Николай
КУШМАНОВ



# АСĂМРИ ÇЫВĂХ ÇЫНСЕМ



**Николай**
**КУШМАНОВ**

# АСĂМРИ ÇЫВĂХ ÇЫНСЕМ

## III том

ШУПАШКАР
2013

УДК 894Ё 344
ББК 84 /2 Рос – Чув/ – 4
К – 96

К 96 Кушманов Н. К. **Асăмри çывăх çынсем**. Шупашкар. Аса илӳсем, очерксемпе повесть. 3 том. 2014 ç. 280 стр.

Кӗнекене автор çырнă «Тăван ял—йышăм хушшинче», чăваш халăхӗн паллă композиторне, Александр Сергеева халаллана «Юрă хăнана чӗнет» очерксене кӗртнӗ.

Вулакансем çавăн пекех вăл тӗрлӗ çулсенче куçарнă Нина Алешевăн «Герман епископ» очеркӗпе, Николай Тувалькинăн «Çӗнтерӳн цӗрремӗш чӗкеçӗсем яла вӗçсе килчӗç» калавӗпе, казах писателӗн Аким Таразин «Аяз тата Ораз» повеçӗпе паллашма пултараççӗ. «Авалхи Бухара крепоçӗнче» очерк та вулакансемшӗн кăсăклă пуласса шанатпăр. Унта Егоров Вениамин Павлович çинчен çырнă. Вăл 1897—мӗш çулта Чăваш Республикинчи Патăрьел районӗнчи Турхан çуралнă, чăваш, Граждан вăрçи вăхăтӗнче паттăрлăх кăтартнă.

***Кӗнеке хуплашкин страницисенче — автор çуралса ӳснӗ Турхан ялӗн сăн ӳкерчӗкӗсем.***

ББК 84 (2 Рос — Чув) - 4

***© Н. К.Кушманов /Алеметкин/ 2013 ç.***



***Николай Кушманов***



Турхан ялĕ Шăхач енчен пăхсан çапла курăнать

# МАНĂН ЙĂХ-НЕСĔЛСЕМПЕ ÇЫВĂХ ТĂВАНСЕМ

Юлашки вăхăтра чăваш çыннисем хушшинче те хăйсен йăх тымарĕсене тĕпчес туртăм аталанса вăй илме пуçларĕ. Ку лайăх *пулăм ĕнтĕ. Пурин те хăйсен аслашшĕпе асламăшĕсен,* кукашшĕсемпе кукамăшсен кунĕ–çулĕ пирки пĕлес килет.

Нумаях пулмасть эпĕ «Ĕмĕрсен кĕрлевĕ витĕр» ятлă, икĕ томлă кĕнеке пичетлесе кăларма хатĕрлесе çитертĕм. Çывăх вăхăтра вăл вулакансем патне çитмелле. Эпĕ унта Турханта çуралса ÿснĕ чăвашсен паллă художник–профессорĕ А. А. Кокель, святойсен йышне кĕртнĕ Г. А. Кокель /*Герман епископ*/ тата И. А. Кокель çинчен, вĕсен тăванĕсемпе çывăх хурăнташĕсем пирки çырса кăтартрăм.

Ку кĕнекене пичете хатĕрлес умĕн эпĕ пирĕн тăрăхри ялсем хăçан тата мĕнле пуçланса кайнине тĕпченĕччĕ. Çавăнпа та халĕ Турхан ялĕн историйĕ пирки тепĕр хут асăнасшăн мар, ытларах хамăн тăвансен пурнăçĕ çинчен çырасшăн.

Кирек кам та çут тĕнчене килнĕ, хăйсен хăй тымарĕнчен тухнă паллă çын тухсан, вăл тăван çĕршывшăн халăх асĕнче юлмалли ĕç туса хăварсан савăнать. Вара вăл хăйĕн ачисене: «Вăт кур–ха, пирĕн йăхран мĕнле маттур çын тухнă, эсĕ те çавăн пек пулма тăрăшса вĕрен, ĕçле», — тесе ăс парать. Ку лайăх туртăм–и? Никам та хирĕçлесеt пулĕ тетĕп, паллах, лайăх.

Пире мĕн пĕчĕкрен атте пире çапла хытарса тăратчĕ: «Ухмахпа çыхланиччен, ăслă çын ури патне выртма тăрăшăр...»

Эпир ÿснĕ вăхăтра ялти шур сухалсен авторитечĕ çав тери пысăкчĕ. Сумлă çынсене урамра курсан хĕллехи вăхăтра çĕлĕке, çулла пуçри карттуса хывса сывлăх сунасси йăлараччĕ. Кил–йышра яланах арçын хуçа пулнă. Хĕрарăм ун сăмахĕнчен мала иртеймен. Чылай çемьере ĕçлесе илнĕ укçа–тенкĕпе те вăлах хуçаланнă.

Тепĕр япалана та асăнса хăварасшăн. Çемьере ывăл е хĕр ÿссе çитсен, вĕсем йăва çавăрма шут тытсан, кил хуçипе унăн арăмĕ пулас кин е кĕрÿшĕ хăш йăхран, мĕнле çемьерен тухнине пур енчен те тĕпченĕ, тăванлашма кирлипе кирлĕ маррине те хăйсемех татса пама тăрăшнă. Пулас мăнукĕсен сывлăхĕ, ăс шайĕ еплерех пулма пултарать? Çакă вĕсене питĕ шухăшлаттарнă. *Кĕскен каласан, пур енчен те хакланă: эпир кахал йăхпа*





*Сĕнтĕрвăрри районне кĕрекен Турханкасси /Сотниково/ ялĕ революциччен тата хальхи вăхăтра. Пĕрремĕш ўкерчĕк çинчи чиркў умĕнчи халăха курсан тĕлĕнмеллипех тĕлĕнетĕн: мĕн чухлĕ çын Мăнкун праçникне уявлама тухнă. Пурте тенĕ пекех лайăх тумланнă.*

*Шел пулин те хальхи вăхăтра чиркў çуккине иккĕмĕш ўкерчĕк çинче асăрхатăн.. Вăл çунса кайнă. Ĕлĕкхи вырăн халĕ çапла курăнать.*

*Турханкассинчи чиркĕве çак ўкерчĕк çинче пăхрăм та тўрех çакна асăрхарăм: вăл пирĕн ялти /Турханти/ чиркĕве аса илтерет. Ахăртнех, ăна пĕр проекта тĕпе хурса туса лартнă пулмалла.*

хурăнташланмастпăр—и, каярахпа çамрăксем пире, ватлăх кунĕсенче сума сăваççĕ—ши, алăри çăкăра туртса илмеççĕ—ши?.. «Мĕн акан, çавă шăтать», «амăшне пăх та хĕрне ил» тата ытти халăх хушшинче каланă ăслă каларăшсем ĕмĕрсем хушшинче çуралнă. Çав сăмахсем пуш пĕлтерĕшпе кăна çÿремен, вĕсем пурнăçра тĕрĕсленнĕ. «Ватă çын — тăвată çын» тесе каланин пĕлтерĕшĕ тата епле анлă.

Пирĕн енчи ялсем 1637—мĕш çулсенче пуçланса кайнă. Мăн асаттесемпе асаннесем, кукаçисемпе кукамайсем малтан Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Турханкассинче /*вырăсла «Сотниково» ятлă*/пурăннă. Вĕсене кунта малтан тĕрлĕ налуксенчен хăтарнă. Истори документсем çакна лайăх çирĕплетсе параççĕ: мăн асаттесем ку тăрăхра пурăнма пуçласан, пилĕк çул хушшинче хыснана ним те тÿлемен.

Камсем куçса килме пултарнă—ха халиччен çын ури пырса таптаман вырăнсене? Чи хăюллисем, кирек мĕнле ĕçрен те хăраман çынсем тесе калама пултаратпăр эпир. Пирĕн асаттесемпе кукаçисем тĕрĕслĕхшĕн те тăма пултарнă. Кун пирки эпĕ маларах асăннă «Ĕмĕрсен кĕрлевĕ витĕр» кĕнекере те асăннăччĕ. Çакна, паллах, эпĕ хам тĕллĕн шухăшласа кăларман. Архивра упранса юлнă документсем халь çеç çирĕплетсе каланине пире лайăх ĕнентереççĕ.

Пирĕн енчи çынсем хăйсен ырă кăмăлĕпе, сăпайлăхĕпе Атăл тăрăхĕнчи çынсенчен /*вирьялсенчен*/ уйрăлса тăраççĕ. Астăватăп—ха, ял хушшинче сарăлнă сăмахсене. Енчен те кам та пулсан, хăйĕн пулас арăмне çак тăрăхран качча илсен, çакна ырламастчĕç. Пытарма кирлĕ мар, çак çемьерен тухнă çынсем кăмăлĕпе урăхларахчĕ. Вĕсен çынна ăмсанас е хурласа калаçас туртăм вăйлăрахчĕ.

Хамăр енчи çынсен пĕлÿ шайĕ пирки те кăштах çырас кăмăлăм пур. Пирĕн ял çывăхĕнчех, сăмахран, Шăхач ялĕ вырнаçнă. Унта вырăс, ирçе тата чăваш çыннисем пурăнаççĕ. Медицина çыннисем пире çапларах ăнлантарса пани пирки те кунта асăнса хăвармалла. Енчен те икĕ наци çынни пĕрлешсен, вĕсен ачисем сывлăх енĕпе те, ăс шайĕпе те палăрмаллах улшăнаççĕ. Калас пулать, Улатăр тăрăхне Петĕр патша вăхăтĕнче вырăс çыннисем куçса килнĕ. Вĕсем тинĕс карапĕсем валли кунта юман йывăçĕсене касса хатĕрленĕ, унтан çав тавара Петербурга ăсатнă. Паллă ĕнтĕ, вĕсем чылайăшĕ кунта тĕпленсе пурăнма пуçланă. Çавăн пекех кунта ирçе çыннисем те Саранск

тăрăхĕнчен куçса килсе пурăнма пикеннĕ. Çапла вара виçĕ наци çыннисем кунта тахçанах хăйсен çемйисене çавăрнă. Чăвашĕ вырăспа, ирçи чăвашпа, вырăсĕ ирçепе пĕрлешнĕ. Вĕсем яланах туслă пурăннă. Тĕрлĕ наци çыннисем пĕр – пĕрин лайăх енĕсене йышăннă. Çак сăлтавсене пула халăхăн культура шайĕ те çулсерен аталанса вăй илнĕ.

Тутар ялĕсем те çывăхрах. Пирĕн ялта та ку нацин çыннисем пулнă. Вĕсене «мишер» тесе чĕнетчĕç. Паллă ĕнтĕ, вĕсенчен чылайăшĕ чăвашсемпе пĕрлешсен чăваша тухнă.

Эпĕ Турханти вăтам шкулта вĕреннĕ. Калас пулать вăл халĕ Республикăри чи вата пĕлÿ керменĕ шутланса тăрать. Чăвашсен учительсем вĕрентсе кăларакан пĕрремĕш шкулĕ те Чĕмпĕрте вырнаçнă пулнă. Унта пирĕн енчен тухнă çынсем чылайăн пĕлÿ илнĕ.

Çапла вара илсе кăтартнă тĕслĕхсем мĕн пирки калаççĕ – ха? Республикăри ытти ялсенчен те маларах кунта çынсем хăйсен пĕлÿ шайне ÿстерме пултарнă.

«Патăрьел» теççĕ пирĕн тăрăха. Мухтанмасăрах çапла çирĕплетме пулать: чăнах та паттăрсен енĕ вăл. Кирек кам та хăй çуралса ÿснĕ вырăна юрататъ, унăн пуянлăхне çуллен – çул ÿстерсе пырать.

Çак кĕнекене хатĕрленĕ чухне çакăн пек шухăш та пулчĕ: кирлех – ши вăл вулакана? Элемет йăхĕнчен тухнисен, каярахпа хăйсен çемйисене çавăрнă майăн, ытти ăрури çынсемпе тăванлашса е хурăнташланса кайсан, халăх умĕнче палăрмалли ĕçсем пур – и? Чылайăшĕн пурнăçĕ, паллах вуншар – çĕршер çынсен кун – çулне аса илтерет. Çапах та сăпайланса ларни вырăнсăр тесе шутлатăп. Тĕрĕссипе каласан, эпĕ халĕ те хамăн тăвансене пурне те пĕлместĕп. Пирĕн ачасем е мăнуксем, эппин, каярахпа хăйсем хăш йăхран тухнине те чухламаççĕ – çке. Вырăссем кун пек чух: «Иваны — не помнящие родства»,— теççĕ. Çавăнпа та, пирĕн, аслăраххисен, хамăр мĕн пĕлнине çырса хăвармалла тесе шутлатăп. Эпир пуçăнмасан, ку ĕçе никам та тумасть.

## АСАТТЕПЕ АСАННЕ, ÇЫВĂХ ТĂВАНСЕМ ПИРКИ

Манăн асатте Михаля, асанне Кĕтерук ятлă пулнă. Асаттене «Элемет Михали» тесе чĕннĕ. Атте каласа панă тăрăх, асатте çав тери кăра çилĕллĕ этем пулнă, вăл кĕске самантрах çилленсе кайма, анчах та кăшт вăхăт иртсенех лăпланма, хăйне алла илме пĕлнĕ. Пĕр тĕслĕх çеç илсе кăтартатăп. Асанне пĕррехинче хăй кăмăлланă ĕне пăрушне туянас тесе çине тăнă, анчах та асатте хирĕç пулнă. Чылай вăхăт хушши хăйĕн кăмăлсăрлăхне пытарса пурăннă вăл. Анчах та пĕррехинче çилли капланса килнине пусарайманнипе, вăл асаннене саламатпа çапнă. Тепĕр хĕрарăм кун пек самантра упăшкине хирĕçлесе калаçма та пултарать, паллах. Анчах та асанне асаттен кăра çиллине пĕлекенскер, упăшкине хĕнеме пуçланăшăн çапла хуравлать: «Ах, Михаля, саламату сылтăм енчен хытах лекрĕ, тепре çапас пулсан сылтăм енчен çап – ха»,— тесе, тепĕр енне çаврăнса тăрать. Асатте, çакна пач кĕтменскер, саламатне урайне пăрахать те картишне тухса каять.

Атте асаннене çав тери хытă юратнă. Вăл час – часах хăйĕн амăшĕ сăлтавсăрах инкек курнине курса ўснĕ. Каярахпа, каласа паратчĕ атте, асанне çине тăрса туянтарнă пăруш, ĕне пулсан, нумай сĕт паратчĕ. Вара тин арăмĕ упăшкине çапла калама пултарнă: «Куртăн – и, Михаля, эпĕ йăнăшмарăм вĕт. Пирĕн ĕне лайăх пулчĕ, тавах сана мана итленĕшĕн...»

Куратпăр ĕнтĕ, чăваш хĕрарăмĕн шăпи епле йывăр пулнă иртнĕ саманара. Тепĕр саманта та асăнса хăварасшăн. Эпĕ пĕчĕкрех чухне килте хĕрарăмсем пуçтарăнса ларсан, манăн çак сăмахсене те илтме тўр килетчĕ. Астăватăп – ха, Кĕтерук аппа каланине. «Арçыннăн пўрте кĕнĕ чухне ура сасси илтĕнсенех хĕрарăмăн чĕтресе тăмалла».

Татьяна Петровна Кошкина /*хĕр чухехи хушамачĕ Алеметкина — манăн иккĕмĕш сыпăкри аппа*/ каласа панă тăрăх, асанне Комсомольски районне кĕрекен Тимрĕчкассинче çуралса ўснĕ. Вăл /*Петр Михайлович Алеметкин çырса хăварнă тăрăх*/ 1931 – мĕш çулта 70 çулта пулнă. Эппин, асанне 1861 – мĕш çулта çуралнă тесе калама пултаратпăр.

Упăшкипе арăмĕн çуралнă вăхăчĕ пĕр – пĕринчен ытлашши уйрăлса тăмасть. Эппин асатте те 1860 – мĕш çулсенче пуçласа

кун çути курнă теме пулать. Асанне вăрçă вăхăтěнче /*1941—1945 çç.*/ суккăрланнă. Ăна çавăтса çÿренě.

Анна Петровна Карзакова /*хěр чухнехи хушамачě — Алеметкина — манăн иккěмěш сыпăкри аппа*/ каласа панă тăрăх, пирěн асанне Комсомольски районěнчи Шурут ялěнче çуралса ÿснě. Вăл çуралса ÿснě çурт Шурута Арапуç ялě енчен кěрсен сулахай енче, кас хěрринче пулнă. Унта унăн аппăшě Маюк пурăннă. Çапла вара Анюк аппа /*Карзакова А. П.*/ Таня аппа /*Кошкина Т. П.*/ каланине хирěçлет. Вăл пирěн асаннен Тимрěчкассинче тăванěсем нумай пулнă тет. Вăл калани тěрěсрех пуль. Мěншěн тесен, асанне каласа панисене вăл лайăхах астăвать. Таня аппа унран çамрăкрах пулнă. Асанне 16—17 çула çитсен тăлăха тăрса юлать. Ăна тăван мар амăшě хăй пач юратман çынна вăйпа тенě пекех качча парасшăн пулнă. Тăван ашшě хирěçленě—ши е хирěçлемен, ку пирěншěн, паллах, паллă мар. Мěн тумалла пулнă—ха çакăн пек лару—тăрура?

Ěлěкхи саманара хěрупраç шăпи ашшě—амăшěн ирěкěнчен килнě. Асанне нумай шутласа тăмасть, хăйне вăйпа качча парассинчен хăтăлас шутпа Турхана тарса килет. Кунта вăл хăйěн Кирккка тетěшě патěнче пурăнма пуçлать.

**Киркка** /*киркка*/, хр. имя мужч., Кирилл. *К.—Кушки.* // Яз. имя мужч., *Ялюха. М.*

Киркка тетен Эндрюш, Сахрун тата ветврач пулса ěçленě ачи /ятне маннă/ пулнă. Вěсем Чернышев хушаматпа çÿреççě. /Эндрюш тетене эпě лайăх астăватăп. Унăн Толя /*çав тери сăпайлă, кирек кама та хисеплекен çынччě. Пурнăçěнче вăл никама та усал туман пуль. Шел нумаях пулмасть сарăмсăр вилěме пула пирěнтен уйрăлса кайрě/*, Сергей /*манпа пěр çулта, шофер пулса ěçлет/*ятлă ывăлěсем пулнă. Ваçça тетене /*Чернышев/* те лайăх пěлетěп. Вăл шофер пулса ěçлет. Арăмě Галя ятлă. Вěсем Анаткасра пурăнаççě.

*Чернышевсем асанне енчен пирěн тăвансем пулаççě. Эпě çакна тěпě—йěррипе Анюк аппапа калаçсан çеç лайăхрах пěлме пултартăм. Астăватăп—ха кăштах, ěлěкрех Мăнкун кунěсене манăн аттепе анне Киркка тете енчен тухнă тăвансемпе пěрле паллă тунисене. «Ěрет ирттеретпěр»,— тетчěç вěсем çав асра юлмалли праçниксене.*

Асанне Киркка тете патěнче пурăннă вăхăтра ыраш вырнă. Ялта ěçчен хěре тÿрех асăрхаççě. Вăл пěвěпе пысăках мар пулсан

та тăрăшулăхĕпе хăйĕнпе пĕр çулхи тантăшĕсенчен питĕ те уйрăлса тăнă, хушнă ĕçе тĕплĕн пурнăçлама тăрăшнă. Элемет Михали часах ăна асăрхать. Шурутран килнĕ хĕре юратса пăрахать. Вĕсем часах мăшăрланаççĕ. Хальхи вăхăтра Кошкина Татьяна Петровна пурăнакан вырăнта пӳрт–йĕр çавăрса пурăнма пуçлаççĕ.

Çапла вара çак пӳрт вырăнĕ пирĕншĕн, Элемет йăхĕнчен тухнисемшĕн, чи сăваплăă вырăн.

*/Эпĕ Библи кĕнекине чăвашла сăвăласа куçарсан /иккĕмĕш томĕ сахал тиражпа тухнăччĕ/, хĕл сивине пăхмасăрах, ятарласа Турхана çитрĕм, тӳрех Таня аппа патне кайрăм. Пӳрте кĕрсенех ăна çапла каларăм: «Аппа, çак кĕнекесене вула, упра. Вăл пирĕншĕн хаклăран та хаклă çуртра чи хисеплĕ вырăнта пултăр». Манăн чунран тухнă сăмахсене Таня аппа хумханса йышăнчĕ. «Коля, шăллăм,— терĕ вăл. Кун пек хаклă япалашăн укçа тӳлеççĕ. Манăн килте халĕ укçи–тенки çукрах. Парне вырăнне парне пултăр. Сана Шупашкара пыл тата кăштах сурăх какайĕ парса яратăп». Унтан вăл йыснана хăй шантарса каланă сăмаха пурнăçлама ыйтрĕ.*

*Çакна мĕншĕн çыратăп–ха? Акă мĕншĕн. Таня аппа Библи кĕнекин пĕлтерĕшне лайăх ăнланать. Савăнтăм эпĕ уншăн. Эпĕ, паллах, ун чухне Петр Михайлович Алеметкин чиркӳре ĕçленине те, вăл Турра ĕненнине пула нуша тӳснине те пĕлмен. Кун пирки каярах çырăп–ха./*

Атте каласа панă тăрăх, асаттепе асанне чылай вăхăт хушши ача пулман. Вĕсен Лазарь, Кĕçтен, Петр тата Ульха ятлă ачасем пулнă. Атте, Алеметкин Константин Михайлович 1897–мĕш çулта çуралнине шута илсен, Лазарь тете 1894–мĕш çулта, Петр Михайлович 1900–мĕш çулта, Ульха 1903–мĕш çулта çуралнă.

Лазарăн Элекса ятлă хĕр пулнă. Вăл Аслă Арапуçне качча кайнă. Упăшкипе пĕрле пурăнакан çурт малтан йывăçран пулнă. Кайран ăна пăсса çĕнĕ çуртне кирпĕчрен купаласа пахча вĕçне лартнă. Вăл МТСа кайнă çĕрте кĕтесре, крахмал завочĕ енче ларать. Элекса аппан Таня, Василий, Гена ятлă ачисем пулнă. Хальхи вăхăтра Гена кил хуçи кирпĕч çуртра пурăнать. Элекса аппан упăшки пус чавнă вăхăтра вилнĕ.

Манăн атте, Алеметкин Константин Михайлович, хăйĕн ĕмĕрĕнче виçĕ хут авланнă, пĕрремĕш арăмĕ Кĕтерук ятлă пулнă. Вĕсен Маюк */хĕрĕ Дуся/*, Мĕкĕте */хут çинче Николай тесе çырнă/*, Анюк */хĕрĕ Нина, ывăлĕ Володя/*.

Иккĕмĕш арăмĕ Марфа ятлă пулнă. Вĕсен ачисем: Алексей, Василий /*ачисем — Геннадий, Луиза*/, Оля /*виçĕ ача*/.

Виççĕмĕш арăмĕ — Матрена /*манăн анне*/. Вĕсен ачисем: Петр /*ачисем — Надя, Сергей, Алина*/, Николай — ку эпĕ /*манăн ачасем Евгений, Нина ятлă*/, Нина /*Сергей, Оля*/, Михаил /*ачисем — Катерина, Константин*/.

## Çĕпĕрти тăвансем

Кĕнекене хатĕрленĕ чух 1964—65—мĕш çулсенче Çĕпĕре пурăнма куçса кайнă хамăн тăвансене шырама тиврĕ. Çак тĕллевпе аттен иккĕмĕш арăмĕ енчен тивекен хамăн аппа, Ольга Константиновна Михайлова патне çыру çыртăм. Акă вăл:

***Ырă кун сунатăп сире, хаклă тăвансем!***

*Пурнăç пире çĕршывăмăрăн тĕрлĕ кĕтессине салатса янă. Пĕр—пĕрин пирки те, кам мĕнле пурăннине те лайăх пĕлместпĕр. Анчах та куллен—кун тĕрлĕрен ыйтусем сиксе тухаççĕ: мĕнле пурăнаççĕ—ши аякри тăвансем, вĕсен ачи—пăчисем пур—и, мĕн ятлă вĕсем, пире, хăйсен тăванĕсене пĕлеççĕ—ши? Çавăн пек шухăшсем канăç памаççĕ.*

*Уля аппа, эпĕ пĕчĕк чухнех сана çапла чĕннĕ, халĕ те çаплах каласшăн. Çыру конверчĕ çинчи адреса вуларăн та тĕлĕнтĕн пулĕ—ха: кам мана пата çапла çырать тесе. Эппин хам пирки кăштах пĕлтерем. Хут вараланкни — санăн шăллу Коля. Хушаматăм — Кушманов. Анчах та чăн—чăн хушаматăм Алеметкин пулмалла. Тĕрĕссипе, атте «Алиметкин» тесе çырнине йышăнатчĕ. «Элемет» сăмах вырăсла «Алеметкин» пулмалла тесе шутлатăп. Тĕрĕссипе каласан, эпир, Уля аппа, пурте Элемет йăхĕнчен тухнă. Хамăн хушамат 7—8—мĕш классчен /Петяпа иксĕмĕрĕн/ Алеметкин, пирĕнтен кĕçĕнреххисен Нинăпа /1952—мĕш çулта çуралнă/ Мишăн / 1955—мĕш çулта çуралнă, 1995—мĕш çулта вилнĕ/ Кушманов хушамат пулнă. Анне пенсие кайсан пирĕн хушаматсене улăштарнă, пурне те пире «Кушманов» хушамата панă. Тен, кăна пĕлетĕн, тен, пĕлместĕн, çапах та çакна та сире пĕлтересех терĕм.*

*Эпĕ, Уля аппа, чăвашсен поэчĕ, Раççей писателĕсен Союзĕн йышĕнче тăратăп, Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, 10 кĕнеке авторĕ. Чи пысăк ĕçĕм — Библи кĕнекине чăвашла сăвăласа куçарни шутланать. Вăл виçĕ томпа пичетленсе тухнă* /Хальхи вăхăтра Библи кĕнекисен шучĕ, сăвăласа куçарни 7 кĕнеке. Çавсен шутне «Çĕнĕ Заветăн» пур кĕнеки те, 4—мĕш, 5—мĕш тата 6—мĕш томсем, çавăн пекех Исаия пророкăн кĕнеки, 7—мĕш том кĕреççĕ. — Автор хушса

*калани/. Нумаях пулмасть хамăр ялта çуралса ӳснĕ Алексей Кокель профессор–художник, Герман епископ – Г. Кокель /Ăна 2001–мĕш çулта святойсен йышне кĕртнĕ/ тата Иван Кокель, вĕсен тăванĕсем çинчен икĕ томлă кĕнеке хатĕрлесе патăм. Вăл та кăçалах вулакансем патне çитет.*

*Мĕншĕн çыратăп–ха эпĕ Уля аппа çак çырăва сан патна? Чи малтанхи тĕллевĕм манăн çапларах: сирĕн пурнăç пирки пĕлесшĕн тата хамăрăн тăвансен сăнӳкерчĕкĕсене вăхăтлăха усă курма ыйтса илесшĕн. Вĕсене кĕнекере пичетлесе кăларма тĕллев тытрăм.*

*Нумаях пулмасть Анюк аппа /Алеметкина–Карзакова/ патĕнче пултăм. Телее унта эсир янă çыру пурччĕ. Унпа паллашсан сирĕн Çĕпĕрти адреса пĕлме пултартăм. Савăнтăм уншăн. Анчах та хамăрăн пулас кĕнеке валли информаци питĕ те сахал. Эпĕ пĕлместĕп: сирĕн миçе ача, миçе мăнук? Хăвăр тата мăшăрăр пенсие тухиччен ăçта ĕçленĕ? Ачăрсем мĕн ятлă, ăçта ĕçлеççĕ? Çавсене тĕплĕн çырса пĕлтерме ыйтатăп. Аттен малтанхи ачи Маюк аппа, унтан Мĕкĕте тете /хут çинче Николай тесе çырнă, вăл вăрçăн малтанхи кунĕсенчех вилнĕ/, Анюк аппа пулнă. Маюк аппан /упăшкин хушамачĕ епле? Вĕсем Çĕньялта пурăннине кăштах астăватăп/ Дуся ятлă хĕрĕ пур. Унăн ачисем пур е çук нимĕн те пĕлместĕп. Анюк аппан Нина ятлă хĕр иккенне, вăл 1954–мĕш çулта çуралнине пĕлетĕп. Унăн 16 çулта чухне ӳкерĕннĕ сăнĕ пур. Вăл, паллах, качча кайнă пуль. Унăн ачисем те пур ĕнтĕ. Нинăн ашшĕ мĕн ятлă пулнă тата вăл кам пулнă? Кĕскен каласан тĕплĕн çырса пĕлтерессе шанатăп. Эпĕ шутланă тăрăх, эсир Çĕпĕрте, Элемет йăхĕнчен тухнисем, пурте пĕр вырăнта пурăнатăр. Эппин, Уля аппа, Эсир мана тĕрĕс хурав пама пултаратăр. Çыру çырнă чухне ан васкăр, тĕплĕн çырăр. Сăмахран, Михайлова /Алемеметкина/ Ольга Константиновна 1942–мĕш çулта Турхан ялĕнче çуралнă. Унăн упăшки Михайлов, ячĕ, ашшĕн ячĕ, 19.. çулта çуралнă. Вĕсен ачисем çавсем, çавсем, мăнукĕсем... Марфа аппа /аннӳ пирки те/ хăв мĕн пĕлнине çырса яр, тархасшăн.*

*Хамăн çемье пирки кăштах. Манăн арăм Галина Семеновна Дмитриева Çĕньялта çуралса ӳснĕ, аслă пĕлӳ илнĕ, малтан учительница пулса ĕçленĕ. Хальхи вăхăтра ача садĕнче — воспитательница. Пирĕн ывăлпа хĕр. Асли Женя 1978–мĕш çулта çуралнă. Вăтам шкула ылтăн медальпе вĕçленĕ, университет пĕтерсе аслă пĕлӳ илнĕ, математик. Халĕ интернет енĕпе Мускавра та, Шупашкарта та ĕçлет. Нина, 1986–мĕш çулта çуралнăскер, кăçал шкул пĕтерет. Вăл та, Женя пекех, шкула ылтăн медальпе вĕçлессе, кайран тетĕшĕ пекех, Шупашкарти университетăн математика факультетне вĕренме кĕрессе шанатпăр.*

*Ваçça /Алеметкин В. К./ тетен ачисем Генăпа Лиза Шупашкартах пурăнаççĕ. Çывăх вăхăтра вĕсем патĕнче пулатăп, фотисене кĕнекене вырнаçтаратăп. Геннадий Васильевич отставкăра. Вăл аслă лейтенант пулса вертолетпа вĕçнĕ. Сывлăхĕ япăххипе тивĕçлĕ канăва тухнă. Икĕ*

*пӳлӗмлӗ хваттерте арӑмӗпе пурӑнать, ачисем ҫук. Лизан ачисем пур. Пӗр—пӗрин хушшинче ҫыхӑнусем аталанман. Гена — вӗри чӑваш, хӑвӑрт кӳренме пултараканскер. Хамӑн юбилее, 50 ҫул тултарсан, килмерӗ. Тӳррӗн каланине йывӑрпа йышӑнать. Ну, юрӗ, унпа пӗр сӑмах тупма пулать—ха. Лиза пасарта ылтӑн япаласем сутса тупӑш тӑвать. Хӑй патне хӑнана чӗнет. Тен, ҫывӑх вӑхӑтра кайса килетӗп пулӗ—ха вӗсем патне. Амӑшӗ /пирӗн инке, вӑл Рая ятлӑ/ ҫуллахи вӑхӑтра Чементе, хӗлле Шупашкарта пурӑнать теҫҫӗ.*

*Элекҫей тете Краснодар облаҫӗнче пурӑнать. 1980—мӗш ҫулсенче Шупашкарта кӑштах пурӑнчӗ. Петя та ун патӗнче Краснодар облаҫӗнче пулса курнӑ. Вӑл ун чухне хӑйӗн ҫемьи валли ҫурт—йӗр ҫавӑрас тӗлӗшпе ӗҫлетчӗ тет. Хальхи вӑхӑтра унӑн шӑпи пирки нимӗн те пӗлместӗп.*

*Кӗскен каласан, Уля аппа, пурин ҫинчен те тӗплӗн ҫырса яр. Чӑвашла ҫырма йывӑр пулсан, вырӑсла та юрать. Тен, санӑн ачусем чӑвашла ҫырма пӗлмеҫҫӗ те. Ҫавӑнпа та вӗсенчен тархаслсах ыйт, тӗплӗн, васкамасӑр ман пата ҫыру ҫырса яма. Ал айӗнчи лайӑхрах фото ӳкерчӗксене ҫырупа пӗрле ярса пар. Ҫырӑвне ҫыхӑну уйрӑмӗнче /почтӑра/ «заказной» майпа яр, тархасшӑн. Ун пек тусан, ҫав хаклӑ документсем ҫухалмаҫҫӗ. Эпӗ вӗсемпе усӑ курсанах каялла ярса пама шантаратӑп. Улталамастӑп, ан шиклен.*

*Эпӗ кӑларнӑ кӗнеке /унта хамӑр йӑх ҫинчен ҫырнисӗр пуҫне тата поэма пичетленет/ истори валли пулать. Ӑна пичетленсе тухсанах Шупашкарти Государство архивӗсене, Кӗнеке палатине паратӑп. Вӗсем унта ӗмӗрлӗхех упранаҫҫӗ. Енчен те, Уля аппа, эсӗ манӑн ыйтӑва туллин тивӗҫтерсен, савӑннӑ пулӑттӑм. Хӑвах шутласа пӑх, Лидя аппан 21 мӑнук, манӑн аннен те 40 ытла, Таня аппан та чылай. Кашнин килӗнче пӗрер кӗнеке пулсан, пирӗн тӑвансем хӑйсем Элемет йӑхӗнчен тухнишӗн е ҫак йӑхпа тӑванлашса хурӑнташланнишӗн мӑнаҫланма кӑна пултараҫҫӗ. Ҫапла вӗт? Эппин ку ӗҫ питӗ кирлӗ иккенне чунупа туйса ил те мана пулӑш. Заказной ҫыру янипех ҫука юлмӑн. Шанатӑп сана, Уля аппа. Тата мӗн ҫырас—ха. Аса илтӗм. Атте ҫуртне салатма памарӑм. Хамӑн тӑван тетех /Кушманов Дмитрий Сергеевич/ аппа хӗрӗпе /Кушманова —Короткова Зоя Сергеевна/ Гальӑпа манран вӑрттӑн сутса ярса тӗп тӑвасшӑнчӗ те — вӗсен ӗҫӗ ӑнмарӗ. Эпӗ вӗсенчен ӑслӑрах пултӑм. Чухламаҫҫӗ кампа ҫыхланмаллине. Хальхи вӑхӑтра унта эпӗ ҫӗнӗ мунча туса лартрӑм, пӳрт тӑррине шиферпа виттертӗм. Атте лартнӑ сад кивелет, ҫавӑнпа та унта кӗркунне 20 тӗп панулми йывӑҫҫисем лартса хӑвартӑм. Хам вӑл ҫимӗҫе тутанмасан та хӑть кӳршӗ ачисем ҫиччӗр, мана хӑйсен ӑшӗнче тав сӑмахӗ калаччӑр... Кӑҫал ҫулла ҫӗнӗ хапха тӑвасшӑн, материалсем хатӗр. Кӳршӗсем те ял—йыш та мана хисеплет, атте ҫуртне салатма паманшӑн савӑнать. Тен, ватлӑх кунӗсенче унта арӑмпа кайса пурӑнма тивет? Пурнӑҫра малашне мӗн пулассине никам та пӗлмест вӗт.*

*Çапла вара, Уля аппа, Кушмановсем çапла хăтланнăшăн хытах кӳрентĕм те, хамăн пулас кĕнекесене скобкăра «Алеметкин» тесе пичетлесе кăларма пуçлатăп. Мĕншĕн тесен, эпĕ те сан пекех, Элемет йăхĕнчен тухнă.*

*Çакăнпа çырăва вĕçлетĕп.*

*Аслă Туррăмăр Сире пурне те, Уля аппа, ырă сывлăх патăр, пурнăçри мĕнпур хуйха—суйха сирсе яма пулăштăр.*

*Салампа, санăн тăван шăллу — Элемет Коли.*
*9. 04. 2003 çул.*

***<u>Адрес</u>: 428010, г. Чебоксары, ул. Б. Хмельницкого, дом 117. кв, 13. Телефон: /8352/ 21‒81‒60***

Çĕпĕртен часах хурав илтĕм. Конверт ăшĕнче икĕ çыру: пĕрне вырăсла, теприне чăвашла çырнă. Вулакана вĕсемпе паллаштарасшăн. Вĕсене ним улăштармасăр пичетлетĕп. Паллах, çырури йĕркесене хумханмасăр вулама çук.

Здравствуйте, уважаемый Николай Константинович!



Судя по всем данным, которые мне изложила моя тетя Оля /Михайлова/, Вы мой дядя, а я ваша племянница — Лида Константинова. Это мамина фамилия. Дело в том, что дом матери сгорел — был пожар, точно не знаю при каких обстоятельствах и в каком году /*знаю просто по рассказу*/, но сгорели некоторые документы, при восстановление, по имени дедушки Константина — Константинова Мария. Вы выслали фотографии. Представляете, я впервые за 44 года, хоть на фотографии увидела своего отца — это мне сказала моя сестра Дуся. Она—то его видела в те года и узнала, у него прикрытый один глаз. Дуся говорит, что отец видел только одним глазом. Фамилия его Халапов, а зовут его, точно по чувашски не знаю, но по русскому в свидетельстве о рождении у меня стоит просто без фамилии и отечества, Никифор. Вот такие чудеса.

Признаться честно, в душе появилась огромная радость, какое—то волнение, удивление, вообщем не знаю, как это можно передать

словами и можно ли изложить на бумаге, не каждому это дано, но я надеюсь Вы поймете меня. Я очень рада этой информации. Честно говоря, может большому стыду, я ничего почти не знала о Вас, ваших братьях и сестер. Мне никто ничего не рассказывал, и я того не зная не могла интересоваться. Вот только благодаря вашему письму начались воспоминания и раскрываться что—то новое, как будто другой мир.

Наша мама Константинова – Алеметкина Мария Константиновна 1917.01.04 года рождения. Первая дочь у дедушки. Нас у нее осталось трое:

Дуся — 13. 03.1943 г. р.
Лида /это я/ — 26. 05. 1959 г. р.
Вера — 07. 10. 1963 г. р./*самая последняя*/.

Примерно 1964—65 году мы уехали из Чувашии в Красноярский край с. Сухобузимское. Здесь жила Дуся, старшая дочь с мужем Первухиным Владимиром Сименовичем и двумя детьми — девочками:

Первухина Валентина — 1964 г. р.
Первухина Елена — 1967 г. р.

Мама купила маленький домик, там мы жили трое: мама, Вера и я. Она в 1970 году умерла. Работала мама дояркой в совхозе, сами знаете, что это за труд, тем более в те годы, все в ручную. Не берегла себя, заболела серьезно, сделали операцию /рак желудка/ и после нее в скорости умерла 1970 году 23 июля.

Она была безграмотная, не одного класса образования, письма не умела ни читать, ни писать, поэтому уехав из родных мест, не могла ни с кем поддерживать связь, так мы и уединились, про нас ничего, и мы никого не знали.

После смерти мамы, нас с Верой отдали в детский дом. Мне было 10—11 лет, а Вере 6 лет. Так нас, можно сказать вырастило государство, но я не жалуюсь, конечно, ласку и теплоту мы не ощущали, но голодными и босыми не ходили. Через 9 месяцев, после смерти мамы, умер Дусин муж Первухин В. С. Она осталась с двумя детьми. И дай Бог здоровья, я ей очень благодарна. Она нас никогда не забывала. Забирала нас к себе на каникулы, хотя ей было очень не легко, да и заработок был не велик, чтобы часто ездить к нам. Дуся умудрялась как—то выкроить на дорогу, на гостинцы, может где—то от своих детей, тогда мы этого не понимали. Как это было не легко, сейчас вспоминая я благодарна ей больше, чем родной матери, низкий ей поклон, за благородство, любовь и терпение, за нелегкую заботу. Относилась она к нам, как и дочерям своим. Сейчас она живет не далеко от Сухобузимское в п. Мингуль /30 минут езды/ одна без мужа. Ей в этом году исполнилось 60 лет и дай ей Бог еще столь прожить.

*Она очень хороший и добрый человек. Никогда и не с кем не ругается,* промолчит, перетерпит, ни кого не осудит. Ее очень уважают и по работе, и по соседству. Мы с Верой, конечно, далеки от нее. У нас другие характеры, бывает всякое, но Дуся умеет как—то нас смирить, подсказать, помочь.

Тетя Аня, мамина сестра /*вторая*/ к нам относилась как—то не по родственному. После смерти матери, нас просто все забыли, хотя родных здесь не мало. Только одна Дуся тянулась на своих, и на нас с Верой, где письмо, где копеечку вышлет, где посылочку соберет, и благодаря наверно ей мы чувствовали, что не брошены, как—то стремились учиться, добиваться чего—либо самим.

У меня в душе всегда таилась какая—то тревога, даже обида можно сказать, за то, что родилась я там в Чувашии, Батыревском районе, д. Шаймурзино. А те места не знаю и почти совсем не помню /*но кое—что смутно помню*/. Чувашского языка, родных не знаю, ведь там остался мой родной дедушка, который, наверное и не видел меня, и не разу не вспомнил, хотя знал, что у Марии есть дочь Лича. Так же и мой отец, которого я никогда не видела /*вот первый раз на фотографии*/. И вообще я ничего о нем не знаю: кто он? где он? и знает ли он обо мне? Все так загадочно и странно. Правда же?

Николай Константинович, у меня огромное желание и большая просьба, напишите мне пожалуйста побольше о себе, о своей семье, о своих родных, о своих местах и родных, о моей деревне — есть ли она еще? Ведь после перестройки и реформы многое изменилось, вас наверно тоже это коснулось? У нас, например, исчезли многие деревни, фабрики и заводы /*прикрылись*/, совхозы, если и уцелелись, то на выживание вот—вот обанкротяться.

Я долгое время, почти 17 лет, работала на птицефабрике «Бузимский», выращивали племенных бройлеров. Сами выводили, растили и реализовывали продукцию. Жили не плохо: и заработок не плохой, и условия, давали квартиры, путевки — и кто бы подумал, что нас ожидает — обанкротились, а была такая, можно сказать, богатая *фабрика, все растащили, разрушили, даже страшно вспоминать — обида* душит, сколько было вложено труда. Я работала лаборантом в зоотехнической лаборатории. Работа мне очень нравилась, часто ездила по другим фабрикам специализироваться, или делиться опытом, то на слеты, то на учебу — чувствовала себя, можно сказать, человеком. А сейчас чувствуешь себя совсем по—иному. Работу мне, конечно, по душе уже не найти — ушли годы и времена не те, итак где придется, то продавцом, то техничкой, лишь бы стаж не потерять /*хотя нужен ли он?*/. Живем, можно сказать, за счет хозяйства. Муж мой работает в ЗАО «Сухобузимское» шофером, комбайнером, бывает и трактористом по сезону. Зарплату не дают уже лет 7—8, только корма, коров—телят, а зарплата 800—700 рублей в месяц начисляется. У нас



*Гладышева Лидия Никифоровна, ее муж, Валентина Владимировна Первухина, Гладышевы: Сергей и Денис, в середине Владик — внук Дуси.*



*Внуки, правнуки Марии Константиновны: Сережа Гладышев, Таня Сотникова, Денис Гладышев, Толя Мороков, Владик Первухин, Виталий Миллер, Валя Первухина, Лена Морокова.*



*Валя Первухина, Денис Гладыщев, Виталий Миллер,Таня и Вячеслав Сотниковы, Вера Миллер, Дуся Первухина, Сережа Миллер, Лена Халапова, Лида Гладышева.*



*Вера Миллер, Дуся Первухина,*
*Лида Гладышева, Лена Халапова.*



*Володя Кудряшов, Вера Миллер, Нина Гладышева, Валя Первухина, Лида Гладышева*



**Слева направо 2 ряд:Нина Гладышева, Вера Миллер, Сережа и Лида Гладышевы; 1 ряд: Наташа и Света Гладышевы, Виталий Миллер, Денис Гладышев**

двое парней: Сергей 13.09.1987 года, Денис 29.05.1989 года рождения. Учаться в школе. Младший старательный, учиться хорошо, старший не много по хуже, но — трудолюбивый, интересуется техникой. Свои обязанности дети знают, стараются выполнить и по—хозяйству и в школе, и бывают нашкодят. Хочется, конечно, чтобы выросли хорошими людьми, не забывали меня, мало ли что может быть еще, но не знаю, удастся ли воспитать, вложить в них побольше хорошего и доброго, гены родительские и прородительские тоже многое значат.

Николай Константинович, я очень надеюсь, что Вы мне ответите на мое письмо /*только на русском языке, я вас очень прошу*/, иначе мне не прочесть, я не одно слово не помню, все забыла, а когда мы переехали сюда, я не знала русского, не могла сразу пойти в школу, отстала от своих сверстников по учебе.

Но, а если Вы пожелаете с нами познакомиться по ближе, приезжайте к нам, пожалуйста в гости всей семьей, мы очень будем рады и благодарны.

Ведь мы по дедушке одной крови — значит родные. Честно, от души, как мне хочется увидется с Вами со всеми. Тем более, мы здесь почти все рядом живем в одной деревне. Дуся тоже очень обрадовалась. Она вас всех помнит, знает и тоже будет очень рада с вами встретиться. Она болеет, у нее давление, и вообще, что—то с головой. Она начинает заговариваться, теряет сознание, начинаются галюцинации. Тетя Аня умерла года три назад.

Я надеюсь, что вы все—таки надумаете и приедете к нам. Только сообщите заранее мне лично. Мы обязательно встретим вас в Красноярске с Дусей, чтобы узнать и привезем. Я очень надеюсь, ведь годы идут, а так хочется познакомиться по ближе.

А пока до свидания. Всего Вам доброго и самого хорошего, вашим детям, жене и всем родным, пока мы не очень знакомы, но надеюсь, что мы сблизимся по ближе.

*Красноярский край,*
*Сухобузимский район.*
*с. Сухобузимское, ул. Весенняя, 6—2*
*Гладышева Лидия Никифоровна,*
*телефон местный: 2—24—75.*

**Саламлă çыру**

Ырă кун пултăр Сире, Коля, çак çырăва илсе вулама. Коля, эпĕ Лидя патне килтĕм те вăл мана санăн çырăвна пачĕ. Çырăвна вуланă чухне куçран куççуль юхать. Эпĕ сире яланах аса илеп, курас килет, сирĕнпе калаçас килет. Унта кайма укçа çук. Ку çырăва вуласан çыру яр. Петя мĕнле пурăнать? Вăл Турхантах—и? Курсан салам кала, Дусяран тесе. Коля, килсе кур, çыру çине пурне те çыраймастăн. Эпир

пурте Сухобузимра пурнатпӑр. Кунта нумай тӑвансем. Анюк аппа хӗрӗ Нина кунта. Коля, эпир сире курасшӑн. Сирӗн укҫа пур.

Килӗр. Хытӑ кӗтетпӗр.

Салампа Дуся.

*Красноярский край,*
*Сухобузимский район,*
*П. Мингуль,*
*ул. Проспективная, 10–1*
*Первухиной Евдокии Федоровне.*

Уля аппа патне ҫыртӑм та, пач кӗтмен ҫӗртен ытти тӑвансенчен икӗ ҫыру илтӗм, ҫапла вара вӗсем пирки чылай ҫӗнӗ хыпар пӗлме пултартӑм.

## АТТЕ ЕНЧИ ҪЫВӐХ ТӐВАНСЕМ

Петр Михайлович Алеметкин — аттен шӑллӗ 1900–мӗш ҫулта ҫуралнӑ. Вӑл пӗр сӑнӳкерчӗк ҫине ҫапла ҫырса хӑварнӑ: «Ҫак карточкӑна 1931–мӗш ҫулта июль уйӑхӗнче 2–мӗш числинче ҫакӑнта ӳкерӗннӗ йышсем хӑҫан ҫуралнӑ, хӑш ҫулта:

1. Петр Михайлович, 1900 ҫ.
2. София Николаевна, 1899 ҫ.
3. Анна Петровна, 1921 ҫ.

Екатерина Петровна 70 ҫ.

*Анчах та ҫакна кӑранташпа туртса хунӑ. Тен, вӑл /асанне/ инке /София Николаевна Алеметкина /Косойкина/ ҫумӗнче ларнӑ? Ҫапла шутлама ӳкерчӗк ҫинче инкен сапунне кӑштах каснипе ӑнлантарма пулать. Петр Михайлович купӑс калама юратнӑ, чиркӳ хуралҫинче ӗҫленӗ. Ялта вӑл нумай ачан хӗресашшӗ пулнӑ, инке чиркӳре техничка пулса вӑй хунӑ. Пирӗн тӗп килте каярахпа колхоз /«Октябрль» ятлӑ/ правленийӗ пулнӑ. Тепӗр колхозне «Победа» ятне панӑ./*

Петр Михайлович тата ҫапла ҫырнӑ:

4. Елена Петровна 1925 ҫ. 1932 ҫулта январь уйӑхӗн 21–мӗш кунӗнче каҫхине 11 сехетре, 55 минутра тунтикун каҫ, ҫӗнӗ числопа 1933–мӗш ҫ. ҫакӑ сехетре пиртен уйрӑлса кайрӗ ачамӑр. Тунтикун каҫ 11 ч. 55 м. Ӗмӗрлӗхе куҫран ҫухалчӗ ачамӑр Елена.

*/Петр Михайлович Еленӑна питӗ хытӑ юратнине ҫак сӑмахсене вуласанах туйса илетӗн. Вӑл ҫырнипе паллашсан тата ҫапларах пӗтӗмлетӳ тума пулать. Унӑн пӗлӳ шайӗ ҫӳлте тӑнӑ. Ҫырнипе паллашсанах вӑл ӗҫе тӗплӗ пурнӑҫлама тӑрӑшнине сисетӗн. Мӗншӗн тесен, Петр Михайлович хӗрӗ пирки ҫине–ҫине асӑнать. Ял–йыш хушшинче унӑн авторитечӗ те пысӑк пулнӑ. Ачисене тӗне кӗртнӗ чух чылай ҫын ӑна хӗресашшӗ тунине те ҫак сӑлтавпа ӑнлантарса пума пулать./*

Петр Михайлович арӑмӗ София пулнӑ. */Вӑл ялта тӑн–тӑн пурӑнакан Косойкисен ҫемйинчен тухнӑ. Калас пулать,*

*Косойкинсем /ялта вěсене «Кусуйка» йăхě тетчěç/ ăсхакăл енěпе аталаннă çынсем шутланаççě. Сăмахран, эпě питě хисеплекен Николай Дмитриевич Косойкин чылай вăхăт хушши районти ěçтăвком председателěн заместителě пулса вăй хунă. Унăн ывăлěпе, Александр Николаевич Косойкинпа, эпě Турханти вăтам шкулта вунă çул хушши пěрле вěреннě. Манăн ачалăхăмри тусăм, Саша, шкула та кěмěл медальпе пěтерчě. Алексей Михайлович Косойкин та чылай вăхăт хушши колхоз председателě пулса ěçлерě. Вăл ял историйěпе питě интересленнě.*



**П. М. Алеметкин**

*Эпě пěлнě тăрăх, Алексей Михайлович пирěн ялти çынсен йăх тымарне те тěпченě./*

Вěсен ачисем: Анна /*ачисем— Геннадий, Галина, Валерий, Люда, Борис/*; Елена /*çамрăклах вилнě/*; Лидия /*ачисем — Татьяна, Фаина, Ирина, Александр, Людмила, Аленка/*; Татьяна /*ачисем — Геннадий, Светлана, Владимир, Елена, Петр/.*

## «ЭПИР ЯРХУН ЙĂХĔНЧЕН...»

Геннадий Степанович Карзаковпа /*Вăл — манăн иккěмěш сыпăкри аппан/*, Анна Петровна Карзакова – Алеметкинăн пěрремěш ывăлě. Эпир пěр вăхăтра /*эпě унран кăшт çеç аслăрах/* çуралнă. Ача чухне тăтăшах тěл пулаттăмăр. Каярахпа пирěн пěр – пěрин хушшинчи çыхăнусем татăлчěç. Сăлтавě, Гена йěкěт чухне Мускавра ěçленипе те çыхăннă. Пурнăçра ялан çапла вěт, эпир час – часах çывăх тăвансемпе сайра хутшăнатпăр, пěр – пěрин патне çÿреместпěр, ку ěçе яланах ырана хăваратпăр.

Çапах та кăçал эпě хамăрăн йăх – несěлсем, тăвансем пирки кěнекере çырса хăварма çирěп тěллев тытрăм, кун пирки Генăна шăнкăравласа пěлтертěм: «Манăн,— терěм ăна,— Анюк аппапа /*ÿкерчěк çинче вăл мăнукěпе ларать/* тěл пулса калаçмалла,

унран хамăрăн тăвансем пирки ыйтса пĕлмелле».

Гена, сывлăхĕ япăх пулнине пăхмасăрах, манпа пĕрле хăйсен ялне Патăрьел районĕнчи Çăл Ăтăк ялне кайса килме шантарчĕ.

2003 – мĕш çулхи апрель пуçламăшĕнче унăн çăмăл машини çине ларса, эпир çула тухрăмăр, çав кунах каялла Шупашкара таврăнма шутларăмăр.

Кăçалхи çуркунне кая юлса килет. Шупашкар районне кĕрекен ялсен çывăхĕнчи уйсем – хирсем йăлтах шурă юртан тасалман – ха. Çул тăршшĕпех Генăпа çамрăк чухнехи вăхăт, хамăрăн ачасен майĕпен йĕркеленсе пыракан пурнăçĕ пирки калаçса пытăмăр. Гена мана хăйĕн сăпайлăхĕпе килĕшет. Унăн, хăш – пĕр çынсем пек, мухтанса, кăкăра çапса, виçерен тухса пакăлтатас йăла çук. Кашни сăмаха виçсе, шухăшласа пуплет вăл, ваттипе — ватă, çамрăкпа çамрăк пек пулма тăрăшать. Унăн чунĕнче çынна сăмахпа кӳрентерес туйăм çук тесе те калама пултаратăп. Тепĕр чухне пĕр – пĕр çын хăйне хирĕç калакана сивĕ сăмах каласа хурать. Гена вара пач урăхла этем. Хăйне усал тăвакана та вăл хăйĕн çемçе кăмăлне кура хирĕçлеме хăяймасть, çавна пула пĕр – пĕр тӳрккес этемĕн сăмахне чун тĕпне хăварать. Ку вара ахалех иртсе каймасть. Çавна пула ун çумне тĕрлĕ чир – чĕр çулăхать. Мĕн тăвăн ĕнтĕ? Пире аттепе анне мĕнле кăмăл пилленĕ, эпир ăна улăштарма пултараймастпăр.

Çул çинче Гена çапларах калаçрĕ: «Çамрăк чухне ытла та хастар пулнă. Сăмахран, Мускаври Лихачев ячĕпе хисепленекен машинăсем туса кăларакан заводра рабочисем малтан пĕр станок çинче ĕçлетчĕç, эпĕ икĕ машинăна пăхса тăраттăм. Кайран çынсем икĕ станок çинче вăй хума тапратрĕç, эпĕ вара тăватă машинăна пăхса тăма, ун çинче ытларах детальсем туса кăларма пикентĕм. Ĕçшĕн те хамăр ĕмĕтленнĕ пек пире тӳлемен. Каярахпа ватăрах рабочисем кӳренсе калаçатчĕç: «Эсĕ, — тетчĕç вĕсем, — хăвăн паттăрлăхна кăтартрăн та, акă кур, туса кăларнă детальсен хакне чакарчĕç». Çамрăк чухне хамăра шеллемесĕр тар тăкни ахалех иртмест, паллах. Халĕ акă юн пусăмĕ хăпарнине час – часах туятăп...»

Çапла çав, чăваш çынни кирек ăçта та чунне парса ĕçлет, çĕршыв пуянлăхне ӳстерессишĕн тăрăшать. Патшалăхĕ вара темшĕн çакна пурнăçра шута илесшĕн мар...

Сăмах пине çитет тенĕ пек, тем çинчен те калаçрăмăр çул çинче Генăпа. Эпир пурнăçри тĕрлĕ пулăмсем пирки иксĕмĕр

те пĕрпекрех пăхатпăр. Тен, ку иксĕмĕр те пĕр йăхран тухнипе çыхăннă. Кунта, паллах ку витĕме шута илмеллех тесе шутлатăп.

Часах Патăръел районне çитрĕмĕр. Кунти уйсенче юр çукпа пĕрех, ял урамĕсенче пыльчăк çăрăлать.

Çăл Атăкĕ ялне çитсен машинăна асфальтпа сарнă çул хĕрринчех лартса хăвартăмăр та пылчăк çăрса Генăсен çурчĕ енне утрăмăр.

Йыснапа аппа килтех. Степан Романович Карзаков пире хапха умĕнче хаваслă кăмăлпа кĕтсе илчĕ, хăйĕн савăнăçлă куççульне пытарма тăрăшмарĕ.



*Анна Петровна Карзакова*

Унăн хуçалăхĕ тĕреклĕ. Пÿрчĕ умĕнче кирпĕчрен купаласа çăмăл машинăна лартмалли гараж туса лартнă. Хăйĕн ĕмĕрĕнчи виççĕмĕш çуртне, 1980 – мĕш çулта тунăскере, сухăр юхтарман пĕренесенчен çĕкленĕ, никĕсне кирпĕчрен янă. Пÿрте кĕтĕмĕр. Анюк аппа тĕпелте ларать. Вăл мана, куçĕ япăх курсан та тÿрех палласа илчĕ

Çут тĕнчере аппа 80 çул ытла пурăнать. Сывлăхĕ япăх пулсан та унăн ăс – тăнĕ çивĕч – ха. Эпĕ çакна пĕрле калаçса ларнă май аванах туйма пуçларăм.

«Эпир,— терĕ вăл кăштах калаçса илнĕ хыççăн, тĕпелте юнашар ларсан,— Ярхун йăхĕнчен тухнă. Хăй вăхăтĕнче çак ăрури çынсем тĕреклĕ пурăннă. Эпĕ каланине çак тĕслĕхсем те çирĕплетсе параççĕ. Сăмахран, Ярхун йăхĕнчен тухнă çынсен çурчĕсем хальхи вăхăтра Аркадий Андреевич Базунов /*вăл халь вилнĕ, килĕнче ывăлĕ Михаил Аркадьевич Базунов пурăнать*/ çурчĕпе юнашар, тепри, вĕсене çул урлă чалăшрах вырнаçнă. Эпĕ астăвасса, виççĕмĕш çурчĕ, хальхи вăхăтра санăн тетÿ /*Кушманов Петр Константинович*/ пурăнакан тата тепри Николай Сергеевич Зубов /*шкул çывăхĕнче*/ пурăнкан вырăнтаччĕ. Унта Ярхун Анюкĕ пурăннă. Вăл Зубов Николайăн

тăван аппăшĕ пулнă. Зубов чылай çул хушши лесничествăра ĕçлесе пенсие тухнă. Унăн ачалăхне пĕлмен çынсем, вăл чăвашла япăх сăмахланине шута илсе: «Зубов ирçе çынни»,— теççĕ. Ку тĕрĕс мар. Ăна ача чухне усрава илнĕ. Ӳссе çитĕнсен кăна вăл Турхана пурăнма килнĕ.

Эпĕ асăннă çынсен çурчĕсем пурин те шатрун тăрăллă пулнă. /*Хам енчен тата çакна каласшăн. Николай Сергеевич Зубов Аслă Отечественнăй вăрçа хутшăнса Мухтав орденĕн икĕ степенне илме пултарнă. Вăрçăри паттăрлăхне шута илсе, вăл 1945—мĕш çулта Мускаври Çĕнтерӳ парадне хутшăннă. Эпĕ кăштах астăватăп—ха атте мана эпир Н. Зубовпа пĕр йăхран тухнине каласа панине. Чăнах та, Н. Зубовран хĕл каçма вутă—шанкă хатĕрлеме ирĕк ыйтсан, вăл аттен ыйтăвне яланах тивĕçтеретчĕ. Тăвансен пĕр—пĕрне пулăшас йăла юнра ĕнтĕ. Ку пурне те паллă чăнлăх.*/

«Элемет» ят епле тухса кайни пирки çапла пулнă. Пĕр хĕрарăма, Ярхун йăхĕнчен тухнăскере: «Элле, инке» тесе каланă. Тепĕр тĕрлĕ те сăмахланă теççĕ: «Элеме туртсв кай». Кайран ку сăмах «Элемет» пĕлтерĕшпе çӳреме пуçланă.

*Шупашкара таврăнсан, эпĕ ятарласа Н. И. Ашмаринăн 17 томпа тухнă «Чăваш сăмахĕсен» кĕнекинче «элиме», «элле», «элеме» сăмахсем пирки вуларăм. 1929—мĕш çулта тухнă 3—мĕш томра, 12—мĕш страницăра çапла çырнă /**«е»** сасă паллине халĕ **«э»** тесе вуламалла/:*

**Елиме** */Элимэ/ яз. личн. имя женщ. Рекеев, САСС, Полевое Байбахт. Цив. у., Рысай.и др.*

*13—мĕш страницăра:*

**1. Елле** */эллэ/, неизвестно; или; может быть; разве.*

**2. Елле** */Эллэ/, яз. им. мужч. Цив.*

*11—мĕш страницăра:*

**Елем** */элэм/. флаг. СПВВ// Флаг, хоругвь. Изамб. Тет. П. Пинер. Эпĕ пыраттăм иртсе çулпала, вĕл—вĕл вĕçсе юлчĕ хура элем. Хып. 1906, №30. Унтан пăлханакансем хĕрлĕ элем çĕкленĕ те тупăпа пĕрре пенĕ. О Япон. урамсенче элемсем çака—çака хураççĕ. Янтик. Тем праçникĕ паян, пĕтĕм урамсене элемсем çакса тултарнă /Развешены флаги/.*

**Елем—селем** */элем—сэлэм/, неимоверно. СПВВ.Х. Элем—сэлем пуян çын. То же слово и у И. С. Степ. Элем—сэлем. Эй эсĕ! элем—сэлем тумланса тухнă! Нарядился франтом!*

Елеме, *назв. растения. Кайсар. Элеме тымарĕ юна шĕветет.*

**Елемей** */Элэмэй/, личн. им. мужч. Иревли.*

*Куратпăр ĕнтĕ:* **«Элле», «Элиме», «Элемей»** *ĕлĕкрех çын ятне,* **«элем»** *— ялава пĕлтернĕ,.***«Элем–сэлем»** *сăмах этем пуянлăхĕпе е вăл чаплă тумланса çўренипе çыхăннă. Çак сăмахсенчен ытларахăшĕ /çын ячĕсем/ Çĕрпў тăрăхĕнче çўренĕ. Эпĕ маларах асăнтăм–ха пирĕн мăн асттесемпе асаннесем Сĕнтĕрвăрри енче пурăннă пирки. Н. И. Ашмарин 17 томпа тухнă «Чăваш сăмахĕсен» кĕнекинче* **«Елеме»** сăмах пирки те çырать Вăл кун пирки: «назв. растения. Кайсар» *тет. Элеме тымарĕ юна шĕветет. тет.*

*Анюк аппа каланинче те /Элеме туртса кай/, Н. И. Ашмаринăн Элеме тымарĕ юна шĕветет теничe те «Элемет» сăмах тухать. «Элемей» сăмах та çын ятне пĕлтернĕ, «й» саспалли вырăнне «т» саспалли лартсан «Элемет» сăмах пулать. «Элеме» курăк ятне пĕлтерет, тет Н. И. Ашмарин. Эпир пирĕн йăха пуçласа яракансем 17–мĕш ĕмĕртех «Элемет» сăмахпа усă курнă.*

*Чăн малтанах пирĕн йăха пуçласа яракансен хăйсене: «Эпир Ярхун йăхĕнчен»,— тенĕ тет Анюк аппа. Ку сăмах пĕлтерĕшĕ пирки Н. И. Ашмаринăн 4–мĕш томĕнчи /ку кĕнеке 1929–мĕш çулта пичетленсе тухнă/ 234–мĕш страницăна уçса пăхар–ха. Унта çапла каланă:*

***Йархун*** */jарhуn/, личн. яз. имя мужч. Иревли. Нюшк–к. Йархун старик. Орау. Йархун — çын ячĕ. Ст. Чек. Кутăнланса тăрсан, ĕçе кайма ўркенсен: эй, Йархун! Йархун пурччĕ ĕлĕк çапла, теççĕ. // Назв. урочища. Орау.*

***Йархун кати*** */ кади/ы/ назв. поля и леса. Нюшк–к.*

Ярхун ăрăвĕнчен тухнă çынсен ячĕсем çапла пулнă: Петрушка, Калюк, Михаля /**пирĕн асатте**/, Ульха.

*Пирĕн ăрăва пуçласа яраканăн ячĕ* ***Ярхун*** *пулнă, тет Анюк аппа. Ку ята малтанах тĕне кĕмен çынсене панă. Хĕрарăмăн* ***Елиме*** */Элимэ/ ячĕ те тĕне кĕмен чăвашсен пулнă. Кун пирки эпир маларах асăнтăмăр.*

*Çапла вара пирĕн ўт–пўре Ярхун, Элемет йăхĕнчен тухнă çынсен юнĕ чупать. Кĕçĕнрех ăруран тухнисен çакна яланах асра тытмалла. Сăмахран, акăлчансем хăйсен йăх тымарне тăхăр е тата та ытларах сыпăк таран пĕлеççĕ. Калас пулать, пирĕн мăн асаттесемпе асаннесем, кукаçисемпе кукамайсем те*

*хăйсен хăй тымарĕсене лайăх пĕлнĕ. «Çич юта качча кай» е «çич ютпа тăванлаш» тени хăй вăхăтĕнче çав тери пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă. Çын ĕренкинчен тухнă, ял хушшинче авторитет çухатнă е япăхрах çынсене «çичĕ ют» сăмахпа танлаштарнă. Кашни сăмахăн е сăмах çаврăнăшĕн пĕлтерĕшĕ нумай енлĕ. Çавăнпа кун пирки чарăнса тăмăпăр. Çакна çеç каласа хăварăпăр: чăвашсем çич сыпăкран ытларах тăван лекекен çынсемпе çеç пĕрлешнĕ./*

Петрушка арăмĕ вырăс хĕрарăмĕччĕ. Вăл çĕвĕç пулса, çынсен ыйтăвне тивĕçтеретчĕ. Кайран вĕсен çуртне сутса ярсан Çăл Атăк ялне куçарса килчĕç. Пÿрчĕ вĕсен пысăках марччĕ. Эпир, пĕчĕк ачасем, вырăс майри мĕнле çĕленине вăрттăн кайса чÿречерен пăхма юрататтăмăр. Тĕлĕнмелли пулнă ĕнтĕ. Ялта çĕвĕ машинкипе ĕçлекенсем вăл вăхăтра пулманпа пĕрех.

Калюк тетен иккĕмĕш арăмĕ Шăхаль ялĕнче çуралса ÿснĕ. Турхана пыриччен вăл Матви ятлă ачине çуратнă. Калюк тетешĕн вăл усрав ывăл шутланать. Ачи хăйĕн мар пулсан та Калюк тете ăна пăхса ÿстернĕ. Матви кайран «Алеметкин» хушаматпа çÿренĕ. Унăн, çемье çавăрсан, Микулль, Паçук, Нина тата Толя ятлă ачисем пулнă. Тĕрĕссипе каласан, вĕсен «Поляков» хушамат пулмалла. Алеметкин Толя халĕ пурăнакан вырăнта чăн малтан Элемет Калюкĕ пурăннă. Юнпа эпир вĕсемпе тăвансем мар.

*Михалян Лазарь, Кĕçтен /__манăн атте__/,* Петя тата Ульха ятлă ачисем пулнă.

Ульха аппа Упамсана качча кайнă. Пирĕн унпа çыхăну çухалнă.

* * *

*Маларах эпĕ Анюк аппа 1921–мĕш çулта çурални пирки асăнтăм. Хăй кун пирки эпĕ 1922–мĕш çулта кун çути курнă тет. Эпĕ кун пирки ăна Петя тете çырса хăварнине каларăм. Калас пулать, манăн атте те хăйĕн кашни ачи хăш вăхăтра, миçе сехетре çуралнине тĕплĕн çырса хума тăрăшнă. Ку лайăх ен Петя тетен те пулнă.*

*Анюк аппан амăшĕ, манăн инке /Алеметкина—Косойкина София Николаевна/ çут тĕнчере 101 çул пурăнчĕ. Ăна çулла пытартăмăр. Кунĕ ун чух çав тери лайăх тăчĕ. Анюк аппа ун чух йывăр чирленĕччĕ те ăна йысна хăйĕн çăмăл машини çине лартса, амăшĕпе сывпуллашма масар çине илсе пычĕ. Вăл*

*утаймастчӗ. Вара ӑна ывӑлӗ Гена йӑтса пукан ҫине ларма пулӑшрӗ.*

*Анна Петровнӑна сыватас тӗлӗшпе йысна тата ачисем чылай вӑхӑт хушши тӑрӑшрӗҫ. Халӗ вӑл пӳртре хӑех кӑштӑртатса ҫӳрет. Килти йывӑртарах ӗҫ йысна ҫине тиеннӗ. Степан Романович хӑй те инвалид. Ҫапах та парӑнмасть–ха паттӑр ветеран. Танлаштарса каласан, вӑл тепӗр ҫамрӑк ҫынран та маттуртарах. Йысна калаҫма пуҫласан, хӑлхуна чанк! тӑратса итлеме ҫеҫ ан ӳркен. Вӑл сана хӑйӗн иртнӗ пурнӑҫӗнчи асра юлмалли саманчӗсем пирки ҫыравҫӑ пекех сӑнарлӑн каласа пама юратать. Ывӑлӗсем кун пек самантра ун пирки: «Атте хӑйӗн кӗнекине уҫса хучӗ», — теҫҫӗ.*

*Йысна ытларах хӑй фронтра тӳснисене каласа пама кӑмӑллать. Мӗн тӑвӑн, вӑл фронтра хӑйӗн урине хӑварнӑ. Степан Романович /ӳкерчӗк ҫинче/ пирки каярахпа та ҫырӑп–ха, халӗ Анюк аппан калавне тӑнлар–ха.*

Ҫемьере эпӗ асли пулнӑ,— тет вӑл. — Ҫавӑнпа та вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче мӗнпур йывӑр ӗҫ пирӗн ӑрури ҫамрӑк хӗрсем ҫине те ытлашшипех тиеннӗ. Асанне суккӑр пулнӑ, анне пӗр – пӗччен пур ӗҫе те пурнӑҫлама ӗлкӗреймен, хуҫалӑхра арҫын алли ҫитменни хытах сисӗнетчӗ. Эпӗ килте пурин валли те ҫӑпата хамах тӑваттӑм. Пушӑтне туянма укҫа ҫуккипе ӑна хамах хатӗрлеттӗм.

*|Анюк аппа ҫӑпата пирки сӑмах тапратсан, эпӗ атте пире каласа панине аса илтӗм. Вӑл хӑйӗн малтанхи аттине Ташкент хулине ӗҫлеме кайсан туяннӑ пулнӑ. Япалана тирпейлӗ упрама вӗрентнӗ май, атте хӑйӗн аттине 25 ҫул хушши тӑхӑнса ҫӳрерӗм, халь туса кӑларакан атӑ–пушмак пахалӑхӗ ҫав тери япӑх тетчӗ. Унӑн аттине авланнӑ чух Петя тете те тӑхӑннӑ иккен. Хӑй вӑхӑтӗнче вӑл ҫав тери хаклӑ япала шутланнӑ. Пӗр шутласан, ӗненес те килмест. Тепӗр енчен шухӑшласан, атте сӑмахӗ чӑн пулнине йышӑнмах тивет. Паллах, вӑл вӑхӑтра ӗҫлӗ кунсенче е ытти вӑхӑтра та хресчен уринчен ҫӑпата кайман./*

Атте вӑрҫа тухса каяс умӗн эпир пуян пурӑннӑ. Хальхи пекех астӑватӑп, пирӗн ҫав тери тырӑ нумайччӗ, 300 пӑт ытла, ӑна упраса хӑварма та йывӑрччӗ, вӑл кӑвакарма пуҫланӑччӗ. Ҫавӑнпа та эпир хамӑртан чухӑнрах пурӑнакан ҫынсене вӑрҫӑн малтанхи ҫулӗсенче кивҫенле чылай тырӑ салатрӑмӑр. Анчах та кайран вӗсенчен панӑ тырра каялла илеймерӗмӗр. Тӗрӗссипе каласан, пирӗн умра парӑма кӗрекенсен кивҫене парса татма майӗ те

пулман ĕнтĕ. Çапла вара, хамăрăн ырă кăмăла пула, вăрçă вăхăтĕнче выçăллă — тутăллă пурăнма пикентĕмĕр.

Тăван йăмăкăмсемпе пуçтарăнса, сĕтел хушшинче ларнă вăхăтра Таня йăмăкăм çапларах сăмахлать: «Эсĕ, аппа, пирĕншĕн атте вырăнĕнче пулнă». Ку сăмахсенче ÿстерсе калани çук. Вăл чăнах та çапла пулнă.

Вăрман çывăхрах пулсан та вут — шанкă хатĕрлеме те вăл çулсенче çăмăлах пулман. Колхозра ĕçленĕшĕн халăха пĕр пус та тÿлемен тесен те йăнăш пулмасть. Пĕртен — пĕр çăмăллăх вăл пирĕн пÿртре колхоз правленийĕ вырнаçни, кĕркуннехи, хĕллехи вăхăтра çурта ăшăтса тăма вутă — шанкă парса пулăшни пулнă. Тек колхозран нимĕн те илмен тесен те йăнăш пулмасть. Самани çаплаччĕ ĕнтĕ. Кăштах çăнăх пулсан яшкана унпа пĕçернĕ. Юрать — ха чăваш çынни вăрманта е пахчара ÿсекен тĕрлĕ курăксемпе усă курма пĕлет. Çуркунне пуçланасса питĕ кĕтеттĕмĕр. Вăл пирĕн çăлăнăçчĕ. Вăрман кайса серте тататтăмăр. Пултăран, вĕлтĕрен яшки пире выçса вилесрен хăтарнă.

Тылри халăх хăй мĕн ĕçлесе илнине йăлтах фронта панă. Тем тĕрлĕ налук пулнă çав вăхăтра. Ăна та вăхăтра парса татмалла пулнă. Енчен те хресчен патшалăх хушнине пурнăçламасан, килти хуçалăхран выльăх — чĕрлĕхе е хаклăрах япаласене вăйпа тенĕ пекех илсе тухса кайнă. Халăх чăтнă. Влаçра ларакансене хирĕçлеме юраман.

Вăрçă вăхăтĕнче ăçта кăна пулман — ши? Торф кăларнă вырăнта, вăрман каснă çĕрте те, е тата Хусан çывăхĕнче асфальт сарса çул тунине халĕ те асрах тытатăп — ха. Унта эпир тыткăна илнĕ нимĕç салтакĕсемпе пĕрле ĕçлеттĕмĕр. Пирĕн йышри Тюмма Альтукĕ хăюллă хĕрччĕ. Вăл нимĕç салтакĕсенчен ним чухлĕ те хăрамастчĕ, хăйне паттăр тытатчĕ. Шÿтлес енĕпе ăна никам та çитейместчĕ.

Улатăр районне кĕрекен Эйпеç ялĕ çывăхĕнчи вăрман кăларнă çĕрте ĕçленĕ эпир. Хĕллехи вăхăтра унта яхтă касаттăмăр. Алăри пăчăкăн тăрăшшĕ тăвату метрччĕ. Йывăça каснă чух ăна тăваттăн туртаттăмăр. Яхтăна çуррине яхăн кассан уйрăмах асăрханулла пулмаллаччĕ. Вăл çĕр çине хаплатса ÿкес умĕн çынсене хăй айне тума пултаратчĕ. Йывăçа тÿнтерсен ăна 4 — 4,5 метр чухлĕ сыпăламаллаччĕ, хамăрăнах лав çине тиесе ăна чугун çулĕ çывăхне турттарса тухмаллаччĕ. Хĕллехи вăхăтра эпир çуна лавĕсене юра тасатса аяларах вырнаçтараттăмăр. Çапла тусан каснă йывăçсене вĕрлĕкпе хирсе лав çине тиеме

çăмăлтарахчĕ. Унсăрăн епле тийĕн – ха вĕсене? Эпир каснă яхтă пĕренисенчен самолетсен çуначĕсене тунă çĕрте усă куратчĕç, тетчĕç пире. Пăчăкăна хамах хăйраттăм. Эпĕ çӳрекен «Упа» ятлă лаша ватăччĕ. Улатăр вăрманĕсенче ĕçленĕшĕн пире 10 куншăн 5 килограмм çăнăх паратчĕç. Халĕ шутласан тĕлĕнетĕп те: мĕнле чăтнă эпир выçăллă – тутăллă пурăнса вăрман кăларнă çĕрте? Çăнăх шӳрпи, тĕрлĕ курăка çăнăхпа хутăштарса пĕçернĕ пашалусăр пуçне тек нимĕн те пулман – çке урăх. Çав колхоз уйăрса панă 5 килограм çăнăха киле валли те кăштах хăварнă – çке.

Торф кăларнă çĕрте пăрлă шывра пулни те, вăрман кăларнă çулсенче тарласа ĕçленĕ хыççăн шăнни те ахалех иртмерĕ, паллах. Халĕ акă аран – аран çӳретĕп, кунсерен шăм – шак сурнине туятăп...

## ЧИРКӲ ĔÇĔШĔН НУША КУРНИСЕМ

«Ĕмĕрсен кĕрлевĕ витĕр» кĕнекере эпĕ Н. Н. Максимов священник çинчен çырнă чух вăл 1930 – мĕш çулсенче Турханти чиркӳре ĕçлени, кайран ăна тĕрмене хупсан вăл унтах вилни пирки çырнăччĕ. Эпĕ кăштах йăнăшнă иккен.

Нина Александровна Алешева «СВ. СВЯЩЕННОМУЧЕНИК ЕПИСКОП ГЕРМАН /КОКЕЛЬ/ кĕнекере /вăл 2002 – мĕш çулта Н. Новгород хулин «Полиграфлэнд» типографийĕнче 2000 экземплярпа пичетленнĕ/, 85 – мĕш страницăра Н. Н. Максимов протоиерей хăйне тытса кайиччен Шурутра священник пулни, тĕрмерен тухсан çул çинче вилни пирки çырнă. Асăннă кĕнекене эпĕ чăвашла куçартăм /*Ăна ку кĕнекере пичетленĕ/*.

Халĕ эсир куракан сăнӳкерчĕке мана богослови кандидачĕ И. Н. Карлинов протоиерей çӳлерех асăннă кĕнекере пичетлеме панăччĕ. Вăл мана Н. Н Максимов 1930 – мĕш çулсенче Турханта ĕçлени çинчен каласа панăччĕ.

Н. А. Алешева хăйĕн кĕнекинче нуша курнисен списокне асăннă. Вăл 1917 – мĕш çулччен Раççейре 100 пин священник ĕçлени, тепĕр икĕ çултан çак йышран 40 пин çын çеç сывă юлни пирки çырать.

Çапла вара 60 пин священника сăлтавсăрах пурнăçран, тăванĕсенчен уйăрнă. Кунта эпĕ хамăр ял çывăхĕнчи Чиркӳ ĕçĕшĕн нуша курнисем пирки çеç кăштах асăнса хăварасшăн. Вĕсен шутне пирĕн районти Василий Герасимов протоиерей,



***Максимов Николай Николаевич арăмĕпе 1930-мĕш çулсенче ӳкерĕннĕ.***

Серафим иеромонах, Николай Иголкин иерей, Фомин Илья Фомич /*Вăл Анат Тăрмăшĕнче çуралса ӳснĕ. Унăн хĕрĕ Нина халĕ Шурутри чиркӳре манашка тата староста, Георгий мăнукĕ священник пулса ĕçлеççĕ*/, Фомин Тимофей Фомич священник, Цыганова Александра Николаевна /*Çĕнĕ Ахпӳртре çуралса ӳснĕ*/ кĕреççĕ.

Кĕнекере эпĕ Чиркӳ ĕçĕшĕн пирĕн ялти çынсем нуша чăтни пирки мĕншĕн çырас терĕм—ха? Çак сăлтав Анюк аппапа калаçнă хыççăн çуралчĕ. Вăл хăйĕн ашшĕ /*Петр Михайлович Алеметкин*/ Турханти чиркӳре хуралçă пулса ĕçлени çинчен каласа панăччĕ.

Чиркĕве хупнă хыççăн чылай çынна тĕрмене тыта—тыта илсе кайнă иккен. Вĕсен шутĕнче çӳлерех асăннă Н. Н. Максимов протоиерейсĕр пуçне Иван Корнилов /ялта ăна Хура Иван тесе чĕннĕ/ тияккăн, Анастассия манашка /*Ун пирки эпĕ «Ĕмĕрсен кĕрлевĕ витĕр» кĕнекере тата Герман епископ поэмăра çырнăччĕ.*/ тата П. М. Алеметкин пулнă. Анюк аппа каласа панă тăрăх, вĕсене тĕрмере нумай вăхăт хушши тытса тăман, часах ирĕке янă. Влаçра ларакансем çапла хăтланнине, вĕсем чиркӳ ĕçне туса пыракансене хăратас, вĕсен витĕмне халăх хушшинче чакарас тĕллевпе тунă тесе ăнлантарма пулать пулĕ.

Эпӗ «Тӑван ял – йышӑм» хушшинче манӑн атте, Алеметкин К. М. чиркӳ хӗресне хӑй мӗнле вырнаҫтарса лартни пирки ҫыртӑм. Ку чӑн пулнӑ. Ӑна халӗ те ялта астӑваҫҫӗ.

Турханти Чиркӳ чанӗсене епле антарни, ватни пирки ҫӳлерех асӑннӑ кӗнекере Виталий Петрович Сергеев, ҫакна *хӑйӗн куҫӗпе курнӑскер, ҫырса кӑтартнӑччӗ. Ҫавӑнпа кун пирки* текех асӑнса тӑмӑп.

Ялти чиркӳсӗр тӑрса юлсан халӑх ӑҫта пухӑннӑ – ха?

Нумаях пулмасть Николай Петрович Сергеев, хӑйӗн йӑх – тымарӗпе яланах интересленекенскер, мана КГБра упранакан документран ҫырса илнӗ йӗркесемпе паллаштарчӗ. Эпӗ унпа «Ӗмӗрсен кӗрлевӗ витӗр» кӗнекене ҫырнӑ чух усӑ курнӑччӗ.

КГБра упранакан документсенчен ҫакӑ курӑнать. Вӑл вӑхӑтра кулаксен йышӗнче Иван Афанасьевич Кокель, Пирожков Павел тата Романов Андрей шутланса тӑнӑ. Кулаксен хӳрешкисен /подкулачники/ шутӗнче Тигешкин Павелпа Алеметкин Константин Михайлович пулнӑ. Ҫак ҫынсем обновленецсене хирӗҫ кӗрешнӗ, православи тӗнне хӳтӗлес енӗпе тӑрӑшнӑ, чиркӗве хупсан хӑйсен килӗсенче пухӑнсаларнӑ.

Паллах, эпӗ асӑннӑ ҫынсем хӑйсем ҫак хура списока кӗнине пӗлмен, кун пирки тӗлӗкӗсенче те тӗлленмен. Ӑна эпир, вӗсен ачисемпе мӑнукӗсем, халӗ ҫеҫ пӗлме пултаратпӑр.

Эпӗ маларах Анастассия манашка пирки асӑнтӑм. Вӑл Атаманов Николая качча кайнӑ Унӑн упӑшкине Турханта Атаман Микулӗ, тетӗшне Атаман Элексҫей тесе чӗннӗ. Вӗсен ҫурчӗсем, шатрун тӑрӑпа витнӗскерсем, иккӗшӗ те ял варринче ларнӑ.  Атамановсем вырӑс ҫыннисем пулнӑ. Ҫакна та каласа хӑвармалла: Виталийпе Николай Петровичӑн ашшӗ, Петр Сергеевич Сергеев, ҫак йӑхран тухнӑ.

Хӑй вӑхӑтӗнче Анастассия Терентьева Герман епскопа тӗрмене хупсан, Мускавра М. И. Калинин патӗнче пулнӑ, ӑна вилӗмрен хӑтарма пулӑшнӑ. Кун пирки эпӗ ҫӳлерех асӑннӑ «Ӗмӗрсен кӗрлевӗ» кӗнекере тӗплӗнрех ҫырнӑччӗ.

## СТЕПАН КАРЗАКОВ АСА ИЛНИ

*Анюк аппапа калаҫса ларнӑ вӑхӑтра йыснан иккӗмӗшывӑлӗ Валерий те арӑмӗпе, Гальӑпа килсе ҫитрӗҫ. Валерий пӳрте*

*шута илсе панӑ, унччен маларах унӑн «Запорожей» маркӑллӑ автомашинӑччӗ.*

*Урама тухиччен эпӗ йыснаран хӑйӗн йӑх—тымарӗ пирки кӑштах каласа пама ыйтрӑм. Вӑл мана кӗскен ҫапларах каласа пачӗ.*

Эпӗ пӗлнӗ тӑрӑх, манӑн асаттен виҫӗ ывӑл пулнӑ. Вӗсене Ваҫҫа, Илья тата Кузьма тесе чӗннӗ.

*/Хӑйӗн хушамачӗ мӗнле пулса кайнине ыйтсан йысна мана кун пирки «кӑрсак» сӑмахран тесе ӑнлантарчӗ. Н. И. Ашмаринӑн Чӑваш сӑмахӗсен кӗнекин 7—мӗш томӗнче «кӑрсак» тата «кӑрсака» сӑмахсем пирки ҫапла ӑнлантарса панӑ:*

**Кӑрсак** /*кырзак?*/, пузо /с тат./ *Альш. Орау.* Пӗчӗк ачасене: ха, кӑрсаккине тултарн! теҫҫ. *Пь.* Ха, кӑрсакки тесе, мӑн хырӑмлӑрах ачана хырӑмӗнчен лап—лап—лап! ҫапаҫҫӗ.

**Кӑрсака** /*кырзага*/, вспыльчивый. Янтик. Ку ҫӗнӗ учитлӗ пит кӑрсака /горящий/, часах ҫатӑртатса каять. *Пь.* Кӑрсака тесе, час ҫиленекен ҫынна калаҫҫӗ. СПВВ. ФВ. Кӑрсака ҫын — придирчивый. СПВВ. ФВ. Кӑрсака тесе, пит ҫилӗллӗ, час ҫиленсе час ҫиленекен ҫынна калаҫҫӗ. СПВВ. КЕ. Кӑрсака —час ҫиленекен ҫын; хӑйне пӗр сӑмах хирӗҫ каласан, часах виртлешсе каять; ун пек ҫын хӑй ывӑлӗсене питӗ хӗнет. *Ст. Ахпердино.* Вӑл пит кӑрсака /пит час чӗрре кӗрсе каять// *СПВВ. ФВ.* Унпа калаҫма та кӑрсака, туххӑмра урлӑ—пирлӗ пулать, теҫҫӗ/

Роман Васильевич Карзаковӑн Николай /*1922—мӗш ҫулта ҫуралнӑ. Вӑл вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче сержант пулнӑ, Сталинград патӗнче пуҫне хунӑ.*/, Ҫтаппан /*ку —эпӗ, 1924—мӗш ҫулта ҫуралнӑ*/, Алексей /*1928—мӗш ҫулта ҫуралнӑ*/, Михаил /*1930—мӗш ҫулта ҫуралнӑ*/, Нина /*1934—мӗш ҫулта ҫуралнӑ*/, Тарук /*1938—мӗш ҫулта ҫуралнӑ*/, Толя /*1942—мӗш ҫулта ҫуралнӑ*/. Алексей Романовичӑн Вера, Алексей, Коля ятлӑ ачисем пур. Михаил Романовичӑн Валентин ятлӑ ачи Пушкӑртстанра пурӑнать. Унӑн хӗрӗ Луиза Михайловна— медицина наукисен кандидачӗ, доцент, тепӗр хӗрӗ — Людмила Михайловна преподаватель пулса ӗҫлет Тарукӑн ачисем: Саша, Ванюш, Лариса, Юркка ятлӑ.

Василийпе Илья тата Кузьма Карзаковсем хӑй вӑхӑтӗнче тӗреклӗ пурӑннӑ. Вӗсем ялта ӗҫчен, хастар пулнипе палӑрса

тăнă. Çакна виçĕ тăван хайсен вăйĕпе çил арманĕ тытса тăнипе те çирĕплетме пулать.

Эпĕ пĕчĕккĕ чухне час–часах армана атте патне каяттăм, унта тăван тетесем мĕнле ĕçленине пăхса тăма, арман çунаттисем çаврăннине сăнама юрататтăм. Вĕсем мана тÿпене кĕç–вĕç вĕçсе каяс пекех туйăнатчĕç. Пĕррехинче мана анне чашăкпа шăн çу парса ячĕ, армана çитсенех ăна аçуна паратăн, терĕ. Эпĕ хаваслансах хушнине пурнăçламаваскарăм. Анчах та арман тĕлне çитсен такăнса ÿкрĕм, чашăкри шăн çу та çĕр çине лаплатрĕ. Хăраса кайрăм, айван пуçпа шухăшлатăп: «Мĕн туса хутăм–ха? Халĕ атте мана куншăн хытă вăрçать». Тăратăп çапла, çухалса кайнăскер, ним тума та пĕлместĕп. Атте çакна пăхса тăраканскер ман пата пычĕ. Вăл эпĕ хăраса ÿкнине тÿрех асăрхарĕ: «Хăрарăн–им?»— ыйтать лăпкă сасăпа. Эпĕ сăмах хушма та хăратăп. Вăл кулса ячĕ те çапла каласа хучĕ: «Шăн çупа ним те пулас çук. Вăл тÿрех ирĕлсе каймасть. Ăна эпир çиместпĕр вĕт. Унпа арман авăртнă чухне çеç усă куратпăр». Çак саманта халĕ те манаймастăп.

Колхоз тунă çулсенче, ытти хресченсемпе танлаштарсан, пуянрах, тĕреклĕрех пурăнакан çынсене хĕсĕрлеме пуçларĕç. Ку пирĕн тăвансене те тÿррĕнех пырса тиврĕ. Аттепе Илья тете, инкек пуласса сиснĕскерсем, арман тытнă чухне хăйсене тивекен тÿпине, урăхларах каласан, тупăшне, йăлтах Кузьма тетене пачĕç. Хут çинче пĕртен–пĕр хуçа, Кузьма тете пулса тăчĕ.

Вăхăт шунăçемĕн вĕсем çапла туни тĕрĕс пулчĕ. Мĕншĕн тесен часах çил арманне Кузьма тетерен колхоз валли тесе туртса илчĕç. Ялти хуçасем кунпа кăна лăпланмарĕç, Кузьма тетен кĕлетне те пăсса урăх вырăна куçарса кайрĕç.

* * *

*1999–мĕш çулхи январĕн 10–мĕшĕнче манăн йысна, Карзăков Степан Романович хăйĕн алçырăвĕн пуçламăшĕнчех çапла çырать:*

«Ленинград блокади 900 кун хушши пулнă, хула çыннисен вилнĕ шучĕ 600 пин ытла, блокадăри салтаксем 1800 пин чухлĕ пулнă».

*Çавăн пекех вăл çав хаяр вăрçăра Совет Союзĕнчи — 27, тĕнчипе 50 миллион çыннăн пурнăçĕ вăхăтсăр татăлни пирки асăнать. Эппин унăн аса илĕвĕпе паллашар–ха.*

«Эпĕ, Карзаков Степан Романович, 1924—мĕш çулхи Патăрьел районне кĕрекен Çăл Атăк ялĕнче çуралнă. Вăрçă пуçлансан Тăван çĕршыва хӳтĕлеме пирĕн килтен виççĕн тухса кайнă: Карзаков Николай Романович, Карзаков Роман Васильевич, манăн атте тата эпĕ. Тете вăрçа кайиччен колхозра тракторист, атте конюх ĕçĕнче тăрăшнă. Николай Романович Карзаков, 1922—мĕш çулта çуралнăскер, 1941—мĕш çулта фронта кайнă. Вăл унта танк экипажĕн командирĕ, сержант пулнă. Тете Сталинграда хӳтĕленĕ çĕрте пулнине те лайăх пĕлетĕп. Шел пулин те вăл киле таврăнайман, çапăçу хирĕнчех пуçне хунă.

Атте 1899—мĕш çулта çуралнă. Унччен граждан вăрçине хутшăннă. Вăл фронтри çапăçусене хутшăнман, запасра тăнă.

Ăна вăрçа илсе кайсан, эпĕ колхозра атте вырăнĕнче конюх пулса ĕçлерĕм.

Вăхăт иртсе пынăçемĕн вăрçа кайма манăн та черет çитрĕ. Пире часах Первомайскинчи военкомата 1942—мĕш çулхи июлĕн 22—мĕшĕнче пуçтарчĕç. Унта манпа пĕрле пирĕн ялти Ильин Федор Тимофеевич, Карлинов Иван Иванович пурччĕ. Пире, пухăннăскере, Чăваш Республикнчи Çĕрпӳ хулинче салтаксене вăрçа кайма хатĕрлекен полка ăсатрĕç. Кунта 1924—23 çулта çуралнă çамрăксене пуçтарннăччĕ.

Çĕрпӳре тĕрлĕ пăшалсенчен пеме, вĕсене тасатма вĕрентсе çитерсен, пире поездсем çине лартса тӳрех Мускав урлă Ленинград фронтне илсе кайрĕç. Ун чухне чугун çулĕпе хулана лекме май пулман. Эпир Ладога кӳлли урлă çĕрле пăр çийĕн утса, вăрмана кĕрсе вырнаçрăмăр. Анчах та салтаксем çӳрекен çул çине те нимĕç фашисчĕсем тăтăшах бомбăсем тăкатчĕç. Ленин—града кĕмелли пĕртен—пĕр çула «хулан пурнăçĕн çулĕ» тетчĕç. Пире военнăй казармăра лайăх кĕтсе илчĕç. Унта кĕрес умĕн икĕ хапха витĕр, часовойсем сăнаса тăракан вырăнтан иртмелле—ччĕ. Музыка янăратчĕ, вăл пирĕн кăмăла çĕклетчĕ.

Ирхине пурне те список тăрăх тĕрĕслерĕç. Кунта кашни кунах тăвата хутчен апатлантаратчĕç. Военнăй казармăра тăвата кун хушши пултăмăр. Юлашки кунĕнче пире вăрçă трибуналĕ йышăннипе пĕр сутăнчăка персе вĕлернине кăтартрĕç. Тепĕр кунне, тул çутăличченех, Ленинграда çавăрса илнĕ фашистсен ункине çапса салатма тухса кайрăмăр.

Эпир, совет салтакĕсем, тăшманран ним чухлĕ те хăраман. Ленинград урамĕсем тăрăх утнă май çакна асăрхарăмăр:

салтаксен стройне тротуар ҫинче тӑракан хӗрарӑмсем пӑхса тӑраҫҫӗ. Вӗсем пуҫӗсене тайса, тутӑр вӗҫӗсемпе куҫӗсене шӑлатчӗҫ. Ҫак ӳкерчӗк халӗ те куҫ умӗнче тӑрать. Эпир вӗсен хӳтӗлевҫисем пулнӑ – ҫке. Ҫапах та кӑмӑла пусаракан туйӑма сирме урамра янӑракан музыка пулӑшатчӗ, вӑл пире утма вӑй паратчӗ...



*Карзаков Степан Романович*

Часах Ленинградран тухса вӑрҫӑ хирӗ ҫывӑхнерех шурӑмӑр. Каярахпа ҫывӑхри вӑрманта ҫӗр каҫрӑмӑр. Анчах та унта та пӗртте лӑпкӑ марччӗ, ҫине – ҫинех ҫывӑхрах снарядсем ҫурӑлатчӗҫ. Ҫав вӑхӑтра хамӑрӑн ҫывӑх юлташсемпе курнӑҫрӑмӑр. Эпир пӗр арминче, пӗр полкри чӑвашсем чылайӑнчӗ. Пирӗн йышра хамӑр ялти Ильин Ф. Т., Ҫӗньялти Яруков В., Вушнаев Н., Турхантан Кадушкин П. Т. пурччӗ.

Тепӗр кун пире тӗрлӗ ротӑсене салатрӗҫ. Ҫав вӑхӑтрах пирӗн пата, Ленинград фронтне, Инҫет Хӗвелтухӑҫӗнчен, Япони чикки ҫывӑхӗнче тӑракан салтаксем килсе ҫитрӗҫ. Хӗрӳ ҫапӑҫусене хутшӑнма тӳр килчӗ мана та. Апат – ҫимӗҫ ҫителӗклӗ чухне хӗл сиввине те тӳсме те йывӑрах марччӗ. Час – часах каҫ пулсан тӑшман тылне каяттӑмӑр.

Астӑватӑп – ха пӗр рейда. Ҫапла пӗррехинче каҫхи ухутана тухрӑмӑр, тӑшман салтакӗсене землянкӑсенчен хӑваласа кӑлартӑмӑр. Вӗсем, пире кӗтменскерсем, мӗн пур япалисене пӑрахса тухса тарнӑ. Эпир пыриччен тӑшмансем ҫав ҫӗр пӳртсенче койкӑсем лартсах, матрассем сарса, байка утиялӗсемпе витӗнсе хуп турттарнӑ иккен. Канлӗ ыйӑха путиччен, тимӗр каланккӑсенче котелоксем лартса, ҫӗрулми пӗҫерсе ҫинӗ. Эпир тапӑннине сиссенех, тӑшман салтакӗсем пурҫӑн кӗписене тӑхӑнмасӑрах ӑшӑ йӑваран тухса тарнӑ. Вӗсем кашта ҫинче ҫакӑнса тӑратчӗҫ. Землянка ҫывӑхӗнчех минометсем пурччӗ тата ҫӗмӗрӗлсе ларнӑ пӗр танк ларатчӗ, унта – кунта ҫын виллисем выртатчӗҫ. Тӑшмансем вырнаҫнӑ

çĕр пÿрте кĕрсен, эпĕ унта кус тĕлне лекнĕ утияла çурса, хам валли пуртенкке турăм. Ура кăçатă ăшĕнче пулсан та тарланипе хăвăрт шăнатчĕ. Командир кăшкăрать, хăвăртрах землянкăсенчен тухăр, тăшман эпир кунтине пĕлсенех пеме пуçлать тесе. Хушнине пурнăçласа, юр çийĕн шăши пек малалла шурăмăр. Часах фашистсене 8–мĕш ГЭС еннелле хăвалама пуçларăмăр. Унта çитсен, стратеги тĕлĕшĕнчен хамăра кирлĕ пысăк объекта çапăçура туртса илтĕмĕр. Çав вăхăтра манăн чунра пуçласа мăнаçлă туйăм çуралчĕ. Тăшман тарать. Ку вăл эпир вăйлине пĕлтерет–çке! Эппин, часах хамăр çĕре ют йăх–яхсенчен тасатăпăр та мирлĕ ĕçе пуçăнăпăр. 8–мĕш ГЭС тĕлĕнче, станцин ишĕлчĕкĕсем çывăхĕнче, пĕр шăтăк хĕрринче шыв юхăмне çавăракан пысăк кустăрмана асăрхарăм. Унтан та инçех мар пĕр пысăк çурт ларатчĕ, вăл ишĕлменчĕ. Каярахпа унта пирĕн санчасть вырнаçрĕ. 8–мĕш ГЭС çумĕнчен иртсе малалла шуса пынă чух, шыв кустăрми çумне вырнаçрăм, ывăннине пула кăштах сывлăш çавăрса илес тесе, чĕркуçленсе ун çине тайăнтăм, çаврăнса юлташсем еннелле пăхса илтĕм. Пурте йĕркеллех пек. Вара эпир, кăштах вăхăт иртсенех, каллех малалла шурăмăр.

Нимĕçсем каялла чаксанах хÿтĕленме пуçларĕç. Эпир, командир хушнине пурнăçласа, 82 миллиметрлă минометсенчен пеме пуçларăмăр. Тăшман енче часах снарядсем çурăлма пуçларĕç. Часах пĕрле сĕтĕрсе пынă ещĕксенчи боеприпассене йăлтах персе пĕтертĕмĕр. Çак самантра пирĕн çийĕн нимĕçсен разведка самолечĕ вĕçсе иртрĕ. Шел пулин те ăна никам та персе антараймарĕ. Вăл, паллах, эпир тăракан вырăна асăрханă та хăйсене кирлĕ сведенисене пире хирĕç тăракансене пĕлтернĕ. Çакна эпир часах туйса илтĕмĕр. Самолет вĕçсе кайсан нумай та вăхăт иртмерĕ, çывăхрах снарядсем тăкăнма пуçларĕç.

Çав вăхăтра мана пĕр осколок сылтăм кăкăра пырса çапрĕ, вăл антăхтарсах ячĕ, суранран юн юхма тытăнчĕ. Кадушкин Павел пулăшнипе пакетикран лекарство илсе, аманнă вырăна сĕрсе бинтпа çыхрăмăр. Юн юхма чарăнчĕ. Вара эпĕ çапăçура юлташсене пăрахмарăм, санчаçе каймарăм. Фронтра пĕрремĕш хут аманни çапла пулса иртрĕ.

Темиçе кун иртсен Кадушкин Павел та çĕрле аманчĕ, унăн аллине фашистсен снаряд катăкĕ вăйлах сусăрлатрĕ. Вăл çапăçусене манпа пĕрле хутшăнма пултараймарĕ, суран

вырăнне хамăр пĕлнĕ пек çыхни те пулăшаймарĕ. Командир çакна курсан мана çапла каларĕ: «Эсĕ унăн ентешĕ, юлташна санчаçе илсе çитер. Вăл хăй тĕллĕн утса çитеймест». Санчасть ăçта вырнаçнине ыйтсан, вăл мана хамăр маларах туртса илнĕ 8—мĕш ГЭС çывăхĕнчи сыхланса юлнă зданинче вырнаçни пирки каларĕ, унта епле çитмеллине ăнлантарса пачĕ.

Вара эпир çула тухрăмăр. Йывăççен тĕлĕсемпе юлташа çавăтса, уçланкăсенче ыратман аллине çĕр çине хăяккăн хурса, таянкаласа, кăштах вăй илес шутпа канса, санчасть вырнаçнă çурта кăнтăрла иртсен çитрĕмĕр. Пире курсан шурă халат тăхăннă медицина сестрисем чупса тухрĕç, Кадушкин Павела хăйсемпе пĕрле шала илсе кĕчĕç.

Хĕллехи кун кĕске. Каялла, хамăр тăнă часть вырăнне кайма тесе çула тухса, вăрмана кĕрсен, çурма çула çитнĕ çĕре тавралăха хура пĕлĕтсем сырса илчĕç. Умра нимĕн те курăнмасть, аран—аран хамăрăн часть патне çитрĕм, командира Кадушкин Павела санчаçе тĕрĕс—тĕкел çитерни пирки пĕлертĕм.

Пирĕн снарядсем йăлтах пĕтсе çитрĕç. Командир минометсене хăварса малалла шума приказ пачĕ. Кашни салтакăн аллинче винтовкăпа штык, пиçиххи çинче ручной гранатăсем пурччĕ. Боеприпассем сахал пулсан та тăшмана хăвалама чарăнмарăмăр.

Часах пире канма ячĕç. Каялла, хÿтĕрех вырăна утнă чух, пирĕн вырăна урăх салтаксем йышăнчĕç. Вĕсем хăйсемпе пĕрле тачанкăпа танка хирĕç перекен пулемет туртса пыратчĕç. Эсир халь кăштах канăр терĕç. Эпир хăш вырăнта пулни пирки ыйтсан «Синявенский высоти» çумĕнче терĕç. Ăна хамăрăн полк часах тăшманран туртса илчĕ. Ку стратеги тĕлĕшĕнчен малалла тапăнма е хÿтĕленме питĕ меллĕ вырăнчĕ, умра питĕ çÿллĕ çĕр купиччĕ. Ун çине хăпарсан аялта вырнаçнă лаптăк алă тупанĕ çинчи пек лайăх курăнатчĕ. Каларăм ĕнтĕ, эпир çак вырăна тăшманран туртса илтĕмĕр.

Часах эпир пĕр—пĕрне паллакан юлташсемпе пĕр вырăна пуçтарăнтăмăр. Эпĕ пирĕн хушăра Вушнаев çуккине асăрхарăм, кун пирки Яруковран ыйтрăм. Вăл мана тăшман хăваланă вăхăтра Вушнаев вилнине пĕлтерчĕ.

Кăштах канса илнĕ хыççăн апат çирĕмĕр. Тавралăх тĕттĕмленсен пире çапăçма урăх вырăна куçарчĕç.

Эпĕ çивĕç те хăюллă салтак пулнине командирсем часах

асăрхарĕç. Вара мана 946—мĕш стрелковăй полка куçарчĕç, полк штабĕн йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн, тăшман тылне каякан разведка уйрăмне ячĕç.

Пĕррехинче, хальхи пекех астăватăп, февралĕн 21—мĕшĕнче разведчиксен пĕр ушкăнне штабра пуçтарчĕç. Унта кашни салтакран килти адреса, çемьере миçе çын пулнине, кам пурăнать, кам ăçта службăра тărать, кĕскен каласан, пурин пирки те тĕплĕн ыйтса пĕлеççĕ, çав сведенисене хут çине çырса юлаççĕ. Ун хыççăн тин боевой задани параççĕ. Разведкăна каяс умĕн лайăх апат çитереççĕ, хăюллă пулма кăштах эрех параççĕ.

Тăшман тылне каякан разведчиксен ушкăнĕнче тĕрлĕ наци çыннисемчĕ: 5 салтакран иккĕшĕ вырăс, виççĕшĕ чăвашсемчĕ. Вырăссенчен пĕрне пирĕн командир /вăл взвод командирĕн помощникĕччĕ/ туса хучĕç.

Боевой задани пачĕç: тăшман тăракан вырăна çитсен, хăть мĕнле пулсан та фашистсен пулемет точкине аркатмалла.

Хушнине пурнăçлама çула тухрăмăр, штаба хыçала хăварса, Нева шывĕн юппин юппипе, тарăн çырма тĕпĕпе, юрпа хăмăш тарăнлăхĕн хушшипе, шăши пек, малалла шурăмăр. Командирпа эпир иккĕн малта, хыçалта пирĕн юлташсем. Штабран тухсанах вăл мана хăйĕнпе юнашар пулма хушрĕ. Унăн аллинче автомат тата танка сирпĕтекен гранатăсем, пирĕн — винтовкăпа пĕрле штык тата ручной гранатăсем.

Часах тăшман пулеметчикĕсен çĕр пӳрчĕ патне шуса çитрĕмĕр. Иксĕмĕр те алăкăн икĕ енне сăнарăмăр, сасăсем пулнипе пулманнине тăнларăмăр. Командир автоматран печĕ. Çапах та сас—чĕвĕ илтĕнмерĕ. Батарейкăпа çутă çутса, иксĕмĕр те землянкăна кĕтĕмĕр. Шалта никам та курăнмарĕ, урайĕнче эрехĕн пушă кĕленчисем выртаççĕ. Пирĕн хыçра виçĕ салтак юлчĕ. Вĕсем, цепра выртакансем, тапăнакансем пулсан пире хӳтĕлеççĕ. Çĕр пӳртĕнчен тухсан, командир хамăр çине персе ларакан пулемета пĕтерме цепь тăрăх приказ пачĕ, çырма хĕррине кашнийĕшĕ пĕрер граната ывăтăр, терĕ. Хушнине пурнăçларăмăр, тăшманăн пулеметчикĕсене тĕп турăмăр. Вĕсем виççĕн пулнă. Фашистсем кĕске самантрах çут тĕнчепе уйрăлчĕç. Тăшман тылĕнчен тухма васкамарăмăр, хамăра пересссинчен сыхланса чылай вăхăт хушши юр çинче выртрăмăр. Командирпа тепĕр салтак, унăн хушамачĕ Васильевчĕ, малтан пулеметчиксем вырнаçнă тĕле хырăмпа

шуса кайрĕç, унтан часах хăйсемпе пĕрле кирлĕ даннăйсем илсе килчĕç. Çапăçура тупнă хаклă сведенисене командир Васильев салтака штаба илсе çитерме хушрĕ. Эпир вăл каякан çула хÿтĕлеме юлтăмăр. Мĕншĕн тесен, пурте пĕрле кайсан, *пире тăшмансем пурне те тĕп тума пултарнă. Штабра вара* эпир тупнă даннăйсем питĕ кирлĕ пулнă. Командиртан эпĕ Васильев пĕчченех каять – им, мана унпа пĕрле кайма юрать – и тесе ыйтрăм. *Вăл* пĕччен*ех* штаба çитет, эсĕ кунта пулсан, тăшман тапăнсан, эпир пĕрле хÿтĕленетпĕр, терĕ.

Васильев, штаба çитсен, часах каялла çаврăнса çитрĕ. Штабрисем пире чаçе таврăнма хушнă, çав вырăнтах юлсан сире пурне те вĕлерме пултараççĕ тенĕ. Вара эпир малтан килнĕ çулпах, хамăрăн малти лининчен инçех мар, нимĕçсем курăнмалла мар хÿтĕрех вырăна каялла шурăмăр.

Пирĕн Нева пăрĕ тăрăх ăçта май пур, унта чупса е выртса, е хырăмпа шуса хамăрăннисем патне çитмелле. Эпир куçакан вырăна тăшманăн снайперĕсем те сăнаса тăнă. Виççĕн пăр урлă чиперех каçса кайрĕç. Анчах та ман умра чупакан Комсомольски районĕнчи Димитриев Василие уринчен амантсан, манăн ăна пулăшма тиврĕ, çавăнпа та юлташсенчен хыçалта тăрса юлтăм. Аманнă юлташа малти лини патне сĕтĕрсе çитерсен, пире хирĕç шуса тухнă пĕр санитар Васильевăн урине çыхса яма пулăшрĕ. Ку ĕçе снаряд çурăлнипе, çын алтнă пек, пĕр шăтăкра турăмăр. Тăшман асăрхарĕ те пирĕн çине *вут – çулăм тăкма пуçларĕ. Ниçта та кайса кĕме çук.* Чылай вăхăт хушши хамăра хÿтĕлекен шăтăкра вилнĕ çынсемпе юнашар выртма тиврĕ. Анчах та часах ман çумрах снаряд кĕрĕслетрĕ, хăлхасене йăлтах хупласа лартрĕ. Тăна кĕрсен икĕ ура та пĕçерсе кайнине туйрăм. Санитарпа пĕрле юна чарас тесе сурансене çыхрăмăр. Уйрăмах манăн сулахай ура вăйлах сусăрланнă: снаряд ванчăкĕ ура сыппинчен çÿлерех уран шăммине йăлт ватса çĕмĕрсе тухса кайнă, аманнă вырăнăн пысăкăшĕ чăх çăмарти пекех, уран ÿчĕсем кăна курăнаççĕ. Юн юхать. Тепĕр урана та снаряд ванчăкĕ лекнĕ, вăл ура сыппинчен çÿлĕрех вырăнта, ура шăмми çинчен ÿчĕпе какайне хырса тухса кайнă. Санитар тăрăшсах сурана çыхсан та юн юхнине йăлтах чарма çук. Вăл ку самантра мĕн тăвайĕ ĕнтĕ? Аманнипе юн тымарĕ татăлнă – çке. Пуç та янраса кăна тăрать. Снаряд ванчăкĕ, сулахай хăлха витĕр тухса, шăмă çине кĕрсе ларнă. /*Калас пулать, вăл паянхи кунта çав вырăнтах ларать.*

*Вăхăт вăхăтпа суран хăйĕн пирки аса илтерсех тăрать, пуç ыратать./*

Тăшман эпир вырнаçнă шăтăка сăнасах тăнă. Çавăнпа та мана февралĕн 22—мĕшĕнчен пуçласа, февралĕн 25—мĕшĕччен малти линирен илсе тухаймарĕç. Виçĕ талăк хушши вилнĕ салтаксемпе юнашар юн юхтарса выртрăм.

Çав тамăкран санитаркăсем мана волокушка çине хурса илсе тухрĕç. Унтан тӳрех Морозовка станци патĕнчи санитари чаçне ăсатрĕç. Унта чылай вăхăт хушши тытса тăмарĕç, тепĕр кун Ленинградри госпитале илсе кайрĕç. Унта çитсенех çĕрле çутă çутса сулахай урана, ура сыппинчен çӳлерехрен, хирургсем татрĕç. Вĕсем хăйсем васканине мана кайран çапла каласа пачĕç: енчен те уруна татмасан, эсĕ тепĕр 5—6 сехетрен вилеттĕн, çавăнпа та пирĕн тул çутăличченех санăн пурнăçна сыхласа хăварма тиврĕ.

Çапла вара эпĕ çамрăклах хамăн урана Ленинград фронтĕнче хăвартăм, çамрăклах инвалид пулса тăтăм.

Госпитальте сывалнă вăхăтра икĕ хутчен юн ячĕç. ун хыççăн тин ӳт—пĕве вăй кĕчĕ, хама лайăхрах туйма, апат çиме пуçларăм. Кунта эпĕ 22 кун выртрăм, унтан Сокол хулине куçарчĕç. Вăл хамăр еннелле тухмалли çул çинче вырнаçнăччĕ. Кунти госпитальте пĕр уйăх хушши сипленĕ хыççăн, мана Красноярск тăрăхĕнчи Абакан хулине поезд çине лартса ăсатрĕç. Ку хулара сулахай уран пысăк шăммине чĕркуççирен *4—5 см чухлĕ хăварса, урана татах татрĕç.*

Госпитальсенче сипленнĕ вăхăтра нуша хыççăн нуша куртăм. Урана сипленĕ хыççăн протез туса пачĕç, унпа утма вĕрентрĕç. Ун хыççăн киле кайма юрать тесе, документсене хатĕрлесе хамăн аллах пачĕç. Вĕсене Тăван çĕршывна çитсен кăтартатăн, «история болезни» тесе çырнине военкомата çитерсе пама хушрĕç.

Эпĕ сипленнĕ госпиталь малтан Украинăри Харьков хулинче пулнă. Вăрçă пуçлансан ăна Çĕпĕре куçарнă, номерне халĕ те лайăх астăватăп, унăн кĕске адресĕ çапламчĕ: ЭГ—1782.

Çапла вара Тăван çĕршыва хӳтĕлесе эпĕ икĕ хут амантăм. Пирĕн 946—мĕш стрелковăй полк 67—мĕш Армин йышне кĕретчĕ.

Правительствăн наградисем:

**Орден Отечественной войны I степени.** Ăна хамăрăн полк штабĕн учечĕ тăрăх, Совет Союзĕн Оборона Министрĕ Гречко

юлташ алă пуснипе пачĕç

**Орден Отечественной войны II степени.**

**Медаль «За оборону Ленинграда».**

**Медаль «За доблестный труд».**

**Çавăн пекех юбилей медалĕсен шучĕ — 10.**

Тата манăн чуна хумхантараканни, савăнтараканни çакă *пулса тăрать: фашистла Германие çапса аркатнăранпа 30 çул* çитнĕ ятпа СССР Оборона Министрĕ Гречко юлташ Шупашкарти военкомат урлă ман ятпа ятарласа çыру янă. Унран тĕслĕх илсе Шупашкарти, Патăрьелĕнчи военкомсем те, райкомпа райисполкома ертсе пыракан пуçлăхсем те мана саламларĕç. Çав хаклă çырусене мана Илья Владимирович Нягин йышлă халăх умĕнче алăран тыттарчĕ. Çавăн пек самантсем ĕмĕрлĕхех асра юлаççĕ. Вĕсем эпĕ Тăван çĕршывăн ирĕклĕхне сыхласа хăварассишĕн хамран мĕн килнине пурне те тунине пĕлтереççĕ».

*Куратпăр ĕнтĕ, манăн йысна, Карзаков Степан Романович вăрçăра харсăр салтак пулнă. Эпĕ унăн аса илĕвне ним улăштармасăр, хăй мĕнле çырнă, çавăн пекех пичетлетĕп.*

*Пурнăçăмра унпа сайра—хутра курнăçсан та, кашни тĕл пулура пĕрле калаçса ларнă хыççăн тарăн шухăша путатăп: мĕн кăна чăтса ирттерме тивмен—ши унăн пурнăçра? Çапах та парăнман салтак, пăйкăшман, шав малалла талпăннă, çапла майпа вилĕме çĕнтернĕ. Шутласа пăхăр—ха. Вăл виçĕ талăк хушши юн юхтарса выртнă. Çапах та çирĕп шаннă, ăна тус—юлташĕсем вăрçă хирĕнче пĕччен пăрахса хăвармаççĕ, пулăшаççех. Чăнах та унăн ĕмĕчĕ кайран пурнăçланнă.*

*Эпĕ йыснан аса илĕвĕпе паллашсан, унпа ăшра вăрттăн мухтантăм та. Çакăн пек паттăрпа Элемет йăхĕнчен тухнă манăн аппа хăйĕн пурнăçне унпа çыхăнтарнăшăн тивĕçлипех савăнтăм.*

*Вăрçă хыççăн вăл мирлĕ пурнăçа кӳлĕннĕ. Кун пирки малтан та асăнтăм—ха, хăйĕн ĕмĕрĕнче аппапа пĕрле виçĕ хутчен çĕнĕ çурт туса лартнă. Кирек мĕнле ĕçе те тиркесе тăман, ăçта вăй çитнĕ унпа пулма тăрăшнă.* «Аппупа, *— тет вăл, —* иксĕмĕр малтанхи çурта пуралараăмăр, платниксене тара тытмарăмăр, никам пулăшмасăр, ăна иксĕмĕрех çĕклесе лартрăмăр.

*Пилĕк ача пăхса ӳстернĕ вĕсем, пурне те тивĕçлĕ пĕлӳ парса пурнăç çулĕ çине кăларнă.*

*Хăш—пĕр писательсем, илемлĕ произведени çырнă чух, вăрçăри пулăмсене хитрелетсе çырма тăрăшаççĕ. Чăнах та, кĕнекесенчи геройсен сăнарĕсем чылай çыннăн лайăх енĕсенчен калăпланаççĕ. Паллах, çавăн пек произведенисем те халăха кирлĕ. Ку тĕлĕшпе эпĕ писательсене хирĕçлеместĕп. Мана мĕн шухăша ярать—ха йыснан аса илĕвĕпе паллашнă хыççăн? Пĕлместпĕр çав эпир хамăрăн çывăх тăвансен, хурăнташсен пурнăçне. Пирĕн вĕсен кун—çулне тĕплĕн тĕпчемелле, çырмалла. Çапла тусан çеç çамрăксемпе ваттисен ĕмĕртен ĕмĕре, ламран лама куçса пыракан туслăхĕ аталанса пыма пултарать. Вара çамрăксен аксакалсене хисеплес туртăм мĕн пĕчĕкрен йăл илсе вăйланать.*

*Совет влаçĕ вăхăтĕнче çамрăксене тĕрĕс воспитани парас енĕпе тăрăшатчĕç. Шел пулин те хальхи саманара ытларах çынсем хăйсем пирки çеç пуç ватма пуçларĕç.*

*Йыснан аса илĕвне вуланă хыççăн тата тепĕр саманта çырса хăварасшăн. Малтанах каларăм—ха вăл паттăр пулни, çын куçĕнчен пăхма юратманни пирки.* «Пĕлетĕн – и, эпĕ санăн аппупа епле пĕрлешнине? — *ыйтрĕ вăл манран. Унтан хăех хурав пачĕ.* — Ăна куç хывакансем чылайăн пулнă. Анчах та эпĕ вĕсене шăн пăр çинче лартса хăвартăм,— *кулать йысна.*— Эпĕ ялсенчи çирĕпленнĕ йăлана пăхăнмарăм, аппун килне евчĕ ярса тăмарăм. Пĕр тĕл пулура унран çапла ыйтрăм: «Анюк, мана качча тухма килĕшетĕн – и?» «Килĕшетĕп»,— терĕ вăл. Вара эпир сельсовета кайрăмăр, унта тӳрех çырăнтăмăр. Вара ăна, Сетнер Нарспине вăрланă пек, урхамах çине лартса киле илсе килтĕм. Сирĕн ялта Çтаппан Анюка вăрласа кайнă текен хыпар çиçĕм пек хăвăрттăн саралнă. Эпир ĕçсе савăнса ларнă вăхăтра ман пата ик – виçĕ йĕкĕт киле пычĕç. Эпĕ вĕсене сельсоветра панă документа кăтартрăм. Ним тума та çук, эпир саккуна пăсман. Пуш алăпах кайма тиврĕ йĕкĕтсен Турхана...

*Йысна хăпартланса калаçать. Ăна никам та 80 çулхи çын тесе калаймасть. Вырăссем ырра шанса, шанăçпа пурăннине «оптимизм» сăмахпа палăртаççĕ. Çак сăмахпа çеç йыснан çирĕп кăмăлне палăртни те çителĕксĕр пуль. Вăл хăйне евĕрлĕ, çав тери вĕри этем, кирек мĕнле йывăр лару—тăрура пуçне усмасть, нимрен те хăрамасть, сăмаха пат! татса калать, кирек мĕнле пуçлăх умĕнче ыйту палли пек пулса кукăрălмасть, япăххине — япăх, начаррине — начар, лайăххине — лайăх тет.*

*Паллă ĕнтĕ, çемье тĕрекĕ икĕ çын пĕр çăвартан сурнинчен*

## *Родословная таблица Ергуновых, Алеметкиных, Федотовых*





Алеметкин Алексей Константинович с женой и ребенком



Алеметкин Геннадий Васильевич, Федотов Сергей Александрович




*Кушманов П. К.— колхозри партком секретарӗ, варринчи Кутузов Валерий — колхоз хорӗн ертӳҫи. 1980 ҫул.*



*Трошкинсен çемйи*



*Карзаковсем мăнукĕсемпе*

*килет. Çур ĕмĕр пĕрле килĕштерсе пурăнаççĕ аппапа йысна. Çак вăхăтра вĕсем ыррине те астивнĕ, ытларах нушине те курнă. Малтанах каларăм–ха, пĕр виç çул каялла Анюк аппа утайми пулни пирки. Ăна, тĕрĕссипе каласан, ура çине йысна тăратрĕ. Хаклă эмелĕсем те пулăшнă–ха, унсăр май та çук. Çапах та, ман шутпа, аппана сывалма йыснан ырра шанса, шанăçа мала хунин витĕмĕ хавал панă. Вăл халь те пурăнма вăй парса тăрать тесе çирĕплетме пулать. Кĕскен каласан, вĕсем куллен–кун пĕр–пĕрне хисеплесе, юратса, пĕр–пĕрне пулăшса, ăшă сăмах каласа, килĕштерсе пурăнаççĕ, пĕр–пĕринчен вăй–хăват илсе тăраççĕ.*

## Яргуновсем, Алеметкинсем, Федотовсем...

Пирĕн ăрăва пуçласа яраканăн ячĕ Ярхун пулнă, тет Анюк аппа. Вăл тĕрĕс калани, тепĕр документпа паллашсан, çирĕпленчĕ.

Кăçалхи Çĕнтерӳ кунне паллă тума Турхана кайрăм, унта тус — юлташсемпе, тăвансемпе курса калаçрăм. Халăх ял варринче уява ирттернĕ вăхăтра Турханти вăтам шкул директорĕпе, Валентин Порфирьевич Сергеевпа тĕл пултăм. Вăл çак кунсенчех Турхан ялĕнчи çынсен йăх — несĕлĕсен таблицисемпе мана паллаштарма сăмах пачĕ. Эпĕ çак хаклă документ пурри пирки пĕлеттĕм — ха. Анчах та ăна хам куçпа курасса шанмастăм. Майăн 10 — мĕшĕнче тĕл пулма калаçса татăлтăмăр Валентин Порфирьевичпа.

Тепĕр кунне эпĕ Николай Сергеевич Зубовпа тĕл пултăм. Вăл эпир иксĕмĕр те пĕр йăхран тухнине пĕлет, анчах та Ярхун йăхне пуçласа яракансен ячĕсене манса кайнă. Санăн аçу, Константин Михайлович калатчĕ — ха кун пирки, тет. Унпа калаçса ларнă хыççăн шкула кайрăм.

Валентин Порфирьевич Сергеев хăй сăмахне пурнăçларĕ, мана халĕ эсир куракан таблицăсене алăран тыттарчĕ. Хумханса паллашрăм эпĕ вĕсемпе. Нумай ыйту çийĕнчех татăлчĕ. Шкул директорне тав туса тухрăм та, каллех Николай Сергеевич Зубовпа тĕл пулма васкарăм. Вăл мана курсанах: «Хăвăн пулас кĕнекӳн докуменчĕсене манса хăвартăн»,— тет. Эпĕ ăна хавасланса Валентин Порфирьевич панă хаклă документсемпе паллаштартăм. Тинех куççем уçăлчĕ, хамăр хăш енчен тăвансем пулнине тин пĕлме пултартăмăр.

## Род Лещевых



Терентии
Андрей
Степан
Николай
Василий
Валерий
Семен
Алексей
Василий
Бронислав
Мирон
Яков
Егор
Федор
Константин
Кирилл
Мирон
Анатолий
Геннадий
Терентий
Афанасий
Петр
Ирина
Илья
Сергей
Константин
Николай
Иван
Семен
Илья
Татьяна
Петр
Алексей
Иван
Николай
Илья
Василий
Аврам
мать

Ăрусен йăх таблицисене Алексей Михайлович Косойкин пурнăçланă. Хăй вăхăтĕнче çав тери пысăк ĕç тунă вăл. Ĕмĕр – ĕмĕр тав ăна!

Йăх таблицисемпе паллашсан мĕн курăнать – ха? Иван — Ергуновсен, Алеметкинсен, Федотовсен йăх пуçĕ. Иванăн Хĕветĕр тата Элекçей ятлă ачисем пулнă. Хĕветĕр енчисем каярахпа Федотов тата Яргунов, Элекçей ачисем Алеметкин хушаматсемпе çӳреме пуçланă.

Алексей Михайлович Косойкин хатĕрлесе хăварнă Лещевсен йăх таблиципе те кăсăкланса паллашрăм. Ăна, ман ыйтăва темиçе çул иртсен хуравлас шутпа тенĕ пекех, йĕркеленĕ. Элемет Михалин /*ман асаттен*/ арăмĕ Терентий ятлă çыннăн хĕрĕ иккенне тата унпа пĕрле А. М. Сесмеркинăн арăмĕ е амăшĕ Татьяна ятлă пулни çинчен, И. Г. Рябчиковăн амăшĕ те çак килтенех тухни пирки палăртса хăварнă. Рябчиков Исай Гаврилович ахаль хресчен пулманни пирки те пĕлтернĕ: вăл «гл. Зем. упр.» тенĕ. Глава Земского управа тесе ăнланмалла – ши?

Алексей Михайлович Косойкин Турхан ялĕнчи çынсен йăх таблицисене хатĕрленĕ чух арçынсен ячĕсене çеç асăннă. Кунта вара вăл тĕп çултан кăшт пăрăннă. Мĕн хистенĕ ăна Лещевсен йăхне пуçарса яраканăн, Терентийĕн хĕрĕсене асăнса хăварма?

«Советский Энциклопедический Словаре» /*Москва, Советская Энциклопедия, 1990 г.*/ уçар – ха. 465 – 66 – мĕш страницăра «Земство» пирки çапла çырнă:

**Земская управа,** *уездная и губернская, исполнит. орган земства в России /пред., 2—3 чл./; избиралась на земских собраниях на 3 года.*

**Земство** */земские учреждения/, выборные органы местного самоуправления /земские собрания, земские управы/ в России. Введены земской реформой 1864; к 1914 — в 43 губ. Ведали просвещением, здравоохранением, стр—вом дорог и т. д. Избирательная система по 3 куриям /уездные землевладельцы, владельцы гор. недвижимости, представители от сел. об—в/ обеспечивали господство помещиков. Контролировались Мин—вом внутр. дел и губернаторами, имевшими право отмены постановлений 3. постоянно урезались пр—вом. Контрреформы усилили правительств. опеку. Упразднены в 1918 декретом Сов. пр—ва.*

Рябчиковсен йăх таблиципе паллашсан, Сергей Георгиевич хăйĕн ачине мăн аслашшĕн, Исай Гавриловичăн ятне панине пĕлме пулать. Тĕлĕнмелле! Тахçан – тахçан пирĕн мăн асаннесем

## Рябчиковы


Исай
Сергей
Василий
Георгий
Иван
Александр
Фрол
Изосим
Исай
Гаврил
Семен
Петр
Николай
Василий
Алексей
Артамий
Отто
Петр
Михаил
Никифор
Димитрий
Василий
Витолий
Петр
Ефим
Егор
Валерий
Николай
Виктор
Семен
Иван
Пуд
Василий

пĕр йăхран тухнă иккен. Исай Гаврилович Рябчиков та хăй *вăхăтĕнче вĕреннĕ, ăслă çын шутĕнче тăнă. Мĕншĕн тесен,* земство управине ертсе пыма пĕлӳ пухнă çынна çеç суйласа ларма пултарнă. Вăл вăхăтра Турхан ялĕ вулăс центрĕ пулнă.

*Эпĕ Георгий Фролович Рябчикова лайăх астăватăп.* Унăн малтанхи ачисем Светлана, Нина тата Оля ятлăччĕ. Йăх тымарне тăсаканни Сергей шутланать. Ăна ашшĕ питĕ кĕтнĕ. Пушар деповĕнче ĕçленĕ вăхăтра вăл ывăлне Сергее яланах лаша урапи çине лартса çӳретчĕ. Пытарма кирлĕ мар ĕнтĕ, кирек мĕнле арçын та хăйĕн йăхне тăсакана, вăл çут тĕнчене килессе, çапла вара хушамат упранса юласса кĕтет.

Çулсем иртсен, хамăн ялти пахчана сухалама шутласан, манăн Сергей Георгиевичран пулăшу ыйтма тивнĕччĕ. Вăл хирĕçлемерĕ, тӳрех килĕшрĕ. Паллах, ун чухне эпĕ унпа тăван – хурăнташ пулнине пĕлмен те.

Шупашкарта Светлана Гергиевнăпа та тăтăшах тĕл пулатпăр. Вăл хальхи вăхăтра пенсие кайнă. Упăшкипе Василий Ивановпа та, паллă спортсменпа яланах туслă пурăнатпăр.

Чăваш халăх поэчĕпе, Аслă Арапуçĕнче çуралса ӳснĕ Василий Иванович Давыдов – Анатрипе эпĕ писательсен Союĕнче ĕçлеме пуçласанах çыхăну тытма пикеннĕ. Вăл мана *хăй вăхăтĕнче* СССР *писателĕсен* Союзне кĕме *хавасланса*х рекомендаци панăччĕ. Турхан ялне кайсан, хамăр урамра пурăнакан Егор Николаевич Рябчиковпа тăтăшах тĕл пулатăп, *вăл, кашнинче тенĕ пекех, чăвашсен паллă поэтне хăйĕнчен* салам калама хушать. Эпĕ, паллах, кун пирки Василий Ивановича пĕлтерсех тăратăп. Çак кĕнекене хатĕрленĕ чухне В. И. Давыдов – Анатрие килне шăнкăравларăм. Телефон трубкине сăвăçă хăех тытрĕ. Мăшăрĕ Мария Максимовна кăштах чирлекелет. Мĕн тăвăн? Халĕ ĕлĕкхи пек çамрăк мар çав. Ватлăх хăйĕн ĕçнех тăвать. «Василий Иванович, — ыйтатăп унран, — Эсир Рябчиковсемпе хăш енчен тăван пулатăр?» Вăл мана Микула тете енчен, тет.

Рябчиковсен йăхне пуçарса яракансене Алексей Михайлович Косойкин икĕ таблицăра кăтартнă. Микула тетене ялта Пудак /*«пăт» сăмахран тухнă пулĕ*/ Микули тетчĕç. Эпĕ пĕлнĕ тăрăх, Микула тетепе пĕр çуртран Семенпа пĕрле Хĕветĕр те тухнă. Вăл гражданвăрçинче епле вилни, унăн арăмĕ манăн арăмĕн асламăшĕ пулни çинчен «Ĕмĕрсен кĕрлевĕ витĕр» кĕнекере тĕплĕн çырнăччĕ.

Василий Иванович, паллах, пур ята та лайăх астумасть. Вăл амăшне хĕр чухне Александра Семеновна Адьютанова тенине, вăл Сĕнтĕрте çуралса ÿснине асăнчĕ. Унпа пĕрле пĕр килтен Наçук аппа тата Трифон кукка тухнă, тет. Чăваш халăх поэчĕпе кĕске вăхăт хушшинче калаçса илсенех, эпĕ унăн амăшĕ, Александра Семеновна, хут вĕренмен пулсан та юрлама юратнине пĕлтĕм. /*Вăл 1989—мĕш çулта çуралнă, 1963—мĕш çулта вилнĕ.*/ Эппин, амăшĕн Турă панă пултарулăхĕ каярахпа ывăлне куçнă иккен. Василий Иванович манпа калаçнă май, çине—çинех Ефим Николаевич Рябчиков ятне асăнчĕ. Эпĕ вара ача чухне Ефим тете хăйĕн çав тери уçă сасăллă хут купăсне каланине аса илтĕм. Ялта ун пек чаплă хут купăс тек çукчĕ те пулĕ.

Турханта вĕреннĕ чухне пире музыка енĕпе Алексей Михайлович Адъютанов вĕрентетчĕ. Эпĕ çакна мĕншĕн аса илтĕм—ха? Турă панă таланта ниçта та пытараймастăн. Вăхăт çитсене вăл çурхи ейÿ пек тапса тухать. Çапла вара чăвашсен чаплă поэчĕ çуралассри çак сăлтавсенчен те килнĕ пулĕ тетĕп.

Василий Иванович хăйсен çемйинчен тухнисен ячĕсене те асăнчĕ. Вĕсем çаксем: Акулина Ивановна Давыдова /1903—1982 çç./, Максим Иванович Давыдов /1905—1986 çç./, Давыдов Виктор Иванович /1914—1990 çç./ Апполинария Ивановна Давыдова /1921—1956 çç./ Ку килтен тухнă Максим Иванович, вăрман хуçалăхĕнче ĕçлес тĕллевпе аслă пĕлÿ илнĕскер, Аслă Арапуçĕнчи пĕрремĕш инженер шутланать. Тепĕр пиччĕшĕ, Виктор Иванович, вăрçă паттăрĕ, художник пулнă.

«Эпĕ мĕн пĕчĕкрен ĕçе кÿлĕннĕ,— тет Чăваш халăх поэчĕ. — анне мана нумай çул хушши çут тĕнчере пурăнатăн тетчĕ. Вăл тĕрĕсех калаnă иккен».

Чăнах та, Рябчиковсем те Турханти çав тери ĕçчен çынсен йышĕнче тăраççĕ. Ку ен ăруран ăрăва, вĕсен пур ачисене те, мăнукĕсене те куçса пырать. Кам ĕçлеме ÿркенмест, вăл лайăх пурăнать.

Маларах эпĕ Ефим Николаевич Рябчиков пирки асăнтăм. Вăл чиркÿре манăн тетен, Василий Константинович Алеметкинăн хĕреснашшĕ пулнă. Эпĕ лайăх астăватăп, манăн атте Рябчиковсен йăхĕнчен тухнă çынсемпе яланах туслă пурăнатчĕ. Халĕ сăлтавне тавçăрса илтĕм ĕнтĕ.

Василий Иванович Давыдов—Анатри: «Эпир санпа, шăллăм,

хурӑнташ — тӑвансем, тет. Эпӗ, паллах, куншӑн савӑнатӑп. Тен, халӑх поэчӗ кӑштах ӳстеререх, мана тӑван литература кaçалӑкӗнче ӗçлеме хавхалантарас шутпа калать.

Çывӑх тӑвану чаплӑ çын пулни аван. Анчах та ку чӑнлӑх сана та хӑвӑн общество умӗнчи тивӗçне, яваплӑхна яланах туйса тӑма хушать. Пуçра вара ваттисем мӗн авалтан «чӑваш ятне ан çӗрт» тесе калани янӑрать. Чӑваш халӑх поэчӗ хӑйӗн амӑшӗ Шӑхач ялӗнче çуралнине асӑнчӗ. Манӑн анне те çак ялтах çуралса ӳснӗ. Эпӗ пӗлнӗ тӑрӑх, чӑвашсен паллӑ поэчӗ, философи докторӗ Николай Аверкиевич Исмуков та маларах асӑннӑ А. М. Адъютановпа çывӑх хурӑнташсемех. Раиса Сарпи поэтессӑн ашшӗ енчи тӑванӗсем те Шӑхач ялӗнче пурӑнаççӗ. Раиса Васильевна манпа тӗл пулсан, эпир санпа Мыловсен енчен тӑвансем пулатпӑр, тет. Чӑвашсен тепӗр паллӑ писателӗ Васлей Игнатьев прозаик та Мыловсене тӑван лекеççӗ. Пӗррехинче Василий Герасимович мана Раиса Сарпи хӑйӗнпе тӑван пулнине каланӑ. Эпӗ малтан ӗненмерӗм, ку поэтессӑн фантазийӗ пулӗ тесе шухӑшларӑм, тет вӑл. Кайран хамӑн тӑвансемпе тӗл пулса калаçсан, Сарпи тӗрӗс калани çирӗпленчӗ, тет Васлей Игнатьев. Кун пирки эпӗ каярахпа çырӑп — ха.

Илсе кӑтартнӑ тӗслӗхсем мӗн пирки калаççӗ — ха? Шӑхач ялӗ чылай поэтпа писательсемшӗн ытла та сӑваплӑ вырӑн иккен. Чӑваш çыравçисем ку ялпа куçпа курман çипсемпе çыхӑннӑ. Анчах та, шел пулин те, пурнӑçра эпир хамӑрӑн йӑх — несӗлсем пирки лайӑх пӗлместпӗр, камсене пула çут тӗнчере çӳренине чухламастпӑр.

Вулакан ман пирки, ку этем паллӑ çынсен çумне çыпçӑнса, хӑйӗн чапне ӳстерес тесе тӑрӑшать тесе те шутлама пултарать, паллах. Ку апла мар. Эпӗ, ку кӗнекене çырнӑ май, пӗр тӗллеве çеç пурнӑçласшӑн: манӑн хамӑра пурнӑç панӑ çынсен ячӗсене тупса палӑртмалла, вӗсемпе халӑха паллаштармалла.

Чап тени вӑл урӑх ӑнлав. Паян, сӑмахран, эсӗ пуян е сан яту таврара кӗрлесе кӑна тӑрать. Анчах та ВӐХӐТӐН АЛИ çав тери тиркевлӗ. Вӑл кӗске самантрах тӗрлӗ çӳп — çапсенчен хӑвӑрт тасалать, малашнехи пурнӑçра мӗн хаклӑ, çавна çеç çынсем валли хӑварать. Хӑть мӗнле тапаçлан, чӑвашсем «кӑвапуран çӳле сикейместӗн» тени яланах тӳрре тухать. Эппин, тивӗççӗр каппайланни, мӑнаçланни нихӑçан та мӑн кӑмӑллӑ çыннӑн хакне ӳстереймест. Кӗскен каласан, çын ячӗ


Косойкины-40
Степан
Петр
Кирил
Иван
Михаил
Павел
Семен
Сергей

вăл хăйĕн пурнăçĕнче тунă ырă ĕçĕсене пула кăна килес ăрусемшĕн упранса юлма пултарать.

## Çĕнтерӳ парадне хутшăннă паттăрпа Николай Сергеевич Зубовпа тĕл пулсан...

Эпĕ маларах Николай Сергеевич Зубов патĕнче пулни пирки, эпир унпа пĕр йăхран тухнине асăннăччĕ. Халĕ хамăн çывăх тăванăм пирки çырам–ха. Çĕнтерӳ парадне хутшăннă, тивĕçлипех мухтава тивĕçлĕ Николай Сергеевич пирки сăмах хускалчĕ пулсан, эпĕ пĕр самант пирки те вулакана пĕлтересшĕн.

Çĕнĕ Шупашкарта, çак хулана никĕслекенсенчен пĕри — Виталий Петрович Сергеев пурăнать. Эпĕ унпа «Ĕмĕрсен кĕрлевĕ» ятлă кĕнекене çырнă май çывăххăн паллашса кайрăм. Яланах пĕр–пĕринпе телефонпа калаçсах тăратпăр. Унăн шăллĕпе те, Çĕнĕ Шупашкарăн пуçлăхĕ пулнă Николай Петровичпа та юлашки çулсенче туслă çыхăну тĕрекленсе вăй илчĕ. Çапла, пĕррехинче, Виталий Петровичпа телефонпа сăмахлатпăр, пĕр–пĕрне çĕнĕ хыпарсем пĕлтеретпĕр. «Пĕлетĕн–и, — калаçать Виталий Петрович, — радиопа Николай Сергеевичăн мăнукĕ /*сăмах Василий Николаевич Зубовăн хĕрĕ Люба пирки пырать*/ калаçрĕ. Ăна корреспондент çинс–çинс ыйту парть. Лешĕ, шкул ачи пулсан та, ватă ăсчах пек сăмахлать, кашни сăмаха виçсе калаçать. Чăваш чĕлхи пирки унран ыйтсан, вăл тăван сăмахлăха упрамалли çинчен ĕнентерӳллĕн те витĕмлĕн, тĕслĕхсем илсе калаçма пмкенчĕ. Тĕлĕнсе те савăнса итлерĕм ăна, хам ăшра шутлатăп: ара, Николай Сергеевич Зубов ирçе çынни–çке. Вăт пăх та кур, епле маттур мăнук ӳсет ку кил–йышра».

Эпĕ малтанах Виталий Петровича хирĕçлеме, Николай Сергеевич ирçе çынни пулманнине татса калама сăмах та тупаймарăм.

Хальхинче, ялтан таврăнсан, ăна çапларах ăнлантарса патăм: Николай Сергеевич Зубов нимĕнле ирçе çынни те мар, вăл чăн–чăн чăваш, манăн çывăх тăван. Тĕлĕнчĕ Виталий Петрович. Пирĕн хушăмăрти калаçăва пĕлнĕ пекех нумаях пулмасть Николай Петроаич Сергеев та ман пата киле шăнкăравларĕ. Ăна та çак хыпара пĕлтертĕм.

Эппин, Николай Сергеевича /*ӳкерчĕксем çинче ăна*



**Ӳкерчӗк ҫинче эсир Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ ветеранӗсене — 1945 ҫулта Мускавра ирттернӗ Ҫӗнтерӳ парадне хутшӑннӑ ентешсен пӗр ушкӑнне /Н. С. Зубов — хыҫалти ретре, сылтӑмран виҫҫӗмӗшӗ/ куратӑр.** /С. Игнатьев фотоӳкерчӗкӗ, «Коммунизм ялавӗ» хаҫат, 1990 ҫулхи майӑн 9—мӗшӗ./



*куратăр/* сăмах парар – ха. Чăнах та, калаçнă чух, вăл чăвашла таса калаçаймасть. Сăлтавне вăл каласа панă хыççăн ăнкарса илме пулать. «Эпĕ,— терĕ вăл,— 1921 – мĕш çулта Турхан ялĕнче Сергей Михайлович Ергунов çемьинче кун çути курнă. Атте, Ергунов Сергей Михайлович 1891 – мĕш çулта çуралнă. Манăн асаттен, Михаил Федотовичăн пурĕ виçĕ ывăл пулнă. Чи асли манăн атте, ун хыççăн Александр — 1894 – мĕш çулта, Антон 1902 – мĕш çулта тата Перасковия çуралнă. Александр Михайлович 1942 – мĕш çулхи июлĕн 6 – мĕшĕнче вăрçăра пуçне хунă, Антон Михайлович вара 1941 – мĕш çулта хаяр вăрçăра пĕр хыпарсăр çухалнă».

1921 – мĕш çулта таврара выçлăх хуçаланнă чух, ашшĕ вилсен, Николай Сергеевич тăлăха тăрса юлать. Вара унăн амăшĕ, Пелагея Степановна Ергунова /Унăн хĕр чухнехи хушамачĕ Иванова пулнă, вăл Шăхач ялĕнче çуралса ӳснĕ/ Ирçе Çармăс ялĕнче пурăнакан Максим Никифорович Зубовпа, ирçе çыннипе çемье çавăрать. Вĕсен 1923 – мĕш çулта Василий, 1925 – мĕш çулта Петр, 1928 – мĕш çулта Иван, 1933 – мĕш çулта Мария, 1936 – мĕш çулта Константин тата 1938 – мĕш çулта Павел ятлă ачисем çуралаççĕ. Çапла вара тин çеç асăннă ачасем Николай Сергеевичшăн амăшĕ енчен çеç тăван шутланаççĕ.

Хăйĕн шăллĕсемпе йăмăкĕн пурнăçĕ пирки Н. С. Зубов мана кĕскен каласа пачĕ. Ӳссе çитсен вĕсем пурте çĕршывшăн усăллă çынсем пулнă. Сăмахран, Василий Максимович Зубов «Мордовия»х хаçатăн редакторĕнче вăй хунă. Унăн иккĕмĕш сыпăкри пиччĕшĕ, Иван Захарович Антонов — СССР Писателĕсен Союзĕн членĕ. прозăпа темиçе кĕнеке авторĕ.

*Эпĕ Николай Сергеевич Зубовăн ывăлĕпе, Геннадийпе, пĕр вăхăтра çуралса, Турханта ӳснĕ. Салтака кайсан эпир унпа пĕр–пĕрин патне çырусем те çырса, арми пурнăç пирки пĕлтерсех тăраттăмăр. Ача чухне, пĕррехинче, Гена мана пĕр кĕнеке кăтартрĕ, унăн авторĕ манăн пичче терĕ. Кĕнеки самаях хулăмччĕ. Николай Сергеевич кун пирки каласа парсан*

*ача чунехи çав саманта тӳрех аса илтӗм. Николай Сергеевича кун пирки каларӑм та, вӑл хӑйӗн иккӗмӗш сыпӑкран лекекен тӑванӗ хӑйне тахçан кӗнеке парнелленине аса илчӗ.*

Николай Сергеевич шӑллӗсем хальхи вӑхӑтра ӑçта пурӑннине аса илчӗ. Петрпа Иван тата Павел Макимовичсем — Пермь, Горький, Иркутск облаçӗсенче пурӑнаççӗ. Константин Максимович Зубов Ирçе Çармӑс ялӗнчех, тӗп килте ашшӗпе амӑшӗн вучахне сӳнме памасть. Йӑмӑкӗ, Мария Макимовна та Павел пекех Иркутск облаçӗнче пурӑнать. Вӗсемпе, пуринпе те тенӗ пекех, Николай Сергеевич çыхӑну тытать.

Ирçе Çармӑс ялӗнче пурӑннӑ вӑхӑтра Николай Сергеевич çемьере чи аслӑ ача пулнӑ. Вӑл ялти çичӗ класлӑ шкула вӗренсе пӗтерсен ашшӗ–амӑшӗпе пӗрле колхозра ӗçлет. Çакна та каласа хӑвармалла: асӑннӑ ялта шкулта вырӑсла вӗрентнӗ. Йӗпреç районӗнчи «Новая сила» колхозра çамрӑк каччӑ салтака кайиччченех вӑй хурать.

Хӑйӗн çӗнӗ хушамачӗпе епле çӳреме пуçланине та аса илчӗ Николай Сергеевич. «Мана,— тет вӑл,— çичӗ çулхи ачана пӗррехинче Турхан яле илсе килчӗç. Çуралнине пӗлтерекен хута улӑштармалла, манӑн «Ергунов» хушамата манса кайса, «Зубов» хушамата йышӑнмалла иккен. Анчах та ку ыйтӑва суд органӗнче çеç татса параççӗ. Суда ертсе пыраканни манпа мӑн çынпа калаçнӑ пек, ыйту парать: «Зубов» хушаматпа çӳреме килӗшетӗн–и?» Эпӗ, аслисене хирӗçлеме хӑнӑхманскер, аптраса тӑратӑп, тем каламалла. Унтан, килте маларах вӗрентсе каланине аса илтӗм те: «Килӗшетӗп»— тетӗп. Çапла вара тӑван ялтах, хамӑн йӑх хушаматне çухатрӑм...

Çакна мана Николай Сергеевич 2003–мӗш çулхи майӑн 9–мӗшӗнче, ялти халӑх Çӗнтерӳ кунне уявланӑ вӑхӑтра каласа пачӗ.

*Эпӗ çак кӗске калава итленӗ вӑхӑтра хамӑн малтанхи «Алеметкин» хушамата епле çухатнине аса илтӗм. Ӗçӗ çапла пулса иртнӗччӗ. Манӑн аттепе анне, хӑйсем пӗрлешсе пурӑнма пикенсен те тӑватӑ ача çуратса ӳстернӗ. Анчах та ял Советӗнче пӗр–пӗринпе мӑшӑрланнине пӗлтерекен хут çыртарман. Аннен малтанхи упӑшки Кушманов Сергей Иванович пулнӑ. Мӑшӑрсен икӗ ача, пӗри Дмитрий тата Зоя ятлӑ ачасем çуралнӑ. Паллӑ ӗнтӗ: вӗсем пурте «Кушманов» хушаматпа, çав шутра анне те, çӳреме пуçланӑ. Эпир Петр*

*Константиновичпа малтанах иксĕмĕр те «Алеметкин» хушаматпа ҫӳреттĕмĕр. Пирĕн йăмăкпа шăллăмăн, Нинăпа Михаилăн «Кушманов» хушаматчĕ. Анне /хĕр чухне унăн хушамачĕ Иванова пулнă/, 1910–мĕш ҫулта ҫуралнăскер, пенси ҫулĕ ҫитсен, 1964–65–мĕш ҫулсенче тивĕҫлĕ канăва каяс тĕллевпе тĕрлĕрен документсем хатĕрлеме пуҫлать. Унăн ултă ача пуррине шута илсен, 55 ҫултах пенсие кайма май пур. Пенси органĕсенче ĕҫлекенсем паллашаççĕ те вăл кăтартнă докуменсемпе ҫакна асăрхаççĕ: манăн аннен улт ачинчен тăваттăшĕ пĕр хушаматпа, теприсем /эпир ĕнтĕ!/ пач урăх хушаматпа ҫӳреççĕ.*

*Бюрократи машини хăйне майлă ĕҫлет ҫав. Мĕне кирлĕ ăна санăн чăн–чăн хушамату, санăн йăх–тымару? Кирек ăҫта кайсан та, хăть мĕнле ăнлантарса пар, хут ҫинче ҫырнине ҫеҫ ĕненеççĕ.*

*Вара васкасах пире Петр Константиновичпа иксĕмĕре ҫĕнĕ хушамат парнелерĕҫ. Эпир иксĕмĕр те йăх хушаматне ҫухатрăмăр.*

*Нумаях пулмасть эпĕ Патăръелĕнчи ЗАГСра хам ҫуралнине ĕнентерекен хут илнĕччĕ. Атте кам пулнине пĕлтерекен йĕркесенче «Константин» тесе ҫеҫ ҫырнă. Калăн, манăн аттен Алеметкин Константин Михайловичăн хушамачĕ те, ашшĕ ячĕ те ҫук. Ҫакна манăн мăшăрăм, Галина Семеновна /Дмитриева/ Кушманова асăрханă та кулать: «Санăн аҫун ашшĕ те, хушамачĕ те ҫук, такам–ха вăл «Константин» — тет.*

*Ҫапах та хам ҫыравҫă пулнишĕн савăнатăп. Кĕнекесене пичетлесе кăларнă чух псевдоним ҫыраса пуҫа ватмалла мар. Мĕншĕн тесен, эпĕ чунпа та, юнпа та Элемет йăхĕнчен тухнă ҫын шутланатăп. Ҫавăнпа та ҫак хушамата ҫеҫ йышăнатăп...*

Николай Сергеевич патне таврăнар – ха. Кунта эпĕ «Авангард» хаҫатра 1980 – мĕш ҫулхи майăн 9 – мĕшпе 11 – мĕшĕнче пичетленнĕ «Ҫĕршывшăн ҫапăҫнă» статьяпа вулакана паллаштарасшăн Ăна М. Спинов журналист ҫырнă. Акă вăл */ăна кăштах кĕскетрĕм/*:

«1941 ҫул. Апрель уйăхĕ. Уй – хир юртан тасалнă, ҫырмасенче ҫурхи шыв шарласа юхать. Колхозра ҫураки пынă вăхăтра Н. Зубова ял – йышсем Совет Ҫарне ăсатаççĕ.

Ҫар эшелонĕ ҫула тухрĕ. Вагон чӳречисенчен юратнă Чăваш ҫĕршывĕ вĕлтлетсе юлать. Призывниксем Курск облаҫне ҫитеççĕ. Н. Зубовăн ҫар службине артиллери полкĕнче пуҫланать.

Çире çĕнĕ шинель, атă, пилотка, алăра — карабин. Салтаксем вĕренеççĕ, хурала çӳреççĕ. Тăван яла хавас кăмăл – туйăмпа çырнă çырусем вĕçеççĕ, никам та вăрçă çинчен шутламасть.

1941 çул. Июнĕн 22 – мĕшĕ. Салтаксем ир – ирех тревогăпа вăранаççĕ, строя тăраççĕ.

— *Нимĕç фашисчĕсен çарĕ Совет Союзне хирĕç вăрă – хурахла вăрçă пуçланă*,— пĕлтереççĕ командирсем.

Вăрçă... Çак сăмах кашни çыннăн чĕрине çĕçĕпе чикнĕ пек ыраттарать, ирĕксĕрех алăсем чăмăртанаççĕ. Кашнин куçĕнче *фашистсене курайманлăх çиçĕмĕ çиçет.*

Н. Зубов тăракан артиллери полкне Калинин фронтне куçараççĕ. Вăл Торопец хулишĕн пыракан çапăçăва хутшăнать, Великие Луки, Ржев хулисемшĕн çирĕп тăрать.

Сивĕ, çил – тăман алхасать. Хаяр та йывăр çапăçу пырать. Танмар тытăçура Н. Зубов наводчик аманать. Ăна тыла ăсатаççĕ. Госпитальте виçĕ эрнерен сывалса тухнă хыççăн каллех вăрçă хирне çул тытать чăваш каччи.

Украина фрончĕ. Коростень хулине ирĕке кăлармалла. Тăшман дзочĕсенчен пулеметсем вут – хĕм сапаççĕ. Хула патне çул хупă. Пуçа çĕклейместĕн: нимĕçсем персе тăраççĕ.

— Дзота пĕтермелле!— приказ парать батарея командирĕ, биноклӗпе сăнанă май.

Расчетри салтаксем пушкăран пеме пуçлаççĕ. Оруди икĕ хутчен кăна печĕ, фашистсен дзочĕ çĕрпе танлашрĕ: пулемет шăпланчĕ.

— Маттур, Зубов,— мухтарĕ батаря командирĕ,— тытăнса тăр! *Юнашарти* орудисем те тăшман çине вут – хĕм тăкаççĕ. Тăшман укрепленийĕ арканчĕ. Çул уçă. Çапăçура хастарлăх кăтартнăшăн Н. Зубова «Çапăçури паттăрлăхшăн» медальпе наградăлаççĕ.

*Пĕрремĕш награда сержанта хавхалантарнă, паллах. Пирĕн* танксем, вĕсен хыççăн пехота малалла ыткăнать. Пушкарьсем те вĕсенчен юлмаççĕ.

Умра — каллех чăрмав. Нимĕçсем минометран переççĕ, пирĕн çарсене малалла кайма чăрмантараççĕ.

— Орудие к бою! Огонь! — каллех янăрать командирăн уçă сасси, 76 – мĕш калибрлă оруди хаяррăн ухлатса илет, тăшман çине шрапнель вирхĕнет. Автоматчиксем «Ура!» кăшкăрса малалла чупаççĕ. Наступление куçма пулăшнăшăн оруди командирне «За боевые заслуги» медальпе наградăлаççĕ.

1943 çул. Июль уйăхĕ. Çу кунĕсем. Курскпа Орел пĕккинче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Ăçта пăхатăн, унта хура тĕтĕм йăсăрланать, орудисем ухлатни, бомбăсем шартлатни хăлхана çураççĕ. Тӳперен çĕршер самолет çĕр çине вут—хĕм тăкать. Тăшман танкĕсем пирĕн артиллеристсен позицине тапăнса килеççĕ. Снарядсм шăхăрса вĕçеççĕ, çывăхрах минăсем çурăлаççĕ.

— Сылтăмра — танксем, огонь!— приказ парть Н. Зубов. Пушка снаряд хыççăн снаряд кăларса ярать. Акă малта пыракан танка вут хыпса илчĕ, юнашаррин — гусеницисем стройран тухрĕç. Танксем каялла çаврăнчĕç. Çулпа тăшман броневикĕ тусан кăларса çывхарать.

— Броневика тĕп тăвăр!— хушать сержант.

Часах ăна та хускалми турĕç совет салтакĕсем.

— Июлĕн 5—мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçу халĕ те куç умĕнче,— аса илет Н. Зубов.,— ун чухне тăшманăн икĕ танкĕпе пĕр броневикне çĕмĕрсе тăкрăмăр. Кĕтмен çĕртен тăшман снарячĕ пушка лафечĕ çине ӳксе çурăлчĕ. Виçĕ артиллерист вилмеллипех, тепĕр виççĕшĕ питĕ йывăр аманаççĕ. Оруди умĕнче пĕртен—пĕр командир çеç. Хăех снаряд йăтать, авăрлать, хăех наводчик та, перекенни хăех. Çак çапăçура чăтăмлăх, паттăрлăх кăтартнăшăн дивизион командирĕ Н. Зубова I степеньлĕ Отечественнăй вăрçă орденĕпе наградăлама тăрататъ.

... 1944 çул. Совет çарĕсем Днепр урлă каçаççĕ. Тăшман урса кайса хирĕç тăрать. Тарăн та сарлака юханшыв урлă каçма çăмăлах мар. Хумханса юхакан шыв çийĕн снарядсем шăхăрса иртеççĕ. Шыв фонтан пек çĕкленет. Автоматчиксем сылтăм çыран хĕрринче.

— Тăван çĕршывшăн! Огонь!— янăрать команда. Пирĕн артиллери тăшман çине «вилĕм тетти» тăкма пуçлать. Çапăçура хăюллăх кăтартнăшăн чăваш салтакĕ II степеньлĕ Отечественнăй вăрçă орденĕ илме тивĕçлĕ пулнă.

Совет çарĕсем фашистсен йăвине — Берлина çул тытнă. Умра — Висла. Ку пирĕн çарсемшĕн пысăк чăрмав, çитменнине фашистсем питĕ вăйлă персе тăраççĕ. Çĕрлехи тĕттĕмлĕхе прожекторсем ыталаса илеççĕ.

— Тем пулсан та орудисене шыв урлă каçармалла, унсăрăн май килмест,— хушать батарея командирĕ.



***Николай Сергеевич Зубов фронтри юлташĕсемпе. 1945 çул***

Чăн малтан Н. Зубов орудине хăмасенчен тунă сула çине лартса каçараççĕ. Артиллеристсене автоматчиксем те пулăшаççĕ. Пĕрлешнĕ вăйпа орудине каçарса, çыран хĕррине вырнаçтарса тăшман çине переççĕ. Совет çарĕсем наступленине куçаççĕ.

— Пулăшу çитиччен тытăнса тăрăр, ан чакăр, — çирĕп приказ парать автоматчиксен командирĕ. Çак хаяр та çивĕч çапăçура хастарлăх кăтартнăшăн Н. Зубова III степеньлĕ Мухтав орденне параççĕ.

— Вăрçăн юлашки тапхăрĕнчи çапăçусем Переяслав хулине ирĕке кăларнă çĕрте пулса иртрĕç,— тет фронтовик,— тăшманăн 40 пинлĕ çарне парăнтарнă çапăçăва хутшăнтăмăр.

Оруди командирне Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăлаççĕ.

1945 çул. Майăн 9–мĕшĕ. Çĕнтерĕ кунĕ. Вăрçă чарăннă. Н. Зубов сержанта Çĕнтерӳ парадне хутшăнма тӳр килет.

— Июнĕн 24–мĕшĕнче Мускаври Хĕрлĕ площадьре пулса иртнĕ парадра утни нихăçан та асран тухас çук,— аса илет Николай Зубов.— Стройпа В. И. Ленин мавзолейĕ умĕнчен иртрĕмĕр.

Çуллахи шăрăх кун. Уй—хирти тырпул та саралнă. Пĕр—ик эрнерен вырма тухма вăхăт. Çывăхри кăтра вăрман та симĕс тум тăхăннă. Н. Зубов сержант тăван яла таврăнать. Йĕпреç районĕнчи «Новая сила» колхозра ăна ăшшăн кĕтсе илеççĕ. Салтак ĕçе кӳлĕнет. Ăна ферма заведующине лартаççĕ.

Тăван кĕтес чи хакли, теççĕ. Çуралнă тавралăх, паллах, çывăх. Тăван ял асран каймасть.

1948 çулта вăрçă геройĕ Турхана таврăнать. «Россия» колхозра ферма заведующийĕ пулса ĕçлет. Ĕне выльăх шутне сыхласа, вĕсенчен продукци туса илессине ӳстерессишĕн вăй хурать.

1963 çулта лесникре ĕçлеме пуçлать Николай Сергеевич. Унтанпа 17 çул çитрĕ. Кăнтăрла—и, çĕрле—и, хаяр сивĕре, çил—тăманлă вăхăтра та ялан вăрман хуралĕнче вăл. Ĕçне кура хисепĕ, теççĕ халăхра. Унăн, фронтра илнĕ орденсемпе медальсемсĕр пусне, мирлĕ ĕçре илнĕ наградăсем те чылай. Вăрман хуçалăхĕнчи лесниксен ăмăртăвĕнче пĕр хут кăна мар мала тухнă...»

М. Спинов журналист хăйĕн статьинче Николай Сергеевич Зубов мĕнле сăлтава пула хăйĕн çуралнă ялне, Турхана таврăннине тĕплĕн çырса, уçса паман. Вăл, тĕрĕссипе каласан, хăйĕн умне кун пек ыйту лартман. Унăн Çĕнтерӳ парадне хутшăннă паттăр салтакăн фронтри пурнăçне сăнласа парас тĕллев пулнă. Вăл çакна лайăх, пур енлĕн çутатса панă. Эппин, мĕн хистенĕ—ха тăван тăрăха таврăнма кăкăр тулли орденсемпе медальсем çакнă фроновика? Кун пирки мана Николай Сергеевич çапла каласа пачĕ:

«Эпĕ Турхана курма килнине пĕлсенех мана Анюк аппа шыраса тупрĕ, хăйĕн патне хăнана илсе кайрĕ. Вăл Куприяновсен йăхĕнчен тухнă. Данилпа Петр Николаевич Куприяновсемпе пĕр тăван шутланать. Анна Николаевна /*Анюк аппа*/ манăн тетен, Александр Михайлович Ергуновăн арăмĕ пулнă. Вăл 1942—мĕш çулхи июлĕн 6—мĕшĕнче вăрçăра пусне хунă пирки эпĕ маларах асăннăччĕ. Анюк аппа йĕре—йĕре тете вăрçăра вилни пирки мана каласа пачĕ. «Санăн тетӳ,— терĕ вăл мана,— фронтран янă çырăвĕнче çапла çырса пĕлтерчĕ. Енчен те эпĕ тăван çĕршыва таврăнаймасан, пирĕн тĕп киле Сергейăн ывăлĕ Николай таврăнтăр та, унта çемьеллĕ пулса пурăнма пуçлатăр. Эпĕ сана унăн халалне пĕлтерес терĕм. Эсир

## Куприяновы


Александр
Валентин
Василий
Петр
Михаил
Владимир
Федор
Николай
Гаврил
Николай
Егор
Куприян
Андрей
Иван
Данил
Алексей
Иван
Генадий
Петр
Алексей
Александр
Иван

иксӗр те фронтра ҫапӑҫнӑ салтаксем. Ман шутпа санӑн Турхана таврӑнса пурӑнма пуҫламалла, тетӳн халалне пурнӑҫламалла...» Кам пӗлет, тен, эпӗ яла таврӑнмастӑм та пулӗ. Анюк аппан йӗре–йӗре каланӑ сӑмахне илтсенех Турхана таврӑнма шутларӑм.

Малалла Николай Сергеевич мана, унӑн ашшӗн, Сергей Михайловичӑн пулас ҫурчӗ халӗ Иван Антонович Рыбкин пурӑнакан вырӑнта пулмаллаччӗ, терӗ. Анчах та вӗсен унта ҫӗнӗ ҫурт–йӗр ҫавӑрса пурӑнма тӳр килмен. Вӑл ҫичӗ уйӑхрах ашшӗсӗр тӑрса юлсан, унӑн амӑшӗпе пӗрле Турхан ялӗпе вӑхӑтлӑха сывпуллашма тивнӗ.

*Ергуновсен, Алеметкинсен тата Федотовсен йӑх таблицисене пӑхсан ҫакӑ курӑнать. Александр Михайлович вӑрҫӑра вилнӗ. Унӑн арӑмӗ Анна Николаевна /Куприянова/ Ергунова тек качча кайман. Ӗмӗр тӑрӑшӗпех упӑшкин ятне чунӗнче упранӑ. Шухӑшлатӑн та тӗлӗнетӗн, мӗн чухлӗ чӑваш хӗрарӑмӗ хаяр вӑрҫӑра вилнӗ мӑшӑрӗсене ирсерен–каҫсерен кӗтсе пурӑннӑ. Вӗсенчен чылайӑшӗ, ҫав шутра Анюк аппа та, хӑйсене валли ҫӗнӗ упӑшка тупма пултарнӑ–ҫке. Куприяновсенчен тухнисенчен ку тӗлӗшпе тӗлӗнмелли пурах ҫав. Сӑмахран, Турхан шкулӗнче Пелагея Ивановнӑпа Мария Ивановна Куприяновӑсем хӑйсен ӗмӗрӗ тӑрӑшӗпех учительница пулса ӗҫлерӗҫ. Сӑмахран, Пелагея Ивановна, Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫа хутшӑннӑскер, !946–!950–мӗш ҫулсенче Раҫҫей Федерацийӗн Верховнӑй Совечӗн депутачӗ пулнӑ, Мария Ивановна Куприянова РФ тава тивӗҫлӗ ячӗсене илме пултарнӑ. Вӗсен йӗкӗчӗсем вӑрҫӑра вилнӗ, ҫавӑнпа та вӗсем качча каймасӑр пурӑнаҫҫӗ, тетчӗҫ ялта пурӑнакансем. Ку йӑхпа манӑн тете те Кушманов Дмитрий Сергеевич тӑванлашнӑ. Манӑн инке Зинаида Степановна /Семенова/ Кушманова амӑшӗ енчен Мария Ивановнӑпа Пелагея Ивановна Куприяновӑсене виҫӗ сыпӑкран тӑван лекет.*

Антон Михайловичӑн, йӑх таблицисене пӑхсан, икӗ ывӑл пурри паллӑ: Аркадий Антонович тата Федор Антонович Ергуновсем. Николай Сергеевича вӗсем икӗ сыпӑкран, пире — Алеметкинсене — тӑватӑ сыпӑкран тӑван тивеҫҫӗ. Кунта та тӗлӗнмелли нумай. Антон Михайловичӑн арӑмӗ Дуня Шеляковсен йӑхӗнчен тухнӑ. Вӑл Степан Аверкиевичпа пӗр тӑван шутланаҫҫӗ.

## Шеляковы


Алексей
Генадий
Василий
5°
Валентин
Степан
Валентин
Трифон
Аверкий
Федот
Николай
Яков
Амросий
Константин
Семен
Прокофий
Иван
Спиридон
Шемельке
Молдаван
Шелеп – примерно 200 лет назад

*Эпӗ пӗлнӗ тӑрӑх, Степан Аверкиевич манӑн аттепе тантӑшсем шутланаҫҫӗ. Вӗсем иккӗшӗ те 1897–мӗш ҫулта ҫуралнӑ. Унӑн ывӑлӗ Геннадий Степанович Шеляков пире шкулта вӗрентнӗ. Шкулта вӗреннӗ вӑхӑтра Геннадий Степановичӑн тетӗшӗ /те Василий, те Алексей/ пирӗнпе тӗл пулса Кубӑра пулни ҫинчен каласа панӑччӗ. Ҫакна та каласа хӑвармалла: Геннадий Степанович ҫав тери лӑпкӑ ҫынччӗ. Эпир ӑна, ачасем питӗ хисеплеттӗмӗр Вӑл ман тетепе, Дмитрий Сергеевич Кушмановпа ӗмӗр тӑрӑшӗпех килӗштерсе, туслӑ пурӑннӑ, хӑй ҫӗре кӗричченех унпа ҫыхӑну татман.*

*Шеляковсен йӑхне пуҫарса яраканни Шелеп ятлӑ ҫын шутланать. Ку 200 ҫул каялла пулнӑ. Степан Аверкиевич яланах хӑйӗн утарне кайнӑ чух пирӗн урамран иртсе каятчӗ. Вӑл манӑн аттерен кӑшт нумайрах пурӑнчӗ. Астӑватӑп–ха, аттене пытарса килсен, сӗтел хушшинче ӑна асӑнса шурӑ эрех ӗҫсен каланине: «Эпӗ Константин Михайлович хыҫҫӑн ялта пӗччеиех тӑрса юлтӑм, ҫапах та вилме шутламастӑп–ха...»*

*Шеляковсен йӑхӗпе Базунов Григорий Андреевич та тӑванлашнӑ иккен.*

*«Шелек» ят Турхан тӑрӑхӗнче сарӑлнӑ. Юнашар вӑрманти пӗр ӗшнене те ҫак ятпа асӑнаҫҫӗ.*

*Алексей Михайлович ҫырса хӑварнӑ йӑх таблицисене уҫсанах тӗлӗнетӗн те, хумханатӑн та, тунсӑхлатӑн та е тарӑн шухӑша путатӑн. Вӑл, сӑмахран, маншӑн темӗнле лайӑх кӗнекерен те хаклӑрах. Кашни ят — хӑйне евӗр ҫутӑ ҫӑлтӑр. Кашни ят — хӑех пӗр тӗнче!*

*Шел, кунта арҫын ячӗсем ҫеҫ. Енчен те хӗрарӑмсен енчен тӗпчесе тухсан, хӑш йӑх кампа хурӑнташланнине–тӑванлашнине пӗлме пулать.*

Николай Сергеевич Зубов хӑйӗн мӑшӑрӗпе, Елизавета Степановнӑпа /хӗр чухнехи хушамачӗ *Макарова*/ тӑватӑ ывӑл пӑхса ӳстернӗ: Геннадий, Владимир, Александр тата Василий.

Эпӗ маларах Геннадий Николаевич Зубов ҫинчен ҫырнӑччӗ–ха. Вӑл салтак службине Германире иртгерчӗ. Унра ҫыравҫӑ таланчӗ те пурччӗ. Ача чухне вӑл хӑй тӗллӗн тем тӗрлӗ легендӑсем шухӑшласа кӑларатчӗ, ӑна артист пекех каласа пама юрататчӗ. Германирен янӑ пӗр ҫырӑвӗнче вӑл ҫар вӗрентӗвӗ пирки ман пата Пенза облаҫне ҫырса янӑччӗ. Вуласа тухсанах, ку ҫырӑва пӗр–пӗр журналист ҫырнӑ теме пулатчӗ. Тӗрӗссипе

каласан, эпĕ хам та литература каçалăкне кĕме Арми хыççăн çеç шутларăм. Унччен ку шухăш пуçра та пулман.

Салтакран 1970–мĕш çулта таврăнтăмăр. Эпĕ кăшт маларах, Гена — ман хыççăн. Вăл яла килсенех, Николай Сергеевич пире, салтакаран килнĕ çамрăксене, хăйĕн килĕнче пуçтарса лайăх хăналарĕ. Нумай сăмахлама юратманскер, вăл пире пурне те: «Халĕ эсир чăн–чăн арçынсем, мĕншĕн тесен пурте Çĕршыв умĕнчи тивĕçĕре пурнăçларăр»,— терĕ.

Паттăр салтак, хаяр вăрçă витĕр тухнăскер, ун чух пире хăй пирки ним те каламарĕ. Эпĕ, сăмахран, ун чух Николай Сергеевич Мускаври Çĕнтерӳ парадне хутшăннине пĕлмен те. Тĕлĕнетĕп унран, çав тери сăпайлă çын çав вăл. Теприсем, вăрçă хирĕнче пулса курманскерсем, уйрăмах ерех ĕçсен, мухтанма, кăкăрĕсене çапма юратаççĕ.

Сăнӳкерчĕкри унăн юлташĕ Александр Порфирьевич Табаков та Çĕнтерӳ парадне хутшăннă паттăр. Патăрьел районĕнчен вĕсем иккĕшĕ çеç асран кайми 1945–мĕш çулхи июнĕн 24–мĕшĕнче Мускавра пулнă–çке. Тивĕçлипех мухтанмалла пирĕн вĕсемпе!

Ача чухнехине тата кăштах аса илем–ха. Николай Сергеевичăн пахчи хыçĕнче сад ĕрчетчĕ. Унта панулми йывăççисем чылайччĕ. 1950–мĕш çулсенче çав тутлă çимĕçе тутанса пăхакансем ялта нумаях марччĕ. Мĕншĕн тесен вăл вăхăтра сад ĕрчетме те хресченĕн май пулман. Сăлтавĕ — патшалăх налуксем хунипе çыхăннă. Николай Сергеевича çав вăхăта аса илтертĕм: «Эпир, ача–пăча, сирĕн садран тухма та пĕлмен»,— терĕм. «Эй, мĕн каласмалли пур ун пирки, садĕнче «ранет» ятлă сортсем çеç пулнă, астăватăн пулĕ–ха, вĕсен улмисен вĕтĕччĕ вĕт,— терĕ. Унтан кăшт щухăшласа тăрсан, — ача–пăчана, кирек кам ачи пултăр, эп нихçан та сада кĕме  чарман, яланах çапла калаттăм: «Çимĕçне татăр, тутанăр, анчах та йывăçăн турачĕсене ан хуçăр».

Хальхи вăхăтра Николай Сергеевич ывăлĕсем виççĕшĕ те, Геннадийпе Владимир тата Александр, Узбекистан çĕршывĕнче пурăнаççĕ. Владимир Николаевич ашшĕ çулне суйласа илнĕ. Вăл Сĕнтĕрвăрринче вăрман хуçалăхĕн техникумне пĕтернĕ.

Киле чи кĕçĕнни Василий юлнă. Вăл çемье çавăрнă. Арăмĕ Вера Васильевна */хĕр чухнехи хушамачĕ Егорова/* Зубова Турханти инвалидсен çуртĕнче ĕçлет. Хăй, Василий Николаевич, Турханти вăтам шкулта завхоз тата электрик тивĕçĕсене



***Николай Сергеевич Зубовпа Мухтав орденĕсен тулли кавалерĕ Александр Порфирьевич Табаков.***

пурнăçлать. Туслă çемьере пĕр ывăлпа икĕ хĕр ÿсеççĕ. Ывăлне, аслашшĕне хисеплесе, Николай ят панă. Хĕрачисене Люба, Надя тесе чĕнеççĕ.

Эпĕ пынă вăхăтра Николай Сергеевичăн мăшăрĕ Елизавета Степановна диван çинче выртатчĕ. Упăшки ăна шеллесе: «Çичĕ çул хушши пăхатăп ĕнтĕ, ниепле те сывалаймасть»,— тет.

Калаçса ларнă хушăра Николай Сергеевич ĕнерхи, майăн 9—мĕшĕнчи уява хутшăннă фронтовиксене епле чысланине. унта ăна Чăваш кĕнеке издательстви 1941—45—мĕш çулсенче Патăрьел районĕнче çуралса ÿснĕ, вăрçăра пуç хунă паттăрсен ячĕсене халалласа кăларнă кĕнекене парнелени пирки каласа пачĕ.

*Ку кĕнеке мĕнле тухнине эпĕ лайăх астăватăп. Ăна малтан Патăрьел районĕн администраци пуçлăхĕ В. Д. Петров 10 пин тиражпа кăларма, ăна фронта хутшăннисен кашни çемьине парнелеме ĕмĕтленнĕ. Эпĕ çав вăхăтра Чăваш кĕнеке издательствинче аслă редактор пулса ĕçлеттĕм. Ун чухне*

*çĕршывра инфляци хуçаланатчĕ. Укçа—тенкĕ кунсерен йӳнелетчĕ. Издательствăн тĕп редакторĕ Василий Герасимович Игнатьев, чăвашсен паллă прозаикĕ Патăрьел администрацине çак кĕненкене кăларас тесе темиçе хутчен те çыру çырчĕ. Мĕншĕн тесен ăна наборласа çитернĕччĕ. В. Д. Петров хурав памасть. Мĕн тумалла? Самани пăтранса тăратчĕ, пуçлăхсем те улшăнсах тăратчĕç. Мана Патăрьелне командировкăна ячĕç. Администраци пуçлăхĕ ун чух, суйлав хыççăн улшăннăччĕ, района Н. В. Селиванов ертсе пыма пуçланăччĕ. Тавах Турра, Николай Васильевич мана ун чух ăнланчĕ, вăл Чăваш кĕнеке издательствине вексель хыççăн вексель пама пуçларĕ. Ун чух укçа вырăнне вексельпе усă куратчĕç.*



**Люба Зубова**

*Мĕншĕн аса илтĕм—ха эпĕ çав вăхăта? Çак кĕнекен корректури ун чух манăн алăраччĕ. Унпа паллашрăм. Турхантан кайса вăрçăра пуçĕсене хунисен списокне вулатăп та унта Мĕкĕте тетен ячĕ çук. Кĕнекере Алеметкин Николай Константинович тесе çырнă. Кĕскен вăл 1921—мĕш çулта çурални, вăрçăра хыпарсăр çухалнине асăннă. Патăрьел районĕнчи военкоматрисем йăнăшнă пулĕ тетĕп хамăн ăшра. Юрать—ха «Николай» вырăнне «Никита» тесе çырса хумарăм, чăн малтан тетепе, Петр Константинович Кушмановпа канашларăм. Вăл мана: «Коля, эсĕ халĕ те пĕлместĕн—и вара, атте сана Мĕкĕте тетене хисеплесе Николай ят, мана Петр Михайловича Алеметкин хисеплесе ун ятне панă. Хут çинче Мĕкĕте тете Николай ятпа çӳренĕ.*

Николай Сергеевичпа часах уйрăлма вăхăт çитрĕ. Вăл мана хăш—пĕр фото ӳкерчĕксене каярахпа тупса пама шантарчĕ.

Тепĕр тĕл пулура, Николай Сергеевича кĕнекене кĕртнĕ текстпа сăнӳкерчĕксене паллаштарма кайсан, ырă хыпар пĕлтĕм. Унăн мăнукĕ — Люба сăвăсем çырать иккен.

Савăнмаллипех савăнтăм. Çамрăк сăвăçă аслашшĕ енчен манăн йăмăк пулать—çке. Кам пĕлет, малашне тен, вăл та тăван литература каçалăкĕнче вăй хурĕ. Чăтаймарăм, Любăран сăввисене ыйтса илтĕм.

Вăл 2000 çулта «Тантăш» хаçат «Çĕн ĕмĕре чăваш ятпах кĕретпĕр» тесе irttерекен çамрăк çыравçăсен ăмăртăвне хутшăннă. Унта унăн «Туслăх» ятлă сăвви пичетленнĕ. Халĕ ытти хайлавсемпе те сире паллаштарасшăн.

### *ХУРĂН*

*Хурăн, хурăн, шурă хурăн,*
*Мĕншĕн курăнан салхуллăн?*
*Ман пĕлесчĕ хурлăхна:*
*Ма тайса ларан пуçна?*

*Тен, çынсем сана савмаççĕ,*
*Тен, вĕсем сана хурлаççĕ?*
*Ан итле халь вĕсене,*
*Ĕненсем ман чĕрене.*

*Саншăнах вăл хуйхăрать,*
*Саншăн çеç çунса тăрать.*
*Ан кулян, юратнă хурăн,*
*Ир те каç хаваслăн курăн.*

### *ÇЕÇПĔЛ МИШШИНЕ*

*Эп çак сăвва çыратăп хумханса,*
*Мухтавлă поэта чунтан савса.*
*Вăл «Çеçпĕл» ят шыранă самантра*
*Хăйне чечекпеле танлаштарать.*

*«Çеçпĕл Мишши» тесессĕн, чĕрере*
*Çуралчĕ туйăм сăвăсем патне.*
*Вăл питĕ паллă çын çут тĕнчере,*
*Манмастăп нихăçан та ун ятне.*

*Чăваш чĕлхишĕн Çеçпĕлĕм, паллах,*
*Нумай вăй хунă—çке мĕн çамрăклах.*
*Çĕкленĕ халăха палăртмаллах,*
*Пĕрремĕш хут вырăссемпе танах.*

*Таясчĕ пуçăма хастар çынна,*
*Мухтасчĕ ун ятне кăмăлтанах.*

*Асрах тытасчĕ ун ĕçĕсене,*
*Хăпартланса вуласчĕ сăввине.*

*Калатăп Çеçпĕле: тавах сана,*
*Çÿçентереççĕ сăввусем мана.*
*Çут шанăçа çухатмăп нихăçан,*
*Сырас килет сăввăмсене ялан.*

*Ĕмĕтленетĕп сăвăçă пулма,*
*Ун пултарулăхне чунтан савма.*
*Нихçан та тухас çук ман асăмран*
*Юратнă Çеçпĕлĕм. Эс пур, пурнан!*



**Николайпа Анатолий Богдановсем, Зубов Н С. Зубов А.Н., Козлов А., хыçалта Давыдов В. С. тăрать.**

Ергуновы, Алемоткины, Федотовы
23, 24, 25



# АЛЕМЕТКИН КОНСТАНТИН МИХАЙЛОВИЧĂН ĂРĂВĚ





***АЛЕМЕТКИН***
***Константин Михайлович***
**(1897-1983)**



***КУШМАНОВА***
***Матрена Ивановна***
**(1910-1996)**



***Алеметкина***
***Мария Константиновна***
***упăшкипе пĕрле***



***Алеметкин***
***Алексей Константинович***



**КУШМАНОВ**
***Петр Константинович***



**КУШМАНОВ**
***Николай Константинович***



**КУШМАНОВА *(Федотова)***
***Нина Константиновна***



**КУШМАНОВ**
***Михаил Константинович***
**(1955-1995)**



*Алеметкин К. М.–ăн çемйи*



*Петрпа Кушманов Коля. 1964 ç.*



*Кушманова М. И.*
*хĕрĕпе, Нинăпа*



*Кушманов Петр*
*Константинович хĕрĕпе,*
*Надьăпа. 1970 ç.*



*Кушманов Петр. 1955 ç.*



*Кушманов Коля. 1964 ç.,*




***Кушманов Петрпа Кушманова Матрена Ивановна***



***Алеметкин Константин Михайловичӑн Турханти хӑйӗн ӗмӗрӗнче туса лартнӑ виççӗмӗш çурчӗ.***



*Кушманов Н. К., 1979 ç.*



*Кушманова М. И.,*



*Кушманов П. К., Кушманова /Фомина/ Р. А.,хĕрĕ Надя. Хыçалта тăраканни пуçанăшĕ — Петров Юркка. Вăл Чернобыльти аварие пĕтерме хутшăннă хыççăн, 1997 çулта Шупашкарта вилнĕ.*

## Кушманов Петр Константиновичăн çемйи



*Кушманов П. К., 1982 ç.*



*Кушманова /Фомина/ Рая.
Йĕлтĕрпе чупса
Патăрьел районĕн
чемпионки пулнă. 1962 ç.*



*Кушманова Надя, 15 çулта.*



*Кушманов Сергей Петрович.*



*Кушманова Алина Петровна.*



*Кушманов Сергей Петрович, Кушманова /Максимова/ Лина Валерьевна.*



*Кушманов Петр Константиновичӑн ҫемйи. 2001 ҫул.*



***Сымова /Кушманова/ Н. П., Сымов Володя,***
***ачисем: Андрей, Алена***



***Сымова /Кушманова/ Н. П., Андрей, Алена Сымовсем***



***Кушманов Петр Константиновичпа арӑмӗ Раиса Акимовна Кушманова /Фомина/ 1989 ҫул.***



***Андреев П. В., Кушманов П. К. ывӑлӗпе, Сергейпе, Козлов Альберт, Богданов Толя, Козлов Арсентий. 1975 ҫул. Ҫӗнтерӳ кунӗ.***



*Кушманов Сергей Петрович хӑйӗн ҫемйипе, тӑванӗсмепе.*



*Максимова Галина Николаевна,*
*Максимов Александр Валерьевич*



*Кушманов Сергей Петровичпа Кушманова /Максимова/ Лина Валерьевна мăшăрланнă чух.*



*Кушманова /Максимова/ Лина Валерьевна.*



*Кушманов Дима пĕрремĕш утăмсем тăвать...*



***Гришанин Владимир и Гришанина /Кушманова/ Алина мăшăрланнă чух***



***Гришанина /Кушманова/ Алина, хĕрĕ Юля***



Алеметкин К. М.



Кушманова М. И.

# СЕМЬЯ КУШМАНОВОЙ /ФЕДОТОВОЙ/НИНЫ КОНСТАНТИНОВНЫ



*Федотов Александр Афанасьевич, Федотов Сергей, Федотова /Кушманова/ Нина Константиновна, внуки: Игорь, Ринат, Саша, Юлия*





***Бузиа /Федотова/ Ольга, Нина, Сергей Федотовы***



***Алеметкин Геннадий Васильевич,***
***Федотов Сергей Александрович***



***Жанна, Сергей Федотовы***




***Федотовы: Игорь, Жанна, Саша, Юлия, Сергей.***




***Бузиа /Федотова/ Ольга Александровна, Бузиа Мухамед***




***Бузиа /Федотова/ Ольга Александровна с сыном Ринатом***



*Гладков В.Н., Кушманов Н.К.*

Манăн анне 1910–мĕш çулта февралĕн 7–мĕшĕнче Шăхач ялĕнче çуралнă. Вăл каласа панă тăрăх, унăн амăшĕ, манăн кукамай, Пăраски ятлă пулнă. Сăнĕ–кĕлеткипе чипер курăннăран ăна, Упамса ялĕнче пурăннă чух «Хитре Пăраски» тесе чĕннĕ.

Шăхач ялĕнче пурăнакан Шăмми Иванне качча тухсан вăл упăшкин ялне пурăнма куçать. Упамсара унăн Якку ятлă шăллĕ, манăн кукка, юлнă.

Шăхач ялĕнче Шăмми Иванĕпе пĕр тăвансем Уçăп тата Элексçей пулнă. Кукамайпа кукаçин Микула, Матюк /манăн анне/, Елька тата Маюк ятлă ачисем пулнă.

Микулан арăмне Хĕветуç тесе чĕннĕ. Вĕсен Настя ятлă хĕр пулнă. Кукамайпа кукаçи вилсен Елькана усрава панă. Вăл сăнĕпе кукаçи пек хура, анне, амăшĕ пек, сарă пулнă.

Аннен тепĕр йăмăкĕ, Маюк та çут тĕнчере нумай пурăнайман. Вăл Шăмăршă районĕнчи Виç пӳрт Шăмăршă ялне, Куракин Алексей Никифоровича */1907–мĕш çулта çуралнă/* качча кайсан, 1930–мĕш çулта вĕсен Чĕкеç ятлă хĕр çуралнă. Хут çинче ку ята «Анна» тесе çыраççĕ. Анна /Чĕкеç/ Алексеевна Виç пӳрт Шăмăршă ялĕнче пурăнать. Вăл упăшкипе, 1931–мĕш çулта çуралнă Гладков Николай Алексеевичпа икĕ ывăлпа пĕр хĕр пăхса ӳстерсе пурнăçăн анлă çулĕ çине кăларнă. Гладков Валерий Николаевич, 1957–мĕш çулта çуралнă. Вăл 2012 çулччен, мĕн çĕре кĕриччен Шупашкарти Троллейбус управленийĕнче профсоюзсен комитетне ертсе пычĕ. Унăн йăмăкĕ, Никонорова/*Гладкова*/ Галина Николаевна, 1960 çулта çуралнăскер, бухгалтер пулса ĕçлет. Шăллĕ, Гладков Александр Николаевич 1963 çулта çуралнă. Вăл водитель пулса ĕçлет*.

---

**** Автор ăнлантарни: «Тăван ял–йышăм хушшинче» /2004 ç.,/ 230 страницăллă кĕнекере хамăн тăвансен сăнӳкерчĕкĕсене нумай пичетленĕччĕ, халĕ вĕсен йышĕ кунта сахалрах.***



А.Смолин,В.Лепина,Н.Сергеев,В.Павлова, Л. Павлов,Ф.Агивер, Н.Кушманов



В.Трошкин, Н.Кушманов, О.Антонов,В.Осипов,С.Антонова



Н.Родионов,Н.Пирожков,Н.Кушманов



Кушмановсем: Николай,Рая,Петя



Ю.В.Антонов, Н.К. Кушманов, Н. М. Антонова/Дмитриева/

# Семья Кушманова Николая Константиновича



*Кушманов Н. К., Кушманова /Дмитриева/ Г.С., 2001 г.*



*Кушмановы: Евгений, Галина, Николай, Нина*



***Евгений, Наталия***
***Кушмановы в день свадьбы 20 сентября 2003 г.***



***Кушмановы: Галина, Наталия, Николай, Нина***



*Александр Кушманов принимает христианство*







***Фотографии Александра Кушманова в разное время***



***Кушмановы: Николай, Александр, Галина***



***Наталия, Александр, Евгений Кушмановы***



***Нина, Николай Кушмановы в Тарханах***


Родственники Евгения и Наталии Кушмановых



Николай и Галина Кушмановы перед дачей



*Александр Кушманов за рулем*



*Нина, Галина Кушмановы*



*Кушмановы, три поколения*



*Александр Кушманов стоит рядом с Президентом Чувашии М. В. Игнатьевым*



*Александр Кушманов с бабушкой и дедушкой на даче*



***Кушмановы: внук и дедушка***



***Александр Кушманов***



***Наталия, Александр, Евгений, Галина Кушмановы***



***Нина и Николай Кушмановы на даче***



***Галина и Александр Кушмановы у елки***





***Нина и Галина Кушмановы в разное время года***



***Нина и Саша на даче***



***Нина***



***Нина среди цветов***



***Белка любит всех***



***Нина Кушманова во время выборов исполняет обязанности секретаря избирательной комиссии***



***Галина и Николай Кушмановы в Тарханах на погосте***



***Нина хочет напиться***



***Александр помогает старшим***




**Герман Епископ**

# ГЕРМАН ЕПИСКОП

## МАЛТАН КАЛАНИ

***«Хăвăн Турруна пĕтĕм чунупа, пĕтĕм ăсупа юрат».***

***Матвей çырнă Евангели: 22; 37.***

1917 çулта Ленин ертсе пынипе Турра ĕненмен, халăха хирĕç тăракан çынсем влаçа ярса илнĕ. Пĕтĕм тĕнче аталаннă тапхăрта пĕрремĕш хут художествăлла произведенисене пĕтерме, архитектура, истори палăкĕсене тĕллевлĕн аркатма пуçланă. Ахăрсамана вăхăтĕнче миллионшар çын, вĕсен хушшинче Раççей çĕршывĕнче чи лайăххисем, пĕтеççĕ. Паллă ĕнтĕ, кашни çулах Ломоносовсем, Пушкинсем, Гогольсем çуралаймаççĕ. Апла пулин те çав вăхăтра темиçе миллион çынна персе пăрахнă, выçăпа асаплантарса пурнăçран уйăрнă, çĕре чикнĕ.

Вĕсен шучĕпе Раççей историйĕ — пĕлўсĕррисен усăсăр ирттернĕ кун – çулĕ, аталанусăр, йăнăш хыççăн йăнăш туса, аташса ахаль ирттернĕ вăхăт çеç. Сăмахран, Троцкийпе унăн юлташĕсен шухăшĕпе, вырăс халăхĕ хăйĕн аталанăвĕнче ытла та кая юлнă. Вăл çапла çырнă: «Енчен те виççĕр миллион çынна пĕтермелле пулсан, эпир шухăшласа тăмасăрах çакна пурнăçлама хатĕр» */Русский вестник. Прессборник, №2, стр.42/*. Ленин та çак шухăшах пĕлтерет: «Пирĕн влаçа хамăр алăра хăварас тесен, çĕршыври 90 процент чухлĕ çынсен йышне пĕтермелле пулсан, пĕтерĕпĕр, 10 проценчĕпе тĕнче революцине тăвăпăр».

Мĕн чухлĕ çыннăн ырă ĕмĕт — шухăшне шеллевсĕррĕн татнă куллен – кун пăнтăхса пыракан влаç? Вăл, халăха темиçе ĕмĕр хушшинче пуянланса, аталанса пынă культура эткерлĕхĕнчен *пăрса, суя çулпа пыма хистенĕ, хирĕç тăма хăякансене пĕтернĕ.*

Акă влаçа пĕчĕк ушкăн ярса илнĕ. Çав вăрă — хурахсен йышĕ çĕршывра чăтма çук хăрушă оккупаци режимне туса хунă. Кун пеккине этемлĕх нихăçан та курман. Пур çĕрте те вырăс халăхне хĕсĕрленĕ, пур çĕрте те террор хуçаланма пуçланă. Пурне те хăратса тăма пикеннĕ пысăках мар ушкăн, хăйĕн влаçне упраса хăварас тĕллевпе, таса чунлă çынсене пач хĕрхенмесĕр пăшалсенчен пенĕ, тĕрмесенче выçăпа асаплантарнă, чунĕсем

каниччен иртӗхнӗ, ӑҫта май килнӗ, ҫавӑнта хӑйсем ҫеҫ хуҫа пулнине кӑтартнӑ, хӑйсем ҫеҫ путсӗр иккенне пытарнӑ, халӑха ним шухӑшлама пӗлмен выльӑх вырӑнне хунӑ.

Таса Православи Чиркӗвӗсене хирӗҫ тискер ӗҫсем пурнӑҫлама пикеннӗ. 1918 – мӗш ҫултах, Мускаврa, суд йышӑнӑвӗсемсӗрех Турра ӗненнӗшӗн ҫынсене тӗрмесене хупса хума, каярахпа вӗсене сӑлтасӑрах мӑшкӑлама, персе пӑрахма пуҫланӑ. Сӑмахран, «Турӑсӑррисен союзӗнче» /«*Союз безбожников*»/ тӑнипе мухтанакан ҫынсем тискер ӗҫӗсемпе палӑрнӑ. Вӗсене Емельян Ярославский /*Миней Израилевич Губельман*/ ертсе пынӑ. Ҫак ушкӑна кӗрекенсем пысӑк уявсем, мыскараллӑ вӑйӑ – кулӑсем ирттерме юратнӑ, вӗсенче Турра ӗненекенсенчен кулнӑ, йышлӑ халӑх хушшинче намӑс – симӗсе уямасӑр вӗсене мӑшкӑлланӑ, хӗненӗ. Ҫав иртӗхӳллӗ вӑйӑ – кулӑра турӑсӑррисен йышӗнчисем кӑвайт чӗртнӗ, турӑшсене, авалхи чаплӑран та чаплӑ кӗнекесене вутӑ – ҫулӑма пӑрахнӑ. Мӗнле тӗллев пулнӑ – ха ҫав этем сӑнне ҫухатнӑ ҫынсен? Ярославский, Заславский, Радус – Зенкевич тата ыттисем те мыскараллӑ вӑйӑ – кулӑсем ирттерсе, иртӗхсе халӑх асӗнчи чи ырӑ, таса ӗмӗте, тахҫанхи чаплӑ пулӑмсене манӑҫтарма, Турра ӗненекенсен йышне чакарма, ҫынсен кӑмӑл – сипетне сиенлетме тӑрӑшнӑ. Вӗсем, ҫынсене пӗр карта лартса, хӑйсене мӗнле килӗшет, ҫавӑн пек тума, пуринпе те выльӑхпа хуҫаланнӑ пек, Ивансем хӑйсен ӑру – несӗлӗсене пуҫӗпех манса кайччӑр тесе, тӑрӑшнӑ. Ленин, Троцкий, Сталин, Каганович, Ягода тата ҫавӑн евӗрлисем хут ҫинче ҫырса хунисене перопа чӗрсе хума, ҫапла майпа ҫынсен кун – ҫулне тискеррӗн пӗтерме пикеннӗ.

Ҫавӑн йышши ертӳҫӗсем йӑлтах вилсе пӗтмен – ха, пурте леш тӗнчене ӑсанман. Ҫапах та вӗсен ӗҫӗ – хӗлӗ ҫут тӗнчере пурӑнать, малтанхи пек сӑн – питпе мар, пачах та урӑхла, кӑшт ҫеҫ улшӑннӑ сӑнпа. Енчен те вӗсене вӑхӑтра питлемесен, вӑхӑтра кашниййӗшӗн чӑн – чӑн сӑн – питне халӑх умӗнче яр уҫҫӑн ҫутатса кӑтартмасан, ҫавӑн йышши ертӳҫӗсем татах влаҫа ярса илессишӗн тапаҫланма, халӑха ултав ҫулӗ ҫине тӑратма пултараҫҫӗ.

Вырӑссен Таса Православи Чиркӗвӗнчи чи чаплӑ та мухтава тивӗҫлӗ ҫынсенчен чылайӑшӗ Аслӑ Туррӑмӑра сивлекен, халӑха хирӗҫле пыракан Совет влаҫӗ вӑхӑтӗнче пӗтнӗ. Вӗсен пурнӑҫӗ асапланса вилнӗ авалхи христиансенни пекех пулнӑ, кашниййӗн чунӗ нихӑҫан сӳнми кӑварпа хӗмленнӗ, вӗсем Аслӑ Туррӑмӑра

юлашки сывлăш тухичченех юратнă, çав хăват таса чунлисене кирек хăш вăхăтра пысăкран та пысăк, вышкайсăр хăват парса тăнă. Асапланса тертленни, вěçěмсěр нушаланни, Христоса парăнса ирěн – каçăн ěçлени тата Аслă Туррăмăр чăнлăхěшěн миллоншар çын хăйсен пурнăçне вăхăтсăр татни манăçа тухмалла мар. Иртнě кунсен никěсě çинче çěнни яланах хăват илет. Айтăр – ха Анатолий Франс сăмахěсене аса илер. Вăл: «Иртнě пулăмсене çухатмастпăр», — тенě. Вěсене тěпе хурсан çеç хамăрăн пурнăçа йěркелеме пулать. Эпир истори тěлěшěнчен юлашки тапхăрта пурăнатпăр. Çавăнпа та пирěн XX – мěш ěмěрте сăваплă ěçшěн чунне панă çынсен пурнăçě çинчен çырса хăвармалла, упранса юлма пултарнă архив документсемпе халăха паллаштармалла. Аслă Туррăмăр умěнчи пирěн тивěç вăл, тўрě те таса кăмăлпа пурăннă паллă çынсен пурнăçě пирки тěплěн каласа кăтартасси пулать.

Хěн – хурлă шăпаллисен пурнăçě пирěншěн тата килес ăрусемшěн ырă тěслěх, паттăрлăх тата туслăх шанчăклăхě пулса тăрать. Эпě çаксене шута илсе, архипасторăн, Христос тěнне пăхăннă тата ăна халăх хушшинче сарас тěлěшпе ěçленě миссионерăн, Аслă Туррăмăршăн таса чунне панă Герман епископăн сăваплă шăпи пирки çырма шутларăм.

Герман епископăн пурнăçě çинчен туллин те тěрěс çырса кăтартнă, çакна архив документсемпе туллин усă курса çирěплетнě. Кунта тўрех палăртмалла: Герман епископ политикăшăн мар, таса Православи ěненěвěшěн асап курнă. Çакна эпир унăн чылай ěçěсемпе паллашсан асăрхатпăр. Вěсене вăл халăх умěнче тухса калаçас тěллевпе тата чиркўсенче ěçлекен священниксен ячěпе çырнă. Хăйěн ěнентерўллě чěнěвěсенче вăл Православи Чиркěвěн саккунěсене хисеплесе пăхăнма ыйтать, витěмлě те чуна тивекен сăмахěсенче святой апостолсемпе святой аттемěрсем каланисене илсе кăтартать, çав тěслěхсен никěсě çирěп пулнине ěнентерсě Апостолсен Православи Чиркěвěнчен пăрăнмалла мар тет. Кам тўрě çултан пăрăннă, кам раскольниксен енне çаврăнса тăнă, çавсене ўкěнме ыйтать.

Çав тери кěске сăмахсемпе çырнă биографи справкисем кăшт çеç Герман епископăн пурнăçě пирки каласа параççě. Анчах та вěсенче эпир вăл тамăкри пек çунса асапланнине, тем тěрлě тертленнине курма пултараймастпăр. Кашни допросра асаплантарни, тискеррěн хěнени, тěрмесенче чăтма çук пăнтăхлă сывлăш хуçаланни, сăлтасăрах тертлентернě хыççăн ларса канма

е çывăрма май пулманни пирки ăнкарса илме çеç пулать. Выçă ларни, тĕрме камерисенче сивĕ пулни, санитари условисене ним чухлĕ пăхăнманнине пула çынсем пыйтланса кайни, тĕрлĕ чир – чĕре пула вĕсем шăнасем пек вилни, тăвансемпе, чи çывăх тус – юлташсемпе çыхăну татăлни, сивĕ е çумăрлă кунсенче арестантсене тĕп вырăна çитиччен асап кăтартса çуран уттарни, çын тивĕçĕнчен кăларни, следовательсем мăшкăлласа айăплани, уголовнисен «террорĕсем», яланах автоматпа персе пăрахма пултарни — çаксем, паллах, пурте пирĕн очерка кĕмен. Çапах та вулакан çав вăхăтри пулăмсене ытти художество произведенийĕсем урлă та лайăх пĕлет.

## ПУРНĂÇĔ ТАТА ĔÇĔСЕМ

*Ачам, кĕлту, сана тăнлать, ав,*
*Çут тĕнчене Пултаракан.*
*Йÿç куççульне куллен шутлать Вăл,*
*Ыйтсан явап парать ялан.*

***И. С. Никитин***

*Эй, Турăçăм, хута кĕнишĕн*
*Эп хатĕр пурнăça пама.*
*Хăратăп эп çав кун çитнишĕн*
*Сана пуриншĕн те тав тунă май.*

Акрагантийск епископĕ, Григорий святой кунне уявланă вăхăтра 1883 çулхи ноябрĕн 23 – мĕшĕнче Афанасийпе Екатерина Кокель хресченсен çемьинче виççĕмĕш ывăл кун çути курать. Ăна тĕне кĕртнĕ чухне Григорий ятне параççĕ. Чĕмпĕр губернине кĕрекен Пăва уездĕнчи Турхан вулăсĕнче /*хальхи Патăрьел районĕ*/, ял варринче йывăçран купаланă чиркÿ вырнаçнă. Кокельсен çурчĕ унтан инçех пулман. Вĕсем пурăнакан урама «Пылчăккасси» тенĕ. Григорийĕн ашшĕпе амăшĕ Турра ĕненнĕ, çавăнпа та вĕсем яланах ачисене хăйсемпе пĕрле чиркĕве илсе кайнă. Кам пĕлет, тен çав вăхăтрах пĕчĕк Григорийĕн чунĕнче Аслă Туррăмăршăн ĕçлес туйăм вăраннă.

Афанасийпе Екатерина Кокельсем çут тĕнчере чылай çул пурăнайман, иккĕшĕ те вăхăтсăр çĕре кĕнĕ, çавна пула вĕсен тăватă ачи сĕм тăлăха тăрса юлнă. Килти пĕтĕм хуçалăх ĕçĕсем Иван Афанасьевич Кокель /*1874–мĕш çулта çуралнă*/ çине



*Григорий Кокель*

тиеннĕ. Тăлăха тăрса юлнă ачасен хресчен ĕçĕсене пурнăçласа пурăнма тивет. Вĕсем ялти ытти çынсем пекех уй—хирте çĕр сухаланă, акнă, тырă туса илнĕ, çарансенче е вăрманта килти выльăх—чĕрлĕх валли утă хатĕрленĕ. Çак çăмăл мар пурнăçра Кокельсене çынна яланах ырă тăвакан Аслă Туррăмăр пулăшсах тăнă.

Пĕррехинче Григорий хăйĕнчен виçĕ çул аслă пиччĕшĕпе, Алексейпе, вăрман хуçалăхĕн управляющийĕ */В. М. Раубе/* патĕнче вут—шанкă хатĕрлеме тара кĕрĕшнĕ. Кăнтăрлахи апат вăхăчĕ çитнĕ. В. М. Раубе ачасене апата чĕннĕ те хăй урама тухнă. Çав кĕске вăхăт хушшинчех Алексей, вăрман улпучĕн çуртĕнче шурă хут листисем ал айне лексен, вĕсем çине хăй кунта мĕн—мĕн курнисене аса илсе, тĕрлĕ ÿкерчĕксем тăвать, пурне те çурт стенисем çине тирпейлĕн вырнаçтарса хурать. Раубе каярахпа пÿрте кĕрет те тĕлĕнсе шак! хытать. Мĕншĕн тесен Алексей ÿкернĕ ĕçсем профессиллĕ художниксеннинчен ним чухлĕ те кая пулман. Вăрман улпучĕ, хăй патĕнче ĕçлекен ачасем ăс—тăн тĕлĕшĕпе çÿлти шайра пулнине шута илсе, вĕсене кулленхи пурнăçра пулăшма пуçлать.

Вăл тăрăшнипе каярахпа Алексей Кокель чăвашсен пĕрремĕш художникĕ, профессор пулса тăрать. Григорий Кокель Чĕмпĕрти И. Я. Яковлевăн чăваш шкулĕнче пĕлÿ илет. Унта вĕренсе пĕтерсен ăна Патăрьел ялне ĕçлеме яраççĕ. Вăл ялти шкулта ачасене чăваш тата нимĕç чĕлхисене вĕрентет.

Турă çырнипе вăл çав вăхăтра Ирина Егоровна Спиновăпа, Сумароковри икĕ клас училищинчен вĕренсе учитель ятне илнĕ хĕрпе, тĕл пулать, унпа паллашать. Ирина Егоровна ачасене вырăс чĕлхине вĕрентнĕ. Вăл каярахпа Чĕмпĕр хулинче, Ишек ялĕнче ĕçленĕ.

Чăваш хĕрĕ çÿллĕ те яштака пÿ—силлĕскер, кирек мĕнле ĕçрен ютшăнман, уйрăмах алă ĕçне пысăк кăмăлпа пурнăçлама юратнă. Ирина ашшĕ, Егор Спинов, çав вăхăтра пуян хресченсен

йышӗнче тӑнӑ. Унӑн Ҫӗнӗ Ахпӳрт ялӗнче икӗ хутлӑ ҫурт, лавкка, шыв арманӗ, ял хуҫалӑх машинисем /жнейкӑсем, культиваторсем/ тата чылай ҫӗр пулнӑ. Егор Спинов тата унӑн ҫемйинчисем Православи христианӗсен шутӗнче тӑнӑ, час-часах пурте пӗр кӑмӑлпа чиркӗве ҫӳренӗ.

Григорий Кокель Егор Спиновпа паллашсан, хӑйӗн тахҫанхи, чун тӗпӗнчи вӑрттӑн шухӑшне, Аслӑ Турӑмӑршӑн священник пулса ӗҫлеме ӗмӗтленнине каласа парать. Е. Спинов ҫамрӑк учителе Чӗмпӗрти Духовнӑй Семинарине вӗренме ярать. Г. Кокель 1901 ҫулхи мартӑн 12-мӗшӗнче Чӗмпӗрти архиерейсен ҫуртӗнче пӗлӳ илме пуҫлать. Вӗреннӗ хушӑрах чӑваш халӑхне ҫутта кӑларнӑ И. Я. Яковлевпа ҫывӑххӑн паллашать, ӑна Евангели, Псалтирь тата религи темипе ҫырнӑ ытти кӗнекесене чӑвашла куҫарма пулӑшать. 1901 ҫулхи октябрӗн 4-мӗшӗнче вӑл псаломщик ятне хӳтӗлет, ун хыҫҫӑн Чӗмпӗрти архиерейсен ҫуртӗнче псаломщик пулса ӗҫлет. Семинаринче ӑнӑҫлӑ вӗренсе тухсан ӑна Чӑваш Республикине кӗрекен Комсомольски районӗнчи Шурут ялне, Христо-воздвиженски чиркӗвне ӗҫлеме яраҫҫӗ. 1903 ҫулхи августӑн 2-мӗшӗнче вӑл Патӑрьелне куҫать, Ирина Егоровна Спиновӑпа пӗрлешет. 1905 ҫулта Г. Кокель стихарь ӗҫӗсене пурнӑҫлама пикенет. Хусанти Духовнӑй Академинчи миссионерсен курсне вӗренме кӗрсен, 1907 ҫулхи октябрӗн 9-мӗшӗнче, ӑна малтанхи ӗҫӗсенчен хӑтараҫҫӗ. Малалла вӗреннӗ вӑхӑтра, 1908 ҫулхи май уйӑхӗнче ӑна Пӑва уездӗнче пурӑнакан чӑвашсем ҫинчен ҫырма хушаҫҫӗ. Ҫав тери пысӑк кӑмӑлпа пуҫӑнать вӑл ҫак ӗҫе. Калас пулать, Григорий Кокель тахҫанах чӑвашсен пурнӑҫӗпе ҫыхӑннӑ историпе интересленнӗ. Виҫӗ уйӑх хушшинче вӑл вӑл 14 ялта пулать, ку шута: Пысӑк Патӑрьел, Карабай-Шӑмӑршӑ, Ҫӗнӗ Пуянкасси, Пӗчӗк Патӑрьел, Сӑкӑт, Кивӗ Катек, Тӑрӑн, Ҫӗнӗ Ахпӳрт, Туҫа, Кивӗ Ахпӳрт, Кивӗ Туҫа, Ҫӗнӗ Бахтиарово, Кошки Кулеево, Янтиково ялӗсем кӗреҫҫӗ. Хӑйӗн отчетӗнче Григорий Кокель ялсен историйӗ пирки, вӗсен малтанхи ҫыннисем ҫинчен, авалхи сӑмах-юмахсем, юханшывсем, ҫынсен чылай ҫул хушшинче ҫирӗпленнӗ йӑли-йӗркисем, вӗсем мӗнле тумланни, тӗн тӗлӗшӗпе еплерех тавракурӑм пулнине ҫырса кӑтартать. Асӑннӑ пысӑк калӑплӑ ӗҫе вӗҫленипе ҫеҫ лӑпланса лармасть вӑл. Ҫине тӑрса вырӑсларан чӑвашла вӗрентӳллӗ проповедьсем куҫарать. Унӑн 1908 ҫулхи январӗн 26-мӗшӗнчи «В неделю 26-ю по Пятидесятнице» текен вырӑсла тата чӑвашла ҫырнӑ

ĕçĕсем упранса юлнă. Асăннă ĕçсен шутне çаксем кĕреççĕ: «Мулшăн тăрăшакан çын çинчен каланă юмах» /*Притча из Евангелия о человеке, который хранил много зерна и незнал, что с ним делать*/ проповедь; «Малашне» — святой. /*1908 ç., февралĕн 5—мĕшĕ*/; «Мул çинчен каланă юмах» /*1908 ç., сентябрь*/; «Ытлашши мул шыранăшăн хурлăх курни» /*Епархиальные ведомости, 1891 г. №6 /Симбирск/*[1] «Çылăхсенчен ӳкĕнмесĕр вилекен çыннăн леш тĕнчери пурнăçĕ»; «Святой çынсем вилĕме епле хатĕрленсе кĕтни çинчен калани» /*12 апрель, преп. Афанасий*/; «Неделя 27—ая по Пятидесятнице» /*Ев. от Луки, гл. 13, 10—17*/; «Иисус Христос шăматкун пĕкĕрĕлсе тухнă хĕрарăма тӳрлтни».

Çав çултах Г. Кокель чăваш халăх юррисен сборникне хатĕрлесе çитерет, вĕсене вырăсла куçарать /*пурĕ — 425*/, вĕсен нотисене те çырать.

1909 çулхи июнĕн 12—мĕшĕнче Пятидесятницăн 8—мĕш эрнинче Чĕмпĕр хулин Кафедральнăй соборĕнче литурги ирттернĕ чух Хусанти миссионерсен курсне вĕренсе тухнă Григорий Кокеле пехиллесе Пăва уездĕнчи Тăрăн ялĕнче диакон пулса ĕçлеме яраççĕ. Çавăн чухне Чĕмпĕр хулин Высокопреосвещеннăй архиепископĕ Иаков /*Пятницкий*/[1] халăх умĕнче çапла калать: «Сирĕн умăрта хăйĕн ирĕкĕпе хĕн—асап чăтма хатĕрленнĕ çын. Вăл сирĕншĕн, хăйĕн ĕненĕвĕшĕн, Святой Чиркӳшĕн хăй мĕн юратнине хăварма хатĕр, вăл хăйĕн арăмне те малтанхинчен сахалрах юратĕ. Унăн ăна хăварса, Таса Чиркӳ чĕннĕ тĕрлĕ вырăна çитме, Унщăн службăра пулма тивĕ». Пророкла сăмахсем часах пурнăçланаççĕ.

[1]*Симбирские епархиальные вдомости. 1909 г.,№17 (сентябрь), стр. 223.*

## ГРИГОРИЙ АТТЕ

*Тăвăр хапхапа кĕрĕр,*
*мĕншĕн тесен пысăк*
*хапхапа аслă çул*
*пĕтме илсе каяççĕ;*
*нумайăшĕ çавсемпе пыраççĕ.*
*Тăвăр хапхапа ансăр çул*
*чĕрĕлĕхе илсе каяççĕ,*
*вĕсене тупакан сахал.*
**/Мф. 7, 13–14/**

*Ĕнтĕ кайса пур халăхсене те*
*вĕрентĕр: вĕсене Ашшĕн,*
*Ывăлĕн, Святой Сывлăшĕн*
*ячĕпе тĕне кĕртĕр.*
**/Мф. 28, 19/**

Чăн – чăн священникăн шăпи, кун – çулĕ яланах йывăр пулнă. Ăна сăмахпа виçсе хаклама май çук, ку вăл — пысăк паттăрлăх. Мĕншĕн тесен, священник хăйĕншĕн мар, халăхшăн службăра тăрать. Григорий, пўрнĕ шăпапа килĕшсе, хăйĕн хĕресне пурнăçра тўсĕмлĕн йатса пынă, ытти çынсемшĕн тăрăшса, вăл Туррăмăра, халăха юратса пурăннă. Тем тĕрлĕ хĕн – хура чăтма кирек кам та пултараймасть, çапах та кунта çакна та палăртмалла: вырăс духовенстви хушшинче урăх наци çыннисене ĕçлесе пурăнма тата та кансĕртерех пулнă. Чăваш çĕршывĕнче вăл вăхăтра анлă пĕлў илнĕ священниксем çав тери сахал пулнă. Наци ыйтăвĕсене пула унăн час – часах чăнлăхшăн кĕрешме тивнĕ. Пысăк хуласенчен аякра вырнаçнă ялти прихутсенче 2 – 3 причт пулнă, унта службăсене славян чĕлхипе ирттернĕ. Ку кăна çитмест – ха, вырăнти халăх вырăс чĕлхине лайăх пĕлмен. Эппин çынсем чиркўсенче ирттернĕ кĕлĕсене ăнланмаççĕ пулсан, вĕсем Христос тĕнне епле майпа йышăнма пултарĕç? Чылайăшĕ язычество /*нумай турра ĕненекен*/ тĕнĕпе пурăннă.

Вырăс пупĕсем хăйсене мăнкăмăллăрах тытни те халăха чиркў енне çавăрма чăрмантарнă. Çак ыйусем, паллах, Григорий аттене шухăшлаттарнă. Çавăнпа та вăл чиркўре ирттерекен

службăна кашни христианин ăнлантăр тенĕ. Вăл Турă умĕнче кашни халăх пĕр правалла тата вырăс çыннисемпе пĕр тан пулнине кăтартма тăрăшнă.

Григорий иерей, миссионер, урăхларах каласан, Христос тĕнне саракан священник пулса, Христос уйĕнче чăн – чăн ĕненӳ вăрлăхне акать, тĕне кĕмен чăвашсене тĕттĕмлĕхрен хăтарма пуçлать. Унăн пĕрремĕш прихучĕ Тăрăн ялĕнчи Никольски чиркĕвĕ пулнă. Григорий атте чăваш халăхне çав тери пысăк туйăмпа юратнă, хăй те, чухăн çемьерен тухнине кура, ахаль çынсен нуши – тертне чĕри патне çывăха илнĕ. Вăл тăван халăхăмăр Православи тĕнне пĕтĕм чун – чĕрипе çеç йышăнсан, унăн вышкайсăр аслă витĕмĕпе пурăнсан, çынсем хăйсен нушаллă пурнăçне çăмăллатма пултарĕç тенĕ. Пĕр отчетĕнче вăл çапла çырать: «Эпĕ служба ирттерекен прихута кĕрекен чăвашсене религи тĕлĕшĕпе тăватă категоринче кăтартма пулать: язычество тĕнне 50 процент чухлĕ йышăнакансем, икĕ тĕнлисем, православине çеç çирĕппĕн ĕненекенсем тата ирĕклĕн шухăшлакансем. Çапла вара религи тĕлĕшĕпе чăвашсем, вырăс халăхĕпе танлаштарсан, аялти шайра тăраççĕ. Çакна ăнлантарса пама йывăрах та мар. Вырăс халăхĕн, сăмахран, пĕр пин çула яхăн упранса юлнă историйĕ пур. Çынсен асĕнче халăх юратакан святойсен йышĕнче çĕршер ят упранса юлнă. Вĕсем тăрăшнипе мăнаçлă Святой Раççейĕмĕре туса хунă. Чăвашсем пирки мĕн каламалла – ха? Вĕсем Христиансен Чиркĕвĕн хӳттине 200 çул каялла çеç кĕнĕ. Çавăнпа та çынсем тĕттĕм вăйсен витĕмĕпе пурăнинчен тĕлĕнме кирлĕ мар, хăть мĕн тесен те нумай турра ĕненни вĕсен чунĕсемшĕн çывăхрах, ăнланмалларах. Çавăнпа та пирĕн чăваш халăхне Православи Чиркĕвĕпе çывăхлатмалла, вăл çеç пĕртен – пĕр тĕрĕс çул иккенне тӳсĕмлĕн те ӳркенмесĕр ĕнентерсе вĕрентмелле.

Çак тĕллеве епле пурнăçламалла – ха? Епле майпа чăваш чунне, вăл язычество тĕнĕнчен е икĕ тĕне те пĕр пек йышăннинчен хăтарса, чăн – чăн Турă çул – йĕрĕ патне илсе каймалла? Епле майпа ăна Православи Чиркĕвĕпе вырăс культурине юратма, хаклама вĕрентмелле? Григорий атте шучĕпе çак пархатарлă та пысăк ĕçе пурнăçлас тесен чиркӳсенче Турăшăн служба ирттермелле, мĕн хушнине пурнăçламалла, чиркӳре проповедьсем ирттермелле, чиркӳре çеç ӳкĕтлесе ăс панисĕр пуçне çакна кил – йышсенче тумалла, Турă Саккунне шкулта халăх ăнланмалла тăван чĕлхепе вĕрентмелле.

Пирĕн Туррăмăрăн – Вĕрентекенĕмĕрĕн, Иисус Христосăмăрăн тĕслĕхĕ пирĕншĕн. Ăна ĕненекенсемшĕн — ертсе пыракан саккун пулмалла, тесе калать Григорий атте.

Вăл «еврей ученăйĕсем, кĕнекеçĕсемпе фарисейсен чĕлхипе калаçнă пулсан», «халăха хăйĕн чĕлхипе вĕрентнĕ», çавăнпа та «Хăйĕн ĕçне тăвакан нумай вĕренекенсем тупнă, вĕсем Вăл хушсан, Унăн вĕрентĕвне тĕттĕмре ларакан тата вилĕм танатинчи çынсен хушшинче сараççĕ». Çавăнпа та пачăшкăпа ăна итлекенсен хушшинчи ĕçĕн ăнăçлăхĕ пĕр – пĕрне ăнланнинчен килет. Вĕрентекенĕмĕрĕн ырă тĕслĕхне шута илсе, апостолсем халăхпа вĕсен чĕлхипе калаçнă. Мĕншĕн тесен, Святой Павел шучĕпе, çынсемпе вĕсем ăнланман чĕлхепе сăмахлани усă кÿмест. Вăл çапла калать: «Эсĕ ыттисем пĕлмен чĕлхепе Турра мухтама тытăнсан, пĕлмен çын Эсĕ Турра тав тунă чух: аминь, тесе епле калĕ: вăл эсĕ мĕн каланине ăнланмасть» */1 Кор, 14,16./*. Апостолсен проповечĕсенчи тата вĕсен вĕрентÿллĕ службисенче çакă тĕп саккун пулнине кура, Евангелине халăхсем хушшинче сарнин ăнăçлăхĕ пире те, сăмах хуçисене, пырса тивет. Халăх хушшинче ĕçленĕ вăхăтра унпа вăл ăнланмалла чĕлхепе калаçмалла. Апостолсем вĕренмен халăх хушшинче çапла тунă. Эппин пирĕн те хальхи вăхăтра çав саккунсене пăхăнса ĕçлемелле. Священникăн чиркĕве пынă халăхпа вĕсен чĕлхипе служба ирттермелле. Чăвашсене хисеплемесĕр, вĕсемшĕн ют чĕлхепе калаçни, чиркÿ тĕлĕшĕпе те тĕрĕс мар ĕç туни пулать.

Епархири пуçлăхсене пĕлтернĕ тăрăх, Григорий атте хăйĕн миссионерла ĕçне пуçланă чух, вăл службăра тăракан уездра 30 пин çын язычество тĕнне ĕненнĕ, тата çавăн чухлĕ çын ислам тĕнне пăхăннă. Юлашки вăхăтра, пĕлтерет вăл, чăвашсем нумай турра ĕненме пăрахаççĕ. Христиан тĕнĕн кивĕ йăлисем тăрăх пурăнакансен тата раскольниксен йышĕ çав тери сахал. Вĕсем Пăва тата Кăрмăш уездĕнче çеç тĕл пулаççĕ. Кунта сектантсен раскол ушкăнĕн прихучĕсем 5 тата 2, христиан тĕнĕн кивĕ йăлисем тăрăх пурăнакансен йышĕ 447 тата 30, сектантсен — 0 тата 2 пулсан, Чĕмпĕр тата Улатăр уездĕнче вара сектантсен раскол ушкăнĕн прихучĕсем 31 тата 29, христиан тĕнĕн кивĕ йăлисем тăрăх пурăнакансен йышĕ 2582 тата 7182, сектантсен йышĕ — 24 тата 800. Григорий аттешĕн чиркÿ службисене, проповедьсене вырăнти халăхăн чĕлхипе ирттермелле тени саккун пулса тăрать. Вăл священниксемпе учительсем чăваш халăхĕнченех тухмалла: «Арçынсем вырăс чĕлхине чаплах мар

пулсан та кăштах ăнланаççĕ, анчах та хĕрарăмсем ним чухлĕ те пĕлмеççĕ», — тесе шутланă.

Г. Кокель ялсенче пуçламăш шкулсем уçать, вĕсенче пуçламăш классенче ачасене тăван чĕлхепе, каярахпа çеç вырăс чĕлхине вырăс букварĕ урлă вĕрентессишĕн çине тăрать. «Пархатарлă халăхăн тĕллевĕ — чăвашсене вырăссен православи культурипе паллаштарса, Христианствăн çутă çулĕпе илсе каясси пулса тăрать. Малтанах вĕрентнĕ чух Чиркӳпе шкулăн тата чиркӳри служба чăваш чĕлхи çинче никĕсленмелле. Вырăс патшалăхĕн чĕлхине лайăх пĕлмелле тата халăхсен хушшинче туслăха тĕреклетмелле. Вăл хĕрарăмсене, килти вучах ăшшине упракансене, çемьере хăйсен ачисене тĕрĕс воспитани паракансене тивĕçлĕ пĕлӳ парассишĕн пысăк тимлĕх уйăрать»[2].

Григорий атте учительсен съездĕнче язычество тĕнĕпе пурăнакан хутла пĕлмен чăвашсене Христианство тĕнне йышăнтарас тесен, чăваш чĕлхипе çеç усă курмаллине хĕрӳллĕн ĕнентерет. Шел пулин те, пур священниксем те унăн ырă сĕнĕвĕпе килĕшмеççĕ. Сăмахран, Пăва уездĕнчи чиркӳ шкулĕсене тĕрĕслесе тăракан С. протоиерей чăваш священникĕсене хăйсен тивĕçĕсене япăх пурнăçлаççĕ тесе айăплать, чăваш чĕлхи шкулсенче вĕрентнĕ чухне тата чиркӳсенче служба ирттернĕ вăхăтра ним тума кирлĕ мар, тет. Вăл тĕлĕнсе Кокельрен çапла ыйтать: «Эсир, аттеçĕм, мĕншĕн чăвашсемшĕн тăрăшатăр?» Лешĕ çапла хуравлать: «Чăвашсене чăвашла вĕрентмесен пĕлӳ панин усси пулас çук»[3].

Чăвашсене хӳтĕлесе, Кокель хăйĕн патне чиркĕве çӳренĕ пĕр чăваш çинчен каласа парать. Вăл Варшава институтне пĕтернĕ хыççăн Ленкоранри вĕрентӳ семинарĕнче вĕрентет. Унсăр пуçне Никольский Н. В., Хусанти миссионерсен курсĕнче вĕрентекенскер, чăвашсем пирки çапла асăнать: «Эпĕ çакна палăртасшăн, вак халăхсен хушшинчен тухнă вĕренекенсем пĕлӳ илес тĕлĕшпе çав тери пултаруллă. Эпĕ пысăк кăмăлпа пĕлтеретĕп: вĕсем пурте, наукăлла ĕçсенче те, хăйсене йĕркеллĕ тытас тĕлĕшпе тата тăрăшуллăхĕпе чи лайăх вĕренекенсем пулса тăчĕç. Училищĕре вак халăхсен хушшинчен тухнă 45 вĕренекен шутланса тăрать, вĕсенчен чылайăшĕ «пиллĕк» паллăсемпе

[2]*Симбирские епархиальные вдомости. 1911 г.,№10 (15 мая). Отчет священника о современном состоянии чуваш в религиозно-нравственном отношении, стр. 351.*

[3]*НА ЧГИГН, отд.1, том 283, стр.253-255. Письмо Никольскому Н. В.*

вёренеççĕ, лайăхран япăххи /4/ никам та çук, хăйсене тытассипе тата сăпайлăхпа вырăс ачисенчен те маларах тăраççĕ»[4].

XX – мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче чăваш халăхĕ пур çĕрте те язычество тĕнне пăхăнма чарăнса Христианство вĕрентĕвĕ енне куçать, хăйĕн пурнăçне унăн витĕмĕпе йĕркелеме тытăнать.

Григорий Кокель священник Кăрмăш уездĕнчи мăнастире йĕркелесе яма пулăшать, Чĕмпĕрти Вараксарск религи общинине ĕçлеттерме, унта килти чиркӳ тума тăрăшать. Община ĕç – хĕлне йăлтах йĕркелесе ярсан, вăл Чĕмпĕрти Чăваш шкулĕнче вĕренекен хĕрупраççемшăн çуллахи канмалли вырăн пулмалла тесе шутланă. Кунта, шкулсен кулленхи ĕç – хĕлĕсемсĕр пуçне, Чĕмпĕр епархине кĕрекен чăвашсене çутта кăларас енĕпе те ĕçлеме, христиансен тĕнне иккĕленсе йышăнакансен йышне чакарма палăртнă, ку тĕлĕшпе чăваш чĕлхипе кăларакан кĕнеке издательстви уçма тĕллев тытнă. Паллах, кĕнеке кăларас текенсен тематики религи енĕпе çеç пулман, вĕсем халăха кирлĕ, усăллă кĕнекесен тиражне çуллен ӳстерсе, вĕсене çынсем хушшинче сарма ĕмĕтленнĕ. Анчах та çӳлте ларакан пуçлăхсем общинăн уставне çирĕплетмен. Чăвашсен хушшинче община хăйĕн ырă ятне таврара сарма ĕлкĕрнĕ. Çакна пĕр тĕслĕхпе çирĕплетме пулать. Пĕррехинче Григорий священнике Кивĕ Катекре пурăнакан Петр Степанов хăйĕн пĕтĕм пурлăхне Вараксарск общинине пама кăмăл пуррине пĕлтернĕ. Ырă çыннăн шухăшĕ пирки Григорий атте тӳрех И. Я. Яковлева çырупа пĕлтерет. Часах унтан хурав çитет.

### *Пăва уездĕнчи Тăрăн ялĕнчи священнике Григорий Афанасьевича Кокель аттене*

*Сирĕн февралĕн 14–мĕшĕнче, 26–мĕш номерлĕ çырăвăра илсе вуларăм. Хамăн тивĕçĕме ăнланса çакна пĕлтеретĕп. Хĕрарăмсен общинине регистрацилемен, çавăнпа та пехиллесе пană пурлăха илме юрамасть»[5].*

И. Я. Яковлев тепĕр çырăвĕнче пехиллесе панă çырăва ярса пама ыйтать, вăл çапла çырать:

*«1910–мĕш çулхи мартăн 20–мĕшĕнче, 44–мĕш номерлĕ çырăвăрта Кивĕ Катек çынни вилнине пĕлтертĕр...юлашкинчен*

---

[4]НА ЧГИГН, отд.I, том 168, стр.173.

[5]ЦГА ЧР, фонд 207, л.24,1910 г.


*И. Я. Яковлев*

*хамăн тивĕçĕмĕн яваплăхне туйса Сире, Григорий атте, общинăна аталантарас тĕлĕшпе лайăх ĕçленĕшĕн тав тăватăп»*[6].

И. Я. Яковлев Григорий аттене тата Чăваш учителĕсен шкулне вĕренсе пĕтернĕ çынсене, май килнĕ таран тăлăх—туратсене тата вăрçа тухса кайнине пула ашшĕсĕр тăрса юлнă ачасене пулăшма ыйтать. Вăл Вараксарти хĕрарăмсен мăнастирĕнче тăлăх ачасен приют училищине уçма сĕнет. Григорий атте Вараксарти мăнастирь ĕçĕсене хутшăннипе çеç лăпланса лармасть, Аслă Туррăмăра юрăхлă кĕнекесене чăвашла куçарать, Евангели, Псалтирь тата религи темипе çырнă, чăвашла пичетленĕ произведенисене халăх хушшинче сарать. Вăл хăй ăçта службăра пулнă, çавăнта пурăнакан кашни çемье унран Таса Евангели, Псалтирь, Канонник илнĕ. Григорий атте алăпа пичетлемелли машинăпа типографи станокне туянать, ăна Çĕрпӳел ялне илсе килет. Каярахпа «Толкование на катехизис», «Поучение для новокрещенных», миссионерла, чĕнсе каланă листовкăсем тата религи темипе çыхăннă ытти кĕнекесене пичетлет. 1915—мĕш çулта вăрçă темипе çырнă брошюра çырса халăх хушшинче салатать. Хăй çырнă чылай ĕçсемшĕн вăл гонорар илмест. Сутма палăртнă кĕнекесен хакне те май килнĕ таран пĕчĕклетме тăрăшать.

Вак халăх хушшинчен тухнă священник çапла тăрăшса, чунне парса ĕçлени хăш—пĕр вырăс священникĕсене килĕшмест. Чиркӳсенче вăл чăвашла ирттернĕ кĕлĕсем вĕсен умне хăрушлăх кăларса тăратнă пекех туйăннă. Çапах та Григорий атте хăйне ĕçре чăрмантарнине, ура хунине пăхмасăр малтан мĕн палăртнине пурнăçлама, Православи тĕнне халăх хушшинче сарас, чăвашсен пĕлӳ шайне ӳстерес енĕпе вăйне—халне шеллемесĕр тăрăшать, ку ĕçе тутарсен хушшинче те тăвать, тухатмăшсен сиенлĕхĕ пирки, ку çулпа кайсан инкек—

[6]ЦГА ЧР, фонд 361, ОР РГБ, стр. 59.

синкек серепинчен хӑтӑлма май ҫуккине ӑнлантарать, нумай турра ӗненнин сиенлӗхне тӑрӑ шыв ҫине кӑларать.

Халӑхра христиансен ӗненӗвӗ аталанса, вӑй илсен, ҫынсен пӗлӳ шайӗ тӗрӗс ҫул ҫине тухсан, Григорий атте юнашар вырнаҫнӑ урӑх вулӑссенче ӗҫлет, халӑхсен хушшинче хайӗн миссионерла ӗҫне малалла тӑсать. Ҫакна унӑн ӗҫ вырӑнӗсем те кӑтартаҫҫӗ.

1912 ҫулхи февралӗн 17–мӗшӗнче вӑл Пандиково ялӗнчи Михаилоархангельск чиркӗвӗнче священник пулса ӗҫлет.

1915 ҫулхи июнӗн 8–мӗшӗнче — Чурачики ялӗнчи Никольски чиркӗвӗнче священник тивӗҫне пурнӑҫлама пикенет.

Григорий аттен юлашки служба вырӑнӗ Кивӗ Ҫӗрпӳел /*Старочелны Сюрбеево*/ ялӗнчи Рождество Христово чиркӳ пулнӑ. Ку ял халӗ Чӑваш Республикинчи Комсомольски районне кӗрет.

Григорий атте Ҫӗрпӳри Чиркӳ–прихут шкулӗнче /*Сюрбеевская Церковно–приходская школа*/ ачасене Турӑ Саккуне /*Закон Божий*/, нимӗҫ чӗлхине, музыкӑна вӗрентнӗ, вӗсене рояльпе калама хӑнӑхтарнӑ. Ку енӗпе ӑна арӑмӗ пулӑшнӑ.

Ҫӗрпӳ ялӗнче Григорий атте псаломщиксен шкулне уҫнӑ, кунтах ют чӗлхесене те вӗрентнӗ. Пӗлӳ пухса тухакансем каярахпа Чӑваш Республикинчи чиркӳсенче псаломщик–регент пулса ӗҫленӗ.

Вӑл ҫын ӳт–пӗвӗнче Туррӑмӑрӑн сӑнарне курса, ӑна виҫесӗр хӑватлӑ юратнӑ, ҫынна ӗненӳ ҫулӗ ҫине тӑратнӑ, вӗрентнӗ, ӳкӗтленӗ, унран ҫирӗп ыйтнӑ, уншӑнах яланах кӗлтунӑ. Служба хыҫҫӑн киле таврӑнсан вӑл хӑйӗнчен хӑй ҫапла ыйтнӑ: «Чиркӳре паян халӑх йышлӑ пулчӗ–ши?»

Ҫак сӑмахсем пире мӗн пирки калаҫҫӗ–ха? Григорий атте хӑй ирттерекен служба вӑхӑтӗнче таврара мӗн пулса иртнине йӑлтах манса кайнӑ, вӑл чун–чӗрипе, пӗтӗм ӳт–пӗвӗпе Аслӑ Туррӑмӑрпа пӗрлешнӗ, Вӑл Таса Храмра пулнине туйнӑ. Григорий аттен чунӗ ӗненӳ вучӗпе пӗрлешсе ҫуталнӑ, ҫакӑ вара чиркӗве пынӑ ҫынсене куҫнӑ.

Григорий иерей ахаль ҫынсен пурнӑҫӗпе пурӑннӑ, укҫа–тенкӗ пирки шухӑшламан, пысӑк пуянлӑхпа капӑрлӑхшӑн ҫунман. Унӑн пысӑкран пысӑк пуянлӑхӗ Аслӑ Туррӑмӑра хытӑ ӗненни, ҫывӑх ҫынна юратни, пӗлӳ тӗнчине ӑнтӑлни пулнӑ. Сӑмахран, Григорий аттен ҫуртӗнчи пӗр стенинче кӗнекесем ҫеҫ вырнаҫнӑ.

Юнлӑ 1917 ҫул ҫитнӗ. Ҫав хӑрушӑ вӑхӑтра Григорий атте

пуриншĕн те, анлă та пысăк пĕлÿллĕ çын, халăх умĕнче витĕмлĕн те ĕнентерÿллĕ тухса калаçакан оратор пулнă. Вăл Евангели чăнлăхне, Православи вĕрентĕвне çынсем хушшинче сарнă вăхăтра, çак ĕç – хĕле мăнастирьсем те туса пынине манмасть. 1917 çулхи октябрĕн 19 – мĕшĕнче Патăрьел районĕнчи Пысăк Арапуçĕнчи П. Егоров священник И. Я. Яковлев патне çыру çырать:

«Кокель атте 1917 çулхи октябрĕн 1 – мĕшĕнче — Вараксарскра, ман патра октябрĕн 6 – мĕшĕнче пулчĕ. Вăл Варакарскри чиркÿ пирки, ăна кĕлтуса тасатмалли çинчен çине тăрсах калаçрĕ. Унран, Чиркĕве ĕçе ярас пулсан, унта кам ĕçлеме пултарать – ха тесе ыйтсан, вăл, прихутсенчен хăваласа янă священниксем чылайăн, тесе хуравларĕ. Эпĕ ăна хирĕçлесе: вĕсен хушшинче чăваш священникĕсем çук – çке, терĕм. Вăл Алексей Васильевич Рекеева асăнчĕ. Вара эпĕ епархи пуçлăхĕсем Вараксарск ялĕнчи храма Люля ялне куçарма ирĕк панине пĕлтертĕм. Кокель атте кунпа килĕшрĕ те, чăнах та, Храма кĕлтуса тасатма вăхăт çитмен – ха, тенипе килĕшрĕ»[7].

*Григорий Кокель çинчен Деомид Хитров жалоба çырса янă. Вăл Кивĕ Çĕрпÿел /Старочелны Сюрбеево/ чиркĕвĕнче, Григорий Кокелĕн псаломщикĕ пулнă. Çак çын Пăлакассинче /вырăсла ку ял Козловка ятлă, вăл Кивĕ Ахпÿртпе Патăрьел хушшинче вырнаçнă/ çуралса ÿснĕ. Пĕр çирĕм çул каялла Хитров ухмаха тухса вилнĕ. Жалобине кĕвĕçнипе çырса панă. Ĕçĕ акă мĕнле пулнă.*

*Пĕррехинче, матушка Ирина /Спинова — Кокель/ Хитров псаломщикăн арăмне хăйсен нÿхрепне тасатнă чух пулăшма чĕннĕ. Ĕçленĕ вăхăтра Хитров мăшăрĕ, нÿхрепре сĕт, хăйма, çу нумайăине курсан, тĕлĕннĕ те кĕвĕçме пуçланă, каярахпа хăй мĕн–мĕн курнине упăшкине каласа панă. Лешĕ те, арăмĕ пекех, ăмсанчăк пулнă. Анчах та вăл кунпа кăна çырлахман, халăх çинче калаçса çÿренĕ: «Ĕнине пĕр йĕп кăна кирлĕ те–ха...»*

*Ĕни вара нумай та пурăнман, вилнĕ. Деомид хăйĕн хура ĕçне тусан та лăпланман, тĕнчери лару–тăру улшăннине курса, Григорий Кокеле элеклесе çăхав çырса панă.*

Турра хирĕç пыракан большевиксен влаçне çакă çеç кирлĕ пулнă. Вĕсем Д. Х. элеклĕ çăхавне тĕпе хурса, священника тĕп

[7]ЦГА Письмо И. Я. Яковлеву от 19 октября 1917 г. от П. Егорова.

тăвас тесе, васкаса приговор çыраççĕ. Турра ĕненекен çынсене тата священниксене хăратас тĕллевпе Григорий аттене халăх умĕнче персе пăрахма шутлаççĕ.

*1917 çулхи декабрь /раштав/ уйăхĕнче Григорие тытса Мăрат ялне илсе кайнă, ăна 9 сехетре вĕлересшĕн пулнă. Григорин мăшăрĕ Ирина воззвани /ун чух çавăн пек каланă тет/ çырнă та çĕрĕпе ялсем тăрăх çынсене çак хут çине алă пустарса çÿренĕ, ирхине юланутпа Мăрата васканă /халĕ* ку ял Комсомольски районне кĕрет/.

9 сехет тĕлне Мăратра пурăнакан çынсене ял варрине пуçтарнă. Çынсем пурте хăраса тăнă, çав вăхăтрах вĕсенчен чылайăшĕ Григорий аттене шелленĕ, унăн хутне кĕме хатĕр пулнă. Часах конвой çывхарнă, хăйсен умĕнче пыракан ряса çеç тăхăннă, кăкăрĕ çине хĕрес çакнă священника салтаксем, винтовкисене пеме хатĕр тытса, утса пынă. Арестленĕ Григорий атте илемлĕ сасăпа юрланă: «Пулăшаканăм тата Хÿтĕлекенĕм, мана çăлăнма май туп, тархасшăн...»

Вăл хăйне çав тери лăпкă тытнă, ним пулман пекех /*хăйне мар, пачах та урăх çынна пырса тивет тейĕн*/, вилнĕ çынна пытарас умĕнхи юрра тата священниксене пытармалли ритулти ирмоса ĕнерленĕ. Çак пĕчĕк ушкăн васкамасăр утса, персе вĕлерме палăртнă вырăна çитнĕ. Григорий атте хăйне айăплакансен умĕнче тÿрре тухса калаçман, айăплă маррине никама та ĕнентерме тăрăшман, тавлашман. Вăл хăйне çапла тытнинче пĕртен — пĕр ырă тĕллев пулнă: Григорий атте чăнлăхшăн, Православишĕн пурнăçне пама хатĕр.

Шăплăх хуçаланнă. Çынсем çак картинăна курсан шак! хытса кайнă. Вĕсем тертленекенĕн кашни сăмахне чĕре патне хурса çывăххăн йышăннă. «Манăн Турăçăм. Ăна мухтатăп. Турă Аттемĕре...» Унăн сăмахĕсене декабрĕн сивĕ çилĕ çÿлти тÿпене çĕклесе инçе — инçе илсе кайнă. Вĕсем Православиллĕ Раççей халăхĕн асаплантарас умĕнхи пĕрремĕш сассисем пулнă.

Акă Герман атте чарăнса тăнă. Çав вăхăтра чуна çÿçентерсе хĕрарăм сасси янăраса кайнă, çынсем пурте кăшкăрнă сасă енне çаврăнса тăнă. Хĕрарăм, лаша çине утланса ларнăскер, аллипе сулнă, çине — çине чарăнмасăр кăшкăрнă. Пуçтарăнса тăнă çынсем пăлханма пуçланă. Хăш — пĕрисем хăвăртрах приговора пурнăçлама, çĕнĕ влаçа юрама тăрăшнă, теприсем шăв — шавпа, халăх пăлханнипе усă курса, священника хупăрласа илнĕ, ăна приговора пурнăçлама хатĕрленекенсенчен хÿтĕленĕ. Хĕрарăм

васкаса халӑх патне ҫитнӗ те ҫынсене аллинчи хута /*возвание*/ кӑтартнӑ. Ку хӗрарӑм Григорин мӑшӑрӗ Ирина пулнӑ. Вӑл ҫӗрӗпе ялсем тӑрӑх ҫӳресе, ҫынсене ҫак хут ҫине алӑ пустарса ҫӳренӗ, ҫапла майпа пурте священник айӑплӑ маррине ҫирӗплетнӗ.

Григорие вилӗмрен хӑтарнӑ. Влаҫра ларакансем халӑха хирӗҫ кайма хӑяйман, мӗншӗн тесен Кокелӗн авторитечӗ вӑл вӑхӑтра ҫав тери пысӑк пулнӑ.

Деомид Хитров, Григорине вӗлерменнине курсан, тепӗр хут ҫӑхав ҫырнӑ: «Хура халӑх неграмотный, ҫыру пӗлмест, ухмах, ӑна итлемелле мар».

Кантурта лараkансем ҫырӑвне Григорий Кокеле вуласа панӑ.Унпа паллаштараканни ҫапла каланӑ: «Акӑ, пӑхӑр—ха, ҫырура хӑйӗн мӗн чухлӗ йӑнӑшсем тата вӑл халӑха хурлама хӑять...»

Каярахпа Хитров ухмаха тухса вилнӗ.

1920 ҫулхи июлӗн 25—мӗшӗнче мӑшӑрӗ Ирина вилсе выртнӑ. Кун пирки вӑл Никольский Н. В. патне «порок сердца» тесе ҫырать.

Григорий аттен ачисем: Александр — пӗчӗккӗ чух вилнӗ, ӑна Тӑрӑн чиркӳ картишӗнче, Григорийпе Клавдие Кивӗ Ҫӗрпӳел /*Старо—Челны Сюрбеево*/ чиркӳ картишӗнче пытарнӑ. Ирина Спинова та унта выртать. Арӑмӗ вилсен Александра — 11 ҫулта, Аркадий — тӑххӑрта, София пиллӗкре пулнӑ.

Совет влаҫӗ Григорий аттене чиркӳ службине хӑварса, ахаль ҫынсен пурнӑҫӗпе пурӑнма сӗнет. Ӑна лайӑх ӗҫ сӗнеҫҫӗ, Шупашкарта пурӑнас пулсан хваттер пама та шантраҫҫӗ. Анчах та вӑл Турӑмӑра хирӗҫ пыракан влаҫ сӗнӗвӗпе килӗшмест, ҫӗр ҫинчи ырлӑх—пурлӑха сивлет. Григорий атте Ҫӑлаканӑн ҫак сӑмахӗсене чун тӗпӗнче упрать:

*«Иисус ӑна каланӑ: аллине акапуҫ тытсан, каялла ҫаврӑнса пӑхакан кирек кам та Турӑ патшалӑхӗшӗн шанчӑклӑ мар вӑл, тенӗ» /Лк., 9; 62/. «Кам хӑйӗн ашшӗне, е амӑшне Манран ытла юратать, вӑл Мана юрӑхлӑ мар; кам ывӑлне, е хӗрне Манран ытла юратать, вӑл та Мана юрӑхлӑ мар»/Мф., 10; 37/.*

Григорий атте малтанхи заповеде яланах асра тытнӑ:

*«Санӑн Турру — Эпӗ, Манран пуҫне санӑн урӑх турӑсем ан пулччӑр».*

Вӑл хӑйӗн тата ачисен пурнӑҫне Турӑ аллине парать, хӗресне тытса Ун хыҫҫӑн утать. *«Пирӗншӗн, Православи тӗнне*

*ёненекенсемшён çёр çинче чи хакли — таса ёнену, вăл ёмĕр—ёмĕре пырать, илĕртекен ытти пурлăхăн вăхăчĕ нумай вăхăт хушши пулмасть, пĕтет»*[8].

Хăйĕн пĕлӳ шайне ӳстерес тата Православи чиркĕвне Турра ĕненмен çынсенчен тата лайăхрах хӳтĕлес тĕллевпе Григорий Кокель Петроградри Богослови институтне вĕренме кĕрет, мĕн пур япалине сутать, Петроградра арăмĕн йăмăкĕ /*Мария*/ ячĕпе пĕр пӳлĕмлĕ хваттер туянать, ачисене вăхăтлăха тесе Петроградри ачасен çуртне вырнаçтарать.

1922 çулта Григорий атте хăйне вĕрентнĕ Н. В. Никольский *профессор патне çыру çырать, чăваш епархине туса хума вăхăт* çитнине пĕлтерет. Ун шучĕпе Шупашкарта чăваш архиерейĕн /е митрополитăн/ кафедри, уездсенче — викарнăй епископсем пулмалла. Вĕсен хуçалăх ĕçĕсене йăлтах хăйсен вăйĕпе тумалла[9].

## ГЕРМАН ЕПИСКОП

1924 çулта Григорий атте Богослови институтне ăнăçлă вĕренсе пĕтерет. Ун хыççăн Таса Патриарх Тихон, çĕнĕ влаç умĕнче айăпланнă çын шутĕнче пулсан та, хăйне чиркӳ службинче ĕçлеме чарманнипе усă курса, Григорий аттене Йĕпреç епископĕ, Ульяновск епархийĕн викарийĕ пулма пехиллет. Чиркӳри епископ тивлетне пурнăçлама шаннă вăхăтра Таса Тихон Патриарх Германа шăппăн çапла калать: «Сана обновленецсене хирĕç кĕрешме пехил паратăп, çине тăрса кĕреш!»

Çав вăхăтра Ленин пулăшнипе пĕтĕм Раççей тăрăх чиркӳсене хирĕçле пыракан тĕн вĕрентĕвне сарма пуçлаççĕ. Çак юхăма Введенский священник, националвноçĕ — еврей, нумай, анчах тĕллевсĕр пакăлтатма юратакан çын ертсе пыма пуçлать. Вăл большевиксен пулăшăвĕпе усă курса, Православи тĕнне шалтан аркатса пыма тĕллев тытать.

Чăваш Республикинчи архиерей кафедрине çитсен, Герман Владыко хăйне хирĕçле ĕçлекен темиçе епископпа, суя шухăшлă раскольниксемпе тĕл пулать. Вĕсен шутĕнче Тимофей /Зайков/, Даниил /Филимонов/, Иоанн /Никольский/ тата ыттисем те

[8]*ЦГА общественных обьединений ЧР, фонд №1, опись 2, том 1, дело №2207, "Возвание епископа Германа ко всем православным христианам Симбирской епархии и Чувашской области", 1 мая 1925 г.*

[9]*НА ЧГИГН, отд.1, том 320, стр.153-156.*

пулнă. Хăйсен пушă, Православи тĕнне хирĕçле ĕçĕсемпе çак ушкăна кĕрекенсем обновленецсен çулĕ çине, теприсем иккĕленсе, малашне мĕн пулĕ—ха тесе, улшăну пулассине шанмасăр, тем пуласса кĕтсе пурăннă. Кĕскен каласан, вĕсен хăйсен çирĕп позицийĕ пулман.

Обновленецсен, чиркӳсене хирĕçле пыракан тĕн вĕрентĕвне саракансен ушкăнне Улатăр хулинче 1924—1925 çулсенче — Феодор Преображенский епископ, 1925—1934 çулсенче — Викентий Никипорчук, Шупашкар хулинче 1924 çулта — Даниил Филимонов, 1924—1938 çулсенче Тимофей Зайков ертсе пынă[10].

Чăваш Республикинче Григорий Яцковский ертсе пыракан тепĕр ушкăн пулнă Вăл та Таса Православине хирĕçле ĕçсем тунă. Григорианецсен управленийĕсене[11] Шупашкарта 1925—1926 çулсенче Симеон Михайлов епископ, Йĕпреçре çав çулсенчех Виссарион Зоринпа Гермоген Кузьмин епископсем, 1926 çулта Анатолий епископ[12] ертсе пынă.

Герман епископ Чăваш çĕршывне килнĕ вăхăтра Православи чиркĕвĕн управленийĕн центрне Шупашкарта 1923—1924 çулсенче Симеон Михайлов епископ, 1926—1930 çулсенче Афанасий Малинин епископ, Улатăр хулинче 1920—1923 çулсенче Гурий Степанов епископ, 1921—1925 çулсенче Иоаким Благовидов епископ[13] ертсе пынă.

Çапла вара, 1924 çулта Чăваш Республикинчи чиркӳсенче виçĕ ушкăн, вĕсен шутĕнче: обновленецсем, григорианецсем тата Таса Православине хӳтĕлекенсем шутланса тăнă. Таса Тихон Патриарх хушнипе кунта килнĕ Герман епископ Улатăрти, Шупашкарти, Ульяновскри Православи чиркĕвĕсенчи ĕçсемшĕн явaплă пулнă.

Вăл православи христианĕсемпе чиркӳсенче служба ирттерекенсемшĕн Чăваш е Шупашкар епископĕ пулса тăрать. Сĕнтĕрвăрри районне кĕрекен Кушниково ялĕнче вырнаçнă

[10]*Акты Святейшего Патриарха Тихона и позднейшие документы о премственности высшей церковной власти 1917-1943 гг. Губонин М. Е. Стр. 910.*

[11]*Акты Святейшего Патриарха Тихона и позднейшие документы о премственности высшей церковной власти 1917-1943 гг. Губонин М. Е. Стр. 911.*

[12]*Митрополит Иоанн Снычев, Церковные расколы в Русской церкви 20-30 г.г. XX столетия, 1997 г., стр.83.*

[13]*Акты Святейшего Патриарха Тихона и позднейшие докумены о премственности высшей церковной власти 1917-1943 гг. Губонин М. Е. Стр. 911.*

Преображенски чиркӗвӗн кӗнекинче ҫапла ҫырса хуни пур: «1924 ҫулхи июль уйӑхӗнче чиркӳре Шупашкар епископӗ Герман пулчӗ». Преображенски чиркӗвӗ нихӑҫан та обновленецсемпе пӗр шухӑшлӑ пулман. Ҫакӑ Герман епископ хӑйӗн пек ҫирӗп шухӑш – туйӑмлӑ, Православи тӗнне ҫирӗп тытса пурӑнакан Александр Соловьев протоиерей патӗнче пулнинче те яр уҫҫӑн курӑнать. Калас пулать, Герман епископӑн тусӗ священниксен йӑхӗнчен тухнӑ, унӑн ашшӗ Алексей иерей священник тивӗҫӗсене 40 ҫул хушши пурнӑҫласа пурӑннӑ. Вӑл Кушниково, Ураково /*тахҫан Бестужев декабрист улпут хуҫалӑхӗ шутланнӑ*/ ялӗсенче шкул уҫнӑ. Герман епископ кунти чиркӳре служба ирттернӗ, вӑл, Тихон Патриарх майлӑ ҫынсене пӗр шухӑшлӑ пулма чӗнсе, Православи Ӗненӗвне упраса хӑварас тесе, Аслӑ Турӑмӑртан тата Унӑн Таса Амӑшӗнчен пулӑшу ыйтнӑ.

Герман епископ Турӑ ӗҫне парӑнса ывӑна пӗлмесӗр тӑрӑшнӑ. Унӑн архипастырь тумӗсӗр пуҫне урӑх нимӗн те пулман, ҫапах та вӑл ҫуран, хӑш чухне ҫул ҫинче кам та пулин лашапа хӑваласа ҫитсен урапа е ҫуна ҫине ларса, Чӑваш Республикинчи пур чиркӳсене те ҫитсе курнӑ.

Чӑваш патшалӑх университетӗнчи культурологи кафедрин доценчӗ, религи енӗпе ӗҫлекен Браславский Леонид Ильич историк «Православные храмы Чувашии» кӗнекере ҫапла ҫырать: «1924 ҫулӑн варринче Чӑваш Республикинче Тихон Патриарх майлӑ ҫынсен активлӑхӗ ӳсет... чиркӳсенче обновленецсене хирӗҫ тӑракан ушкӑнсене Герман епископ ертсе пыма пуҫлать. Ӑна Чӑваш ҫӗршывне Тихон Патриарх хушӑвне пурнӑҫлама янӑ. Герман епископ хӑйӗн ӗҫне обновленецсене хирӗҫ кӗрешмеллине малтанах палӑртнӑ планпа туса пынӑ, кӗске вӑхӑт хушшинче чылай прихутсенче пулса, Чӑваш Республикинчи духовенствӑри чылай священниксене хӑй майлӑ ҫавӑрнӑ» /140 стр./, «1925 ҫулта православи прихучӗсен шучӗ 230 пулнӑ пулсан, вӗсенчен 159 прихут традициллӗ православи енче пулнӑ...» /145 стр/.

Хӑйне шанса панӑ чиркӳсене Герман епископ чунтан хурланса ҫӳренӗ, Ҫӑлӑнӑҫ Паракан̆ӑн сӑмахӗсене пурнӑҫланӑ: «Ҫапла ӗнтӗ, хӗрес хурса Ашшӗн, Ывӑлӗн, Таса Сывлӑш ячӗпе кайӑр, пур халӑха та вӗрентӗр... Сире эпӗ мӗн хушнине пӑхӑнса вӗсене вӗрентӗр». Таса Тихон Патриарх Чӑваш Республикинчи православи прихучӗсен ӗҫне йӗркелесе яма хӑйне пехилленине пурнӑҫласа, вӑл обновленецсен енне куҫнӑ священниксене ӳкӗте

кěртет, вěсем йăнăш çулпа кайнине, аташнине ăнлантарса парать, çапла майпа чылайăшне тěрěс çул çине кăларать.

1925 çулхи февралěн 19—мěшěнче Герман епископ Солдыбаево тата Карамыши ялěсенче Дунин, Глинский, Емельян Федоров тата Белов священниксемпе пěрле пулать. Вăл Шăхран, Хурамал, Ново—Тинчурино, Кошлауши Торханы ялěсене те çитет, февралěн 21—мěшěнче Сěнтěрвăрринчи Казански чиркěвěнче всеношнăй, тепěр кунне те Троицки Соборěнче служба ирттерет. Кунта пулнипе çеç лăпланма лармасть, февраль уйăхěн варринче Шупашкар уездне кěрекен ялсене çитсе курать.

Герман епископ прихутсенче пулнă вăхăтра е çул çинче еретиксемпе тěл пулсан нумай хутчен асап курать. Сăмахран, Чăваш Республикинчи Йěпреç районне кěрекен Хормалы ялěнче ăна обновленецсем тытса хěнеççě, вăл аран—аран вилěмрен хăтăлать. Иоанн Снычев митрополитăн 1999 çулта «Церковные расколы в Русской православной Церкви 20—30 гг. XX столетия» кěнекен 83—мěш страницинче çапла çырни пур: «Герман /*Кокель*/ епископ Йěпреç викариатствине /*1925—1927 çулсенче*/ ертсе пынă вăхăтра пěррехинче çакăн пек киревсěр ěç пулса иртнě. Вăл вырсарникун Киево—Николаевски мăнастирьте кěлě тунă вăхăтра пулнă. Мăнастирь хапхинчен кăшт иртсенех ăна чулсемпе пеме пуçланă, çав вăхăтрах манашкăсем ăна мăшкăлласа вăрçнă. Каярахпа çакă паллă пулнă. Ку мăнастире григорианецсене ертсе пыракан Виссарион /*Зорин*/ епископ ярса илнě иккен. Вăл хěтěртнипе манашкăсем «сергиевски» епископне чулсемпе персе кěтсе илнě»[14].

Çапах та Православине чăн—чăн ěненекенсем тÿрě кăмăллă, таса священника чăтăмсăррăн кěтеççě. Вěсем, Герман епископ мěн хушнине пурнăçланисěр пуçне, вырăнти влаçсенчен хăрамаççě, сăмахран, Вознесенск храмěн Чиркÿ Совечě /*Улатăр хулинче малтан унта хěрарăмсен мăнастирě пулнă*/ ăна кунта ěçлеме тата пурăнма чěнсе илеççě.

Герман епископ вырăсла тата чăвашла чěнсе каланă çырусем хатěрлет, вěсене чиркÿ прихучěсенче çитерсе, халăх хушшинче сарать. Çак çырусенче вăл раскольниксен йышăнăвěсене пăрахăçлама, вěсене пачах та пăхăнмалла мар тесе ăнлантарса парать, раскольниксен наградисене йышăнмалла мар, тет, икě хут авланнă священниксен чиркÿсенче служба ирттерме

[14] *Митрополит Иоанн Снычев, Церковные расколы в Русской церкви 20-30 г.г. XX столетия, 1997 г., стр.83.*

чармалла тесе чӗнсе калать, вӗсемпе ҫыхӑннӑ, мӑшӑрланнине пӗлтерекен документсене шыраса тупма ыйтать, чиркӳсенче ачасене тӗне кӗртнине, ҫамрӑк мӑшӑрсем ҫемье ҫавӑрнине пӗлтерекен документсене, метрика кӗнекисене йӗркеллӗн ҫырса пымалинине аса илтерет. «Вӑхӑт ҫитӗ, вӗсене кайран ӗненсе малашне те упрама пуҫлӗҫ»[15],— тет вӑл. Ҫакӑн пек ҫырусене вӑл Ульяновскри чиркӳ прихучӗсене те ярса парать. Обновленецсенчен пӑрӑнма ыйтса вӑл ҫапла ӑнлантарать: «Шупашкарта, Етӗрнере, Ҫӗрпӳре, Сӗнтӗрвӑрринче обновленецсен чиркӗвӗсем ҫук. Тимофей — обновленец, еретик, ӑна священниксен санӗнчен хӑтарнӑ». Епископ Герман хӑй чӗнсе каланӑ ҫырусем ҫине пичет лартса алӑ пусать.

1925 ҫулхи март уйӑхӗнче вӑл ОГПУ ячӗпе ҫыру ҫырать, «Автономиллӗ Чӑваш облаҫӗнчи Православи Чиркӳн Хыпарҫи» /«Вестник Православной Церкви АЧО»/ ятпа журнал кӑларма шутланине пӗлтерет. Анчах та унӑн ыйтӑвне тивӗҫтермеҫҫӗ, мӗншӗн тесен пулас журналӑн программипе килӗшӳллӗн, Герман епископ религипе нравственность темисемпе кӗнекесем те кӑларма шухӑшланӑ. Паллӑ ӗнтӗ, ку влаҫра ларакансен хирӗҫ пынине пӗлтернӗ.

Обновленецсен юхӑмӗ енне куҫнӑ епископсемпе священниксенчен чылайӑшӗ, хӑйсем суя ирӗке тухнине туйса, христиансен саккунӗсене пӑхӑнма пӑрахаҫҫӗ, иккӗмӗш хут авланнӑ чухне упӑшкисенчен тӑлӑха тӑрса юлнӑ арӑмсене илеҫҫӗ. Вӗсем, Герман епископ хӑйсене чӑрмантарнине, халӑх умӗнче питленине чӑтаймасӑр тата ҫынсем умӗнче тӳрре тухас шутпа ОГПУ ячӗпе элеклӗ ҫырусем ҫырма пикенеҫҫӗ. Священник—обновленецсем пӗр каварлӑ пулса, хӑйсен ҫӑхавӗсенче Герман епископ контрреволюционер, ӑна тӗрмене хупса хумалла теҫҫӗ. Хӑйсен хура ӗҫне малалла туса пырса, вӗсем чиркӳ прихучӗсене пыракан ҫынсене Германа итлемелле мар, ӑна священникӑн вырӑнӗнчен хӑтарнӑ, вӑл коммунист тесе элек сараҫҫӗ: «Пӑхӑр—ха, Герман епископ еплерех вӗрентсе чӗнсе калаҫать, суя шухӑш сарать, анчах та ӑна тӗрмене хупса хумаҫҫӗ. Енчен те вӑл коммунист пулман пулсан, вӑл тахҫанах тӗрмере лармалла».

Чӑваш чиркӗвӗсен управленийӗн председателӗ Тимофей /Зайков/ епископ, обновленец пулса тӑнӑскер, облаҫри исполком

[15]*Архив общественных объединений ЧР, фонд №1, опись 2, том 1, дело №2207.*



пайне ҫакӑн пек ҫыру ҫырать: «Герман епископ ӗлӗкхи пек пурӑнма чӗнсе калаҫать, хӑйне килӗшмен священниксене ӗҫрен хӑтарса, вӗсем вырӑнне хӑй майлӑ ҫынсене лартать, таса синода хирӗҫ ӗҫлет. Облаҫри чиркӳ управленине православи тӗнӗ темиҫе ушкӑна пайланса кайнишӗн айӑплать, хӑйне ӗҫрен кӑларнине шута хумасӑр халӑхран укҫа—тенкӗ пуҫтарать, контрреволюцилле сӑмахсемпе чӗнсе калаҫать, халӑха пӑлхантарать, ӗлӗкхи патша тытӑмне туса хумалла, тет».

Обновленец епископсем хӑйсен саккунлӑ мар пухӑвӗсенче Герман епископа тӗрӗс мар айӑпласа, ӗҫрен кӑларма йышӑнаҫҫӗ. Хӑйсем пирки, эпир православи тӗнне пӑхӑнса тӑратпӑр тесе, халӑх хушшинче наркӑмӑшлӑ суя сӑмахсем сараҫҫӗ.

Вӗсем хӑйсен элеклӗ ҫырӑвӗсенче ҫапла пӗлтереҫҫӗ: Герман епископ шучӗпе, 1923 ҫулта ирттернӗ собора, вӑрӑ—хурахсем пек ирттернӗ. Унӑн йышӑнӑвӗсене кам хирӗҫлет, ҫавсен подписка ҫырса памалла. Вара эпир тин ҫак прихутсене хамӑрӑн йыша илетпӗр. Вӑл контрреволюцилле ӗҫсем тӑвать, священниксене суйласа лартать. Совет влаҫӗн саккунӗсемпе килӗшӳллӗн, уйӑрӑлнӑ упӑшкипе арӑмне, тепре мӑшӑрланас пулсан, венчете тӑратмалла мар, тет.

Хӗрӳ чӗреллӗ, хӑйӗн вӑй—халне шеллемесӗр, ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлекен Герман епископ ҫӗнӗ влаҫшӑн куҫ ҫинчи шурӑ пекех курӑннӑ. Ӑна каҫхине ОГПУ—на ҫине—ҫине чӗнме

пуҫлаҫҫӗ, хваттерӗнче эрнере 2—3 хутчен ухтару ирттереҫҫӗ. Хальхинче вӑл хӑйне Мӑратри пек тытмасть, шӑпи, кун—ҫулне влаҫра ларакансем лайӑх татса парасса шанмасть, хӑй халӑха, чиркӗве кирлӗ иккенне ӑнланать. Ҫавӑнпа та унӑн православи тӗнӗн тасалӑхӗшӗн кӗрешмелле. Ҫапла тӑвать те. Хваттерӗнче ҫине—ҫине ухтарнине, хӑйне тӗрӗс мар айӑпланине хирӗҫлесе отпор парать.

Герман епископ Мария инокиньӑна /*Марфа Егоровна Николаева—Спинова*/[16] ҫапла каласа панӑ. «Пӗррехинче хваттере ОГПУ—ра ӗҫлекенсем ухтарма пычӗҫ. Манӑн ун чухне халӑх валли ҫырнӑ чӗнӳллӗ ҫырусем /*воззванисем*/ нумайччӗ. Мӗн тумалла? Эпӗ чӗнмен «хӑнасене» пӳрте кӗртмерӗм, алӑка хупса хурса, ӑна хӑвӑртрах ан уҫчӑр тесе, пукансемпе, сӗтелпе тата ал айне лекнӗ йывӑр япаласемпе тӗкӗлерӗм. Чекистсем ман пата тӳрех кӗреймерӗҫ, ҫилленсе кайса, алӑка хупса хунине пӑхмасӑр пӑшалӗсенчен пеме пуҫларӗҫ. Эпӗ ҫав вӑхӑтра хам ҫырнӑ хутсене урайӗнче упаленсе пуҫтарса кӑмакара ҫунтарма пуҫларӑм. Хамӑн ӗҫе вӗҫлесен чекистсем хваттере ҫӗмӗрсе кӗчӗҫ. Анчах та вӗсем нимӗн те тупаймарӗҫ. Чекистсем тухса кайсан эпӗ каллех халӑх валли воззванисем ҫырма пикентӗм».

1924 ҫулхи августӑн 5—мӗшӗнче влаҫра ларакансем Герман епископран «хальхи вӑхӑтра пурӑнакан вырӑнтан тек ниҫта тухса ҫӳреместӗп» тесе ҫыртарнӑ подписка илеҫҫӗ. Ҫак кунтан пуҫласа, унӑн, чиркӳ ӗҫӗсемпе тӗрлӗ районсенче вырнаҫнӑ прихутсене каяс пулсан, ОГПУ органӗсенчен ирӗк ыйтмалла пулнӑ. Вӑл унччен те хӑй шутланӑ пек ирӗккӗн тухса ҫӳреймен. Сӑмахран, 1924 ҫулхи майӑн 18—мӗшӗнче Герман епископ Чӑваш Республикине кӗрекен ОГПУ пайӗн Патӑрьел уездне заявлени ҫырнӑ:

«Шӑхран, Хормалы, Ново—Тимчурино, Кошлауши тата ыттисен Чиркӳ Совечӗ мана асӑннӑ прихутсенче служба ирттерме чӗнет. Ҫакна шута илсе мана ҫула тухма ирӗк парӑр[17]».

Унӑн хӑй туяннӑ кашни япалашӑн влаҫра лараканСен умӗнче тӳрре тухса отчет пама тивет. Тӗслӗрен, вӑл Ленинградра

---

[16]*Марфа Егоровна, Ирина Егоровна йӑмӑкӗ, Григорий Кокелӗн мӑшӑрӗ. Хӗр чухнехи хушамачӗ — Спинова, упӑшкин хушамачӗ — Алешева, паспортпа — Николаева. Ку хушамата аслашшӗне, Николая хисеплесе панӑ.*

[17]*Архив общественных обьединений ЧР, фонд №1, опись 2, том 1, дело №2207,следственны фонд.*

шапирограф туяннă, унăн хакĕ пирки те Патăрьел уездĕнчи милици уйрăмне пĕлтерет. Çав вăхăтрах обновленецсем хăйсем мĕнле япаласем туяннине пĕлтерсе вырăнти влаç органĕсен умĕнче нимĕнле отчетсем те тăратман.

Влаçра ларакансем ăна хĕсĕрлемелли çĕнĕ меле сем шухăшласа кăларма пуçлаççĕ, вĕсем Герман епископа çакăн пек заявлани çыртараççĕ: «Мана Чăваш ОГПУ çапла хушнă, çак вăхăтран пуçласа малашне манăн администраци прависем пулмаççĕ, малашне Чăваш облаçĕнчи чиркӳсемпе прихутсен тĕлĕшĕпе эпĕ администраци тивĕçĕсемпе усă курмастăп, енчен те вĕсене пăссан, хам саккун умĕнче яваплă пулнине пĕлтеретĕп»[18].

Каярахпа Герман епископ ОГПУ ячĕпе çыру çырать, вырăнти пуçлăхсем хăйсен влаçне саккуна пăсса ӳстернине кăтартса парать, совет влаçĕн, тет вăл, 1925 çулхи августăн 26–мĕшĕнче НКЮ 5–мĕш пайĕ ăнлантарса панипе, «Чиркӳсене государствăран уйăрмалла» /*«Об отделении церкви от государства»*/ тенипе килĕшӳллĕн, культ облаçĕсен ĕçне хутшăнмалла мар. Вăл çак документа тĕпе хурса, хăй малтан çырса панă хутсене пăрахăçлама ыйтать, тĕрлĕ вырăнта вырнаçнă чиркӳсене ирĕклĕн тухса çӳреме ыйтать.

1925 çулхи августăн 20–мĕшĕнче Герман епископа Шупашкар хулинчи ОГПУ–на чĕнеççĕ. Тепĕр икĕ кунтан унăн тĕлĕшĕпе уголовнăй ĕç пуçараççĕ. Ăна РСФСР Уголовнăй Кодексăн 73–мĕш, 122–мĕш, 123–мĕш статьисемпе айăплама хăтланнă. Çав статьясене ĕненес пулсан мĕн курăнать–ха? Герман епископ влаç тĕлĕшĕпе Чăваш тата Ульяновск облаçĕсенче провокациллĕ тĕрĕс мар шухăш сарать, хăйне тивĕçлĕ мар администрациллĕ функцисемпе усă курать имĕш. Анчах та влаç хăйĕн йышăнăвĕсене хăех хирĕçлени палăрать, сăмахран, апрелĕн 29–мĕшĕнче Патăрьел уездне кĕрекен Йĕпреç ялĕнче Православи чиркĕвĕн обществине регистрациленĕ пулнă, 1925 çулхи март уйăхĕнчех вăл Православи чиркĕвĕн прихучĕсен пĕрлешĕвне Администраци пайĕнче регистрациleме документсем тăратнă. Влаçри чиновниксен ăна саккунра палăртнă тăрăх икĕ эрне хушшинче ответ памалла пулнă. Анчах та вĕсем çав документсене ним

[18] *Архив общественных обьединений ЧР, фонд №1, опись 2, том 1, дело №2207,следственны фонд.*

вырăнне те хуман. 1925 çулхи май уйăхĕнче АЧР ОГПУ уполномоченнăй ячĕпе заявлени çырать. Ульяновск губернинче Симбирск губернийĕн викарийĕ пулнине, хăй Улатăр хулинче пурăннине шута илсе, çакна регистрацилеме ыйтать.

1925 çулхи августăн 24–мĕшĕнче унран хăй пурăнакан вырăнтан ниçта та тухса кайма юрамасть тесе подписка илеççĕ. Авустăн 27–мĕшĕнче 5 сехетрен пуçласа вăл Улатăр хулинче пурăнма пуçлать. Анчах та ăна августăн 28–мĕшĕнче заключеннăйсем ларакан çурта хупса хураççĕ, чиркÿсенче служба ирттерме юрамасть тесе йышăннине пăхăнманнишĕн сентябрĕн 1–мĕшĕнче Ульяновск хулине илсе кайма йышăнаççĕ, ирхине 4 сехетре çакна пурнăçлаççĕ. Хулана илсе çитерсен, сентябрĕн 14–мĕшĕнче тин пĕрремĕш допрос ирттереççĕ. Çав куннех Герман епископа Чăваш çĕршывне каялла илсе кайма йышăнаççĕ. Октябрĕн 25–мĕшĕнче Анимаиса манашка /*Анастасия Терентьева*[19]/ ОГПУ ячĕпе çыру çырать, Герман епископа конвойсăр, тытса хупнă заключеннăйсемпе пĕрле пăрахут çине лартса килмелле мар, вăл хăй ирĕкĕпе Чăваш çĕршывне килме хатĕр тесе çыру çырать. Мĕншĕн тесен ун чухне пăрахут хăçан çула тухасси паллă пулман. Анчах ку ыйтăва татса памаççĕ. Герман епископ Шупашкара ноябрĕн 12–мĕшĕнче çеç çитет Кунта ăна каллех тĕрмене тытса хупаççĕ. Вăл хăй айăплă маррине пĕлтерсе ОГПУ–н Чăваш пайне çыру çырать, хăйне айăплама палăртнă 73–мĕш статьяна çĕнĕ кодексра пăрахăçланине, 122, 123–мĕш статьясемпе усă курас пулсан 6 уйăх таран çеç ирĕксĕрлесе ĕçлеттермелле, тет. Следстви тахçанах вĕçленнĕ, судра унăн ĕçне хăçан пăхса тухасси паллă мар, çапах та ăна виçĕ уйăх хушши тĕрмере тытаççĕ, ку саккуна пăсни пулать. Ноябрĕн 30–мĕшĕнче тин ун ĕçне пăхса тухаççĕ, тĕрмерен кăларса, пурăнакан вырăнтан ниçта тухса кайма юрамасть тесе унран подписка илеççĕ.

Тĕрмерен тухсан та Герман епископа обновленецсем канăç памаççĕ, хăйсен хура ĕçне малалла туса пыраççĕ. Вĕсем хĕтĕртнипе ОГПУ, Герман епископ Чăваш Республикинче пурăнсан, халăхăн кăмăлĕ политика енĕпе влаçра ларакансене малашне тивĕçтерме пултараймасть тесе шутлать, çавăнпа та ăна кунтан кăларса ямалла. Ку ĕçе ОГПУ–н коллегинче пăхса

[19] *Анимаиса манашка — Анастасия Теретьева Патăрьел районне кĕрекен Турхан ялĕнче çуралнă.*

тухма сĕнеççĕ. 1926 çулхи июнĕн 4 – мĕшĕнче Герман епископа Чăваш Республикинче 3 çул хушши пулмалла мар тесе кăларса яраççĕ, малашне унăн хăш вырăнта пурăнмаллине çирĕплетеççĕ.

1926 – 1927 çулсенче Герман епископ Пĕкĕлмере тата Самарăри епархин викарийĕ пулса ĕçлет. Пĕкĕлмере пурăннă чух Турра ĕненекенсемпе ĕненменнисен хушшинче ирттерекен тĕрлĕрен диспутсене хутшăнать, тухса калаçать. Каçхине ăна яланах НКВД машини çине лартса каяççĕ. Турра ĕненменнисемпе ирттерекен диспутсенчи тавлашусенче вăл яланах çĕнтерӳçĕ пулать. Ăна халăх кирек хăçан та хисеплесе, юратса, ура çине тăрса тăвăллăн алă çупса ăсатать. Килте: «Диспутра кам çĕнтерчĕ?» — тесе ыйтсан яланах: «Тура çĕнтерчĕ», — тет.

Каярахпа Герман епископ тĕрлĕ хуласенче пурăнать, пĕр вырăнта тĕпленсе пурăнаймасть. Унăн вырăнти влаçсем ыйтнипе ĕç вырăнне те час – часах улăштарма тивет, вăл:

1927 – 1929 çулсенче — Бугурусланра епископ;

1928 – 1932 çулсенче — Кузнецк епископĕ, Томск епархийĕн викарийĕ;

1929 – 1930 çулсенче — Томск тата Алтай епископĕ;

1930 çулхи ноябрь – 1931 çулхи июлĕн 14 – мĕшĕ — Омск тата Павлодар епархийĕсене ертсе пырать;

1931 – 1932 çулсенче — Никольско – Уссурийск епископĕ, çав вăхăтрах Хабаровск, Приморск, Владивосток епархийĕсенче ĕçлет;

1932 – 1932 çулхи сентябрĕн 19 – мĕшĕ — Барнаул епископĕ, çав вăхăтрах Бийск – Алтай епархийĕсене кĕске вăхăт хушшинче ертсе пырать;

1932 – 1932 çулсенче — Хабаровск епископĕ;

1932 – 1935 çулсенче — Благовещенск епископĕ.[20]

Çӳлерех асăннă облаçсенче епископа яланах ОКПУ йĕрлет, ăна ĕçлеме чăрмантарать. Çак кĕнеке авторĕн Герман епископа вилнĕ хыççăн Кемерово хулинче реабитациленĕ справка та пур. Пирĕншĕн çакă та паллă: 1932 – 1932 çулсенче Герман епископа персе пăрахмалла тесе приговор йышăнаççĕ. Çакна пĕлсен Анимаиса манашка Мускав облаçне кĕрекен Ивантеевка хулине

[20]*Акты Святейшего Патриарха Тихона и позднейшие документы о премственности высшей церковной власти 1917-1943 гг. Губонин М. Е. Стр. 969.*

Марфа Егоровна Спинова — Алешева патне пырса ҫитет. Марфа тата Анимаиса Герман епископа вилӗмрен хӑтарас тесе Калинин патӗнче йышӑнура пулаҫҫӗ, унран пулӑшу ыйтаҫҫӗ. Пурте хисеплекен Совет Союзӗн старости хута кӗрет, епископа вилӗмрен хӑтарать.

Турра ӗненмен власть ӑна нихӑш вырӑнта та нумай вӑхӑт хушши пурӑнма ирӗк памасть. Ҫавӑнпа та Герман епископӑн хӑйӗн пурӑнакан вырӑнне час — часах улӑштарма тивет. Пысӑк пӗлӳллӗ оратора, Православин чӑн — чӑн ӗненӗвне лайӑх пӗлекене, ҫемҫе тата кӑмӑллӑ, хӑй майлӑ ҫавӑрма пултаракан, кирек хӑш вӑхӑтра та хӑйӗн тӗрӗслӗхне ҫирӗппӗн хӳтӗлеме тӑрӑшакан, ҫав вӑхӑтрах Аслӑ Турра́мӑра чунтан юратакан, Ӑна парӑннӑ святоя халӑх хисепленӗ, ҫавӑнпа та ун патне яланах туртӑннӑ. Вӑл православи халӑхӗшӗн магнит пек пулнӑ.

1933 ҫулхи сентябрӗн 8 — мӗшӗнче Герман епископа Барнаул хулинче арестленӗ. Вӑл Амур облаҫӗнчи Свободный хула ҫывӑхӗнчи лагерьте ларнӑ.

Тем тӗрлӗ хытӑ асаплантарсан та Аслӑ Туррӑмӑр ӑна Христос вӗрентӗвӗн аслӑ уй — хирӗнче ӗҫлеме май туса панӑ. Ҫӗпӗрти чылай епархинче вӑл пӗр ҫул е икӗ ҫул хушши ӗҫлеме пултарать. Ҫак кӗске вӑхӑт,уншӑн, Чӑваш Республикинчи пекех, ҫителӗклӗ пулнӑ, вӑл хӑйӗн тивӗҫне туллин пурнӑҫлама пултарнӑ. Герман епископ хӑйне Чӑваш Республикинчен хӑваласа ярсан, Раҫҫей ҫӗрӗнче, Петербургран пуҫласа Владивосток хулине ҫити каять, пиншер — пиншер чиркӗве Таса Православин тӗнӗ майлӑ ҫавӑрать. Аслӑ Туррӑмӑр умӗнче хӑйӗн ҫӗр ҫинчи тивӗҫне йӑлтах, туллин пурнӑҫласан вӑл асапланса вилет.

Мануил /Лемешевский/ митрополит, тӗрмере унпа пӗрле пулнӑскер, Герман епископ асаплантарнине чӑтаймасӑр, чылай вӑхӑт хушши камерӑра ларайман, вилнӗ тесе шутланӑ. Вӑл, 1957 ҫулта, Шупашкар тата Чӑваш епархийӗн архиепископӗн тивӗҫне пурнӑҫланӑ чух, Марфа Егоровна Николаевӑпа тӗл пулать, ӑна ҫак хӑрушӑ хыпара пӗлтерет: «Герман епископ асаплантарнине чӑтаймасӑр вилчӗ».

Герман Владыко Турӑ пулӑшнине пула вилмен, хӑйне асаплантаракансене парӑнман, тӳсӗмлӗн, шӑпа пӳрнӗ хӗресне хӑрамасӑр, нӑйкӑшмасӑр йӑтса пынӑ, ҫирӗп кӑмӑллӑ пулнӑ. Ҫыннӑн пурнӑҫне вӑл вӑхӑтра ытла та йӳн хакпа виҫнӗ. Ҫакна эпир Герман епископа айӑпласа ҫырнӑ приговорпа паллашсан

тӳрех асӑрхатпӑр. Ҫак документа пӗчӗк хут татки ҫинче хӑмӑр кӑранташпа ҫырнӑ. «Персе пӑрахмалла» тенине хӗрлӗ – кӑвак тӗслӗ штампа ҫапнӑ. Лагерьсенче ҫав вӑхӑтра чылай ҫынна персе пӑрахнӑ, хӑйсен тискер ӗҫне тӑвакан палачсен хут ҫинче ҫырнӑ чух, ҫакна алӑпа ҫырма та ӳркеннӗ, ҫавӑнпа та НКВД ятарласа хӗрлӗ – кӑвак тӗслӗ штамп хатӗрленӗ те ӗнтӗ. Епископ Германа Ҫӗпӗрте айӑплани, Чӑваш Республикинчи пекех, ӑссӑрланса кайса ухмахланнине ҫеҫ пӗлтерет. Ӗненекен ҫыншӑн тӗрӗслӗх темрен те хаклӑрах. Турра ӗненекенсем ҫутӑ чӑнлӑхшӑн кӗрешсе пурнӑҫне хӗрхенмеҫҫӗ. Ҫакна Герман епископ шӑпи те питӗ лайӑх ҫирӗплетет.

Ӑна айӑпласа элеклесе ҫырнӑ ҫӑхавсенче тӗрӗс фактсем ҫук. Ҫапах та ҫав документсемпе паллашсан эпир лагерьти кулленхи пурнӑҫпа паллашма пултаратпӑр.

Герман епископа арестлесе тӗрмене хупсан, 1933 ҫулхи декабрӗн 31 – мӗшӗнче 10 ҫул хушши ирӗке тухмалла мар тесе приговор ҫыраҫҫӗ. Ӑна айӑпланӑ куна та чекистсем унран мӑшкӑлласа кулас шутпа суйласа илнӗ, тепӗр кунхине ҫӗнӗ ҫул пуҫланать – ҫке, эппин приговор йышӑнӑвӗ айӑплаканшӑн пысӑк «парне» пултӑр, 1933 ҫулхи сентябрӗн 8 – мӗшӗнчен пуҫласа, декабрӗн 31 – мӗшӗчен майлӑ самант, урӑх кун та пулман тейӗн.

Лагерьти пурнӑҫ — яланах пӗр евӗрлӗ, хӑйне майлӑ, чӑтма ҫук йывӑр тата хӑрушӑ. Кунта ҫыннӑн ячӗ те хушамачӗ те ҫук, унӑн хӑйӗн ҫумӗнче номер ҫеҫ пур. Лагерьте пурӑнакансене ӳт тӗсӗпе, хӑш пайра, категоринче, политика тӗлӗшӗпе мӗнле ҫул – йӗре суйланине палӑртаҫҫӗ. Лагерьти пуҫлӑхсемшӗн Герман епископ хут ҫинче хӑйӗн ӗненӗвӗпе Православи ҫул – йӗрне суйланине, категори тӗлӗшӗпе вӑл активистсен йышӗнче пулнине палӑртнӑ. Малтан ҫырса хатӗрленӗ документра Герман епископ халӗ те хӑйӗн ӗненӗвӗшӗн ҫирӗп тӑрать тенӗ.

Вӑл малтан лагерьти иккӗмӗш уйрӑмри финанс пайӗнче счетовед ӗҫне туса пынӑ, каярахпа ӑна санитари пайӗнче ӗҫлӗ хутсене ҫыракан заведующи тивӗҫӗсене пурнӑҫласа пыма хушаҫҫӗ.

Герман епископпа пӗрле ҫав вӑхӑтра ҫак ҫынсем нушаланнӑ:

Сокольников — пысӑк ученӑй;

Магда Павел Степанович — маларах ВЦИК – ра ӗҫленӗ, 1929 – мӗш ҫулта вӑл манах, каярахпа архиерей пулнӑ;

Чекалин Николай Мефодьевич — православи епископӗ;



Дометий Миллин протоиерей



Мануил /Лемешевский/
митрополит



Михаил архимандрит



София Григорьевна Кокель

Берг Ким Михайлович, Игумновпа Лосев профессорсен тусĕ, наци тĕлĕшĕпе еврей, доцент, МГУ пĕтернĕ, Мускаври пĕр ВУЗ–ра марксизм–ленинизм вĕрентĕвĕ пирки лекцисем вуланă, тĕп ĕçĕсĕр пуçне консерваторинче ĕçленĕ, тĕне кĕнĕ, Православи тĕнне ĕненекен. Анчах та Пĕр Хăй Турă çеç пĕлет вăл ăçта тĕне кĕнине тата хăш вăхăтра Турра ĕненме пуçланине. Кам пĕлет, тен ăна Герман миссионер лагерьте тĕне кĕртнĕ, ун хыççăн çеç вăл Турра ĕненме пуçланă;

Лепятский Николай Мефодьевич — священник;

Пожицкий Валентин Илларионович — священник тата ыттисем те.

Çак уйрăма кĕрекен ушкăнри çынсем пурте православи тĕнне ĕненнĕ, çавăнпа та вĕсене хăйсем суйласа илнĕ çул–йĕртен темле майпа хăратсан та, хăть хăш вăхăтра вырăнтах персе пăрахма пултарни те шиклентереймен, кашнийĕн ĕненĕвĕ çирĕп пулнă.

Владыко Герман пирки вăл — Алтайри контрреволюциллĕ организацине кĕрекен çын тесе айăпланă. Пўрнене ĕмсе шухăшласа кăларнă тăрăх, çак ушкăнрисем интервентсен çарĕсем тапăнса кĕрессе çеç кĕтсе тăраççĕ, майлă самант çитсенех вĕсем Совет влаçне тĕп туса хума хатĕр, имĕш.

Епископăн кашни утăмне, вăл кампа тĕл пулса калаçнине, тĕрмере ларакансем хушшинче мĕнле сăмах–юмах сарнине сăнасах тăнă. Сăмахран, санитари чаçĕнче вăл çапла каланă: «Мĕншĕн–ха çынсене персе пăрахмалла, çынна айăплама урăхларах майсем те пур–çке. Христос: «Ан вĕлер!»— тенĕ. Акă мана тытса хупрĕç те тăван çĕршывран уйăрчĕç. Влаçра лараканссем хăйсем хушшинче хирĕçмесен халăхăн пурнăçĕ те çăмăлланĕччĕ, чиркўсене те хупса хумалла пулман».[21]

Герман епископăн кашни утăмне сăнакансем йышлă пулнă, ыттисенчен те ытларах тăрăшаканни, уйрăмах палăрса тăраканни Нахимович ятлă çын шутланнă. Тăватă çул хушшинче пуçтарнă суя çăхав та ăна сакун тĕлĕшĕпе айăплама никĕс пама пултарайман, çапах та тĕрме йĕрлевçисем хăйсен хура ĕçне тума пăрахман, айăпламалли фактсем пуçра шухăшлама кăларса пуçтарнă, вĕсене пурне те документласа çыра–çыра хунă.

Этем хăйне мораль е сывлăх тĕлĕшĕпе япăх туйсан, яланах

---

[21] *Архив ФСБ по Хабаровскому краю. Дело №3384, стр. 7-37 под грифом совершенно секретно.*

çынсен хушшинче пулса кăмăл — туйăмне лайăхлатма тăрăшать. Пурне те паллă ĕнтĕ: ăслă çын — ăсли, айванраххи айван патнех туртăнать. Тĕрмери пурнăç условийĕ те çапла тума хистенĕ. Çынсем яланах хăраса пурăнас туйăма кăштах сирес тĕлĕшпе пĕр — пĕринпе тĕл пулса калаçнă, чунĕсене йăпатнă, часах хăйсен пурнăçĕ çăмăлланасса шаннă. Çакă вара тĕрме хуралçисене урăхла пĕтĕмлетÿ тума хистенĕ, вĕсен шучĕпе, пĕр пекрех шухăшлă çынсем контрреволюциллĕ организаци туса хунă, имĕш. ОГПУ — н хăйĕн пĕр çăхавĕнче çапла çырса хуни пур: «Кокель епископ санчаçре пулнă вăхăтра Магда епископпа калаçрĕ. Эпĕ пÿлĕме кĕрсенех вĕсем пĕр — пĕринпе сăмахлама чарăнчĕç».

«Коммунистсем Раççей историне пĕлмеççĕ, вĕсем архитектура палăкĕсене аркатаççĕ... Ученăйсене персе вĕлерме лле мар, вĕсем Раççейшăн кирлĕ çынсем».

Çакăн пек çырнă шухăшсене пĕр çĕре пуçтарса, ăçта май килнĕ, унти тĕп шухăша урăхлатса, хăйсене кирлĕ пек майлаштарса НКВД — рисем суя документсем çырса хатĕрленĕ, вĕсене тĕпе хурса ятне «Мракобесы» /*«Пĕлÿлĕх сарассине хирĕçлекенсем»*/ тенĕ. Чекистсем айăплакансене çав документсемпе паллаштарса, унта çырнисене хирĕçлемесĕр хут çинче ал пустарас тесе хытă асаплантарнă, хĕненĕ. Герман епископа та çав нуша кĕтнĕ. Ăна та ыттисемпе танах нушалантарнă, унсăр пуçне епископа хăйĕн ĕненĕвĕнче пăрăнма хистенĕ, хăратнă, тăнран кайиччenех хĕненĕ.

## 3384–МĔШ НОМЕРЛĔ ДОКУМЕНТРАН ИЛНĔ ЙĔРКЕСЕМ

«Кокель ытла та сĕмсĕррĕн контрреволюциллĕ ĕç тăвать, хăйĕн тавра пĕр шухăшлă çынсене пухма тăрăшать, вĕсене хăй майлă çавăрать, ку чухнехи влаçа сивлеме, патша вăхăтĕнчи тапхăрта халăх телейлĕ пурăннă теме хăтланать».

Кокель çапла калать: «Большевиксем историе пĕлмеççĕ тата историллĕ палăксене аркатаççĕ. Патшалăха ертсе пыракан çынна ĕлĕк Хăй Турă суйласа илнĕ. Вăл православи тĕнĕшĕн тата пирĕн пек Турă алтарĕшĕн ĕçлекен священниксемшĕн тăрăшнă. Хальхи вăхăтра пач урăхла лару — тăру: антихристсем Чиркĕве хирĕçле ĕçсем туса ирттереççĕ, Ăна пур çĕрте хĕсĕрлесе хăвалаççĕ. Мĕнех, эпир урăхла лару — тăрура та ĕçлеме, халăх хушшинче

пăталаннă Христосăн ĕçне вăрттăн туса пыма пултаратпăр. Вăхăт çитĕ, ун чух Кремль соборĕсенче вырнаçнă илемлĕ сас кăларакан чансем Турă суйланă çынна саламлĕç. Влаçа ярса илнĕ вăрă – хурахсен шăпи вара япăх пулĕ, вĕсене пурне те, çав шутра коммунистсене тата комсомолецсене вырăс çĕрĕ çинчен шăпăрпа шăлса тасатĕç».

«Серафим Саровский çапла каласа хăварнă, унăн çĕрмен ÿтне Дивеевăра чиркÿ чанĕсем илемлĕ, чуна тивекен кĕвĕпе кĕтсе илĕç, коммунистсен влаçĕ нумай вăхăт хушши тытăнса тăма пултараймасть».

Хăйĕн ĕçне Кокель тĕплĕн туса пынă, контрреволюциллĕ ĕçĕсене малашне те сарса, аталантарма тăрăшать. Вăл тĕрмери çынсене хăйĕн шухăшне çапларах пĕлтерет. Акă, тет вăл, хальхи влаçри çынсем пурте шуйттан чурисем, çавăнпа та вĕсене Турă нумай вăхăт хушши пурăнма сывлăх та пурнăç та памасть. Ленин патшара чылайччен лараймарĕ, вилчĕ. Воровские вĕлерчĕç, Орджоникидзе те леш тĕнчене ăсанчĕ, Кирова персе пăрахрĕç, Куйбышев вилчĕ. Турă хăйĕн тăшманĕсене пурăнма ирĕк памасть. Коммунистсем тем пек тăрăшсан та, вĕсем христиансене çĕнтерейместĕç. Хальхи вăхăтра пирĕн пĕтĕм вăй – хала пуçтарса çамрăксен хушшинче ĕçлемелле, вĕсене хамăр майлă çавăрмалла, Таса Чиркÿ хÿттине колхозниксене илмелле. Пирĕн, Турă ĕçне туса пыракансен, тĕп ĕçсенчен чи кирли çакă пулмалла: çамрăксене яланах ăс памалла, çине – çине витĕмлĕн каламалла, Совет влаçĕ, Сталин, ăна пăхăнса тăракансем йăнăш çул суйласа илнĕ. Вĕсен чиркÿсене тата мăнастирьсене хупмалла мар. Тĕнчери аталану тĕлĕшĕпе малалла кайнă çĕршывсем, пĕлÿ пухнă ученăйсем пурте христиан тĕнне тытса пыракан чиркÿсен хÿттинче пурăнаççĕ».

Çак тема патне Кокель татах таврăнать. Анчах та хальхинче малтанхи шухăшăн вариантне урăхлатать, унăн шучĕпе партие ертсе пыракан çынна тăшман вырăнне хурса йышăнмалла.

«Вăл хăйĕн тата чиркÿ енĕпе ĕçлекен пысăк авторитет пухнă çынсен ятне çÿле çĕклес шутпа çапларах пĕтĕмлетÿ тума тăрăшать: «Турă Кĕнекисенче совет влаçĕ пирки вăл — антихристсен тенĕ, çавăнпа та ку влаç чылай вăхăт хушши тытăнса тăраймасть, тепĕр 20 çултан Христос çарĕн вăйĕсем ăна аркатса тăкаççĕ. Хальхинче те вăл партие ертсе пыракан çынна кураймасăр пурăнмалла тет».

Сăмахсем, сăмахсем, сăмахсем... Вĕсене, лагерьте Владыко Германпа пĕрле ларакансене пĕрмаях йĕрлесе пурăннă май, айăплас тесе чылайăшне шухăшласа кăларнă. Çĕршер страницăллă суя сăмахсем шурă хура хуратса кунсерен ÿснĕ, ÿснĕ, малтанах палăртса хунă тискер ĕçĕн свидетелĕсем пулса тăнă. Ку пуриншĕн те паллă ĕнтĕ, Герман епископ, чăнах та Раççей арканнăшăн куляннă, асапланă. Эпир, паллах, çав вăхăтра хăйсен тÿрĕ ĕçĕсемшĕн асапланса çунакан çынсен шалти туйăмне вĕçне çити ăнланса илме пултараймастпăр. Герман епископ çакна лайăх ăнланнă: вырăс наци культури, Православи упранса юлсан, Раççей пĕтмест, саланса каймасть. Çавăнпа та вăл хăйĕн çирĕп ĕненĕвĕшĕн тата тăван çĕршыв пуласлăхĕшĕн мĕн виличченех кĕрешме хатĕр пулнă. Православи — Раççей нацийĕн тĕп пайĕ. Православи Раççейĕсĕр Россия — Раççей мар. Ăс – хакăлпа шухăш кăмăлăн чăн – чăн пуянлăхĕсемсĕр пурăнма май çук.

Герман епископ хăйĕнпе çывăх пулма тăрăшакан çынсемпе те ытлашши сăмах вылятма юратман. Тен, вăл хăйĕн ăшĕнче пĕрмаях Иисус Христоса кĕлтунă. Ирĕкре чух хăйне каçсерен НКВД – на илсе кайса допрос тунине те вăл хĕрне пĕлтермен. Вăл: «Сана НКВД çынисем ăçта илсе каяççĕ?» — тесе ыйтсан, епископ ăна: «Сана пĕлмесен те юрать, чĕнмесĕр пурăнма вĕрен». Чи çывăх хĕрне те вăл çывăх тăванĕсем пирки каласа паман. Халĕ эпир сăлтавне пĕлетпĕр. Çапла майпа вăл çывăх тăванĕсен пурăнăçне хÿтĕленĕ. Унăн хĕрĕ, сăмахран, Алексей Кокель профессор хăйĕн тетĕшĕ пулнине те пĕлмен.

Хăйне айăплас тĕллевпе пуçтарнă çăхав – элексене ĕненес пулсан та, Герман епископ контрреволюциллĕ ĕçсем тунă тени курăнмасть, çавăнпа та çак ĕçе пуçаракансене тÿрре кăлараймасть. Унăн влаçа ярса илнĕ пуçлăхсем умĕнчи пĕртен – пĕр айăпĕ çакă пулнă: Герман епископ çĕр çинче пурăнать, Турра ĕненет тата Православин Таса Саккунĕсене хÿтĕлет. Çакăн пек ĕненÿпе пурăнакан çынсен вăл вăхăтра çĕр çинче пурăнмалла пулман. Вăл Тăван çĕршыва, халăха хытă юратнă, хăй вăхăчĕшĕн тавра курăмлă пысăк патриот шутĕнче тăнă. Эппин унăн пурнăçĕ яланах килес ăрусемшĕн ырă тĕслĕх пулса юлмалла.

1937 çулхи октябрĕн 17 – мĕшĕнче Тройка /*тĕрмери çынсен шăпине татса паракан виçĕ çынтан тăракан ушкăн*/ Герман

епископа персе пăрахма йышăннă. Хут çинче вăл çапла курăннă:

*Секретарь Тройки*

*Начальник 8—ого отделения УГБ УНКВД по ДВК лейтенант государственной безопасности Завьялов.*

*Управляющий НКВД по Дальнему Востоку Подпись*

*17 октябрь 1937 г. Расстрелять.*

*2 ноября 1937 г. Расстрелян.*

Иккĕмĕшпе виççĕмĕш йĕркесем хушшинче хĕрлĕ кăвак тĕслĕ чернилпа сылтăм енче пĕчĕк шрифтпа çапла çырса хунă: *«2 часа 30 минут ночи».*

Ăна каярахпа çырса хунă пулмалла. Лагерьте, вăрă—хурахсен ушкăнĕнче çакна çырса хуракан çын пулнă ĕнтĕ. Унăн чунĕнче ĕненӳ хĕлхемĕ сӳнмен. Вăл шаннă, вăхăт çитет, тĕрĕслĕх çĕнтерет, сынсем Турра ĕненме пăрахмĕç. Ун пирки уççăн, никамран хăрамасăр калаçĕç.

Герман епископа 1990 çулхи июлĕн 7—мĕшĕнче СССР Верховнăй Совет Президиумĕн 1989 çулхи январĕн 16—мĕшĕнче тухнă «О дополнительных мерах по восстановлению справедливости в отношении жертв репрессий, имевших место в период 30—40 г. г. и начало 90 г.» ятлă Указăн 1—мĕш статйипе килĕшӳллĕн реабитациленĕ. Урăхла каласан таса ятне халăха тавăрса панă. Вăл айăплă пулман тесе Омскра, Благовещенскра, Хабаровскра, Чăваш Республикинче тата ытти облаçсенче çак ĕçе туса irттернине палăртса, реабитациленине пĕлтерекен документсене хатĕрлесе çитернĕ.

Хĕрӳ чĕреллĕ, пĕтĕм чун—хавалĕпе Турра парăннă епископа айăп çук çĕртех айăплă тесе персе пăрахнă. Анчах та ăна çут тĕнчерен уйăрса ярсан та унăн чунне пĕтереймен. Герман епископăн ĕненĕвĕ, Православи тĕнĕ паян кун та пурăнать. Вăл никама та сутман. Хăйĕн ĕненĕвĕ çирĕп пулнине ĕнентерсе вăл тăван ачисен пурнăçне те çăмăллатма тăрăшайман, вилес умĕн те Турăран пăрăнман, хăйĕн асаплă пурнăçĕшĕн Ăна тав тунă. Çакна хăйĕн хушаматне палăртман пĕр авторăн ĕçĕнче те вуласа пĕлме пулать: «Герман епископ çапла каланă: «Асапланакансен кун—çулĕпе пурăнни — пуласлăх храмне утнине пĕлтерет,

инкек – терт курсан çеç Туррăмăрăн чăнлăхне пĕлме пулать»[22].

Вырăс Православи Чиркĕвĕн Священнăй Синочĕ Герман епископа 2001 – мĕш çулхи июлĕн 17 – мĕшĕнче канонизациленĕ.

Герман епископ вăтам пӳллĕ, кăвак куçлă, сăмах нумай ваклама юратман çын пулнă. Вăл çичĕ чĕлхе пĕлнĕ, çав шута нимĕç, акăлчан, француз, грек, латин, вырăс, тутар, чăваш чĕлхисем кĕреççĕ. Унăн арăмĕн йăмăкĕ Марфа Егоровна каласа панă тăрăх, вăл Çĕрпӳелре священник пулса ĕçленĕ вăхăтра французла чĕлхипе çырнă текстсене чăвашла пекех шаккăртаттарса вуланă. Тенор пулнă, сăмахсене уçăмлăн та таса каланă. Григорий аттене хисепленипе тутарсем те православи тĕнне йышăннă. Сăмахран, çав вăхăтри çынсен тăванĕсем /*Луцкое ялĕнчи чиркӳре, вăл Çĕрпӳелпе юнашар вырнаçнă*/ халĕ те чиркӳ службине тутар чĕлхипе ирттереççĕ.

Чăваш çĕршывĕнче епископ пулнă май Герман Владыко çĕнĕ священниксене пил панă. Вĕсенчен чылайăшне вăл малтан Çĕрпӳелĕнчи псаломщиксен шкулĕнче хăех вĕрентнĕ. Каярахпа вĕсем чăн – чăн пачăшкăсем пулса тăнă, пурте тенĕ пекех хăйсен çирĕп ĕненĕвĕшĕн тĕрмесенче ларса тухма тивнĕ. Вĕсенчен пĕри, Михаил Уточкин архимандрит Выползово ялĕнче епархин духовникĕ пулнă, чылайăшĕ вăл малашнехине курса тăракан çын пулнине палăртнă. Дометий Миллин протоиерей те сумлă священниксен йышĕнче тăнă. Марфа Егоровна çапла каласа панă. Пĕррехинче Герман епископ чиркӳ служби иртсен килне таврăннă та хавхаланса çапла сăмахланă: «Мĕнле пысăк çын вăл пулать! Хиротони тунă вăхăтра Святой Сывлăш пурин тĕлĕнче те пĕр пек тăмасть, Дометий атте тĕлĕнче Вăл чылай вăхăт хушши тăчĕ». Çак сăмахсемпе паллашсан куратпăр ĕнтĕ, Герман епископ хăй те чиркӳри Святой Сывлăша курма пултарнă.

2000 – мĕш çулта епископăн кĕçĕн хĕрĕ çут тĕнчепе лăпкăн сывпуллашрĕ.

Çав çулсенчи асаплă пурнăç, епископăн ачисем тем тĕрлĕ асап курни çинчен çырнă йĕркесене вуласа тухсан та София Григорьевна хăйне çав тери йăваш тытрĕ. Çакăн пек çирĕп кăмăллă пулма сахал çын пултарать. Вăл кун пирки çырмасан та юрать тесе шутлать, çак шухăша çирĕплетсе вăл çапла сăмахларĕ: «Пурте вăл вăхăтра асапланнă».

[22] *Архив ФСБ по Хабаровскому краю. Дело №3384, стр. 7-37 под грифом совершенно секретно.*

Çапах та çак очерка вулакансене эпĕ Герман епископăн ачисен кайранхи шăпи пирки те кăштах çырса кăтартасшăн.

Аркадий ывăлĕ тĕрмере вилнĕ. Александра хĕрĕ вокзалта шăнса чирленĕ хыççăн çут тĕнчепе сывпуллашнă. Ăна чекистсем малтан Мускав облаçĕнчи Мытищи хулинчен манăн анне хваттерĕнчен хăваласа янă, унăн çав вăхăтри саккунсене пăхăнса Мускав облаçĕнчен 24 сехет хушшинче тухса каймалла пулнă.

Икĕ архивра пулса эпĕ унта Герман епископпа çыхăннă документсемпе кĕскен паллашрăм. Тĕлĕнмеллипех тĕлĕнтĕм, вăл чăн – чăн пачăшкă пулнă. Унăн пурнăçĕ пирки çырас пулсан, богословипе интересленекенсемсĕр пуçне, историксем валли те уçман çерем темĕн чухлĕ. Ан ÿркен, ĕçле кăна. Хăйĕн хыççăн çав тери нумай пуянлăх хăварнă. Вăл И. Я. Яковлевпа та çыхăну татман. Чăвашсене çутта кăларакан калана сăмахсене те аса илес килет. Вăл: «Христиан тĕнне сарас тĕлĕшпе ĕçлĕр, Евангели таса çутине нумай нациллĕ халăх хушшинче сарăр... Çут тĕнчери чи хаклă та таса пурлăхăмăра — Турра ĕненессине чунăрсенче упрăр», — тенĕ. Епископ богословсемпе ученăйсемпе çыру урлă çыхăну тытнă. Чăваш халăх юррисене */425 юрă/* пуçтарнă. Вĕсем Чăваш Республикинчи пĕр архивра упранаççĕ. Ялсен историйĕ пирки очерксем çырнă. Пурнăçра историк, биолог, этнограф, нумай пĕлекен чĕлхеçĕ пулнă.

Эпĕ кĕскен пĕр çын, православи тĕнне сарас тĕлĕшпе ĕçленĕ Герман епископ, миссионер çинчен çыртăм. Анчах та пĕр сăлтавсăр, пиншер священника тĕрмесенче асаплантарнă, персе пăрахнă. Мĕн чухлĕ çын тата чире кайса çут тĕнчепе хăвăрт уйрăлнă. Вĕсене пурне те шута илме те май çук. Çур ĕмĕр хушшинче Раççей çĕршывĕн чи ăслă, талантлă, мухтавлă çыннисене пач хĕрхенмесĕр тĕп тунă. Уйрăмах 1937 çул палăрса тăрать. Ноябрĕн 7 – мĕшĕнче революци 20 çул тултарнине пур çĕрте те паллă тунă. Ăна тăвакансем пурте сатанистсем пулнă. Вĕсем шуйттана пуç çапнă, çавăнпа та ун ячĕпе, этемлĕхĕн чи хăрушă палачĕсем, тăшманĕсем пулса çынсене вĕлернĕ. 1937 çулхи октябрь – ноябрь уйăхĕсенче пиншер çынна персе пăрахса çут тĕнчерен уйăрнă. Сăмахран, Волынск тата Житомир архиепископне */Кедров Поликарп Петровича/* 1937 çулхи ноябрĕн 27 – мĕшĕнче персе вĕлернĕ. Григорий */Лебедев Александр Александрович/* Шлиссельбург епископĕ тата Ленинград епархин викарийне, духовенствăна ертсе пыракансемпе тата унта кĕрекен мирянсемпе пĕрле персе

пăрахнă. Дамскин /*Цедрик Дмитрий Дмитриевич*/ Стародубск епископĕ тата Чернигов епархийĕн викарийне те 1937 çулхи сентябрĕн 10—мĕшĕнче çут тĕнчерен уйăрнă. Евгений /*Кобранов Евгений Яковлевич*/ Ростов епископĕн шăпи те çавнашкалах, ăна та 1937 çулхи октябрь уйăхĕнче персе пăрахнă. Добронравов Аркадий Павлович Çĕрпӳри Казанск—Богородск чиркĕвĕнче священник пулса ĕçленĕ. Ăна 1931 çулхи июнĕн 10—мĕшĕнче концлагере ăсатнă.

Çав тери нумай хушамата аса илме пулать. Вĕсене пурне те хăйсем шутласа кăларнă усал ритуалпа, çывхарса килекен праçникпе çыхăнтарма тăрăшнă, этем юнĕ шыв пек юхнă. Çын ĕренкинчен тухнă усалсем икерчĕ пĕçернĕ те шуйттана пуç çапнă.

Революционерсем пурте пĕр йăхри çынсем пулнă. Карл Маркс Христоса асаплантаракан раввинсен хушшинчен тухнă. Сăмахран: пысăк преступник тата аферист, ирсĕр тата йĕрĕнтерекен Троцкий—Бронштейн, Зиновьев—Апфельбаум, Володарский—Гольштейн, Каменев—Розенфельд, Ягода—Игуда. ГУЛАГ начальникĕ — Берман, каярахпа — Френкель, ятарлă пая /*спецотдел*/ ертсе пыракан — Гай, Ярославский—Губельман, Румянцев—Шнайдер тата ыттисем те.

Хăш çĕршывра революци пулнă, унтан революционерсем пĕтĕм ылтăна илсе тухнă. Раççей çĕршывĕнче малтан упраннă çав пурлăхпа мĕнле усă кураççĕ—ха? Ку ылттăн—кĕмĕл халăхăн—çке. Хальхи вăхăтра çав укçа—тенкĕпе пире хирĕçле ĕçсем тăваççĕ, идейисем унччен революци тунă тапхăрти пекех, анчах та хальхинче вĕсем тата та чеерех майсемпе усă кураççĕ. Православине курайман тăшмансем хамăрăн ылттăнпах хамăра хирĕç миллионшар тиражпа журналсемпе хаçатсем, кĕнекесем кăлараççĕ, вĕсене халăх хушшинче тӳлевсĕр салатаççĕ, çапла майпа Раççей çĕршывне шалтан аркатаççĕ. Порфирий Иванов— теософ, Блаватская — тухатмăш. Вĕсемсĕр пуçне кришнаитсем, иеговистсем, виссарионовецсем, мармонсем, «Белое братство» тата «Агни йога» ятлă ушкăна кĕрекенсем, баптистсем, 7—мĕш кунăн адвентисчĕсем, тата ыттисем те — вĕсем пурте сурăх тирĕпе витĕннĕ кашкăрсем. Вĕсем пурте усал вăйсемпе çеç çыхăннă. Çут тĕнчере икĕ вăй çеç: усалли тата ырри. Виççĕмĕш вăй çук.

Эпир Святой Раççей çĕршывĕнче пурăнатпăр. Пире Турра епле майпа ĕненмеллине вĕрентме кирлĕ мар. Пирĕн мăн

асаттесемпе асаттесем Православи ӗненӗвӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ. Тӗслӗх вырӑнне Герман епископ пурнӑҫне илсе кӑтартма пулать. Енчен те эпир ҫӳлерех асӑннӑ сектантсен тӗнне йышӑнсан, ку вӑл эпир хамӑрӑн йӑха, тӑван Ҫӗршыва сутнине пӗлтерет. Эппин пурте ӑслӑ – тӑнлӑ пулар, хамӑрӑн чыса варалама, Тӑван Ҫӗршывӑмӑра аркатма парар мар.

**Раҫҫей ҫӗршывӗнчи пиччесемпе аппасем, йӑмӑксемпе шӑллӑмсем!**

Таса тата тӳрӗ кӑмӑлпа туса пынӑ, хамӑрӑн ӗненӗве упраса хӑварассишӗн вӑй – халне, пурнӑҫне шеллемен вӗрентӳҫӗ – проповедниксен ячӗсене нихӑҫан та ан манӑр!

Вырӑс ҫӗрӗ ҫинче пӗрремӗш просветитель Христос апостолӗ Андрей Первозванный пулнӑ. Ун хыҫҫӑн 9 – мӗш ӗмӗрте, 60 – мӗш ҫулсенче христиансен витӗмӗ анлӑн сарӑлма пуҫлать. Ҫӗр ҫинчи паттӑрлӑхӗпе аслӑ та ӑслӑ Ольгӑна, Раҫҫей ҫӗрӗн князь арӑмне епле асӑнмӑн! Киев хулин тата пӗтӗм Раҫҫей таса ҫӗрӗн аслӑ князьне, апостолсен шутӗнче тӑракан Владимира, ӑна халӑх юратса «Сарӑ хӗвел» /*«Красно солнышко»*/ тенӗ, асӑнмасӑр хӑварма юрамасть. Христос тӗнӗшӗн пӗремӗш хут асапланса вилнӗ Борис тата Глеб ячӗсене те асрах упрамалла.

Ятсем, ятсем... Вӗсем ҫав тери йышлӑ: Киев – Печерск Лавринчи святой аттесем, вӗсен шутне летопись ҫырнӑ Нестор святой, Агапит врач, иконӑсем сӑрланӑ Алипий, Лавра йӗркелесе яракан Антоний тата Феодосий. Чернигов князӗ Михаил, вӑл асапланса вилсен те хӑйӗн ӗненӗвӗнчен пӑрӑнман, ӑна сутман. Александр Невский князь, Дмитрий Донской, темӗн чухлӗ мӑнастирь уҫнӑ Сергей Радонежский преподобный, Чулхула облаҫӗнчи хӗрарӑмсен Диеев мӑнастирьне уҫнӑ Серафим Соровский преподобный. Вырӑс халӑхӗшӗн кӗлтӑвакан Тӳрӗ кӑмӑллӑ Святой Иоанн Кронштадский — чӑн – чӑн Вӗрентӳҫӗ – Проповедник нумай асап чӑтакан вырӑс ҫӗрӗшӗн мӗн чухлӗ ырӑ ӗҫ туса хӑварнӑ.

Асран тухман ятсем... Вӗсем ҫӳл тӳпери ҫӑлтӑрсем евӗр нихӑҫан сӳнми ҫутӑпа йӑлтӑртатса ҫунаҫҫӗ, пире тӗрӗс ҫул ҫине тухма пулӑшаҫҫӗ. Влаҫра лараксем Туррӑмӑра сивленӗ вӑхӑтра мӗн чухлӗ ҫын ырӑ, халӑх асӗнчен кайман мухтавлӑ ӗҫ туса хӑварма пултарнӑ. Вӗсем святойсен йышӗнче тӑраҫҫӗ е тӑмаҫҫӗ, кун пирки пуҫа ватма та кирлех мар, мӗншӗн тесен вӗсен

тĕлĕшĕпе аслă Туррăмăр тахçанах хăйĕн судне туса ирттернĕ ĕнтĕ. Çапах та Туррăмăр ĕçĕшĕн пурнăçне шеллемен çынсен хушшинче çутă çăлтăр пек, миссионерăн, пирĕн ентешĕмĕрĕн— Владыко Германăн ячĕ çуталса тăрать. Паянхи кунччен Чăваш çĕрĕ çинче Православи тĕнĕшĕн асран кайми нумай ĕç, вăл пурнăçланă пек, никам та туса хăварман. Хăй пурăннă вăхăтра вăл нумай турра ĕненекен /язычество/ чăвашсем хушшинче ăнлантару ĕçĕсене туса ирттерсе, вĕсене



***Алексей Кокель***

Православи Чиркĕвĕн хӳттине кĕме пулăшнă. Унăн пурнăçĕ Христос Туррăмăр ячĕпе çыхăннă. Хабаровскра, Владивостокра, Пĕкĕльмере, Уссурийскра, Омскра е Благовещенскра пурăнсан та вăл яланах Чăваш çĕрĕшĕн тунсăхланă, тăван халăхшăн кĕлтунă.

Герман епископ пирĕншĕн, Чăваш çĕршывĕнче пурăнакан христиансемшĕн, ентешĕсемшĕн питĕ те çывăх пачăшкă пулса тăрать. Енчен те эпир ăна кĕлтусан, вăл пире пулăшатех. Хăйĕн Турă пилленĕ пурнăçĕнче тем тĕрлĕ асап курсан та вăл яланах Чăваш халăхĕшĕн кĕлтунă, унăн шăпи телейлĕ те ăнăçлă пултăр, тенĕ. Серафим Саровский аттемĕр çапла пиллесе каласа хăварнă: «Эпĕ çут тĕнчере пурăнма пăрахсан, эсир манăн пĕчĕк тупăк патне пырса кайăр! Вăхăт шунă евĕр эсир те ман пата тăтăшах мĕн чухлĕ çӳретĕр, çавăн чухлĕ аванрах пулĕ. Сирĕн чунăрта мĕн пур, сире мĕн кулянтарать, пĕтĕм хурлăхăра хăвăрпа илсе, манăн пĕчĕк тупăк патне пырăр. Çĕр çине выртса, унпа чĕрĕ çынпа калаçнă евĕр сăмахлăр, хăвăрăн хуйхăр—суйхăр пирки пĕр пытармасăр каласа парăр, эпĕ сире итлĕп, вара эсир кулянни

иртсе кайĕ. Кунта эсир чĕрĕ çынсемпе калаçнă евĕр пуплĕр. Эпĕ сирĕншĕн ĕмĕр – ĕмĕр чĕрĕ пулăп».

Герман епископ та пирĕншĕн Серафим Саровский пекех, вăл та яланах чăвашсене пурнăçра пулăшса тăрать.

Эпир, паллах, Герман епископăн çĕр çинче тупнă канлĕ вырăнĕ ăçта иккенне пĕлместпĕр, çавăнпа та масар çине каяймастпăр, çапах та вăл пире, çĕр çинче пурăнакансене, чир – чĕртен сиплет, çула тухсан çитес çĕре ыррăн – сыввăн кайма май туса парать, вĕренӳре ăнăçлăх парать, кĕскен каласан, хăйне ĕненсе кам ыйтать, çав çынна пулăшатех.

2001 – мĕш çулхи ноябрьте Лидия Г. урине амантнă. Сурана пула юн хытă юхма тытăннă. Васкавлă пулăшу чĕнсе илсен, врачсем юн юхнине чарнă, анчах та каçхине Лидийăн ури чиксе ыратма пуçланă. Вăл вара Герман епископа аса илет, унăн сăнӳкерчĕкне аманнă вырăна хурать. Самантрах ыратни иртсе каять, аманнă çын лăпкăн çывăрса каять. Лидия Г. çак тĕлĕнмелле ĕçе Герман епископ тунă тесе шутлать.

Нина А. кăкăр шыççи чирĕ /*мастопати*/ пуçланнă. Вăл кăкăрĕ ыратма пикенсен Герман епископăн сăнӳкерчĕкне кăкăрĕ çине хурать. Çапла майпа вăл темиçе хутчен ыратнине иртгерсе ярать. Каярахпа мастопати чирĕн йĕрри ним чухлĕ те юлмасть. Нина та Лидия пекех хăйне чир – чĕртен Герман епископ сыватнă тесе шутлать.

Наталия К. юнĕ, шăлне кăларсан хăвăрт юхма чарăнман. Вăл Герман епископа пулăшма ыйтса кĕлтусан, юнĕ кĕвелнĕ те суранĕ хăвăрт тӳрленме пуçланă.

Çакăн пек тĕслĕхсем пирки нумай каласа пама пулать. Ку вăл, эпир Герман епископран пулăшу ыйтсан, Аслă Туррăмăр пире йывăр самантра яланах хăтăлса тухма вăй – хал пиллеме пултарни çинчен калать.

Аслă Туррăмăрăн пилĕ – ырлăхĕпе Чиркӳсемшĕн йывăр самантсем иртсе кайрĕç. Хальхи вăхăтра пирĕн çĕршывра çĕнĕ храмсем, мăнастирьсем уçăлаççĕ. Çапах та пирĕн пурин те Христос ĕненĕвĕшĕн хăйсен пурнăçне панă çынсен ячĕсене упрамалла. Вĕсем çинчен килес ăрусене каласа памалла. Пирĕн ачасемпе мăнукăмăрсен Герман епископăн пурнăçĕ – кун – çулĕ пирки пĕлнишĕн Аслă Туррăмăра тав тумалла.

Пирĕн, Православи тĕнĕшĕн Турра ĕненмен çынсене хирĕç кĕрешнĕ таса чун – чĕреллĕ священниксемпĕн, çав шутра Владыко

Германшăн та чĕркуçленсе, çĕре çити пуçа таймалла.

Христос Туррăмăршăн лагерьсенче, тĕрмесенче вилнĕ Кашни Çыннăн ячĕ ĕмĕр—ĕмĕр упрантăр! Эсир Кашниййĕ Туррăмăршăн кирлĕ ĕç туни халăх асĕнче упрантăр!

Туррăмăршăн асапланса чунне панă святой, Православи тĕнĕшĕн пуçне хунă Герман Владыко ячĕ ĕмĕр—ĕмĕр вилĕмсĕр пултăр!

Пирĕншĕн, çылăхлă çынсемшĕн, тăван Чăваш халăхĕшĕн пурне те Каçаракан Ырă Туррăмăр умĕнче кĕлтусам Герман. Вăл темĕн тĕрлĕ мухтава тивĕçлĕ. Ăна пирĕн яланах, паян та, ыран та, малашне те ĕмĕр—ĕмĕрех чысламалла тата пуççапмалла, аминь.



*Турханти чиркӳ*

ТУРРĂМĂРА ПУРИНШĔН ТЕ МУХТАВ!

*НИКОЛАЙ ТУВАЛЬКИН,*
отставкăри полковник

## ÇĔНТЕРӲН ПĔРРЕМĔШ ЧĔКЕÇĔСЕМ ЯЛА ВĔÇСЕ КИЛЧĔÇ



Иккĕмĕш гварди Армийĕ Кенигсберг хулине штурмласа çĕнсе илсен тата Земландск çурутравне нимĕçсенчен тасатсан, пирĕн 87—мĕш гварди стрелковăй дивизи 1945 çулхи апрель вĕçĕнче Пиллау хулинче вырнаçса тăчĕ. Çĕнтерӳ кунне эпĕ кĕтмен çĕртен çакăнта, ирхине, майăн 9—мĕшĕнче кĕтсе илтĕм.

Ирхине ирех çывăрнă вăхăтра такам алăка шаккарĕ, ыйхă тĕлĕшĕпе илтетĕп: «Командир, тăр—ха, тăр! Çĕнтерӳ! Çывăрса ан юл!»

Мана ыйхăран вăратаканни Ильянсова Надя пулчĕ. Вăл пĕр вăхăт хушши пирĕн ротăра санинструкторта ĕçлерĕ, халь юнашар тăракан дивизире штутланса тăрать. Çĕнĕ вырăна ăна пирĕн патран 1945 çул вĕçĕнче куçарнăччĕ. Ырă хыпара пĕлтерес тесе вăл ир—ирех 5 çухрăм утнă. Эпĕ малтанах ăна ĕненмерĕм. Кăштах вăхăт иртсен, хамăрăн дивизин прокурорĕ те ман пата кĕрсе, çак хыпарах каларĕ.

Тепĕр сехет иртсен гарнизонра хаваслă самант пуçланчĕ. Гвардин 15—мĕш строевой корпус генералĕ Лопатин уява чыслăн пуçлассине, митинг йĕркелесе парад ирттерессине хăй çине илчĕ. Тахçантанпа кĕтнĕ уява чыслăн паллă турăмăр!

Часах хаваслă хĕвĕшӳ—тĕркешӳ иртсе кайрĕ, кунсерен мирлĕ пурнăç йĕркеленме пуçларĕ. Çарсем çирĕп кун йĕркипе пурăнма, çар уставне пăхăнма, вăрçă ĕçне куллен—кун хатĕрленме пикенчĕç.

Умра пысăк мероприяти — государство шайĕпе историллĕ аслă Çĕнтерĕве Мускавра ирттересси — мала тухса тăчĕ. Вăл



***Михайловский, Н. Тувалькин, Ситников, Рожков. Пиллау, май, 1945 г.***

тӗп хуламӑрта 1945 ҫулхи июнӗн 24 — мӗшӗнче пулса иртмелле.

Пӗррехинче, май вӗҫӗнче, пирӗн, 87—мӗш гварди стрелковӑй дивизин генерал — майорӗ Тымчик, ҫар чаҫӗн тата дивизин уйрӑм подразделенин командирӗсене канашлӑва пухрӗ. Эпӗ ун чухне дивизи разведкин 90 — мӗш уйрӑм ротин командирӗччӗ. Пӑхса тухмалли кун йӗркинче Мускаври парада хутшӑнакансен йышне палӑртса ҫирӗплетес ыйту та пурччӗ. Парада хутшӑнакан кандидатӑн ҫӳллӗшӗ 170 см, орденсен шучӗ виҫҫӗрен кая пулмалла мар, стройпа утассине те ҫӳллӗ шая ҫитермелле. Разведка ротинчи вӑй — хал тӗлӗшӗпе ҫирӗп, ҫӳллӗ салтаксемпе сержантсене пухрӑмӑр. Вӗсен пурин те наградӑсем чылайччӗ. Пуҫтарӑннисен шутӗнчен 6 ҫынна суйласа илтӗмӗр. Паллах, ҫак йыша тивӗҫлисем татах та пурччӗ, анчах та виҫине те пӗлмелле — ҫке, ытлашши хӑтланма юрамасть, кашни хушӑвӑн чаракӗ пулмалла.

Ҫав кунах дивизи штабӗн ертӳҫи патне дивизи командирӗ Тымчик пычӗ те Прихно полковника ҫапла каларӗ: «Прихно юлташ, Тувалькина та парада кайма суйласа илер. Вӑл йӑрӑс пӳллӗ, стройра ҫав тери лайӑх утать, ӗлӗкрех кавалерист пулни

тӳрех курӑнать, унӑн орденсен шучӗ те темӗн чухлӗ!.. /*Эпӗ чӑнах та, Александр Невски орденне, 1—мӗш степеньлӗ Отечественнӑй вӑрҫӑн 2 орденне, Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр орденне илме тивӗҫлӗ пулнӑччӗ.*/ Анчах та кунта Прихно полковник, чӗрес пыл ҫине тикӗт янӑн, хӑйӗн вӑрттӑн шухӑшне пытарса ҫапларах пакӑлтатрӗ: «Ҫапла, генерал—майор юлташ, сирӗнпе килӗшетӗп, — терӗ вӑл,— Тувалькин пирки эсир тӗрӗсех калатӑр—ха, ӑна парада пӗрле илсе кайма юрать. Ҫапах та ыйту сиксе тухать: унӑн «пуҫ касаканӗсене» ҫав вӑхӑтра кам ертсе пырӗ? Тувалькин пӗр уйӑх хушши пулман вӑхӑтра ӑна улӑштармалли ҫын та ҫук. Ротӑна ертсе пыма Сушникова шанма пулатчӗ, анчах та вӑл ҫук, отпускра, хӑҫан таврӑнасси паллӑ мар. Дивизи разведкин начальникӗ те ҫемйери сӑлтавсене пула отпуска, Киев хулине тухса кайрӗ, службӑна таврӑнман—ха, унтах тытӑнса тӑрать».

Тымчик генерал, ҫав тери ӑслӑ ҫын пулсан та, темшӗн Прихно пакӑлтатнине хӑвӑрт ӗненсе лартрӗ, ман шухӑша итлеме кӑмӑл тумарӗ, хӑй тӗллӗн мӑкӑртатса: «Тӗрӗс калатӑр, ҫапла ҫав», — терӗ те пирӗнтен уйӑрӑлса малалла утса кайрӗ.

Халӗ, унтанпа чылай вӑхӑт иртсен, хама вӑрҫатӑп, манӑн кӑштах хӑюланмаллаччӗ, генерала ӳкӗте кӗртмеллеччӗ, Прихно пакӑлтатнине шута илмелле маррине ӑнлантарса пама ҫине тӑмаллаччӗ.

Прихно илсе кӑтартнӑ тӗслӗх ним ҫинчен те каламасть. Енчен те эпӗ парада хутшӑнсан ротӑра нимӗн те пулса иртместчӗ. Вӑл мана темшӗн парада ярасшӑн пулман.

Никам та мар, хам айӑплӑ, ҫине тӑнӑ пулсан, паллах, Тимчик мана ӗненетчӗ. Вара эпӗ те ҫак историлле парада хутшӑнаттӑм.

Каярахпа, 1955—56—мӗш ҫулсенче, Академире вӗреннӗ вӑхӑтра, 2000—мӗш ҫулта, Ҫӗнтерӳ кунӗ 55 ҫул тултарсан, эпӗ парадра 3 хут пултӑм. Ҫапах та 1945—мӗш ҫулхи ҫутӑ тӗнчери историллӗ парада хутшӑннин пӗлтерӗшӗ сӑмахпа калама ҫук пысӑк ҫав. Вӑл нихӑҫан та ҫынсен асӗнчен каймӗ.

Дивизи командирӗ Тымчик, 87 гварди стрелковӑй дивизин суйласа илнӗ йышӗпе, Мускава парада хутшӑнма тухса кайрӗ. Унӑн тивӗҫӗсене вӑхӑтлӑха Карида половник пурнӑҫлама пуҫларӗ. Эпир унпа пӗр—пӗрне 1943 ҫултанпа пӗлеттӗмӗр. Вӑл ҫав вӑхӑтсенче 88—мӗш гварди стрелковӑй полкӗн, кайран 88—мӗш гварди стрелковӑй дивизин командирӗ пулчӗ. Эпӗ полкри автоматчиксен ротин, кайран 1—мӗш батальонӑн командирӗччӗ.

Эпир Карида полковникпа Тимчик кабинетӗнче тӗл пултӑмӑр.

Вăрçăра икĕ çул пĕрле пулнă çынпа тепĕр хут тĕл пуласси сайра пулать. Иксĕмĕр те савăнса кайрăмăр. Карида Тимчик умĕнче манăн лайăх енсене палăртрĕ.

Хальхинче, дивизи командирĕн ĕçне вăхăтлăха туса пыракан полковник патне, хамăн рапортпа кĕме, ялта пурăнакан анне патне, вăл чирленине пула, киле кайса килес ыйтупа кĕме тиврĕ. Карида мана калать: «Эпĕ хирĕç мар, анчах та санăн пуçлăху — Прихно полковник, унпа калаçса татăлăр. Эпĕ те, вăл та дивизи командирĕн ĕçĕсене пурнăçлатпăр, правасем иксĕмĕрĕн те пĕр пекех. Прихнона эпĕ хирĕçлеменни пирки пĕлтерĕр».

Прихно кабинетне кĕтĕм, ăна хут çине çырнă рапорта патăм. Вăл вуланă чух, сывлама хăймасăр, шăп тăратăп. «Мускаври парада ямарĕ, отпуск пама та хирĕçлет пулĕ—ха», — тесе шухăшлатăп хам ăшра. Тĕлĕнмеллипех тĕлĕнтĕм. Вăл эпĕ панă хута вуласа тухрĕ те, пĕр ыйту та памасăр резолюци çырса хучĕ: «Çула тухмалли документсене хатĕрлесе памалла, июнĕн 5—мĕшĕнчен пуçласа июлĕн 5—мĕшĕччен отпуска ямалла». Савăнса кайса, атă кĕллисене илемлĕн шаклаттартăм /*тахçан кавалерист пулнă—çке, ĕлĕкхи хăнăхăва манса кайман—ха*/, 180 градус чухлĕ çаврăнса пÿлĕмрен тухсан, васкаса дивизи кадрĕсен пайне хыпаланса утрăм. Унти начальник Герасименко майорччĕ. Хавасланса кайнăскер, кадрсен пуçлăхне çапла шантаратăп: «Тăван çĕршыва кайсан, сирĕн валли унтан кучченеç, пĕр кĕленче шурă эрех илсе килетĕп. Çула тухмалли документсене хăвăртрах хатĕрлесе парăр—ха, тархасшăн». /*Панă сăмаха тытрăм, ун валли кайран чăнах та шурă эрех илсе килтĕм.*/

Герасименкăпа малтан эп урлă пулнăччĕ—ха. Вăл мана хытах кÿрентернĕччĕ. Ĕç çапла пулса иртнĕччĕ. Кенигсберг хулине илнĕшĕн мана Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ пама тăратнăччĕ. Çак пысăк наградăна илмелли документсем çине дивизие ертсе пыракансем пурте тенĕ пекех алă пуснăччĕ. Анчах та вăл кирлĕ хутсене малалла яман, хăйĕн сĕтел çинчи сукна айĕнче тытнă. Эпĕ унран: «Мĕншĕн çапла хăтлантăн?,— тесе ыйтсан, вăл намăса пĕлмесĕр çапла хуравларĕ: «Санăн ахаль те тăватă орден пур, манăн вара пĕрре те çук». Эпĕ ăна çапла каларăм: «Сана орден илме никам та чăрмантарман. Енчен те эс кунти ăшă пуканна хуралласа ларман пулсан, нимĕçсен тылĕнчен манпа пĕрле «чĕлхе» тытса килсен, санăн та кăкăру çинче орденсемпе медальсем йăлтăртататчĕç». Ку калаçу ун чухнех лайăхпа вĕçленмерĕ—ха, каярахпа та çак тĕлпулу хăйĕн çинчен аса илтерсех тăчĕ.

Герасименко хăйĕн влаçĕпе усă курса мана отпуска яма чăрмантараймасть. Вăл ман пекех çар çынни, унăн хушнă приказа пурнăçлама тивет. Чăнах та çапла пулса тухрĕ, кадрсен пайĕнче документсене хăвăрт хатĕрлесе пачĕç.

Çула тухас умĕн чăрмавсем виксе тухма пуçларĕç: Пиллауран Каунаса епле çитмелле? Вăл вăхăтра ку маршрутпа нимĕнле транспорт та çӳреместчĕ. Ăнсăртран тĕл пулнă машинăсем çине ларма та шикленмеллеччĕ. Мĕншĕн тесен вăрçă хыççăн отпуска каякан çынсен шучĕ çул çинче пиншерĕн – пиншерĕн шутланнă, çавăнпа та поездсемпе автобуссем çине те ларма питĕ йывăр пулнă. Вăл вăхăтра, командованин вăрттăн хушăвĕпе килĕшӳллĕн, КПП – ра, ман пек отпуска каякансене тытса чарса, военнăй чаçсене каялла янă тĕслĕхсем те пулкаланă.

Çулсем çинче çакăн пек лару – тăру пулсан та ĕç – пуç ăнăçлах пулса тухрĕ. Çакна пĕлтĕм: пирĕн дивизи тылĕнчен Каунас хулине ыран çул – йĕр юсакан бригада фургонлă машина çине ларса çула тухать иккен. Телейĕм çумрах пулчĕ: автомашина çинче ман валли те пĕр вырăн тупăнчĕ. Эпĕ Каунас хулиçе пĕр чăрмавсăр аванах ларса çитрĕм.

Çул çинче шухăшламали те тупăнчĕ.

Документсене йĕркелесе çитериччен манăн Прихно полковникăн хăтланăвĕсем пирки шутлама та вăхăт пулмарĕ, епле – ха вăл пĕр ыйту памасăр мана отпуска яма килĕшрĕ? Ун шучĕпе малтан ман вырăна рота командирĕ пулма çын çукчĕ тата тепĕр сăлтав: Сушников та отпускран таврăнманччĕ. Çаксене пĕтĕмпех танлаштарсан пĕтĕмлетӳ тума пулать: Прихно, хăйĕн влаçĕпе усă курса, мана Çĕнтерӳ парадне яма килĕшмерĕ. Штаб начальникĕсемпе вĕсен заместителĕсем те, служба вырăнĕсенче пулнăран, тем пек тăрăшсан та Мускава кайма пултарайман. Паллах, вĕсен те Çĕнтерӳ парадне хутшăнас килнĕ.

Каунасран Вильнюса поезд çине ларса тухрăм. Хулана çитсен, чугун çул вокзалне кĕрсен. поездсем Мускава хăçан каяссине расписани тăрăх пĕлме шутларăм. Манăн çире кавалеристсен тумĕччĕ: сăран тужурка, гимнастерка, хĕрлĕ çăлтăрлă карттус, икĕ портупей, кĕскен каласан, чăн – чăн вăрçă паттăрĕ пек курăнаттăм. Çапла пассажирсем кĕтекен залра тăратăп, умра хĕвĕшекен çынсене сăнатăп. Кĕтмен те: «Тувалькин!» — тесе кăшкăрнă сасса илтрĕм. Эпĕ, ун – кун пăхкаласа, пĕр вырăнта аптăраса тăратăп. Сасран паллаймарăм – ха: кам пулчĕ – ши ку? Тимлĕрех сăнаса пăхрăм та Чесноков лейтенанта асăрхарăм.

Эпир унпа 1942 çулхи сентябрь уйăхĕнчен пуçласа декабрĕн 20-мĕшĕччен командирсен курсĕнче вĕреннĕччĕ. Вăл, 1911 çулта çуралнăскер, пирĕнтен аслăрахчĕ, 1942-мĕш çулхи августчен кавалеристсен запасра тăракан 10-мĕш полкĕнче пулнă. Эпĕ унпа Ульяновск хулинче палашрăм.

Çапла пачах та кĕтмен çĕртен пĕр-пĕринпе тĕл пулнипе иксĕмĕр те тĕлĕнтĕмĕр. Кĕске калаçуран çакна пĕлтĕм: вăл та ман пекех Мускава çитес тесе çула тухнă иккен, Оренбург облаçĕнчи Чкаловск хулине каять. Унпа хулари магазинсене кĕрсе шурă эрех, кăлбасси, йӳçетнĕ хăяр туянтăмăр, унтан военнăй комендатурăна кĕрсе хамăра тивĕçекен апат-çимĕç илтĕмĕр. Вара столовойне кĕрсе, икĕ çул çурă хушши уйрăлнă хыççăн, паянхи тĕл пулнă саманта паллă турăмăр.

Малтанах каласа хуратăп. Манăн тусăма вăрçă çулĕсенче ăнăçу тĕл пулман. 1942-мĕш çул вĕçĕнче унăн званийĕ кĕçĕн лейтенантчĕ. 34 çула çитсен те, вăрçă хыççăн та вăл служба пусми тăрăх çӳлелле тек хăпарайман, лейтенант званипе çеç юлнă. Темиçе хутчен те аманса пĕтнĕскере, инвалид пулнăскере отставкăна янă. Кăкăрĕ çинче унăн пĕр награда та çукчĕ. Ирĕксĕрех ыйту сиксе тухать: епле-ха вара, нивушлĕ вăл пĕр медаль илме те тивĕçлĕ пулман? Çул çинче пынă май, вăл, эрех ĕçсе кăмăлне çемçетнĕскер, хăйĕн ăнман пурнăçĕ çинчен куççуль витĕр каласа пачĕ. Ăна вăрçă çулĕсенче хитре арăмĕ те улталанă. Вăл ăна, çар çыннине кĕтсе илмен, тепре качча тухнă. Чесноков, эпĕ астăвасса, арăмне хытă юрататчĕ, пирĕн умра унпа, мăшăрĕ çав тери чипер пулнипе мухтанатчĕ. Эпир унран çамрăкрах пулнă, çавăнпа та каннă вăхăтра пирĕн авланнă çынсенчен шӳтлесе кулас йăла пурччĕ. Тăрăхлаттăмăр вара: «Эсĕ уншăн кунта чунна çунтаран, вăл, çакна пĕлсех тăр, ирĕкре юлнăскер, сана гражданкăра улталать...» Чесноков çине тăрсах хăйĕн хитре арăмне хӳтĕлетчĕ. Пăх та кур, эпир шӳтлени ахаль пулман: йĕкĕлтешни чăна тухнă.

Халĕ акă çак тĕлпулу пулса иртнĕренпе 63 çул çитрĕ пулсан та Вильнюс—Мускав чугун çулĕ çинчи калаçăва халĕ те манаймастăп. Эпир, тĕрĕссипе каласан, иксĕмĕр те çĕнтерӳçĕсем пулнă, пирĕн пирки, айккинчен сăнакан пĕр-пĕр çын, вĕсем телейлĕ çынсем теме пултарнă. Анчах та ку çапла пулнă-и-ха? Паллах, çук. Чăнах та вăрçă пуçлансан, вăл вĕçленичченех эпир вăрçă хирĕсенче пулнă, унтан иксĕмĕр те сывă юлнă, çавăнпа хамăра телейлĕ çынсем теме пултаратпăр.

Анчах та эпӗ сывӑ та тӗреклӗ тейӗпӗр, манӑн фронтри тусӑм вара — инвалид. Вӑрҫӑра вӑл вилӗме ҫӗнтерсе тухнӑ пулсан та, офицера чунтан юратнӑ ҫынниех улталанӑ. Арӑмӗ урӑх арҫынпа явӑҫса кайса ӑна качча тухнӑ, юратӑва шеллевсӗр таптанӑ. Эппин, Чесноков телейлӗ теме ниепле те чӗлхе ҫаврӑнмасть.

*Ҫав асран кайми тӗлпулу хыҫҫӑн чылай ҫул иртсен те эпир тек курнӑҫман, шел пулин те, эпир пӗр—пӗринпе ҫыхӑну тытман. Мӗнлерех пулса тухнӑ—ши унӑн кайранхи шӑпи? Эпӗ кун пирки нимӗн те пӗлместӗп. Вильнюск вокзалӗнче тӗл пулнӑ та, кайран пӗр—пӗринчен яланлӑхах уйӑрӑлса кайнӑ. Ҫапла пулин те асран кайми фронтри тусӑн ҫутӑ та ырӑ сӑнарӗ халӗ те куҫӑм умӗнчех. Унӑн хурлӑхлӑ шӑпи халӗ те чуна ыраттарса тӑрать.*

Мускаври Хусан вокзалӗнче халӑх ҫав тери йышлӑччӗ, пурте хӗвӗшеҫҫӗ, ку пайлӑ ӗнтӗ: кашниййӗшӗ хӑйсем шутланӑ вырӑна хӑвӑртрах ҫитесшӗн. Билет ҫуккисен станци ҫуртӗнчен перрон ҫине тухма та май ҫук. Фронтовиксемшӗн вара лару—тӑру кӑшт лайӑхрах. Вӗсем ҫине пурте кӑмӑллӑн, ӑшӑ куҫпа пӑхаҫҫӗ.

Манӑн чӑн малтан Ҫӗмӗрле хулине ҫитмелле, унтан, Кӑканар ҫырми урлӑ, юратнӑ та чун—чӗрене ҫывӑх тӑван ялӑма, Тури Кӑмашана!

Акӑ ман пата танк училищинче вӗренекен икӗ лейтенант пырса тӑчӗҫ, вӗсем вокзалти халӑх хушшинчен перрон ҫине билетсӑрах пӗр хӗрарӑма илсе тухма ыйтрӗҫ. Енчен те ӗҫ ӑнсан, хӗрарӑм кондукторпа пӗр чӗлхе тупса, вагона ларма пултарӗ. Паллах, тӳлевсӗр мар, укҫалла. Эпӗ пач палламан хӗрарӑма перрон ҫине тухма пулӑшрӑм. Вӑл, кондукторпа калаҫса татӑлсан, вагона кӗме пултарчӗ. Хӗрарӑм, кайранхи калаҫуран пӗлтӗм, врач пулса ӗҫлет, манӑн ентеш иккен, Ҫӗмӗрлене ҫитме васкать.

Хулана ҫитсен эпир иксӗмӗр те пуйӑсран антӑмӑр. Икӗ лейтенант Хусана ҫитме васкарӗҫ. Станци вокзалӗнче эпӗ хӗрарӑм—врачпа сывпуллашса уйӑрӑлсан хамӑн ҫулпа утрӑм.

Ҫуллахи каҫ пулсан та тавралӑх тӗттӗмленнӗччӗ ӗнтӗ, ҫурҫӗр ҫитесси те нумаях юлман. Ӑҫта ҫӗр каҫмалла—ха? Ҫӗмӗрлере вӑл вӑхӑтра Бурашников Владимир Осипович пурӑнатчӗ. Вӑл пирӗн ялсемшӗн ют ҫын мар. 20—мӗш ҫулсен вӗҫӗнче Владимир Осипович «Обод» артельте ӗҫленӗ, кӑштах пирӗн патӑрта, каярахпа Лосевсен килӗнче хваттерте пурӑннӑ. Унта унӑн хӑтлӑ пӳлӗм, кӗрсе тухма та уйрӑм алӑк пурччӗ.

Ҫӗмӗрле хулинче В. О. Бурашников вокзалтан инҫех те мар, К. Маркс урамӗнче пурӑнатчӗ. Ҫурт патне ҫитсе тӑрсан, алӑка

шаккатăп, никам та хирĕç сас памасть. Кăштах тăрсан — тăрсан тепĕр хут, хальхинче вăйлăрах тăнкăртаттаратăп. Тинех Владимир Осипович сас пачĕ, кам килнине ыйтса пĕлме пуçларĕ. Хуравлатăп: «Эпĕ ку — Коля». «Мĕнле Коля тата?» — интересленет кил хуçи. «Аким Андреевич ывăлĕ», — тетĕп ăна. Вăл мана сасран палласа илчĕ те алăка уçрĕ.



*Иван Тувалькин*

— Эсĕ кунта мĕнле çаклантăн, санăн фронтра пулмалла — çке, — тĕпчет вăл манпа ăшшăн калаçса.

— Вăрçă вĕçленчĕ, тăвансене курма отпуска килтĕм. Тури Кăмашана Ваньăран маларах çитетĕп пулмалла.

В. О. Бурашников мана тӳрех тĕлĕнтерсех ячĕ:

— Йăнăшатăн эсĕ, Коля. Нумаях пулмасть ман пата Аким Андреевич кĕрсе тухрĕ. Вăл Çĕмĕрлене ывăлне кĕтсе илме çитрĕм, терĕ.

— Епле — ха капла? Ывăлне терĕ пулсан, пирĕн Тимофей вăрçăра пуçне хунă — çке, — ăнланмасăр çине — çинех ыйтатăп унран.

— Епле — ха эсĕ тавçăраймастăн? Аким Андреевич Ваньăна кĕтсе илме хулана килнĕ! Çапла вара, Ваня, санран маларах яла таврăннă.

Çывăрма выртсан та ыйăх килмерĕ. Вырăн çинче виçĕ сехет çитиччен йăшăлтатса выртрăм та, тĕлĕрсе кайма аптранипе, ура çине сиксе тăтăм. Кил хуçин те ыйăхĕ вĕçнĕ, вăл мана лăплантарать, тата кăштах канса илме сĕнет.

— Çук, — тетĕп ăна, киле каятăп.

Кил хуçипе сывпуллашрăм та çула тухма васкарăм. Хамăн çул çинчи япаласене хваттертех хăвартăм. /*Вĕсене кайран атте лашапа кайса илчĕ*/.

Урамра тĕттĕм пулсан та халăх ыйхăран вăраннă та ĕнтĕ, чылайăшĕ ирхи ĕçе васкаççĕ. Эпĕ сывламасăр тенĕ пек, ывăннине пăхмасăр чупатăп, чупатăп, Кăканара çитме васкатăп.

Ун чухне, июнĕн 10 — мĕш кунĕнче, вырсарникун ҫынсем ирех Ҫĕмĕрле еннелле утатчĕҫ, пасара васкатчĕҫ. Эпĕ ҫул ҫинче Тури Кăмашасене курсан та вĕсенчен пăрăнса утма тăрăшрăм. Сăлтавĕ мăн кăмăлланнинче мар, пачах та урăхла: киле ҫитес вăхăта сая ярас мар тенинче. Енчен те кампа та пулсан калаҫма тапратсан, ҫав ҫынран часах уйрăлаймастăн, кăнтăрлаччен те яла ҫитейместĕн...

Ҫапла ачаранах палланă вăрттăн сукмаксем тăрăх, ăҫта май пур чупса е кăштах сывлăш ҫавăрас тесе утса, часах вăрмантан тухса, Тури Кăмаша тăрăхне ҫитрĕм. Алă ҫинчи командир сехечĕ ҫине пăхрăм: 5 сехет ҫитнĕ.

Эпĕ тинех юратнă ялта! Хăҫантанпа кĕтнĕ ҫак ытарайми вăхăта! Чун — чĕре савăнать те, пăлханать те. Эх, ытарайми кĕтесĕм, мана кун — ҫул пилленĕ тăван ялăм, сывăхри вăрманăм, унăн умĕнчи чечеклĕ, куҫа илĕртекен улăхĕ — ҫаранĕ, тырпуллă хирĕ, кĕскен каласан, умра мĕн курăнни, пурте, пурте! Сирĕнтен хакли ҫут тĕнчере ним те ҫук! Пулма та пултараймасть.

Тарăн шухăша кайса тăтăм эпĕ кунта, тăван тавралăха сăнаса.

Чăн малтан аннен иккĕмĕш сыпăкри тăванĕпе, Василий Кузьмич Поляков арăмĕпе, Натальăпа тĕл пултăм. Унпа пĕр икĕ минут пек калаҫса илсен тăван кил енне утрăм, тек никампа та тĕл пулмарăм. Юратнă анне урамра алăк умĕнче тăратчĕ. Вăл мана хайĕн ывăлĕ мар, пĕр — пĕр милиционер тесе шутланă. Ҫавăнпа та анне мана инҫетренех асăрхасан, кӳршĕ хĕрарăмне сăмакун юхтарма пуҫланă вучаха часрах сӳнтерме хушма ĕлкĕрнĕ те иккен. Ара, ирĕксĕрех ҫапла шутлăн: манăн ҫири тум — тирĕме сăранран ҫĕлеттернĕ — ҫке. Ялта вăл вăхăтра ҫакăн пек тумпа милиционерсем ҫеҫ ҫӳренĕ. Пирĕн хушăра 10 метр юлсан анне мана палласа илчĕ те тĕлĕннипе, хăйĕн куҫне хăй ĕненменнипе икĕ аллипе аякĕсене ҫапма пуҫларĕ: «Коля килчĕ! Коля таврăнчĕ!» — тесе кăшкăрчĕ. Савăннипе ниҫта кайса кĕреймесĕр: «Аким! Вăран, вăран часрах! Коля килчĕ!»

Кайран ҫакна пĕлтĕм. Вĕсен ĕнер килте пĕчĕк ĕҫкĕ пулса иртнĕ, ҫав сăлтава пула атте ĕлĕкхилле ир — ирех ура ҫине тăма та ĕлкĕреймен, шăм — шакĕ йывăрланнипе картишне тухман та. Атте аннен сăмахне ĕненмерĕ, шӳтлет терĕ пулмалла. Вăл, эпĕ пӳрте кĕрсе, ҫири тума хывса хурсан, куҫĕсене сăтăркаласа, пӳлĕме кĕрсе тăчĕ. Халĕ ĕнтĕ ывăлĕ, хăйĕн асĕнче упранса юлнă 4 — 5 ҫул каярахри ҫамрăк каччă мар, унăн умĕнче чăн — чăн

арçын, гимнастерка тăхăннă капитан тăрать. Ывăлĕн кăкăрĕ çинче 4 орден йăлтăртатать!

Вăл ман пата пычĕ те ыталаса илчĕ, тĕл пулушăн савăннине пĕртте палăртмарĕ, чуптуса илме те тавçăрса илеймерĕ: «Ывăлăм!» — терĕ те, хăй хумханса кайнине палăртас мар терĕ пулас, тек сăмах хушмарĕ, пӳлĕмрен картишне тухрĕ.

Аттене ăнланма пулать ĕнтĕ. 5 çул каярах унăн ывăлĕ техника училищинче, вагонсене çӳретекен машинист пулма вĕреннĕ. Кĕске вăхăт хушшинчех вăл Совет çарĕн капитанĕ пулса тăнă. Ку кăна — и? Ывăлĕн кăкăрĕ çинче вăл вăрçă паттăрĕ иккенне тата чăн — чăн çĕнтерӳçĕ пулнине палăртса орденсем пĕр — пĕрне перĕнсе чăнкăртатаççĕ, тĕрлĕ тĕспе çиçсе пӳлĕме илемлетеççĕ. Çĕр çине тĕреклĕн пусса утакан паттăр ывăлпа мухтанма пулать — и — ха? Паллах, унпа хăть хăçан та мăнаçланма юрать. Ялта ун евĕр командирсем çукпа пĕрех. Аттен, манпа çеç мухтанма пулать тени те тĕрĕсех мар — ха. Унăн икĕ эрне каялла тепĕр ывăлĕ, сержант, хăйĕн икĕ юлташĕпе яла таврăннă. Эпĕ çитнĕ вăхăтра виççĕшĕ те çывăрса тăманччĕ — ха. Вĕсем Инçет Хĕвел тухăçĕнчен, вăрçă эшелонĕсене вырăна çитерсен, каялла таврăннă. Унăн ывăлĕ Ваня Сталинград патĕнчи хаяр çапăçăва хутшăннă. Ленинград блокадине çăмăллатас тесе, эшелон хыççăн эшелона фронт çывăхне çитернĕ. Аким Андреевичăн темиçе çул каярах хурлăх та тӳссе ирттерме тӳр килнĕ: унăн кĕçĕн ывăлĕ Тимофей, 1942 çулта, вăрçă хирĕсенче çулталăк хушши пулма ĕлкĕрейменскер, паттăрсен вилĕме пуçне хунă. Алăри пилĕк пӳрне те хаклă теççĕ. Вĕсене пĕр — пĕринчен уйăрса, ку лайăх, ку япăх теейместĕн. Тимофей таврăнманшăн аттепе анне хытă *куляннă, çапах та вĕсем пирĕнтен хăйсен чун суранне* пытарма тăрăшнă.

Çапла вара Тури Кăмаша ялне чăн малтан çĕнтерӳ хыпарне июнĕн 5 — 6 — мĕшĕсенче Иван Акимович Тувалькин, июнĕн 10 — мĕшĕнче Николай Акимович Тувалькин фронтовиксем илсе килнĕ. Яла вăрçăран таврăнакансем маларах та килкеленĕ, анчах та вĕсем йывăр аманса сусăрланнисем, инвалида тухнисем, вĕсен шутĕнче Тимофеев Никифор Дмитриевич, Тувалькин Андрей Алексеевич /Махи Унтри/ пулнă.

Тум — тире çул тусанĕнчен кăштах тасаткаласан, пит — куçа сивĕ шывпа çусан уяв сĕтелĕ хушшине ларма хатĕрлентĕм. Çав вăхăтра Ваня та хăйĕн юлташĕсемпе вырăн çинчен тăрсан,

çăвăнсан уява паллă тума хатĕр пулчĕç. Сĕтел çинче, вăл вăхăтпа танлаштарсан, апат – çимĕç çителĕклĕччĕ: каска кăмпи, тăпăрчă хутăштарса ăшаланă çăмарта, чăмăрла пĕçернĕ çĕрулми, пĕлтĕрхи тăварланă пахча çимĕçĕ. Фронтра чух эпир çакăн пек апата тутанса пăхма та пултарайман. Килте тунă сăмакун, кăпăклă сăра та çителĕклĕччĕ.

Сĕтел хушшине лартăмăр. Атте манпа тĕл пулнă хыççăн таçта кайрĕ те çухалчĕ. Хуллен – хуллен хăнасем пуçтарăнма пуçларĕç, ял йăлине кура, кашнийĕшĕ хăйĕнпе пĕрле килти апат – çимĕçпе пĕрле сăмакун е кăпăклă сăра йăтса килчĕç. Малтанхи стакансене çĕклетпĕр, сĕтел çинчи апатпа хăналанатпăр, ĕçнĕ шĕвек пуçа кайнине сисме пуçлатпăр. Çав вăхăтра киле атте таврăнчĕ Вăл шурă эрех янă 3 литр кĕленче савăтне хул хушшине хĕстернĕ. Ун чухне эрехе çапла сутатчĕç. Тăвансем те пуçтарăнчĕç: Иван Федорович Толстов Агафи инкепе, Сергей Гаврилович Лосев Марфа арăмĕпе, хĕрасна атте — Данилов Иван Васильевич /*Тăнти*/, тата ыттисем те. Пурне те асăнса пĕтерме те çук.

Ку — пĕтĕм ялăн уявĕ пулчĕ. Туйсем иртнĕ вăхăтра та çакăн чухлĕ йыш пуçтарăнмасть. Пÿртре ларма та, тăма та вырăн çитмест. Çынсем пĕр вĕçĕм килсе тăнăран çурт тăвăрланнăçемĕн тăвăрланчĕ. Килнĕ хăнасем урама тухма, уява унта ирттерме пуçларĕç. Кăштах эрех сыпнă халăхăн кăмăлĕ çĕкленчĕ, купăс сасси, юрăсем янрама пуçларĕç. Хавасланнă çынсем ушкăна тăрса, пĕр – пĕринпе ăмăртса тенĕ пек ташлама пикенчĕç. Купăсçăсем халăха савăнтарас тесе, юрă е ташă кĕввисене каласа чун – чĕресене çунатлантарчĕç.

Ăçта савăнаççĕ, унта куççуль те кăларса йĕреççĕ çав. Сăлтавĕ те пур: ялтан вăрçă хирне тухса кайнă çынсем пурте ыррăн – сыввăн таврăнайман – çке, чылайăшĕ хаяр çапăçусенче пуçне хунă, вĕсем урăх нихăçан та тăван – пĕтенĕсемпе тĕл пулаймаççĕ. Аттепе анне хăйсем куляннине ытлах палăртмарĕç, мĕн каласан та виçĕ ывăлтан иккĕшĕ куç умĕнче тăраççĕ. Иван Федорович Яранка хурланнине палăртмарĕ. Унăн икĕ ывăлĕ те сывă юлнă. Терентий, вĕсен аслă ывăлĕ темĕнле хĕн – хур курсан та, чĕрĕ. Тепĕр ывăлĕ Ваня та, десантник пулнăскер, ырă – сывă. Паян мар пулсан та киле часах таврăнĕç. Сергей Григорьевич Лосев лăпкă курăнма тăрăшать. Арăмĕ вара, Марфа аппа, хăйне пачах та урăхла тыткалать, хумханнине пытармасть, йĕре – йĕре сăмахлать: «Эсир, — тет вăл, — Ваньăпа Коля киле таврăнтăр, манăн Коля таврăнас çу – ук!»

*Эпир, чăнах та, Марфа аппа ывăлĕпе, Кольăпа Хĕрлĕ çара 1940—мĕш çулта тухса кайнă. Вăл Инçет Хĕвел анăçĕнче, Белоруссии çĕршывĕнче вырнаçнă Волковыск хулинчи гарнизонта, кавалери чаçĕнче службăра тăнă. Вăрçăн малтанхи кунĕсенче унта çав тери кăткăс лару—тăру пулнă. Коля, ман пата çырнă çырăвĕсенче командирсем вĕсене пулас вăрçăри хаяр çапăçусене вăйлă хатĕрленни пирки пĕлтеретчĕ. Ир—ирех команда парса, пĕр вырăнтан тепĕр вырăна хăвăрт куçма, тĕрлĕ марш ыткăнусене хутшăнма вĕрентни пирки çырса кăтартатчĕ. Эпĕ çарти пурнăçа, хам та кавалери училищинче вĕреннĕскер, лайăх пĕлетĕп, çавăнпа та Коля çырса кăтартнисем маншăн çĕнĕлĕхсем пулман тесен те тĕрĕс пулать. Çамрăк кавалеристăн, чăнах та, вăрçăн çулĕсенче темĕнле йывăрлăх та чăтса ирттерме тивнĕ. Паллах, пурин те пурнăçĕ пĕр евĕрлĕ мар, кашниййĕн ăраскал—шăпи тĕрлĕ енлĕ пулса тухать. Коля Лосевăн салтакри службиĕмĕтленнĕ пек ăнăçлах пулман. Вăрçă вĕçленсен те, эпĕ, вăл сывă юлнă тесе, шухăшласа пурăнаттăм, унпа пĕрле Данилов Егор та таврăнасса шанаттăм. Эпир виççĕмĕр те пĕр—пĕринпе туслă пурăннă. Анчах та кĕтни кăлăхах пулчĕ.*

*Данилов Егорăн шăпи мана чылай вăхăт хушши интереслентерчĕ Вăл хăш вырăнта вилни пирки пĕлес тесе Оборона министерствине, Вăрçăпа медицина министерствине, Çĕмĕрлери военкомата çырусем çыртăм, анчах та усси пулмарĕ. Данилов Егорăн шăпи пирки эпĕ нимĕн те пĕлеймерĕм. Ăна Çĕмĕрлери военкомат Çара илнĕ. «Асăну Кĕнекинче» унăн шăпи пирки вăл 1941—мĕш çулхи август уйăхĕнче хыпарсăр çухалнă тенĕ. Ку ăнсăртран, тĕрĕс мар çырнă вăхăт. Ăна свидетельсем, Фомин Павел Михайловичпа Волков Илья Артемьевич каланисене шута илсе çырнă пулмалла. Çак документ Егорăн амăшне, 90 çулхи Акулина Даниловна, ывăлĕшĕн пенси илме кирлĕ пулнă. Егор шăпи пирки сăмах тапратрăмăр пулсан, унăн амăшĕн кун—çулĕ пирки каласа хăварам. Акулина аппан пурнăçĕ йывăр пулнă. Унăн упăшки Арсентий 1—мĕш тĕнче вăрçинче вилнĕ. Тăлăх арăмăн /аслашшĕ Данил пурăннă—ха, анчах та вăл, ватăскер, 30—мĕш çулсенче çĕре кĕнĕ/ пĕччен Крахвин ятлă хĕрне тата икĕ ывăлне, Егорпа Петра ура çине тăратма тивнĕ. Икĕ ывăлĕ те вăрçăра пĕр хыпарсăр çухалнă. Амăшĕ куллен—кун лайăххине шанса пурăннă. Çакăн пек телейсĕр кун—çулшăн пĕтĕмпех вăрçă айăплă. Çемье тĕрекне — вăй—питтиллĕ виçĕ арçынран пĕри*

*те çут тĕнчере юлман. Ирĕксĕрех шухăша путатăп: мĕн кăна тӳсме тивмен чăваш хĕрарăмĕн çав çулсенче? Çапла пулсан та, пирĕн аннесемпе аппасем тата кĕçĕн çулхи ачасем тылра ĕçлесе, выçă—тутăллă пурăнса, Çĕнтерӳ кунне çывхартма тăрăшнă.*

*1970—мĕш çулсен вĕçĕнче Акулина аппана эпĕ упранса юлнă документсене йĕркелесе, собесран уйăхсерен пенси илсе тăма пулăшнăччĕ. Чылай çул иртсен те вăл хыпарсăр çухалнă ывăлĕсем тăван киле таврăнасса шанса пурăнатчĕ.*

Ильин Василий Никифорович пирки каласа хăвармалла. Вăл 1—мĕш тĕнче вăрçине хутшăннă, каярахпа, Граждан вăрçи тапрансан партизан пулнă. Василий Никифорович — вăйлă, çирĕп кăмăллă ватă салтак, икĕ ывăлне — Мишăпа Петьăна — вăрçа ăсатнă, шел пулин те, иккĕшĕ те таврăнаймарĕç. Виççĕмĕш ывăлĕ, Çемен, кунти халăх хушшинчех çӳрет—ха, анчах та вăл ача çулĕсенче, тăххăрта çеç халь. Ялти халăх Çĕнтерӳ кунне уявлать пулсан та Василий Никифоровичăн савăнмаллиех çук çав. Апла пулин те, вăл, куççуль кăлармасăр, тарăн шухăша кайнăскер, халăхпа пĕрле пулма тăрăшать.

Хăть мĕн каласан та, иртнĕ çулсенче халăх тем тĕрлĕ нуша тӳснĕ пулсан та, çапах та çынсен хĕпĕртемелли сăлтав пур. Шанчăка çухатманнисем кĕçех сывă юлнă хăйсен упăшкисене, ывăл—хĕрĕсене кĕтсе илĕç. Вара халăх мĕн пур вăйне пуçтарса мирлĕ ĕçе кӳлĕннĕ.

Тури Кăмаша çыннисемшĕн 1945 çулхи июнĕн 10—мĕшĕ нихçан асран кайми, паллă кун пулса юлчĕ. Ку вăл — хаяр вăрçă вутĕнче пулнă салтаксем тăван киле таврăнма пуçланă вăхăт.

Манăн анне, Екатерина Ивановна каярахпа темиçе хутчен те çапла калатчĕ: «Пурнăçăмри чи телейлĕ те асăма тарăннăн кĕрсе юлнă кун вăл — июнĕн 10—мĕшĕ».

Пысăк савăнăçа палăртнă хыççăн тепĕр кунне пуçа кăштах йывăр тивет. Ун чухне çын хăш чухне мухмăрпа аптрать е тĕрлĕ кичем шухăш кăмăла пусарать. Шутламалли те пурччĕ çав: Ваньăн канмалли кунсен шучĕ, военкоматра отпускне кăштах тăсса парсан та, вĕçленсе пыратчĕ. Манăн та çавах. Эпĕ те, яла васкаса килнипе, хам тăван çĕршыва çитни пирки военкомата пĕлтерменччĕ—ха. Çирĕплетнĕ йĕркене пăхăнма тивет. Иксĕмĕр те Çĕмĕрлери военкомата кайса килтĕмĕр. Пире унта лайăх кĕтсе илчĕç. Вăрçă паттăрĕсене ун чухне пур çĕрте те хисеплетчĕç. Ваньăн отпускне мĕн чухлĕ тăсса панине халĕ астумастăп ĕнтĕ.

Манăн ыйтăва та кунта тивĕçтерчĕç. Çапла вара Çĕмĕрлене йăнăçлă кайса килтĕмĕр.

Хуларан таврăнсан канмалли кунсене туллин те пур енлĕн, ĕçчен халăх хушшинче ирттерме шутларăмăр. Ку енĕпе пире атте пулăшрĕ. Эпир унпа вăл ĕçлекен вырăнсенче: вăрманта, уçланкăсенче, утарсенче, вăрманта вырнаçнă поселоксенче пултăмăр. Вĕсенче аттене паллакан çынсем, унăн тус — юлташĕсем чылайччĕ. Пире курсанах, пурте тенĕ пекех, вăрçă витĕр тухнă фронтовиксене тĕрлĕ ыйтусем паратчĕç, тĕнчери лару — тăру пирки ыйтса пĕлетчĕç. Çакăн пек ыйтусем те пулатчĕç: «Çапăçусене хутшăннă чух хăрушă марччĕ — и?» Мана, пĕр уйăх каялла çеç тăшман тыłне «чĕлхе» тытма кайнă офицера, çакăн пек ыйтусем çине хуравлама йывăрах марччĕ. Мĕншĕн тесен эпĕ пуçран шухăшласа кăларнине мар, чăн пулса иртнине каласа параттăм.

Утарти пĕр тĕл пулу уйрăмах асра юлчĕ. Шел пулин те хурт — хăмăр ăстин хушаматне астумастăп, унăн Тури Кăмашари тăванĕсене те лайăх пĕлместĕп. Утарçăн мăнукĕ Пакулаев Эскетенре пурăнать. Вăл атте патĕнче темиçе хутчен те хăнара пулса курнă. Халĕ те кăвак тĕс çапнă кĕреçе сухаллă юмахри пек утарçă куç умĕнче тăрать. Вăл ятарласа пиртен çĕлеттернĕ вăрăм кĕпе тăхăннăччĕ, пуçне улăмран тунă сарă тĕслĕ шĕлепке тăхăннăччĕ. Унăн вăрманти çурчĕн тăррине улăмпа витнĕччĕ, шалти стенисем шап — шурăччĕ.

Йĕри — тавра пыл шăрши сăмсана кăтăклать. Чечексем çиййĕн тĕрлĕ тĕслĕ лĕпĕшсем вĕçеççĕ, пыл хурчĕсем, кĕвĕллĕ те илемлĕ сасă кăларса, пĕр вĕçĕмсĕр каялла — малалла вĕçеççĕ. Вăрманти тĕрлĕ кайăксен юрри чуна канăç кӳрет, çывăхрах куккук сасси нумай çул пурăнма пиллесе, пĕр чарăнмасăр авăтать. Чăн — чăн çăтмах! Çут тĕнче илемне вăрманта пулсан çеç туйса илме пулать пуль.

Тăватă çул хушшинче эпĕ тăван тăрăхри пек илем курман çав. Эпир умри усаллăха: пуç çиййĕн вĕçекен снаряд е пуля, самолетсем çинчен тăкăнакан бомбăсен, фугаслă снарядсен сассисене, минăсем шартлатса çурăлнине çеç илтме хăнăхнă. Пыл шăрши вырăнне танксем хыççăн юлнă çунăк солярка е снарядпа мина çурăлнă хыççăнхи таса мар тĕтĕме çеç чыхăнса сывлама тивнĕ.

Утарта сĕтел хушшиче хăналаннă, тараватлă утарçăпа

сывпуллашнă, тавралăхри илемпе киленнĕ хыççăн Яхай ялне, унтан тăван киле таврăнтăмăр. Тепĕр кун Саланчăкра пултăмăр. Кунта эпир Леспромхоз ĕçченĕсемпе, çамрăксемпе курса калаçрăмăр. Каç пуласпа çеç Тури Кăмашана çитрĕмĕр.

Часах Ваньăпа унăн юлташĕсен тăсса панă отпускĕ вĕçленчĕ. Эпĕ вĕсене ăсатса яма Çĕмĕрлене кайрăм.

Хулана çитсен Владимир Осипович патĕнче хăнара пултăмăр. Тĕлпулу хаваслă иртрĕ. Кил хуçи — чăн–чăн вырăс чунĕллĕ, туслă йышра хăйне тытма пĕлекен çын. Вăл фронтри çапăçусем мĕнле пулса иртнипе интересленчĕ. Эпир ăна тĕпĕ–йĕрĕпе, пулса иртнине ним пытармасăр, хитрелетмесĕр каласа патăмăр. Тараватлă кил хуçипе сывпуллашсан пирĕн кăштах хула урамĕсенче уçăлса çÿреме, чипер хĕрсемпе паллашма та вăхăт тупăнчĕ. Поезд станцирен тухса каяс самант хăвăрт çитрĕ. Мĕн тăвăн? Уйрăлмалла. Чарусăр вăхăта кĕттерейместĕн. Ваньăпа тата унăн юлташĕсемпе сывпуллашсан поезд вырăнтан тапранчĕ. Эпĕ яла, тăван киле таврăнтăм.

Пĕччен тăрса юлсан, малтанласа чуна кичемлĕх пусрĕ. Çапах та ялта тунсăхласа ларма юрамасть, кунта та мĕнпе те пулсан кăмăла çĕклеме пулать. Çапла, пĕррехинче килте пĕччененех лараттăм. Коридорта сас пулнине илтрĕм. Часах алăк уçăлчĕ те пÿрте Андрей Алексеевич Тувалькин /*Махи Унтри*/ кĕрсе тăчĕ. Манăн аттепе унăн ашшĕ пĕр тăвансем. Вăл, вăрçа хутшăннăскер, яла йывăр аманса таврăннă. Инвалид пулсан та вăйĕ çитнĕ таран тĕрлĕ ĕçе хутшăнма, хăйне тата çемйине тăрантарса пурăнма тăрăшать. Ал ăсти, çав шутра çĕвĕçĕ пулнă май, пур ĕçе те тĕплĕ тăвать. Вăрçăра аманнине кура пĕр урине хуçлатаймасть, ăна çĕр çинче тепĕр урин вăйĕпе сĕтĕрсе пырать.

Ман пата килнин сăлтавĕ пирки вăл çапла каласа пачĕ. Унăн килти çĕвĕ машинине налог инспекцийĕнче ĕçлекенсем илсе кайнă. Çитмен пурнăçа пула инвалид вăхăтра 100 тенкĕ налук тÿлеймен.

Пулăшу ыйтакан хамăн тăван нушине тÿрех ăнлантăм. Ара, вăл çĕвĕ машинипе хăйне валли çăкăр ĕçлесе илет–çке. Нивушлĕ налукçăсен çакăн пек чул чĕреллĕ пулмалла, çак йывăр саманара терт чăтакан çынна ăнланмалла мар? Çĕвĕ машинипе усă курса кăна вăл йÿнеçтерсе пурăнкалать–çке. Пĕр турткаланса тăмасăр пулăшма килĕшрĕм, çывăх тăванăмпа налукçăсене ял тăрăх шырама тухса кайрăм.

Фронтовика кӳрентерекеннисем Сорокин Иван Петрович /*Чакак Ваньки*/ тата Уфилин Семен Иванович /*Митор Ҫимонӗ*/ пулнӑ. Таҫта та ҫитрӗмӗр, анчах та налукҫӑсене тупаймарӑмӑр. Ӗҫ ӑнманнине пула Митор Ҫимонӗн килне кӗрсе тухма шут тытрӑмӑр. Вӑл тӑлӑх хӗрарӑма, Якрав Муҫҫин арӑмне качча илнӗччӗ, унӑн ҫуртӗнче пурӑнатчӗ. Пӳрте кӗтӗмӗр те икӗ налукҫӑ та кунта пулнине куртӑмӑр. Сӗтел ҫинче виҫӗ литр кӗрекен савӑт ларать. Сӑмсана сӑмакун шӑрши кӳ! кӳ! пырса ҫапать. Вӗсем иккӗшӗ те ура ҫине тӑрса, мана яла килнӗ ятпа саламларӗҫ, халӑх йӑлипе стакан ҫине янӑ сӑмакунпа хӑналарӗҫ.

Часах шкул директорӗ Алексей Егорович Павлов килчӗ. Кӑшт тӑрсан унӑн арӑмӗ Антонина Тарасовна та, вӑл та педагог, ҫитрӗ. Куратӑп: йыш хушӑнсах пырать. Ҫавӑнпа та хӑнасем ӗҫсе хӗрсе кайиччен налукҫӑсемпе Андрей Алексеевичӑн ҫӗвӗ машинине епле каялла илмелли пирки канашласа пӑхма шутларӑм. Калаҫу кӗске пулчӗ — 100 тенкӗ тӳлетӗр, вара ҫӗвӗ машинине хуҫине тавӑрса паратпӑр. Андрей Алексеевичӑн хӑйӗн ҫумӗнче укҫа пулмарӗ, вара манӑн ӑна кивҫен пама тиврӗ. Каланӑ — тунӑ. /*Каярахпа налукҫӑсем ҫӗвӗ машинине каялла тавӑрса пачӗҫ*/.

Эпир кунта тек тытӑнса тӑмарӑмӑр, килелле тухса утрӑмӑр. Хаваслӑ йыш уяв ӗҫки—ҫикине пуҫларӗҫ. Кунта мӗн пулса иртнине кайран пӗлтӗм.

Алексей Егорович Павлов Сорокинран вунӑ ҫул аслӑрах. Вӑл хӑйне йӗркеллӗ, кирек мӗнле лару—тӑрура та лӑпкӑ тытма пултарать, ҫынпа пули—пулмишӗн хирӗҫмест, вак—тӗвекпӗн чӗрре кӗмест. Унӑн арӑмӗ Антонина Тарасовна урӑхларах ҫын, вӑл хӑвӑрт хӗрӳленсе кайма пултарать. Иван Петрович Сорокинпа эпир пӗр шкулта вӗреннӗ. Вӑл манран 3 ҫул аслӑрахчӗ. Кама та пулсан хирӗҫтерсе ярас тӗлӗшпе пирӗн хушӑра ун пек ҫамрӑк пулман та пулӗ. Хирӗҫӳ вучахне хӑй чӗртсе ярсан та вӑл айӑпа сирсе яма ӑстаччӗ. Ача чухне те пирӗн хушӑра хӑйне евӗрлӗ ӗҫ пулса иртнӗччӗ. Эпӗ ун пирки халь тӗплӗн чарӑнса тӑмастӑп, мӗншӗн тесен унӑн историйӗ пысӑк. Семен Ивановичӑн пӗр алли чавса таран кӑначчӗ, ҫапла пулсан та вӑл чӑрсӑрлӑхӗпе икӗ алӑллӑ ҫынран та ирттеретчӗ: тавлашма е пӗр—пӗр ҫапӑҫӑва хутшӑнма ухутаччӗ. Эпӗ Ҫимонпа ачаранпах ӗнесене пӗрле кӗтсе ҫӳренӗ, ҫавӑнпа унӑн хӑтланӑшӗсене лайӑх чухлаттӑм.

Ҫапӑҫӑва хӗртсе яраканни, паллах, сӑмакун пулнӑ. Камӑн

чăтăмлăхĕ чăн малтан пĕтсе çитнĕ, эпĕ çакна пĕлместĕп. Хур тӳсекенни яланхи пекех, Сорокин, хамăрла каласан, Чакак Ванькки пулнă. Алексей Егоровичăн та пичĕ илемсĕрленнĕ, кунсăр пуçне унăн плащне те çурса янă. Ку пăтăрмахлă ĕç — пуç пĕр шав кăлармасăр иртсе кайма пултарнă ĕнтĕ. Анчах та çук çав. Чеерехни те кайран мĕн пулассине пĕлсе тăраканни Сорокин пулнă. Вăл хирĕçтăру иртсе кайсанах больницăна кайса медицина справкисене илме ăс çитернĕ. Панă документа ĕненсен унăн операци хыççăнхи аппендицит çĕвви çурăлса кайнă иккен.

Кирлĕ вырăна документсене ярса парсан, вăхăт нумай та иртмен суд следователĕ уголовнăй ĕç пуçарнă, «Обод» артелĕнче ĕçлекен халăха клуба пуçтарнă. Следователь, вырăна çитсен, пулса иртнĕ ĕçпе кăштах паллашсан, манпа курса калаçма кăмăл тунă, Алексей Егорович ывăлне Володьăна ман пата янă. Эпĕ клуба çитнĕ вăхăтра çапăçма юратакансем клубраччĕ. Следователь тӳрех ман пата пычĕ. Эпир пĕр — пĕрин аллине чăмăртаса паллашрăмăр. Вăл мана урама тухса калаçма ыйтрĕ. «Ним тума та пĕлместĕп, — тет вăл, — хăйсем ялти активистсем шутланаççĕ, ĕçсе лартнă та çапăçса кайнă, кам айăплă е айăплă маррине тӳрех уйăрса илме те май çук. Эсир ман вырăнта пулсан, мĕн тунă пулăттăр?» — ыйтать следователь пăшăрханнă сасăпа. «Эпĕ тухса кайсан вĕсем мĕншĕн хирĕçсе кайнине пĕлместĕп, — тетĕп ăна, — анчах та ĕçе ытла шала кĕртсе ярас марччĕ, мирлештересчĕ вĕсене». «Эпĕ те сирĕн пекех шухăшлатăп,— хуравлать вăл, — темĕнле шутласан та ялти интеллигенци çыннисем — çке. Вăрçă пĕтнĕ хыççăн мĕн чухлĕ ĕç умра тăрать».

«Эсир кашнийĕнпе уйрăммăн калаçса пăхăр, — сĕнетĕп эпĕ, — туятăп: вĕсем мирлешме хатĕр. Халăх умĕнче хăвăра йĕркеллĕ тытма, судсем тăрăх çӳресе намăсăра яратăр, ĕçсе супса çӳретĕр. Халь мирлешмесен районта сирĕн ĕçĕре пăхса тухма тивет, унта сире ĕçкĕпе иртĕхнĕшĕн, çапăçнăшăн пуçран ачашласа шăлмĕç, хытах айăплĕç. Ӳкĕте кĕрĕр те мирлешĕр, вара ку ĕçе чарса лартăпăр, малалла ямăпăр, тесе калăр».

Манпа уйрăлсанах, следователь виççĕшне черетпе чĕнсе илсе калаçнă. Виççĕшĕ те мирлешме килĕшнĕ, çавна пĕлтерсе документсем çине алă пуснă.

Клубран тухса кайсан, киле çитсен, тепĕр сехетрен, çывăрма выртма шутланă вăхăтра Володя сассине илтрĕм: «Коля

пичче, — тет вăл, — следовательпе пĕрле мирлешнĕ çынсем пирĕн патăрта пуçтарăнчĕç. Вĕсем çакна паллă тăвасшăн, сире те хисеплесе хăнана чĕнеççĕ».

Володьăпа пĕрле çула тухрăм. Пĕр çухрăм çурă утма тиврĕ. Çитрĕмĕр. Пўртре хаваслă йыш пухăннă. Сĕтел çинче — 3 литрлă кĕленче савăтра кăрчама, çавăн чухлĕ сăмакун */савăла савăлпа çапса кăлараççĕ çав, хирĕçтерекенни сăмакун пулнă—çке/*, чăмăрла пĕçернĕ çĕрулми, çатма çинче çупа ăшаланă çăмарта ларать. Паллах, шыв сапсан та пĕр—пĕринчен уйрăлма пултарайман тус—юлташсем нимĕн те пулса иртмен пек пĕр—пĕринпе шăкăл—шăкăл калаçса юнашар лараççĕ, шўтлеççĕ, анекдотсем каласа пĕр—пĕрне култараççĕ.

Ĕçкĕ—çикĕ епле иртсе кайни пирки çырмастăп. Вулакан ăна хăех тавçăрса илме пултарать. Çакă паха: ăнсăртран пулса иртнĕ ĕç—пуç тăсăлса каймарĕ, мирлĕ майпа хăвăрт вĕçленчĕ.

Манăн отпуск кунĕсем чакса пычĕç, служба вырăнне тухса кайма вăхăт çитрĕ. Çул çинче 5 кун пулмалла. Çав вăхăтра Мускав—Кенигсберг маршрутпа поездсем çўреме пуçланă. Ку хыпар мана савăнтарчĕ. Халĕ эпĕ çула тухсан, пысăк чăрмавсемсĕрех палăртнă вырăна вăхăтра çитетĕп.

*Халĕ Тури Кăмашара урттернĕ вăхăт пирки кĕске пĕтĕмлетў тума та юрать. Калас пулать, Раççей çĕршывĕшĕн ялсем пуррин пĕлтерĕшĕ çав тери пысăк. Кунта пурнăç вĕресе тăрсан пурте пулать, ял пурăнсан — Раççей те пурăнать. Эпир тăван вырăнсемпе куçа курăнман пин—пин çиппе çыхăннă. Анне вăрçă хыççăнах мана вĕрентсе çапла сĕнў панăччĕ: «Хам сывă чухне отпуск вăхăтĕнче нимĕнле санатори—курорт пирки ан шухăшлăр, çу кунĕсем çитсенех тăван яла килсе канăр. Кунта — курорт та, санатори те».*

*Вăл каланине эпĕ тўрех ăша илтĕм, çулсерен отпуск вăхăтне юратнă аттепе аннен килĕнче ирттертĕм. 1952 çулпа Академие вĕренме кĕнĕ вăхăт пулчĕ, 1957 çулта служба вырăнне улăштарма тиврĕ, 1967 çулхи канмалли вăхăта çулталăк вĕçĕнче çеç пачĕç, ун чухне Чита хулинче пурăнаттăм. Çўлерех асăннă çулсенче çеç эпĕ ялта пулаймарăм. Каярахпа, 1968, 1969, 1970 çулсенче Хура тинĕс хĕррине канма кайсан та çула май Тури Кăмашана çитсе курма вăхăт тупрăм. 1971 çулта яланлăхах Шупашкара пурăнма килтĕм. 1991 çулччен Тури Кăмашара канма нимĕнле чăрмав та пулман. Анне 1979 çулта вилсен, чăнах та, яла сайра—хутра çеç килкелесе кайнă. Шел пулин те, 2002 çултан*

*пуçласа паянхи кунччен, ултă çул хушшинче Тури Кăмашана çитсе курма ерçеймерĕм.*

*Пытарма кирлĕ мар: ял ĕлĕкхи пек хăй патне туртмасть, вăл чухăнланса юхăнса пырать. Енчен те кунта тыр—пул акса пуçтармаççĕ пулсан, ĕнесем мĕкĕрмесен, сурăхсем макăрмасан, сыснасем нăриклетмесен, автансем авăтмасан, чăхсем кăтиклетмесен, ача—пăча сасси илтĕнмесен яла ял теме пулать—и вара? Хăш—пĕр çуртсем çинчи алăксемпе чÿречесене хăмасене хĕреслетсе çапса хунă. Ку вăл вĕсенче никам та пурăнманнине пĕлтерет.*

*Ĕçĕ мĕнре, пурнăçри мĕнле сăлтавсене пула çапла пулса тухать—ха? Хуравăн сăлтавне шырама таçта каймалла мар, вăл — кунтах, хĕвеллĕ кун пекех куç умĕнче: колхоза юхăнтарса янă, «Обод» артеле хупса хунă. Çынсен ĕçлесе хăйсен çемйисене тăрантарма май çук.*

*Кăмаша тăрăхне юхăнтарма чăн малтан Хрущев пуçларĕ. Вăл хуçалăх валли йывăçран тĕрлĕ продукци туса кăларакан çĕршыври чылай предприятисене, çав шутра пирĕн «Обод» артеле те, хупса хума Указ кăларчĕ. Çакăн хыççăн çынсем пиншерĕн—пиншерĕн ĕç вырăнĕ шыраса ялсенчен тухса кайма пуçларĕç.*

Çав вăхăтра ялтан чăн малтан тухса каяканни Ильин Семен Васильевич пулчĕ. Вĕсем арăмĕпе, Вера Акимовнăпа пĕрле «Обод» артельте вăй хунă, иккĕшĕ те пĕр вăхăтрах ĕççĕр тăрса юлнă. Çемье йышлă: амăшĕ инвалид, пилĕк ача, пĕри тепринчен пĕчĕк, пурне те тăрантармалла, тумлантармалла.

Кил хуçи 1960 çул вĕçĕнче Красноярск хулине çитрĕ. Эпĕ ун чухне çак хулара службăра тăраттăм. Семен Васильевич 3—4 кун хушши хулари предприятисенче хăйне тивĕçтерекен ĕç шырарĕ. Анчах та вăл чупса çÿренин усси пулмарĕ, пур çĕрте те çав тери сахал укçа сĕнеççĕ. Кунта вырнаçсан, малашне илмелли шалу хăйне пурăнма та ытлă—çитлĕ çитмест. Мĕн тумалла? Ырă кăмăллă çынсем ăна Норильск хулине кайма сĕннĕ. Анчах та унта çитме Семен Васильевичăн укçи пулман. Вăл манран пулăшу ыйтрĕ. Эпĕ ăна ăнлантăм, кивçен пин тенкĕ /*вăл вăхăтра пысăк укçаччĕ*/ патăм. Норильскра ĕçе вырнаçсан Семен Васильевичăн çемйи те хулана килсе тĕпленчĕ. Каярахпа унăн пилĕк ывăлĕ аслă пĕлÿ илчĕç. С. В. Ильин Норильскра 20 çул пурăнчĕ, çав вăхăтра вăл Тури Кăмашаран хулана пурăнма куçса килнĕ чылай çынна ĕçе вырнаçма пулăшрĕ. Тăван ялти çынсем

ăна халĕ те тав сăмахĕ каласа пурăнаççĕ. Йывăр тăпри çăмăл пултăрччĕ Семен Васильевичăн. Вăл, 2001 çулта, 69 çула çитсен, пирĕнтен уйрăлса кайрĕ.

*Илемлĕ çав пирĕн Кăмаша ялĕ! Эпĕ унта пурăнакан ырă кăмăллă та хастар, мал ĕмĕтлĕ çынсене ачаранах юратса ӳснĕ, халĕ те чун–чĕререн хисеплесе пурăнатăп. Вĕсем маншăн кашниййĕшĕ тус–юлташ пулнă. Ялтан аякра, ют çĕрте ăнсăртран е ятарласа тĕл пулсан пĕчĕк ача пек хĕпĕртетĕп. Урăхла пулма та пултараймасть. Епле–ха тăван яла, унăн çыннисене хисеплесе юратмăн! Кунта–çке чăн малтан çут тĕнчене килнине пĕлтерсе сас панă, кунта, тăван килĕн урайĕнче, кăштах вăй илсен çĕр çинче малтанхи утăмсене тунă. Кунта вулама–çырма, шкулта пĕлӳ илме пуçланă, пурнăçăн малтанхи урокĕсене ăша хывнă. Ӳссе çитсе яш пулсан, 1940–мĕш çулсенче кунтан тăван Çĕршыва ирсĕр тăшмансенчен хӳтĕлеме тухса кайнă, 1945 çулхи июнĕн 10–мĕшĕнче атте–анне килне çĕнтерӳçĕ пулса таврăннă, ентешсемпе пĕрле Аслă Çĕнтерĕве савăнса паллă тунă.*

*Ку манăн пурнăçри пысăкран та пысăк, сăмахпа çырса кăтартма май çук чăн–чăн телей!*

Кашни пулăмăн е япалан вĕçĕ пур. Отпуск вĕçленсе пычĕ, Тури Кăмашапа уйрăлма вăхăт çитрĕ. Пирĕн пата çывăх тăвансем, кӳршĕсем, çывăхран та çывăх тус – юлташсем пуçтарăнчĕç, вĕсен хушшинче Володя Кинсарин /*Сибиряк Володьки*/ те пурччĕ. Вăл, аннене икĕмĕш сыпăкран тăван пулакан Çимок Варокне качча илнĕ. Володя та отпуска килнĕ. Вăл Горький хулинчи оборонăн пĕр предприятийĕнче ĕçлет.

Пуçтарăннă çынсемпе сывпуллашсан, Володьăпа çула тухрăмăр. Чугун çул вокзалĕнче, кунти дежурнăй пулăшăвĕпе усă курса, пассажирсен билетне çырса йĕркелерĕмĕр, мĕншĕн тесен билетсене сутмастчĕç. Дежурнăя хăналасан унпа çывăххăн туслашрăм.

Каярахпа, вăл ĕçленĕ вăхăтра, 5 – 6 çул хушшинче манăн Çĕмĕрлене çитсен вагон çине ларас ыйту пулмарĕ, дежурнăй мана яланах пулăшатчĕ. Мĕншĕн çапла пулнине ăнлантарса парам – ха. Çĕмĕрле урлă чăнах та поездсем умлă – хыçлă иртсе каяççĕ. Çапла пулсан та вагонсем çине ларма, вĕсенче пуш вырăн пуррипе çуккине вăхăтра та тĕрĕс шута илменнине пула, питĕ кансĕр.

Поезд килсен, Володя Кинсаринпа, каяс текен çынсене тĕрткелешсе, вагона аран—аран хĕсĕнсе кĕме пултартăмăр. Çывăх тус—тăванăм мана калать: «Коля, вагон çине ларсанах эпĕ сана чăрмантармастăп, утă купи çинчи йĕп пек, тӳрех çухалатăп, мана нимĕнле кондуктор та шыраса тупаймасть. Вагона халăх лăк тулли пуçтарăнни — манăн стихия». Чăнах та, Володьăна эпĕ тек курмарăм, вăл хăш станцинче анса юлнине те асăрхаймарăм.

Каярахпа, Тури Кăмашара тĕл пулсан, Володьăпа 1945 çулхи вăхăта яланах ăшшăн аса илсе, ахăлтатса кулаттăмăр. Яш каччă пулнă вăхăтра эпир пурте телейлĕ пулнă мар—и?

Мускава ăнăçлă çитсен, Белоруски вокзалĕнче çĕнĕ пăтăрмахсем пуçланчĕç. Мускав Çĕмĕрле хули мар, кунта станцире ĕçлекенсенчен нихăшне те сăмакунпа хăналаймастăн, паллакансем тупса хăвăн ыйтăвна хăвăрт татса параймастăн. Станци вокзалĕнче кассăсем пурте хупă, билетсем сутмаççĕ, Мускавран Кенигсберга каякан поезд перронран часах çула тухать. Нумай шухăшласа тăмарăм, йывăр чăматана çĕклесе Можайска каякан шоссе енне васкарăм. Ман телее умра ЗИС—5 автомашина чарăнчĕ. Шофера ăнлантарса ыйтатăп: «Мана часрах поезд çитиччен маларах Можайскри чугун çул станцине тархасшăн илсе çитер—ха!»

Шофер, маттур, пĕр турткаланмасăр килĕшрĕ. */Хальхи вăхăтра çакăн пек ăнланакан çын тупма та, ăна кĕске вăхăт хушшинче ӳкĕте кĕртмешкĕн питĕ йывăр/.*

Водитель хăйĕн сăмахне тытрĕ. Шăп та лăп поезд чарăннă вăхăт тĕлне машинăна чугун çул станцине илсе çитерчĕ. Эпĕ малта чупатăп, вăл манăн чăматана йăтса пырать. Куçа курăннă пĕрремĕш проводница патне чупса пыратăп та вагона кĕртме ыйтатăп. Вăл хирĕçлет, юнашар тăракан вагон енне кайма сĕнет. */Каярахпа хирĕçленин сăлтавĕ паллă пулчĕ: ку спецвагон иккен. Унта 3—мĕш Белоруссии штабĕнчи запасри офицерсем вырнаçнă. Ку вагона никама та лартмаççĕ/.*

Вагон алăкне шаккарăм, пĕр майор тухрĕ. Эпĕ хам кам иккенне пĕлтерсе, офицера чăрмантарнин сăлтавне кĕскен каласа патăм. Вăл ним хирĕçлемесĕр вагона кĕме ирĕк пачĕ. Пуç çинчи чула илсе пăрахнăн хаш! сывласа илтĕм. Çав вăхăтра шофер та чăматана йăтса пырса мана пама ĕлкĕрчĕ. Ăна тав туса сăмах калама та вăхăт юлмарĕ, чăматана тытса илсен алăпа



***Разведчиксем***

сулма çеç пултартăм. Алăкран кĕнĕ самантра паровоз кăшкăртса сас пачĕ, вагон урапиисем чăнкăртатрĕç, вырăнтан тапранса çула тухрăмăр.

Халĕ те тĕлĕнетĕп. Поезда хăвалаcа 120 км хушши кайнă. Мĕнле чăтрĕ – ши ЗИС – 5 автомашина!

Çула тухнă хыççăнхи пăшăрхану кая юлчĕ. Тепĕр 2 – 3 кунтан Кенигсберга, унтан тăван чаçе çитетĕп. Хыçалта отпуск вăхăтне ирттернĕ ырă кунсем, савăннисем тата куляннă самантсем. Часах армин кулленхи йытăвĕсемлĕ пурнăç ытамне лекетĕп. Халлĕхе вагонра – ха. Хама лартнă майорпа часах пĕр чĕлхе тупрăм. Пĕр – пĕринпе сăмахланă хушăра çакна пĕлтĕм: эпĕ ертсе пыракан рота фронтăн малтанхи ретĕнче пулнă пулсан, майор вара манран инçех те мар, тылра тăнă иккен. Çапах та вăл вăхăтри фронт пурнăçне, унти событисем мĕнле черетленсе ылмашнине эпир иксĕмĕр те пĕрпек асăрхаса тăнă. Вăл мана 3 – мĕш Белорусси фрончĕн командующийĕ Черняховсий генерал мĕнле вилни пирки тĕплĕн каласа пачĕ. Эпĕ кун пирки Совинформбюро кĕскен каланипе çеç паллашнăччĕ.

Кенигсберга çитсенех майорпа сывпуллашса уйрăлтăм. Манăн телее Кенигсбергран Пиллауна транспорт çӳрессине йĕркелесе çитернĕччĕ.



*Н. А. Тувалькинпа Н. М. Адер /Тувалкин, сулахайран иккӗмӗшӗ/ юлташӗсемпе*

Халӗ килте теме те пултаратӑп. Юрӑра каланӑ пек: «Пур ҫӗрте те юлташсем, пур ҫӗрте те пур туссем».

Манӑн ротӑри «пуҫкасакансем» эпӗ каннӑ чух никама та кӳрентермен. Ним пытармасӑр тӗрӗссине калас пулсан, чӑнах та, пӗррехинче Тинӗс ҫар флочӗн гарнизон ҫурчӗ умӗнче моряксене тустарса илнӗ. Пиллаура вӑрҫӑ морякӗсен бази вырнаҫнӑччӗ. Вӗсен начальникӗ Пиллау гарнизонӗн пуҫлӑхӗччӗ.

Ку ӗҫ ҫапла пулса иртнӗ. Разведчиксем мана кун пирки кайран каласа пачӗҫ. Пӗр паллӑ ансамбль концерт пама хулана килнӗ. Гарнизон ҫуртне кӗме пурин валли те билет ҫитмен. Моряксем пӗр ҫӗре ушкӑнпа пуҫтарӑнса, умри ҫула пӳлекенсене вӑйпа сирсе ярса, зала, унтан вирхӗнсе сцена патнех ҫитнӗ, ҫапла майпа концерт кӑтартма чӑрмантарнӑ. Иккӗмӗш хутӗнче те Соловьев — Седой композиторпа Фатьянов юрӑҫ килсен халӑх нумай пуҫтарӑннӑ. Ку хутӗнче чӑрсӑр моряксен ҫулне пӳлме манӑн разведчиксене тӑратнӑ. Вӗсем пулса иртекен лару — тӑрӑва хӑвӑрт ӑнкарса илнӗ. Моряксем таран тума пӗр ҫӗре пуҫтарӑнма пуҫласанах Стаднюк старшина, Дон казакӗ моряксене саланма хушнӑ. Лешсем пӑхӑнман. Стаднюк пӑшалсенче пеме приказ панӑ. Разведчиксем, маларах калаҫса татӑлнине шута илсе, пирвай моряксен пуҫӗсем ҫийӗн тата вӗсен умӗнчи тӑракан

вырӑна, урасенчен 20 метр аяккарах, лаптӑка пеме пуçланӑ. Хӑшĕ—пĕрисем тӳрех çĕр çине выртнӑ, теприсем мулкачсем пек шикленсе вырӑнтан аяккалла тапса сикнĕ. Камӑн пурӑнас килмест? Шик туйӑмĕ кирек кама та виçене лартать. Хӑрушлӑх пулнӑ—и? Паллах. Инкек те сиксе тухма пултарнӑ. Вӑрçӑра тем те курнӑ разведчиксемшĕн ку, тĕрĕссипе каласан, ача вӑйии кӑна пулнӑ. Çакӑн пек вĕрентсе илнĕ хыççăн моряксем тек пуçтахланман.



*Николай Тувалькин Пиллау хулинче*

Кадрсен пайĕн начальникĕ патне кĕрсе, ӑна хам малтан шантарнӑ шурӑ эрех кĕленчине парса хӑвартӑм, унтан штаб начальникне курсан, чаçе йĕркеллĕ çитни пирки пĕлтертĕм. Сушников вара вӑл вӑхӑтра та отпускран таврйнманччĕ—ха.

Эпĕ кӑçал 88 çул тултартӑм. Халĕ маншӑн, унтанпа 63 çул иртсе кайрĕ пулсан та, çав асран кайми кунсем ĕнер çеç пулса иртнĕ евĕр туйӑнаççĕ. Çавӑнпа та çав пулӑмсем халĕ те куç умĕнчех, асӑмрах тӑраççĕ.*

*Майӑн 5—мĕшĕ, 2008 çул. Шупашкар хули.*

***Вырӑслараи Н. Кушманов куçарнӑ.***

***Ку калава Николай Тувалькинӑн «Пройденный путь» кĕнекинчен илсе куçарнӑ. Вӑл 2009—мĕш, 2010—мĕш çулсенче пичетленнĕччĕ, икĕ кӑларӑмне те эпĕ хатĕрлесе панӑччĕ.***

***Вӑрӑм ĕмĕр пурӑнчĕ отставкӑри гварди полковникĕ Николай Акимович. Тавах, вӑл эпир, унпа пĕр ялта çуралса ӳснĕ Николай Михайлович Адер—Тувалкинпа çине тӑрса ыйтнипе, асӑннӑ кĕнекене çырма килĕшрĕ. Кĕске вӑхӑт хушшинче ӑна алӑпа çырса хатĕрлерĕ. Хӑйне евĕр палӑк юлчĕ тӑван чӑваш халӑхĕ валли çӳлерех асӑннӑ кĕнекесем...***

## ЮРĂ ХĂНАНА ЧĔНЕТ

Чăвашсен паллă композиторĕн, Александр Сергеевич Сергеевăн пултарулăхĕ мана вăл хăй пуранна вăхăтра та интереслентернĕ, халĕ те кăсăклантарать. Творчество çынниие çут тĕнчере пурăннă чух çывăх юлташĕсем те тивĕçлипех хакламанни пирки Иван Ахрат хăйĕн «Юрламасăр чун чăтмасть» очеркĕнче çапла çырать:

«Ун чухне, тен, эпир ăна /*А. С. Сергеева*/ тивĕçлипех хаклама пултарайман. Талант вăл çавнашкал япала: хамăр хушшăмăрта чухне палăрса та каймасть пек, вăхăт иртсен – иртсен кăна, вăл пирĕнтен уйрăлсан, аякран та аякка кайса пынăçемĕн, ÿссе, сарăлса пырать...»

Паллах, çакнашкал пĕтĕмлетÿ тунипе килĕшме те, анчах та çак шухăша, кăштах уçăмсăртарах пулнипе, хирĕçлеме те тивет. Акă мĕншĕн. Чăнах та, эпир кулленхи пурнăçра чылай япалана асăрхамастпăр, пĕр – пĕр палăрăма вăл çапла пулмалла тесе тарăн шухăшламасăрах йышăнатпăр. Творчество çыннисен ĕçĕ – хĕлĕпе те çапларах пулса тухать. Композитор е поэт пирĕнпе юнашарах пурăнать, тăван халăх валли чунне парса ĕçлет. Шел пулин те, чылайăшĕ çакна асăрхамаççĕ, асăрхасан та курмăш пулаççĕ. Ку енĕпе Иван Ахратăн пĕтĕмлетĕвĕпе килĕшме тивет. Анчах та пултарулăх çыннисен произведенийĕсене пĕтĕмĕшле хак параканни пĕр – пĕр чиновник мар – çке – ха. Вĕсем, темле тăрăшсан та, тĕрĕслĕхе пытарма пултараймаççĕ. Кун пек тума пуçлăхра лараканссен хевти те, влаçĕ те çитмест. Мĕншĕн тесен илемлĕ произведенисен чăн – чăн пĕлтерĕшне халăх çеç туллин те пур енлĕн хаклать. Унран нимĕн те пытараймăн. «Ват çерçие хывăхпа улталаймастăн» тесе ваттисем ахальтен каламан ĕнтĕ.

Кунта тата вăхăт пĕлтерĕшĕ пирки те каласа хăвармалла. Александр Сергеевăн пурăннă кун – çулне тишкерсе тухнă хыççăн, Иван Ахрат та пултаруллă композиторăн еткерлĕхĕ сăмахпа виçсен те калама çук пысăк пулни пирки асăнать. Ку, чăнах та, çапла.

Эппин, эпир те, Иван Ахрат пекех, çак шухăш патнех çитсе тухатпăр. Халăх Александр Сергеева, унăн пирвайхи юррисене итлесенех юратса та, хисеплесе йышăннă. Творчество çыннишĕн çавăн пек виçерен хакли çут тĕнчере тек нимĕн те çук.

Александр Сергеевич Сергеевпа эпĕ 1977—мĕш çулта çуркунне паллашнă. Малтанхи тĕлпулурах эпĕ ăна ачалăхри хамăн тус—юлташăн, Олег Васильевăн амăшĕ вилнĕ хыççăн, унăн чунне кăштах лăплантарас шутпа пĕр сăвă çырни пирки каласа патăм: «Çак сăвва итлесен эсир манăн анне пурăнмасть тесе ан шутлăр, вăл сывă. Кăмăлăр пулсан, итлĕр». Вăл хирĕçлемерĕ. Калас пулать, çак сăвва эпĕ хамăн тухнă пĕр кĕнекене те халĕ те кĕртмен—ха. Акă вăл:

## *АННЕ ПАТĔНЧЕ*

*Каçарччĕ эс мана, аннеçĕм,*
*Килменччĕ эп тахçантанпа.*
*Паян васкавлăн, ак, çитейрĕм,*
*Халь калаçар, эппин, санпа.*

*Масар çинче шăв—шав çук, тăплăх,*
*Йĕри—тавра çеçке, çеçке...*
*Пуç тăрринче тăри: «тăр—тăр!» — тет,*
*Анчах та эс илтместĕн—çке.*

*Сан хĕресӳ пĕччен хурланнăн*
*Пăхса ларать халь ял енне.*
*Выртатăн çав... кĕç—вĕç тăрасшăн,*
*Утасшăн пек халь çĕр çинче.*

*Паллах, епле хитре тавралăх:*
*Тӳпе кăвак, хĕвел пăхать.*
*Уй—хирсенче ĕçлет, ав, халăх,*
*Çĕн юрă—кĕвĕ шăранать...*

*Халь камăн—ха выртас килет—тĕр*
*Тупăкпала пĕрле çĕрсе?*
*Пĕр сана çеç телей пӳрмен—тĕр,*
*Пит хăвăрт кĕтĕн—çке çĕре.*

*Анчах та эп сана куратăп,*
*Каймастăн эсĕ асăмран.*
*Ак, эс ларатăн та ыйтатăн:*
*«Хăçан—ха, ывлăм, авланан?*




**Кĕнеке хуплшки***

*Мăнукăма курасшăн эпĕ,*
*Тата пăхасшăн—çке ăна.*
*Вăл çуралсан, татах хисеплĕç,*
*Туйсамччĕ, ывăлăм, çакна...»*

*— Эй, вăхăт,— эп сывлатăп ассăн,*
*Мĕскершĕн эсĕ терт яран?*
*Мĕскершĕн—ха пуçран çапсассăн,*
*Çын канăçне йăлтах вăрлан?...*

*Каçарччĕ, эс мана, аннеçĕм,*
*Васкать—çке вăхăт, каймалла,*
*Кĕтет мана çуралнă енĕм,*
*Ялйышăма та курмалла.*

*Пурнăçăмра эс ман асрах, асрах,*
*Эп килĕп сан патна татах, татах...*

Çак сăвва итлесен, эпĕ Александр Сергеевич хăвăрт хумханса кайнине, унăн куçĕсем шывланнине асăрхарăм. Вăл тепĕр хут вуласа пама ыйтрĕ. Унтан хăйĕн амăшне аса илчĕ: «Пĕлетĕн – и, – терĕ вăл, – эпĕ аннене питĕ хытă юратнă, ку туйăм манăн чĕрере халĕ те ним чухлĕ те çухалман. Эпĕ, кам хăйĕн амăшне чунтан юратать, çав çынна кирек хăçан та хисеплетĕп. Аннене юратман çын çĕршыва та юратаймасть. Валентин Урдаша халĕ те ырă сăмахпа аса илетĕп. Пĕррехинче, эпир унпа ялти клубра çынсемпе тĕл пулнă вăхăтра, вăл ял – йышпа калаçас умĕн, сцена çине тухсан, тӳрех манăн аннене хисеплесе, пурне те ура çине тăма, пĕр минут хушши шăпланма ыйтрĕ. Пĕчĕк тĕслĕх çеç. Анчах та ку вăл Валентин Урдашăн çынлăхĕ пирки, унăн чунĕ аслă пулнине пĕлтерет. Мĕншĕн тесен, çут тĕнчере аннерен хакли никам та çук...»

Халĕ вăхăт иртнĕ май, шухăшлатăп та Александр Сергеев мана çак сăвăшăнах хисеплесе, хăйĕн тусĕсен йышне кĕртнĕ пулĕ тетĕп. Пирĕн туслăх вара вăл çĕре кĕричченех упраннă. Унпа тавлашнă, хирĕçнĕ самантсем пулман. Тулли кĕрекере те

***«Чунра шăраннă юрăсем» кĕнекене /пурĕ — 224 стр./ 2003 çулта Н. Кушманов пухса хатĕрленĕ. Унта лирикăллă юрăсем, тус–юлташĕсен, тăванĕсен аса илĕвĕсем пичетленнĕ.**

пĕрле чылай ларнă. Халĕ пытарма кирлĕ мар, унпа юлашки укçа–тенкĕне те пĕр хут çеç мар пайланă. Пĕр–пĕрне хисепленин сăлтавĕ, иксĕмĕр те творчество çыннисем пулнинче ĕнтĕ. Унсăр пуçне, вăл мана хăйĕн тăван шăллĕ вырăнне йышăннă, эпĕ те çак хисепе тӳрре кăларас тесе, хам енчен мĕн тума пултарнине пурне те пурнăçлама тăрăшнă.

Композитор, ача чунĕллĕ çын пулнипе, пурне те ĕненсе хăвăрт йышăннине кура, паллах, пурнăçра чылай инкек чăтнă. Ăна, ку чăнлăха та пытарма кирлĕ мар, хăй тус тесе шутланă çыннисем те, кĕвĕçсе те тарăхса, ачаш йытă пек, вăрттăн çыртма, пĕр–пĕр меслет тупăнсанах, ура хума тăрăшнă. Чылай чухне вĕсен хура ĕмĕчĕсем пурнăçланнă. Пултаруллă композитор вара тарăхса чунне çунтарнă, кăштах лăпланас тесе, эрехре те çăлăнăç тупма тăрăшнă. Вăл пурăннă вăхăтра çак симĕс çĕлен талантлă çынсене пĕтермелли, вĕсен çул–йĕрне пӳлмелли чи шанчăклă капкăн пулнă...

Тулли кĕрекере пĕрле ларнă тени пирки те çакна асăнса хăварма тивет. Унăн аппăшĕн хĕрĕ Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ Алевтина Павловна Порфирьева */хĕр чухнехи хушамачĕ Антонова/* манăн пулас арăмпа И. Н. Ульянов ячĕпе хисепленсе тăракан Чăваш патшалăх университетĕнче пĕрле вĕреннĕ, туслă пулнă. Эпĕ Александр Сергеевпа творчествăлла çыхăну тытнине А. П. Порфирьева, паллах, эпир мăшăрлансан çеç пĕлнĕ. Халăх юратакан композитор вара кирек хăш вăхăтра та çакă туслă, килĕштерсе пурăнакан çемьен чи хаклă хăни шутланнă.

Алевтина Павловна, уçă кăмăллă, çынна яланах ырă тума тăрăшакан хĕрарăм, хăйĕн куккăшне тăванлăх туйăмĕпе чунтан юрататчĕ. Унăн упăшки, Грида Георгиевич та, нумай сăмах ваклама юратман çӳллĕ арçын, ача чухнех нуша мĕн иккенне курса ӳснĕскер, композитор пекех, Чирĕклĕ Ямаш ялĕнче çуралнă, мĕн пĕчĕкрен ăна хисепленĕ.

Пысăк уявсенче те, канмалли кунсенче те эпир час–часах пĕрле пухăнса ларнă, вăхăта лайăх ирттернĕ. Халĕ те, композитор çĕре кĕнĕренпе самаях вăхăт иртсен те, Порфирьевсемпе çыхăну тытсах, пĕр–пĕринчен çĕнĕ хыпарсене телефонпа е тĕл пулнă чух калаçса, пĕлсех тăратпăр, пысăк уявсене яланах пĕрле паллă тăватпăр.

Нумаях пулмасть Алевтина Павловна 50 çул тултарчĕ. Эпĕ ăна халалласа сăвă та çыртăм. Акă вăл:



***А. П. Порфирьева /Антонова — сулахайра/,***
***Г. С. Кушманова /Дмитриева/***

*   *   *

*Мӗн калас сана халь, Аля?*
*Сан паян чăн—чăн уяв!*
*Аллă çул, чăнах та, паллă,*
*Чӗннӗшӗн, калатпăр: тав!*

*Ларнă май кӗрекере,*
*Утса тухнă çул—йӗре*
*Вăрттăн, тен, аса илен,*
*Савăнан е эрленен...*

*Пурăнăç çапла этемӗн:*
*Чăтмалла çав унăн тем те,*
*Çӳлти Турă çырнине*
*Тата Вăл палăртнине...*

*Эп пӗлеп: пурăннăçем*
*Юп курсан, йӳççи астиврӗн.*

*Эп пĕлетĕп: санăн тиврĕ*
*Кÿлĕнме чылай ĕçе.*

*Эсĕ çухалса каймарăн,*
*Хăв ятна çÿлте тытăйрăн.*
*Чăваш халăх шăпине*
*Мала хутăн кулленех.*

*Ик алла пĕр ĕç тесе,*
*Тăрăшрăн та хĕмленсе,—*
*Асăрхарĕç те тав турĕç.*
*Чыслă ят та санăн пур халь...*

*Çут тĕнче чĕрĕлнĕ чух,*
*Мĕн калас сана халь, Аля?*
*Малашне те пул вăй—халлă,*
*Чăваш халăхĕшĕн çун!*

*Кукку пек ĕçле, кĕреш,*
*Яту пултăр мухтанмалăх!*
*Çулсерен кĕрекере*
*Çакăн пек чыслатăр халăх!*

Эпир арăмпа малтан Шупашкарти Ленин проспектĕнче пĕр пĕчĕк пÿлĕмре пурăнаттăмăр. Александр Сергеевич пирĕн пата час—часах пырса çÿретчĕ: «Эсĕ /*арăма, Гальăна*/ манăн аппан хĕрĕ, Аля пекех», — тесе калатчĕ.

Александр Сергеевич Сергеевăн пултарулăхне хакласа кĕнеке пичетлес шухăш мана тахçанах канăç памастчĕ. Композитор хăй пурăннă вăхăтра та пĕр пĕчĕк кĕнеке çеç кăларса хăварма ĕлкĕрнĕ. Ун чухне те чăваш халăхĕ пĕтĕм кăмăлтан йышăннă юрăсене пичетлеме йывăр пулнă. Халĕ те çаплах.

Композиторăн творчествине хакланă произведенийĕсене пухнă вăхăтра эпĕ хамăн килти архиври хутсене пăхса лартăм. Ăнсăртран ман куç тĕлне радио валли тахçанах хатĕрлесе панă «Ăраскал» ятлă музыка передачин тексчĕ сиксе тухрĕ. Эпĕ ăна вуласа тухрăм та асаилÿн тĕнчине лекрĕм, куç умне тахçанхи пулăмсем—ÿкерчĕксем чĕррĕн тухса тăчĕç.

Иртсе кайнă вăхăтсем мĕншĕн питĕ те илĕртÿллĕ — ха? Вĕсем халĕ те тепĕр чух чуна ыраттараççĕ, тарăн шухăша яраççĕ, хăлхара юратнă композитор кĕвĕленĕ «Каçа юлнă куккук сасси» /*сăмахĕсем Ю. Плотниковăн*/ юрă янăрама пуçларĕ:

*Каçа юлнă куккук сасси*
*Чарăнас çук пуль, ах, чарăнас çук.*
*Эс шутланă çулсем, куккук,*
*Те иртни ман, те пуласси.*

*Ах, чĕреçĕм, чĕре çунать,*
*Курăнман çулăмпа çунать.*
*Ан авăт—ха, куккук, куккук,*
*Сан сассу мана пулăшас çук!..*

Ытла та чуна илĕртекен тата ăна пач та шеллемесĕр ыраттаракан йĕркесем — çке! Вĕсем юрă кĕввипе пĕрлешсе, çунат сарса, таçти этем ăнланма пултарайман, куçпа курма май çук асамлă, темĕнле вăрттăн вырăна, илемлĕх тĕнчине, кăвак инçетлĕхе пире илсе каяççĕ.

Çакă вилĕмсĕр юрра итлетĕн те, сăвăри юлашки йĕркесене пире Александр Сергеевич халĕ хăй каланă пекех туйăнса каять. Çан — çурăма темĕнле сивĕ сывлăшăн хумĕ пырса çапать. Вара тарăн шухăша путатăн: «Эх, ытарайми тĕнче! Сан патăнта эпир хăнара кăна çав. Вăхăт çитĕ те, эпир те, хуркайăксем пек, çула тухăпăр, ытарайми хаклă тăван çĕршывпа, чи хаклă тăван — пĕтенпе уйрăлса, манăçлăх тĕнчине кайса çухалăпăр», — тесе калас килет.

Эппин, пурăннă чух хаклă вăхăтпа туллин усă курма тăрăшасчĕ, усăсăр ирттернĕ кун — çул пирки, хамăра хамăр ÿпкелесе: «Чавса çывăх та çыртма çук»,— тесе калас марччĕ.

Эпĕ маларах «Ăраскал» музыка передачин тексчĕ пирки асăнтăм. Тен, вăл кашни вулакана килĕшмест те пуль. Ăна эпĕ малтан мĕнле çырнă, çавăн пекех пичетлеме шутларăм. Пирĕн ăрури çынсем унпа паллашсан, тен, асилĕç çав ытарайми, анчах та каялла таврăнма пултарайман вăхăтсене. Паллах, текстра юрă кĕвви янăрамасть, çапах та вăл Александр Сергеев пултарулăхне пĕлекенсене чăрмантармасть. Мĕншĕн тесен, ăна вулама пикенсенех композиторăн кĕвĕленĕ çепĕç юррисем хăлхара янăрама пуçлаççĕ.

* * *

*Шупашкар калаçать. Вăхăт ..... сехет те... минут.*
*Эфирта Александр Сергеев композитор пурнăçĕпе ĕçĕ—хĕлĕ çинчен калакан «Ăраскал» музыка передачи.*
*Авторĕ Николай Кушманов.*

Пленка. «Ăраскал» юрă. Юрă вĕçленсе пырать. Янравлăхĕ чакать. Унăн фонĕ çинче:

*«Тăван çĕршыв пурри — ăраскал,*
*Çумри савни юрри — ăраскал,*
*Çут çăлтăр пек çунни — ăраскал,*
*Юрлас юррăм пурри — ăраскал.*

Çак юррăн сăмахĕсене Валентин Урдаш поэт çырнă. Композитор кĕвĕленĕ хыççăн вăл, чăннипех те, çунат туянчĕ тейĕн, халăх хушшинче анлăн сарăлчĕ. Юрă сыннăн пуласлăхĕ телейлĕ те çутă пулассине шантарать, анчах та ăраскал çынтан хăйĕнчен те килет. Чи малтан унăн тăван çĕршывăн патриочĕ пулмалла. Çак туйăма чунра упрамалла. «Ырă çын çеç тупать ăраскал», — тенĕ юрăра.

Тăван çĕршыва юратма, ăна сыхлама, ырă та çутă пуласлăхшăн кĕрешме, таса та черчен, пĕртен—пĕр юратăва куç шăрçине хўтĕленĕ пек упрама вĕрентсе çырнă чылай—чылай юрăсем парнелесе хăварчĕ пире Александр Сергеев композитор.

1967 çулта Чăвашрадио irттернĕ чи лайăх юрăсен конкурсĕнче вăл çырнă «Шупашкарăн лăпкă каçĕсем» юрă пĕрремĕш вырăн йышăннă. Калас пулать, асăннă конкурсра профессионалсем те, хăй тĕллĕн вĕреннĕ композиторсем те хутшăннă. Александр Сергеев композитор юррисем Чăвашрадио ирттернĕ ытти конкурссенче те чи малти вырăна тухнă: 1980 çулта «Лар, аннеçĕм, юнашар», 1982 çулта «Шăматкун каçхине» юрăсем. Пирĕн республикăра çак юрăсене пĕлмен, юрламан, юратман çын çук та пулĕ. Эфирта «Шупашкарăн лăпкă каçĕсем» юрă. Сăмахĕсене Валентин Урдаш çырнă.

*Пленка. «Шупашкарăн лăпкă каçĕсем»*

1986 çулта Чăваш кĕнеке издательстви композиторăн лирикăлла юрăсенчен тăракан «Лар, аннеçĕм, юнашар» кĕнекине пичетлесе кăларчĕ. Вăл, ытти хăш—пĕр сборниксем пек, кĕнеке çўлĕкĕсенче тусан пĕрчисене пуçтармасăрах хăвăрт

саланса пётрĕ. Чăваш юррисене юратакансем ăна хапăл тусах туянчĕç.

Халĕ, радио итлекенсем, çак сборникре пичетленнĕ «Пилĕкçуллăх паттăрĕсене» тата «Шурă çӳçлĕ салтак – ветеран» юрăсене итлĕр. Сăмахĕсене Александр Галкинпа Хĕветĕр Агивер çырнă.

*Пленка. «Пилĕкçуллăх паттăрĕсене»*

*Пленка. «Шурă çӳçлĕ салтак–ветеран».*

Асăннă кĕнекере композиторăн вунçичĕ юрри пичетленнĕ. Вĕсем халăх хушшинче анлăн сарăлнă. Сăмахран, мĕн чухлĕ тунсăх, каласа пĕтермен шухăшсем, чун ыратăвĕ сисĕнет «Каçа юлнă куккук сасси» юрра итлесен. Сăмахĕсене Юрий Плотников çырнă.

*Пленка «Каçа юлнă куккук сасси».*

Александр Сергеев музыкăпа мĕн ачаран хавхаланнă. Пулас композитор Çĕрпӳ районĕнчи Чирĕклĕ Ямаш ялĕнче Павлов Сергей Павлович учитель çемйинче 1933 çулта çуралнă. Унăн ашшĕ, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен вĕренсе тухнăскер, хăй те музыкант пулнă, ачисене малтанхи музыка пĕлĕвĕсем парас пирки хытă тăрăшнă.

Пулас композитор ял пурнăçне курса ӳснĕ, пĕчĕккĕллех ĕçе кӳлĕннĕ, аслисене пулăшма тăрăшнă, çурлапа тырă вырнă, тăпачăпа авăн çапнă, ял ачисемпе выртмана çӳренĕ. Пĕчĕк Санькка, ялти яш – кĕрĕм каççерен каçхи вăййа тухсан, çывăрман, карта çине ларса, мĕн вăйă саланиччен çамрăксем юрланине итленĕ. Тепĕр чухне хăй те аслăраххисене вăйăра хуткупăс каласа ташлаттарнă е Чăваш çĕршывĕпе уйрăлакан çамрăксене салтака тухса кайиччен юлашки хут музыкăпа савăнтарнă, хурлантарнă.

Ял пурнăçне, унăн йăли – йĕркисене лайăх пĕлни, халăх кĕввисене, ташши – такмакĕсене ача чухнех ăша хывни каярахпа композитора питĕ пулăшнă. Çавăнпа Александр Сергеев юррисем халăх юррисем майлă пурне те ăнланмалла çывăх янăраççĕ. Çак шухăша Чăваш АССР халăх артисчĕ Аристарх Орлов – Шуçăм композитор та çирĕплетет. Вăл «Лар, аннеçĕм, юнашар» кĕнеке умсăмахĕнче çапла çырать: «Александр Сергеев çырнă юрăсем халăх хушшинче мĕншĕн – ха çав тери хăвăрт сарăлаççĕ? Ман шутпа, сăлтавĕ — халăх чĕрине тыткăнлакан çав юрăсен кĕвĕ çепĕçлĕхĕнче. Çав кĕвĕсем халăх ĕлĕкренех юратса юрлакан юрăсене аса

интереççĕ, вĕсемпе тачă çыхăнса тăраççĕ, çывăхланса çураласçĕ — ахальтен мар ĕнтĕ вĕсем ĕмĕрлĕхе ăшра юлаççĕ».

Акă епле çывăх халăх юррисене «Пĕрре курсах саврăм—ши» тата «Юрламасăр чун чăтмасть» юрăсем. Вĕсен сăмахĕсене Валентин Урдаш çырнă.

*Пленка «Юрламасăр чун чăтмасть».*

*Пленка «Пĕрре курсах саврăм—ши».*

Композитор хăйĕн ĕмĕрĕнче чылай çул вĕреннĕ. Вăл Çĕрпӳри педагогика училищинче, Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче, Шупашкарти Федор Павлович Павлов ячĕпе хисепленекен музыка училищинче пĕлӳ пухнă. Совет Çарĕнче салтаксен ансамблĕнче пулнă. Службăра тăнă чухне пуçласа юрăсем çырма пикеннĕ. Унăн пултарулăхне чи малтан Украинăри паллă композитор Платон Майборода асăрханă, çамрăк композитора малашне те ăнăçлă ĕçлеме, тăван чăваш халăхне çепĕç юрăсемпе савăнтарма ырă суннă. Платон Майборода шанăçне тӳрре кăларас шутпа—и, тен, Александр Сергеев чăваш юррисемпе пĕрлех вырăсла юрăсем те çырать. Вĕсене халăх килĕштерет. Унăн «Будьте спокойны мамы», «Пусть грустят березки», «Самая счастливая», «Нас породнила наша ткацкая», «Песня ветеранов войны», «Силы утрой, тракторострой», «Чебоксарский вальс», «Домостроители с песней идут», «Лагерный вальс», «Марш милиции» юррисене радио итлекенсем лайăх пĕлеççĕ.

Итлĕр, иртнĕ вăрçă ветеранĕсем, сире халалласа çырнă çак юрра. Эфирта «Песня ветеранов войны» юрă. Сăмахĕсене Михаил Дудин поэт çырнă.

*Пленка. «Песня ветеранов войны».*

Композитор пултарулăхĕнче юрату теми те тĕп вырăн йышăнать. Ăшă тунсăх, çепĕç туйăмсем çураласçĕ «Çыру çырсамăр салтаксем патне» юрра итлесен. Сăмахĕсене Юрий Семендер поэт çырнă.

*Пленка «Çыру çырсамăр салтаксем патне».*

Калас пулать, композитор Юрий Семендер поэтпа чылай юрă çырнă.

*Пленка. «Атăл куçĕ» спектакльти*

*«Çавал юханшывĕ» çинчен çырнă юрă....*

Анне! Кашнийĕншĕнех чи çывăх та хаклă çын. Композитор та хăйĕн амăшне питĕ хытă юратнă. Анне сăнарĕ, унăн ăшă кăмăлĕ, вышкайсăр юратăвĕ пире яланах чун—чĕререн

хумхантарать. Аннесен умĕнче, ку пурне те паллă ĕнтĕ, эпир ĕмĕр – ĕмĕр парăмра. Çакна Александр Сергеев яланах туйса тăнă, хăйне çутă кун парнеленĕ çынна тав туса, халăх асĕнче юлакан, халăх юратса юрлакан юрăсем çырчĕ. Анне теми сăвăçсемпе композиторсемшĕн те, писательсемшĕн те яланах çĕнĕ.

*«Чĕрере анне ялан,*
*Эп телейлĕ—çке паян.*
*Чун юратнă анне, пĕрре ман,*
*Тухас çук асăмран нихçан...»*

Эфирта «Аннене» юрă. Сăмахĕсене Александр Галкин поэт çырнă.

*Пленка. «Аннене».*

Радио итлекенсем музыка редакцине кашни эрнерех А. Сергеев кĕвĕленĕ «Лар, аннеçĕм, юнашар» юррине итлеме кăмăл туса ыйтаççĕ. Итлĕр, радио итлекенсем, хăвăрăн юратнă юррăра.

*Пленка. «Лар, аннеçĕм, юнашар».*

Пионерсемпе шкул ачисем валли çырнă юрăсенчен халĕ «Наш любимый учитель» юрра итлĕр.

*Пленка: «Наш любимый учитель».*

Ачасем пирĕн малашлăх. Вĕсен ĕмĕчĕсем çутă та пысăк:

*«Çулсем çитсен çул тытăпăр*
*Олимп вăййисене»,—*

шанса юрлаççĕ вĕсем.

*Пленка: «Пулас олимпиецсен юрри».*

Юрий Петров поэтпа композитор тачă çыхăну тытнă. Хăйсен «Куккук» юрринче вĕсем ачасене тăван тавралăха юратма, упрама, çĕнетме вĕрентеççĕ.

*Пленка: «Куккук».*

Композитор Александр Галкин поэтпа та юрă çырнă. Эфирта «Çĕмĕртсем ларсассăн çеçкене» юрă. Юрăпа ташă «Çавал» ансамбльти хĕрарăмсен ушкăнĕ юрлать.

*Пленка: «Çĕмĕртсем*
*ларсассăн çеçкене».*

Александр Галкин сăмахĕсемпе кĕвĕленĕ тата тепĕр кĕвĕ:

*Пленка: «Шупашкар вальсĕ».*

Александр Сергеев композитор пысăк ĕмĕт – шухăшпа пурăнатчĕ. Вăл чăваш халăхне татах та çĕнĕ юрăсем парнелес

тĕллевпе хавхаланса ĕçлетчĕ. Ĕçчен те сăпайлă, вăтанарах калаçакан, ытларах тус – юлташĕсене пĕр пÿлмесĕр итлекен композитора эпир, шел пулин те, текех юнашар, хамăрпа пĕрле кураймастпăр. Сарăмсăр вилĕм ăна пиртен çулталăк каярах вăхăтсăр уйăрса кайрĕ. Апла пулин те, композитор пирĕнпе пĕрле, юнашар. Вăл пире хăйĕн çепĕç те мăнаçлă юррисемпе юратма, кĕрешме, çĕнтерме, чăрмавсене пĕтерсе пыма хавхалантарать. Пĕр иккĕленмесĕрех эпир çапла калама пултаратпăр: композитор хăйĕн пурнăçне ăраскаллă ирттернĕ.

Эсир Александр Сергеев юррисенчен йĕркеленĕ «Ăраскал» музыка передачи итлерĕр.

* * *

Эпĕ Александр Сергеевăн пултарулăхĕпе тахçанах кăсăкланни пирки малтанах асăнтăм, унăн юррисене халăх хушшинче мухтаса, вĕсем çынсен куллен – кунхи пурнăçĕнче пысăк пĕлтерĕшлĕ пулни пирки те каларăм – ха. Халĕ акă кĕнеке кăларас шйту та хама канăçсăрлантарни пирки асăнтăм.

Çапах та мĕнре – ха пултаруллă композиторăн феноменĕ? Çак ыйту мана пĕрмаях интереслентеретчĕ. 1976 – 1980 – мĕш çулсенче И. Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх университетĕнче, историпе филологи факультетĕнчи чăваш чĕлхипе литератури уйрăмĕнче заочно майпа вĕреннĕ чухне те эпĕ Александр Сергеевăн творчествине тĕпчеттĕм. Хамăн диплом ĕçне çырнă вăхăтра композитор Валентин Урдашпа творчествăлла тачă çыхăну тытнине шута илсе, чăвашсен паллă поэт – юрăçăн пултарулăхне халалларăм. Ăна хÿтĕленĕ чух ĕçе лайăх паллă парса хакларĕç, уйрăм кĕнеке туса пичетлесе кăларма сĕнчĕç. Диплом ĕçĕ «В. Урдаш пултарулăхĕнчи юрă жанрĕ» ятлăччĕ. Вулакана халĕ унти хăш – пĕр сыпăксемпе паллаштарасшăн.

Хăшпĕр критиксем пĕр – пĕр поэт – юрăçăн е композиторăн пултарулăхне тĕпчесе статьясем çырнă чух ытла та ансат çул – йĕр суйласа илеççĕ те çапларах çыраççĕ: «Унăн юрри – сăввисем халăх юррисем пекех...» е çавăн евĕрлĕ сăмах çаврăнăшĕсем. Унтан сăвăсен е юрăсен ячĕсене асăнса тухаççĕ. Вара статья хатĕр тесе шутласа, хăйсен тĕпчев ĕçĕнче творчество çыннин пултарулăхне тĕплĕн тишкермесĕр маллалла нимĕн те каламаççĕ.

Эпĕ хамăн диплом ĕçне хатĕрленĕ чух урăхларах çул – йĕр

суйласа илтём, ăна виçĕ сыпăка пайларăм, унта «В. Урдашăн гражданла лирикипе юрă жанрĕ», «Юрă жанрĕнчи юрату теми», «В. Урдаш юррисен илемлĕх уйрăмлăхĕсем» тата «Поэт ăраскалĕ» ятпа çырнă темăсем пулчĕç.

Çапах та пире пĕр ыйту канăç памасть: Александр Сергеевпа Валентин Урдаш мĕнле сăлтава пула пĕр–пĕрне шыраса тупнă–ха, вĕсен туслăхĕ çулсерен вăйланса, çирĕпленсе пынă? Хуравĕ пĕрре. Çут тĕнчере хаклăран та хаклă, ылтăн–кĕмĕлрен те илемлĕрех мул тени вăл... юрă пулнăран.

Вырăссен паллă критикĕ Н. А. Добролюбов унăн пĕлтерĕшĕ, юррăн халăх пурнăçĕнчи вырăнĕ епле пулнине кăтартса çапла çырнă: «Юрă тесе пĕчĕк кăна, юрлама çăмăл тата чĕрери туйăма палăртса тăракан лирикăлла произведение калаççĕ. Юрă кашни халăхăнах пур... Пирĕн халăх пурнăçри нихăш паллă саманта та юрăсăр ирттермест: вăл юрласа савăнать те, юрласа хуйхăрать те. Сăпкари ачисене юрăпа çывăрттарса яраççĕ, каярах вĕсем те халăх юррисене юрлама вĕренеççĕ. Ял çамрăкĕсем хĕлле лармана тухаççĕ те, унта вĕçĕмĕр юрă янăрать, çуркунне çитет, ăна ялĕпе тухса кĕтсе илеççĕ, вăйă выляççĕ, чечек кăшăлĕсем тăваççĕ, юрă юрлаççĕ. Хресчен акана тухать — вăл хăйĕн ĕçне юрăпа çăмăллатать: хĕрӳ ĕççийĕнче хресченсем тырă вырма, утă çулма тытăнаççĕ — кунта та пĕрмай юрă янăрать, вĕсен ырнă шăмшакне çĕклет. Çу кунĕсем иртеççĕ–и, тырă–пулă кĕртнине уявлаççĕ–и — каллех юрă. Юрă ял халăхĕн мĕнпур ĕçĕпе çыхăнса тăрать, вăл унпа пĕрлех килйышра пурнăçа та кĕрет. Пĕве çитнĕ каччă авланма шухăш тытать те, хĕр çураçаççĕ, туй тăваççĕ — çав вăхăтшăн ятарласа хывнă юрă кĕрлесе тăрать. Тăвансемпе уйрăлнă чухне те, амăшĕ ывăлне, арăмĕ упăшкине йĕрсе хӳхлесе, юрласа ăсатать. Çын вилсен те, ăна хуйхăллă юрăсем юрласа ăсатаççĕ... Темĕншĕн чуна тунсăх пусса илет те, çавăнтах тунсăхлă юрă шăранса тухать, чĕрене савăнăç ярса илет те — вăл хавас та хастар юрăсăр ниепле те иртмест...»

Тĕплĕн, тарăннăн шутласан эпир композиторпа поэт çӳлерех асăннă темăсене çутатса пĕрле нумай юрă çырнине куратпăр.

Халăх юррин тема, шухăш, илемлĕх пуянлăхне сăнас ĕçре те марксизм–ленинизм классикĕсен искусство, литература, сăмахлăх çинчен вĕрентсе каланисене шута илмелле. «Этем пур япалана та хитрелĕх законĕсене шута илсе тăвать»,— тенĕ К. Маркс.

Çак сăмахсене вуласан, тӳрех А. Сергеева аса илетĕп. Мĕншĕн тесен, вăл куçа курăнакан хитре япалана пĕчĕк ача пек савăнса пăхса киленетчĕ. Вăл хитре, уппгласа якатнă тумпа, тап – таса кĕпе тăхăнса çӳреме юрататчĕ.

Юрă — искусство, поэзи. Ăна халăх тăвать. Вăл халăх пурнăçĕпе кун – çулне, йăли – йĕркисене, социаллă пурнăç тытăмĕн йĕркисене, çынпа çын, халăхпа халăх, этемпе çутçанталăк хушшинчи çыхăнусемпе хутшăнусене, этемĕн ĕçĕ – хĕлĕпе кăмăлне, тыткаларăшне, сăн – сăпатне, пӳсине, тумне, шухăш – ĕмĕтне илемлĕх виçипе кăтартать. Вăл — илемлĕ сăмах искусстви, халăхăн сăнарлă шухăшлавĕ. Юрă пурнăçпа кăмăла сăнарлă ӳкерчĕксемпе сăнласа, этеме халăх тытса пыракан пурнăç йĕркисене, ырă, килĕшӳллĕ тесе хаклакан хитрелĕхпе мораль нормисене пăхăнса пурăнса, телейшĕн кĕрешме вĕрентет.

Çапла вара юрă жанрĕ халăх пурнăçĕпе авалтан çыхăнса аталанса, вăй илсе пыракан жанр. Паллах, кĕвĕсĕр юрă та çук, юрă та сăмахсăр пулмасть. Вĕсем пĕр – пĕринпе курăнман çинçе – çинçе «çипсемпе» çыхăннă. Анчах çав «çипсем» нихçан татăлмалла мар çирĕп пулсан кăна юрă ĕмĕрĕ вăрăм пулать. Çавăн чухне кăна çеç халăх ăна хăйĕн уйрăлми тусĕ вырăнне йышăнать. «Сăвă — юрă чунĕ, кĕвви çуначĕ», теççĕ. Аса илер – ха, акă, чăвашсен сĕм авалтан упранса юлнă «Алран кайми аки—сухи», «Вĕç – вĕç куккук», «Упи каçми çырминчен», «Шур перчетке», «Вуник кăшăллă», «Уй варринче», «Тапăртатса тăрать тур лаши» тата ытти нумай юрăсене. Вĕсен кĕввисемпе сăмахĕсем çав тери килĕшӳллĕн çыхăннă, пĕр тĕвве пĕрлешнĕ те, ĕнтĕ çав юрăсем пĕр – пĕринсĕр пурăнма та пултараймаççĕ.

Александр Сергеевпа Валентин Урдаш çырнă юрăсем пирки те çакнах каламалла, вĕсен сăмахĕсемпе кĕввисем асамлă, çын куçне курăнман çинçе «çипсемпе» çыхăннă. Иван Ахрат асăрханă шухăш патне таврăнсан, чăнах та, унпа килĕшетĕн. Вăл чăваш юррисене хутран – ситрен пичетлесе кăларнине асăнать, çав антологире Александр Сергеевăн пилĕк – ултă юрă пурри пирки çырать:

«Пирĕн ку саманара пин таран юрă кĕвĕленĕ композиторсем те пур. Анчах *вĕсен чи лайăх юррисен шучĕ, Григорий* Хирбюннисĕр пуçне, Александр Сергеевăннинчен иртеймен...»

Юрату теми А. Сергеевăн чунне питĕ те çывăх пулнă. Унăн юррисенче сăнласа кĕвĕленĕ юрату именчĕклĕ те çепĕç тунсăхпа

палӑрать. Ку вӑл пурнӑҫра А. Сергеев хӑй те ӑтанчӑк та сӑпайлӑ ҫын пулнипе ҫыхӑннӑ ӗнтӗ. Ҫакӑ вара унӑн пултарулӑхӗнче туллин палӑрнӑ. Тӗслӗх шыраса ытлашши пуҫа ватар мар – ха. Умрах композиторӑн «Лар, аннеҫӗм, юнашар» кӗнеки. Пичетленнӗ юррисем пурте тенӗ пекех юрату темипе ҫыхӑннӑ. Вӗсен ячӗсем те пире ҫакӑн ҫинченех калаҫҫӗ: «Пӗрре курсах саврӑм – ши?», «Каҫа юлнӑ куккук сасси», «Шӑматкун каҫхине», «Эсӗ — манӑн чӗрере», «Юрламасӑр чун чӑтмасть», «Шупашкарӑн хӗрӗсем», «Санӑн чӳречӳ умӗнче», «Эп ялан вунҫиччӗре» тата ытти те.

Юрӑ ҫын чӗринче ӑшӑ туйӑмсем ҫуратать. Композитор этемӗн интимлӑ сисӗм – туйӑмне лайӑх та ҫивӗччӗн ӑнкарса илме пӗлес тӗлӗшпе ҫав тери ӑста.

Асӑннӑ сӑвӑ – юрӑри йӗркесем те халӑх юррисене ҫывӑх тӑраҫҫӗ, хӑйсен мелодикипе, рефренӗсемпе авалхи юрӑсем енне туртӑнаҫҫӗ. Халӑх вара иртнине хӑйӗн историйӗ вырӑнне хурса упрать, ӑна ҫӗнӗлле, ырӑпа асилтерекене тав тӑвать, урӑхла каласан, хӑйӗн ҫамрӑклӑхӗпе, юратӑвӗпе тепӗр хут тӗл пулать, иртни урлӑ хальхи савӑнӑҫа тупать.

Тӗлӗнмелле, тӗнче литературинче юрату ҫинчен пӗтӗмпех каланӑ пек туйӑнать тепӗр чухне. Анчах та юратӑвӑн тем чухлӗ вӑрттӑнлӑх пур иккен, вӗсен кашнинех хӑйӗн канашӗ, хӑйӗн хуйхи – суйхи, хӑйӗн телейӗ, хӑйӗн чун – чӗрене килентерекен техӗмлӗ шӑрши пур.

Юрату этем чун – чӗрине хавхаланма, ӗмӗтленме, пурнӑҫра вӗҫӗмсӗр савма чӗнекен паха туйӑм. Ҫавӑнпа та вӑл илемлӗ литературӑра та, музыкӑра та яланах вилӗмсӗр тема пулнӑ, халӗ те ҫаплах. Ҫӗр ҫинче этем ӑрӑвӗ аталаннӑ чухне вӑл малашне те ҫапла пулӗ.

*Хӗвел ансан,*
*Вӑйӑа тухсан,*
*Ӑш ҫунать те, ҫын курмасть.*
*Купӑс тытсан,*
*Сана курсан*
*Юрламасӑр чун чӑтмасть.*

*Эс те шӑпчӗк,*
*Эп те шӑпчӑк,*
*Юрату юрлаттарать.*

*Юрату юрлаттарать те*
*Мăшăра çунат парать.*
*/«Юрламасăр чун чăтмасть». Сăвви В. Урдашăн./*

Композитор пĕр тĕлпулура мана «Пĕрре курсах саврăм – ши» юрра мĕнле тата хăш вăхăтра çырни пирки каласа панăччĕ. Вăл ун чухне пĕрремĕш арăмĕпе уйрăлнă иккен, вара çапла пулса тухнăшăн çав тери хытă куляннă:

«Ниçта кайса кĕрейместĕп, ăш вăркать, ниепле те лăпланаймастăп, йĕри – таврари çынсен, çутçанталăкăн илемĕ мана ним чухлĕ те хавхалантармасть. Мĕнле майпа канăçа тупмалла, епле хамăн пуç çине йăтăнса аннă хуйха – суйха сирсе ямалла? Кĕтмен çĕртен çак кĕвĕ çуралчĕ. Çак юрра В. Урдашпа кĕске самантрах çыртăмăр. Вара ăна юрласа ăш вăрканине пусараттăм, чун ыратăвне кăшт та пулин сиреттĕм...»

Юрăсен илемлĕх уйрăмлăхĕсем пирки татах сăмахлар – ха. Паллă ĕнтĕ, сăвă чĕлхи çын шухăшне сăнарлă уçса памалли меслетсенчен пĕри шутланать. Вăл йĕркеллĕн черетленсе пыракан япаласенчен тăрать. Çакăнта ĕнтĕ унăн тĕп уйрăмлăхĕ. Черетленсе пыракан сăвă йĕркисем хыçĕнче яланах чарăну палли пур. Çав чарăну палли кашни йĕрке хыççăнах пулни пирки сăвă чĕлхин ритми тата та ытларах палăрать. Александр Сергеев Валентин Урдашпа çырнă пĕр юрăри сăвă йĕркисене чăваш халăх юррипе танлаштарар – ха:

*Ир те тăман, каç та тăман,* 8
*Шур мулкачă ăçта–ши?* 7
*Паян хуйăх, ыран асап,* 8
*Ирĕк пурнăç ăçта–ши?* 7
*/Чăваш халăх юрри/*

А. Сергеевпа В. Урдашăн юрри:

*Хĕвел ансан, вăйăа тухсан,* 8
*Ăш çунать те çын курмасть.* 7
*Савни тухсан, купăс тытсан,* 8
*Юрламасăр чун чăтмасть.* 7
*«Ямб» виçи. «Юрламасăр чун чăтмасть».*

Ку сăвăсенче сакăр тата çичĕ сыпăклă йĕркесем черетленеççĕ, çавна пула чĕлхере ритм пурри сисĕнет. Йĕрке вĕçĕнче тăракан чарăну палли унăн вăйне татах ўстерет.

Чăваш халăхěн сăвă чěлхин ритмě юрă содержанийěпе питě тачă çыхăнать. Александр Сергеевпа Валентин Урдаш çырнă юрăсенче те çавах. Акă, илер — ха вěсен «Пěрре курсах саврăм — ши?» юррине:

*Сад пахчинчи сар чечекне* 8
*Хитре тесе татрăм—ши?* 7
*Леш кассинчи сар ачине* 8
*Хитре тесе саврăм—ши?* 7

Ку тěрлě сыпăклă сăвă, халăх сăмахлăхне питě те çывăх тăрать. Сăвăри йěркесене вуласан, сăнарпа пуплев паралеллěхě çинче чарăнса тăма тивěç. Малтанхи икě йěркине 1 — мěш йӳн /*звено*/ теме пулать, юлашки икě йěрки 2 — мěш йӳн, юлашки йӳнě пěрремěшне анлăлатать, ăна туллинрех ăнланма пулăшать. Чăваш юррисенче икě йӳнлě сăвăсен композици тытăмне сăнлăхпа пуплев паралеллěхě /*вырăсла: образно—синтаксический паралеллизм*/ теççě. Кун пирки Урдаш сăввисем çинчен те çавнах каламалла. Çакă ăнланмалларах пултăр тесен чăваш юррисене илсе пăхар — ха:

*Шурăмпуçсем килет, ай шуралса,*
*Шур чатăр карса парса чарас çук;*
*Хěвел тухать, ай, хěрелсе,*
*Хěрлě чатăр карса чарас çук,*
*Манăн каяс вăхăт çитет—çке,*
*Пур тăван та йěрсе чарас çук.*

Кунта та çавах, 2 — мěш йӳн пěрремěшне туллинрех ăнланма пулăшать. Калас пулать, А. Сергеевпа В. Урдаш юррисенчен чылайăшě икě йӳнрен тăраççě.

Юрăсенче час — часах хушса юрламалли йěркесем пулаççě. Хушса юрламаллисем е пěр йěркерен, е тăвата йěркерен, сахал чухне икě — виçě йěркерен тăраççě.

Тăвата йěркеллě хушса юрламалли:

*Шăнкăр кăна шăнкăр шыв юхать,*
*Шăнкăрч та чěппи, ай, шыв ěçет.*
*Ай—хай улма сачěсем те,*
*Юрлаччăр—и кайăксем.*
*Юрлаччăр—и кайăксем те*
*Иртет çамрăк ěмěрсем.*
*/Чăваш халăх юрри/.*

Александр Сергеевпа В. Урдашăн:

*Ма хитре—ши Шупашкар урамĕ*
*Çăлтăрсем каçхи вăййа тухсан?*
*Ма хитре—ши Шупашкар урамĕ*
*Сар хĕрсем юрла—юрла утсан?*
*Ма хитре—ши Шупашкар урамĕ,*
*Сар хĕрсем юрла—юрла утсан?*
*/«Ма хитре—ши Шупашкар урамĕ?»*

Композиторпа поэтăн юррисенчи шалти рифмăсене палăртса хăвармалла. В. Урдашăн пултарулăхне сăнакансем пурте: «Мĕншĕн—ха унăн сăввисене композиторсем юрра хываççĕ, халăх та юратса юрлать?»— тесе калаççĕ. Анчах та халиччен пĕри те поэтăн сăввисенчи шалти рифмисем пирки сăмах тапратман—ха. */Эпĕ хамăн диплом ĕçĕнче çавнашкал чылай тĕслĕх илсе палăртрăм. Кунта А. Сергеевпа çырнă юрăсене çеç илсе кăтартатăп/.*

*Эс те чечек, эп те чечек,*
*Ма ик чечек уйрăм—ши?*
*Эс те пĕччен, эп те пĕччен,*
*Ма ик чĕре уйрăм—ши?*
*/«Пĕрре курсах саврăм—ши?»/*
*Хĕвел ансан,*
*Вăййа тухсан*
*Ăш çунать те, çын курмасть.*
*Купăс тытсан,*
*Сана курсан*
*Юрламасăр чун чăтмасть.*
*/«Юрату юрлаттарать»./*

Çакăнта илсе кăтартнă тĕслĕхсем пире икĕ пултарулла çын мĕншĕн пĕр—пĕрне хисеплесе пурăннин сăлтавĕ пирки калаççĕ. Вĕсем иккĕшĕ те хăйсен кулленхи ĕçĕнче пысăк ăстаçăсем пулнă. Поэтпа композитор творчество лаççинче шăкăл—шăкăл калаçса, пĕр чĕлхе тупса ĕçленĕ. Вĕсен юррисене халăх кăмăлласа йышăннин тĕп сăлтавĕ, теори тĕлĕшĕпе, эпир илсе кăтартнă тĕслĕхсемпе çирĕп çыхăннă. Çавăнпа та Валентин Урдаш вилсен Александр Сергеев хăйне тăлăха юлнă пĕчĕк ача пек туйнă.

* * *

Иван Ахрат хӑйӗн очеркӗнче композиторӑн арӑмне асӑнать. Вӑл Альбина ятлӑ вырӑс хӗрарӑмӗччӗ, тулли кӗлеткеллӗ хитре майраччӗ. Шел пулин те, вӗсен ҫемйи хӑвӑрт арканчӗ. Сӑлтавӗ пурнӑҫ ҫине иккӗшӗ те пӗр пек пӑхманнинче, Альбинӑн пӗлӳ шайӗ ҫителӗклӗ пулманнинче тесе шутлатӑп. Александр Сергеевич пӗрле тӗл пулса калаҫнӑ вӑхӑтра ҫапларах каласа паратчӗ: «Вӑт пыр та калаҫ ҫав хӗрарӑмпа, пӗр – пӗр концерта илсе кайсан, вӑл, манӑн юрӑсене юрланӑ чух, хӗвелҫаврӑнӑш шӗкӗлчесе ларать...»

Арӑмӗ, чӑнах та, сӑнпа чиперччӗ ӗнтӗ. Унпа композитор тусӗсем умӗнче мухтанса илме те юрататчӗ: «Манӑн арӑм хӑех *илемлӗ музыка...» Анчах та ку ҫителӗксӗр – ҫке. Мӑшӑр тени* сӑнпа кӑна мар, чунпа та хитре пулмалла – ҫке, упӑшкине унӑн ҫур сӑмахранах ӑнланмалла. Чӑвашсем ахаль каламан – ҫке: «Ҫемьере пӗр ҫӑвартан сурса пурӑнмалла» тесе.

Укҫа – тенкӗ ҫитмен самантсенче вӗсен хушшинче час – часах хирӗҫӳсем сиксе тухатчӗҫ. Ҫавнашкал самантсенче Альбина хӑй вырӑс пулнипе мухтанса, упӑшкине «чувашленок» тесе йӗкӗлтесе вӑрҫнисем тӑтӑшах пулнӑ.

Малтанах вӗсем Шупашкарти Граждански урамӗнче тимӗр – тӑмӑр изделисем туса кӑларакан заводран инҫех те мар вырнаҫнӑ икӗ хутлӑ ҫуртра пурӑнатчӗҫ. Хваттерӗнче пурӑнма условисем япӑхрахчӗ ӗнтӗ. А. Сергеев хӑйӗн ыйтӑвне яланах хӑвӑрт татса пама пултаратчӗ, ӑна ҫӳлте ларакан пуҫлӑхсем пурте тенӗ пекех хисеплетчӗҫ. Ҫӗнӗ, виҫӗ пӳлӗмлӗ хваттере кӗске вӑхӑтрах мӗнле илни пирки вӑл мана ҫапла каласа панӑччӗ:

«Чӑваш ССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Председателӗ патне кӗме тесе ҫыру ҫырса патӑм та, вӑл мана нумай кӗттермерӗ, йышӑнчӗ.

*/Калас пулать, кун пек самантсенче композитор хӑйӗн ыйтӑвӗ пирки тӗплӗн, кӗскен те ӗнентерӳллӗн ҫырса пама пӗлетчӗ. Ҫӗнӗ ҫемье ҫавӑрнӑ вӑхӑтра вӑл нумай ачаллисен йышне кӗнӗ, ун пек категориллисене черетсӗрех хваттерпе тивӗҫтернӗ./*

*Семен Матвеевич Ислюковран тӳрех: «Мана хваттер* парӑр – ха тесе ыйтаймастӑн—ҫке». Эпӗ В. Урдаша аса илтӗм. Вӑл мана хӑй Семен Матвеевич патӗнче пулнӑ чух унпа еплерех калаҫнине каласа панӑччӗ: «Ҫемен, манӑн ниҫта та пурӑнма *май ҫук, пулӑш...» Поэт Семен Матвеевичпа сӑмахланӑ чух*

нихăçан та хăйне вырăсланса кайма тăрăшакан чăвашсем пек тыткаламан, сăмаха кĕскен, виçеллĕн, ялти пек уçăмлăн чăвашла çеç каланă. Йăпăлтатман. Хăйне мĕн кирлĕ, çавна ыйтнă. Хăть мĕнле пуçлăх пулсан та, ун умĕнче ыйту палли пек авкаланман, чиновниксем умĕнче хăйне вĕсемпе пĕр тан тытнă. Эпĕ те çапларах калаçма шутларăм, анчах та манăн сăмахсем Урдашăнни пек мар, çурри чăвашла, çурри вырăсла пулчĕç: «Эпĕ, Семен Матвеевич, Александр Сергеев композитор. Хăй вăхăтĕнче эпир «покойнăй» Урдаш поэтпа чылай юрă çырнăччĕ те...» Çакăн пек калама ĕлкĕртĕм çеç, Семен Матвеевич мана тӳрех пӳлсе хучĕ: «Пĕлетĕп, сире лайăх пĕлетĕп, анчах та Эсир йăнăш каларăр: Валентин Урдаш покойнăй поэт мар...» Унтан ашшĕ хăйĕн ывăлне кăштах вăрçнă пек: «Хваттерне сире парăпăр – ха, анчах та унчченхи пек пулса тухмĕ – ши, кăштах вăхăт иртсенех çакнашкал ыйтупа ман пата тепре килмĕн – ши», — тесе каласа хучĕ. Эпĕ тарласа кайрăм. Вăт мĕнле ăслă çын, пурне те витĕр курать, тахçанхисене те йăлтах астăвать...»

А. Сергеев хăйĕн арăмĕн пĕлӳ шайне ӳстерес тесе ăна педагогика училищине те вĕренме кĕме пулăшрĕ, ахаль рабочи çеç пулса ĕçлекенскерне пурнăçра нумай çăмăллăхсем туса пама тăрăшрĕ. Анчах пурте харама кайрĕ. Вăл каллех урамра тăрса юлчĕ. Тĕрĕссипе каласан, А. Сергеев Шупашкарта пурăннă чух миçе хваттер илнине хăй çеç пĕлетчĕ ĕнтĕ...

Эппин, юрă теми патне таврăнар – ха.

Александр Сергеевăн юррисене халăх кăмăлласа йышăнни пирки эпир малтанах асăннăччĕ. Мĕнре унăн вăрттăнлăхĕ? Мĕншĕн унăн юррисем халăх хушшинче питĕ те анлă сарăлнă?

Пирваях кунта вăл поэтсен сăввисене суйласа илме пĕлнинче. Унпа пĕрле юрă çырнă сăвăçсем те пурте çакна палăртаççĕ. Вăл хăй те поэт чунĕллĕ çынччĕ, сăвăçсенчен хытă ыйтатчĕ. Хăйне тивĕçтерекен сăвăсем тупаймасан юрăсен текстне, уйрăмах В. Урдаш вилнĕ хыççăн, чылай чухне хăех çыратчĕ. Тĕрĕссипе каласан, вăл поэтсемпе хăш чухне хирĕçсе те каятчĕ. Астăватăп – ха, пĕррехинче Ю. Семендер поэтпа Н. Терентьевăн «Атăл куçĕ» пьеси валли темиçе юрă çырчĕ. Пирвайхи юррин тексчĕ ăна килĕшнĕ, «Индирăпа Ипат Ипатьевич юрри», «Браконьер юрри», хор юрлакан «Атăлпа Çавал пĕрлешнĕ чух» юрăсен тексчĕсем ăна тивĕçтермен. Юрий Семендер поэтăн, те вăхăчĕ сахал пулнă, те урăх сăлтав, вăл

юррӑн пӗр тексчӗнче «хатар» сӑмахпа усӑ курасшӑн пулнӑ, ӑнсӑртран /*те ҫак сӑмахах пулнӑ, те урӑххи, Ю. Семендер хӑй лайӑх пӗлет ӗнтӗ*/ ку сӑмах Н. Ашмарин 17 томлӑ словарӗнче пурри пирки каланӑ. А. Сергеев поэта ӑнланайман. «Театра курма пыракан ҫынсен вара кашнийӗнех Н. Ашмаринӑн словарьне хӑйсемпе илсе пымалла – им – ха?» — тесе тарӑхатчӗ. Халӗ шухӑшлатӑп та тӗлӗнетӗп Александр Сергеев Юрий Семендерпе пӗр чӗлхе тупайманниччен. Мӗншӗн тесен Ю. Семендер чӑваш композиторӗсемпе халӑх валли мӗн чухлӗ лайӑх юрӑ ҫырнӑ? Ҫак тӗслӗх пире мӗн ҫинчен калать – ха? Композитор юрӑсен тексчӗ лайӑх, кӗвӗпе килӗшӳллӗ пултӑр тесе ҫине тӑратчӗ. Ҫӳлерех асӑннӑ юрӑсен текстне вара эпир композиторпа пӗрле ҫыртӑмӑр. Кайран мана кунашӑн: «Эсӗ плагиат, Ю. Семендерӗн сӑввисене вӑрланӑ» тесе киле пӗр хӗрарӑм, хӑйӗн ятне асӑнмасӑр, шӑнкӑравлани те пулчӗ. Тавах Турра, манӑн архивра А. Сергеев хӑй вӑхӑтӗнче ҫырса хӑварнӑ заявленин копийӗ пур.

Композитор, чӑнах та, малтанах пулас юррӑн кӗввине шыраса тупатчӗ. Кун хыҫҫӑн вара унӑн чӑн – чӑн нуши пуҫланатчӗ: «Кама сӑвӑ ҫыртармалла?»

«Сарӑ тулӑ вырма тухар – и» юрӑ та пирӗн ҫапларах пулса тухрӗ. Ӑна вӑл малтан Николай Симунов писатель – поэтпа, хушса юрламаллин текстне хӑех ҫырнӑ, ӑна Г. Ефимов поэта кӑтартса пӑхнӑ. Лешӗ текста тӳрех пӑрахӑҫланӑ та: «Мӗн эсӗ, поэтсем тупаймастӑн – им, кай Василий Кервен е Николай Кушманов патне. Вӗсем ҫамрӑк, санӑн вӗсемпе ӗҫлемелле», — тесе каласа хунӑ. Эпӗ ун чухне «Коммунизм ялавӗ» хаҫатра ӗҫлеттӗм. А. Сергеев эпӗ ларакан пӳлӗме хашкаса чупса кӗчӗ те: «Шӑллӑм, пулӑш, ҫунатӑп, пӗр – ик кун хушшинче хӑть вил, санӑн пулас юррӑн текстне ҫырмаллах...» Унтан вӑл мана Н. Симунов ҫырнӑ сӑвва кӑтартрӗ. Хамӑн ӑшра шухӑшлатӑп: «Татах мана ку пӗр – пӗр пӑтӑрмаха сӗтӗрсе кӗрет...»

Хирӗҫлеме, вӑхӑт сахал тесе ӑнлантарма тӑрӑшатӑп. Кӑлӑхах, Александр Сергеевич пӗрре шутларӗ – тӗк, унтан пӗр шит те чакмасть, хӑйӗн ӗҫне вӗҫне ҫитеретех. Текста вулатӑп:

*Кӗр–кӗрлет колхоз уй–хирӗ,*
*Ӗҫҫинче юрлать чӗре...*

«Ку йӗркесене хамах ҫыртӑм, виҫҫӗмӗшпе тӑваттӑмӗш йӗркисем Николай Симуновӑн», тет вӑл.

Г. Ефимов, пирĕн пултаруллă аксакал, тĕрĕсех асăрханă, вĕсем юрă тексчĕпе ниепле те килĕшсе тăма пултараймаççĕ тесе шухăшлатăп. Унтан пуçра, хам та сисмен, çакăн пек йĕркесем çуралчĕç:

*Куç тулли пуянлăх пирĕн,*
*Тавтапуç тăван çĕре!*

Вăт ку лайăх!— кăшкăрса ячĕ савăннипе Александр Сергеев, унтан юрласа ячĕ. Хăйне сăмахĕсем килĕшрĕç. Анчах та кăштах иккĕленет те вăл.

Халех тухса ан кай, часах килетĕп! терĕ те, малтан пӳлĕме мĕнле кĕнĕ, çавăн пекех хăвăрт тухса кайрĕ.

«Ăçта васкать – ха ку?»— тесе шухăшласа ларса юлтăм.

Нумай та вăхăт иртмерĕ, А. Сергеев таврăнчĕ. Алăка уçнă – уçман:

Сăввăн малтанхи тексчĕ, пуçламăшĕ лайăх, Г. Ефимов ырларĕ, мана санпа пĕрле ĕçлеме сĕнчĕ,— тет.

Асăннă юрра эпир хăвăрт çыртăмăр. Унăн кайранхи шăпи те интереслĕ пулчĕ.

Тепĕр эрнерен тĕл пултăмăр. Александр Сергеевич мана çапла каласа пачĕ:

«Çулсерен республикăри хулапа район центрĕсенче ĕçпе юрă уявне ирттерни пирки эсĕ пĕлетĕн ĕнтĕ. Композиторсем унта пурте хутшăнаççĕ, юлашки çулсенче хăйсем çырнă юррисене правительство шайĕнчи комиссире пăхса тухаççĕ. Эпĕ те кайрăм çав комиссин ларăвне. Черет çитрĕ те кăтартрăм Валентин Урдашпа пĕрле çырнă «Шупашкар хĕрĕсем» юрра. Комиссиринчи пĕр паллă композитор: «А – а, хăй тĕллĕн вĕреннĕ композитор Сергеев – и ку»,— тесе каласа хучĕ.

*/Кунта çакна каласа хăвармалла. Александр Сергеевич хăйне «хăй тĕллĕн вĕреннĕ композитор» тесе каланишĕн кӳренетчĕ. Мĕншĕн тесен, вăл хăйĕн хакне, сумлă композиторсенчен хăй пĕрре те кая пулманнине лайăх ăнланатчĕ, анчах та мĕн тăвăн, унăн пурнăçра консерваторинче пĕлӳ илме май пулманнишĕн чылай чухне нуша курма тиветчĕ.../*

Тимофей Фандеев çав композитора тӳрех пӳлсе хучĕ:

«Александр Сергеев пирĕнне пĕр танах, унăн творчестви çӳллĕ шайра пулнине пирĕн йышăнмаллах, — тесе каларĕ. Унтан ним те пулман пек:

Саша, паллаштар – ха пире хăвăн ĕçӳпе»,— терĕ.

Комисси членĕсем, вĕсен ертӳçи санăн ентешӳ Николай Васильевич Пыркинччĕ, манăн юрăпа паллашрĕç те унпа усă курма май çуккине тата хăйсем мĕншĕн хирĕçленин сăлтавне пĕлтерчĕç. Каярахпа хам та ăнлантăм: тĕрĕсех ĕнтĕ, «Шупашкар хĕрĕсем» юрăри сăвă тексчĕ хула çыннисем çинчен çав. Ăна районти хор коллективĕсен юрламалла — çке, вĕсем вара пурте тенĕ пекех уй — хирти, çĕр çинчи ĕçпе çыхăннă. Ним тума та çук, каялла тухса кайма шутланăччĕ çеç, тӳрех санпа пĕрле çырнă «Сарă тулă вырма тухар — и юрра» аса илтĕм, юрать — ха сăвă тексчĕ те, нотисем те папкăра пур.

«Манăн тата тепĕр юрă пур, итлесе пăхма кăмăл пур — и?» — тесе ыйтатăп комисси членĕсенчен.

Килĕшрĕç. Сăвă текстне Н. В. Пыркина, нотине Тимофей Фандеева патăм, хам пианино умне лартăм.

Н. В. Пыркина сăвă тексчĕ тӳрех килĕшрĕ. Вăл эс çырнă:

*Куç тулли пуянлăх пирĕн,*
*Тавтапуç тăван çĕре! —*

тесе çырнă йĕркесене сасăпах вуласа пачĕ. Комисси членĕсене, композиторсене те юррăн кĕвви пите килĕшрĕ, ăна пысăк хак парса йышăнчĕç...»

Каярахпа эпир пĕрле çырнă сăвă текстне Аристарх Иванович Дмитриев вырăсла куçарчĕ, кайран ăна ĕçпе юрă уявĕнче пĕтĕм республика юрларĕ. Çав юрă халĕ Чăваш радио фондĕнче упранать.

Çавăн пек çынччĕ вăл Александр Сергеев. Хăй пуçланă ĕçе вĕçне çитеретчĕ, хăй килĕштерекен поэтсене ĕçлеттерме, вĕсенчен хытă ыйтма пĕлетчĕ. Теприсем кӳренетчĕç те пулĕ, анчах та вăл хăй нихçан та çилле хăваласа çӳреместчĕ. Хытă ыйтнин сăлтавĕ паллă ĕнтĕ: юрă ĕмĕрсем валли юлакан палăк — çке.

Композитор хăйĕн юррисене Халăх пултарулăх çуртĕнчи е Композиторсен союзĕнчи канашлусенче йышăнса çирĕплетсен, вĕсене тӳрех паллă юрăçсене е хор коллективĕсене юрлаттарма тăрăшатчĕ. Çак ĕçе пурнăçланă чухне васканин сăлтавĕ маншăн ун чухнех паллăччĕ. Мĕншĕн тесен, вăл час — часах пурнăçра хăй килĕштерсе пăрахнă хĕрарăмсене пула, лешсем унран мĕн кирлине илсен /чылай чухне хваттерĕсене хăех илсе парсан та/, урамра пĕр — пĕччен тăрса юлатчĕ. Тепĕр çын кун пек самантсенче судсем тăрăх çӳресе малтан савнă çыннин е хăйĕн нервисене пĕтерет, тура вырăнне хунă мăшăрне тикĕтпе

варалать. А. Сергеев нихҫан та кун пек хӑтланмастчӗ, пур – ҫук япалине пӗчӗк чӑматана, чи хаклине – аккордеонне алла илетчӗ те шӑв – шавсӑр тухса каятчӗ. Хӗрарӑмсем ӑна хытӑ юрататчӗҫ пулмалла. Мӗншӗн тесен, ӑҫта, кампа ҫӗр каҫас ыйту ӑна питех хумхантармастчӗ.

Мулшӑн, пуянлӑхшӑн вӑл нихҫан та тӑрӑшман. Укҫа ыйтӑвне хӑвӑрт татса паратчӗ. Вӑл ку енӗпе ӑҫта, кампа тӗл пулса калаҫса нухрат тупмаллине питӗ те лайӑх чухлатчӗ.

«Коля кум, паспорту ҫумӑнтах – и?» — ӗҫе шӑнкӑравласа ыйтать вӑл пӗррехинче.

Хӑй вӑхӑтӗнче вӑл манӑн ывӑлӑн хӗресашшӗ пуласшӑнччӗ, чиркӗве кайма та хирӗҫ марччӗ. Ун чухне ку енӗпе хытӑ хӗстеретчӗҫ. Анчах та ку ӗмӗт пурнӑҫланаймарӗ.

«Ҫумрах – ҫке».

«Эппин, К. Иванов урамӗнче вырнаҫнӑ суту – илӳ техникумӗнче паян тӗл пулатпӑр. Манса ан кай, паспортна хӑвӑнпа пӗрле ил»,— тепӗр хут асӑрхаттарать вӑл мана.

Кӑнтӑрла тӗлпултӑмӑр. Вӑл мана шурӑ хут листи тыттарать, директор ячӗпе заявлени ҫырма хистет. Эпӗ хут ҫинче музыка инструменчӗсене юсакан мастер пулса тӑратӑп. Техникумӑн те роялӗ, те баянӗ ҫӗмӗрӗлнӗ. Чӑннипе, вӗсене эпӗ куҫпа та курман. Александр Сергеевич каласа панӑ тӑрӑх, вӑл вӗсене хӑех юсанӑ, анчах та кунта штатра тӑнине пула ӑна пӗр пус та парасшӑн мар. Ун чухне вӑхӑчӗсем ҫапларахчӗ ҫав. Директор патне, заявлени ҫырсан, кӗретпӗр те, Александр Сергеевич мана техникумӑн ертӳҫи умӗнче ҫине тӑрсах мухтать: «Сан пек мастер Шупашкарта ҫук, Тимофей Фандеев ку ӗҫре пултаруҫӑ, эсӗ унран та маттуртарах, санӑн «музыкальный слух» питӗ вӑйлӑ аталаннӑ»,— тет. Хӑть ҫӗр тӗпне анса кай. Пурнӑҫра улталама хӑнӑхман та, мӗн тӑвӑн, аслӑ тус – юлташӑма пулӑшмалла, ӑна укҫа – тенкӗллӗ тумалла. Хама хам лӑплантаратӑп тата: вӑрламастпӑр – ҫке, ӗҫне пурнӑҫланӑ, баянне те, роялне те юсанӑ.

Директор патӗнчен тухатпӑр та бухгалтерине, унтан кассир патне пыратпӑр. Вӗсен умӗнче те Александр Сергеевич мана пикенсех мухтать. Лешсем чӗнмеҫҫӗ. Часах алла укҫа кӗрет. Ӑна илес умӗн тахӑш вӑхӑтра композитор тилӗ пек айккинелле шӑвӑнать. Урамра тӗлпулсан, сӑлтавне калать: «Хӑрарӑм, эсӗ тӳрӗ кӑмӑллӑскер, мана ҫынсен умӗнчех илнӗ укҫана аларан тыттарасран. Атя, юнашарти пӗр – пӗр ҫурт подъездне».

Кĕретпĕр те, эпĕ ăна тин çеç илнĕ укçана йăлтах аларан тыттаратăп. Вăл мана вăйпах, илнĕ укçан пĕчĕк пайне парасшăн. Эпĕ хирĕçлетĕп. Вăл пурĕпĕр хăй шутланине тăвать. Иксĕмĕр те кăмăллă. Укçа пур. Александр Сергеева тин çеç илнĕ укçа сахал пек туйăнчĕ пулмалла. Унăн пуçне пĕр шухăш кĕчĕ:

— Эк—кей! Мансах кайнă, манăн çак подъездрах пĕр хваттере кĕмеллеччĕ—çке, унта пианино юсамалла.

Те иккĕмĕш, те виççĕмĕш хута хăпаратпăр. Александр Сергеевич хваттер шăнкăравĕн кнопкине пусать. Часах алăк уçăлса каять те, пире шала кĕме чĕнеççĕ. Кил хуçи хĕрарăмĕ умĕнче композитор мана татах музыка инструменчĕсене юсакан мастер туса хучĕ. Пианино умне пыратпăр. Эпĕ, ăна юсас пулсан, ун патне хăш енчен пымаллине те пĕлместĕп. Александр Сергеевич каçса кайсах мухтать, ман пек ăста маçтăр Шупашкарта çеç мар, Чăваш республикинче те çук иккен. Хĕрарăмĕ, паллах, хăйĕн хĕрне музыка енĕпе пĕлӳ пама тăрăшаканскер, манпа хисеплесе çеç калаçать, пианино тĕрĕс мар сассем кăларни пирки асăнать. Композитор кунта та пакша евĕр йăрă, тахăш вăхăтра сассен янăравлăхне лайăхлатас тесе, портфелĕнчен тин çеç кăларнă инструменчĕпе тем пăркалать, мана çав—çав клавишсем çине пусма хушать. Вăл мухтанипе тата çынна улталанипе тарласа кайнăскер, ним чĕнмесĕр Александр Сергеевич хушнине пурнăçлатăп, ку тĕрĕслев часрах пĕттĕрччĕ тесе шухăшлатăп. Часах пианино умне композитор хăй ларать, клавишсем çине пуснă май, манран вĕсем тĕрĕс сас кăларни пирки ыйтса пĕлет. Эпĕ пурне те чухланă пек: «тата кăштах пăрмалла пулĕ»,— тетĕп. Композитор хирĕçлемест, манпа килĕшсе татах мухтав юррине шăрантарать. Çапла пĕр çур сехете яхăн тăрмашсан, кил хуçинчен тин çеç пурнăçланă ĕçшĕн алла укçа илсен, хваттертен тухатпăр. Пурте кăмăллă, хваттер хуçисем те, эпир те.

«Халĕ апатланма та юрать, атя, университет столовăйне»,— тет композитор мана.

Хирĕçлеместĕп. Эпир çул урлă каçса, столовăйне васкатпăр.

Апатланнă вăхăтра Александр Сергеевич çапларах сăмахлать:

«Эпĕ Альбинăна патша майри пек тумлантаратăп. Укçа тупас ыйту мана ытлашшиех шухăшлаттармасть. Паянхи пек заказсем манăн тупăнсах тăраççĕ...»

Халĕ шухăшлатăп та, енчен те вăл пĕр—пĕр чăваш хĕрне качча илнĕ пулсан, тен, унăн кун—çулĕ те урăхларах пулса

тухатчĕ. Вăл, илем хакне туяканскер, яланах хитре хĕрарăмсем çине пăхма юрататчĕ. Малтанхи арăмĕ те унăн Улатăр хулинчи учительница, эпĕ пĕлекен Альбина та, унпа пĕрлешиччен пĕччен виçĕ ача пăхса ӳстерекенскер, вырăс майриччĕ. Вĕсем, паллах, чăваш композиторне питех хисеплесе кайман. Пирвайхи арăмне вăл Шупашкарти Энгельс урамĕнче вырнаçнă çуртра икĕ пӳлĕмлĕ хваттер илсе панă. Ăна вăл электричесво приборĕсем тăвакан заводăн хор коллективне лайăх ертсе пынăшăн, республика шайĕпе ирттерекен смотр – конкурсра пĕрремĕш вырăна тухнăшăн илнĕ. «Директор мана çак хваттере хăйĕн фончĕн укçипе туянса пачĕ», тетчĕ. Ывăлĕ те ӳссе çитĕннĕччĕ ĕнтĕ. Анчах та вăл, ашшĕсĕр ӳснĕскер, çăмăлтарах пурнăçа хăнăхнăччĕ пулас. Пĕррехинче «Атăл куçĕ» спектакль курма пырсан, хăйне йĕркеллĕ тытмарĕ, спектакль вăхăтĕнче çамрăк каччăсемпе шавласа ларма хăтланчĕ, ашшĕ асăрхаттарса каланисене те ним вырăнне хумарĕ, артистсене сцена çинче выляма чăрмантарчĕ.

Çакăн пек пĕчĕк – пĕчĕк кăлтăксем, чăрмавсем куллен – кун, уйăхсерен, çулсерен пухăнса пыни, паллах, композитора тарăхтарнă, тӳрĕ çулпа утма самаях кансĕрленĕ. Пурнăçра вăл хăйĕн телейне юрăсем çырнинче çеç курнă. Вăл çапла пулнă та ĕнтĕ. Унăн, хăй чунне парса тăрăшсан та, çемье телейĕ пулман.

Писательсемпе поэтсем хушшинче В. Урдаш пирки тĕрлĕ анекдот çӳрет. Сăвăç пурăнакан çурт Шупашкарти тĕп почтамт çумĕнче пулнă. Александр Сергеев та унăн пĕр пӳлĕмлĕ хваттерĕнчен тухма пĕлмен. Гонорар илсенех поэтсемпе писательсем час – часах унта пухăнса, тăван чăваш литератури çинчен калаçса ларма юратнă.

«Пĕррехинче Валентин Урдашпа К. Маркс урамĕпе тăвалла хăпаратпăр, — каласа пама юрататчĕ А. Сергеев. — Милици вырнаçнă çурт патне çитме нумай та юлманччĕ, Урдаш мана машинăсем çӳрекен çул урлă каçма сĕнчĕ. Ăна хирĕçлемерĕм. Çул урлă каçсанах унран: «Валентин, милици çыннисенчен хăратăн – им?»— тесе ыйтрăм. Пĕлетĕн – и вăл еплерех хурав панине? Урдаш нумай шухăшласа тăмарĕ, тӳрех çапла каласа хучĕ: «Эпĕ çак çуртран йĕрĕнетĕп». Вăт пыр та калаç унпа! Кунта та вăл хăранине кăтартмарĕ, тивĕçлĕ хурав пачĕ.

Валентин Урдашăн äсĕ – тăнĕ питĕ те çивĕч пулнă, поэт кирек мĕнле йывăр лару – тăрăва лексен те унран çăмăллăн тухма пултарнă. Тепринче вăл, эрех ĕçнĕ хыççăн ура вăйĕсем пĕтсе

çитсен, çуллахи вăхăтра пĕр паркра симĕс курăк çине выртса, канса илме шутлать. Кунти пĕр милиционер ун патне пырса чăрмантарсан, килне кайса выртма сĕнсен, ăна хирĕçлесе: «Ан чăрмантарса çӳре, эпĕ чечексемпе курăксен юррине итлетĕп!..»

Юлашки çулсенче Александр Сергеев Чăвашсен çамрăк театрĕпе питĕ те килĕштерсе ĕçлерĕ. Кунта вăл «Тавах, аннеçĕм», «Типшар», «Атăл куçĕ», «Сар ачапа сарă хĕр» спектакльсем валли чуна кайса тивмелле юрăсем çырчĕ. Чăваш академи драма театрĕ те унпа çыхăну тытрĕ. «Салтак амăшĕ», тата «Пушар лаши» спектакльсенче вăл кĕвĕленĕ юрăсем янăрарĕç, кашни кураканӑн кăмăлне туллин çĕклерĕç.

Александр Сергеевичпа пĕрле ларса ĕçленĕ самантсене те манаймастăп. Эпĕ унпа Шупашкарти педагогика училищинче тĕл пулаттăм. «Баянпа е аккордеонпа лайăх калама вĕренес пулсан, талăкра 24 сехет хушши ĕçлемелле» — тетчĕ вăл час — часах сăнарлăн. Чăнах та, эпир, музыкантсем халăх умĕнче хăйсен пултарулăхне кăтартиччен, вĕсем мĕн чухлĕ нушаланнине, тар тăкнине чухлаймастпăр та. А. Сергеев, хăй те, аккордеонпа лайăх калаканскер, училищĕре пĕрле ĕçлекен юлташĕсен пултарулăхне пысăка хурса хаклама, хăйĕн çитменлĕхĕсене те йышăнма пĕлетчĕ, час — часах: «эпĕ çав — çав музыкант пекех ăстаçă — маэстро мар — ха, тетчĕ. — Урамра çӳренĕ чух е юрă çырма ларсан, манăн пуçра пин тĕрлĕ илемлĕ кĕвĕ янăрать. Вĕсене тӳрех çырса хуман самантсем пурнăçра мĕн чухлĕ пулнă — ши? Çакна Турă Хăй çеç пĕлет...»

Çӳлти Турра асăнтăмăр пулсан, эпĕ Александр Сергеевич мана каласа панине те асăнмасăр хăварасшăн мар. Ăна, ăста дирижер пулнине шута илсе, чиркӳ хорне ĕçлеме чĕннĕ иккен. Чылай иккĕленсе пурăнчĕ, унта ĕçлес туртăмĕ те пурччĕ унăн. Чăрмавĕ вара урăххинче пулчĕ. «Енчен те эпĕ чиркӳ хорне ертсе пыма пуçласан, манăн юрăсене радиопа та пама пăрахаççĕ, журналсенче, хаçатсенче те пичетлеме чараççĕ», — тетчĕ вăл.

Пĕр — пĕр кĕвĕ шыранă чух вăл час — часах: «ку вырăс кĕвви, ку — тутарсенне аса илтерет, ку чăвашла янăрамасть — ха», тесе калатчĕ. Е тепĕр чух эпĕ ăна хирĕçлесен, е пĕр — пĕр çамрăк чăваш композиторĕн халăх хушшинче янăракан юррине пирваях ăçта юрланине, çав кĕвĕ хăш халăхăн пулнине ăнлантарса паратчĕ.

Çак кĕнекене хатĕрленĕ чух мана Иван Владимиров /*вĕсем*

*Арминче пӗрле службӑра пулнӑ/* художник композиторӑн «Когда медведь наступет на ухо» ятлӑ статйине пачӗ. Унта халӑх хушшинче сарӑлнӑ хӑшпӗр юрӑсем пирки, вӗсен пирвайхи авторӗсем камсем пулни пирки асӑннӑ. Иван Владимиров ҫӳлерех асӑннӑ статья пичетленменни пирки те мана каларӗ. Ҫапла ҫав, чӑвашсем: «Тӳррӗн калакан тӑванне юрайман», — теҫҫӗ. Александр Сергеевич хӑй пурӑннӑ вӑхӑтрах халӑха музыка пӗлӗвӗ парас ыйту ҫав тери кӑткӑс пулнине, вӑл патшалӑх ӗҫӗнче кирлӗ шайра тӑмаллине ӗненмелле те тӗрӗссӗн ҫутатса панӑ. Паллах, ҫавнашкал статьясем чиновниксене килӗшмен, ҫавӑнпа та вӑл вулакансем патне ҫитеймен.

«Когда медведь наступает на ухо» статьяна эпир кӗнекере пичетлетпӗр. Ӑна вуласан, пирӗн ума Александр Сергеевичӑн сӑнарӗ тата туллин тухса тӑрать. Статьян пӗлтерӗшӗ, композиторӑн юррисем пекех, халӑха питӗ ҫывӑх. Ӑна вулатӑн та, ума паянхи пасар пурнӑҫӗн тӳнтерле енӗсем чӗррӗн тухса тӑраҫҫӗ. Музыкӑра кӑна мар, пур ҫӗрте те тӗрлӗрен ҫӳп – ҫапӑ. Мӗнле кӑна урӑм – сурӑм кӗвӗ янӑрамасть тата хальхи саманара чӑваш радио е телевидени хумӗсем ҫинче? Пӗр – пӗр «юррӑн» авторӗ хӑех «композитор», хӑех «поэт», хӑех «юрӑҫ – ҫӑлтӑр». Ку кӑна ҫитмест. Тата... вӑл хӑех усламҫӑ! Намӑс – симӗс те ҫук. «Хӗрарӑм – ҫӑлтӑр» уҫӑ кӑкӑрпа халӑх умне тухса ташласси те йӑлана кӗчӗ пулмалла. Мӗн тӑвӑн, «укҫа чул кастарать» тенине тӳрре кӑлармалла – ҫке...

Пултарулӑх лаҫҫинче ӗҫлекенӗн чун тӗпӗнче, */сӑнарлӑрах каласан/* шалта цензор лармалла. Вӑл пулмасан, манӑн ят халӑх асӗнче юлать – ха тесе, хӑвна ху улталама та ан тӑрӑш. Кӑлӑхах. Ҫут тӗнчемӗрӗн али питӗ те тиркевлӗ. Вӑл ҫӳп – ҫапсене лайӑх тасатма, ырӑ тӗшше хӑйӗн валли хӑварма, упрама пӗлет. «Ҫынна пӗрре улталӑн, иккӗ улталӑн, виҫҫӗмӗшӗнче хӑвах ларса йӗрӗн»,— теҫҫӗ.

Александр Сергеевич вара хӑйӗнчен хӑй ҫирӗппӗн ыйтма, хӑйне хӑй критиклеме те пӗлетчӗ. Унпа ӗҫленӗ самантсенче ҫавна яланах асӑрхама пулатчӗ.

Публицистикӑллӑ «Когда медведь наступает на ухо» статьяна вуласа тухсан, тахҫанхи пӗр калаҫӑва аса илтӗм. «Эстрада юррисене эсир епле хаклатӑр?» — ыйтрӑм эпӗ пӗррехинче Анатолий Петров композитортан. Эпир унпа Патӑръел районӗнчи Турхан ялӗнче ҫуралса ӳснӗ. Вӑл те чӑнласа, те

шӳтлесе çапларах хуравларӗ: «Эстрада юррисем мана çуллахи вăхăтра кăвак тӳпе айӗнче, чечексемпе курăксем çийӗн вӗçекен тӗрлӗ тӗслӗ лӗпӗшсене аса илтереççӗ...»

Тӗрӗслӗх пур-и çак сăмахсенче? Пур, паллах. Лӗпӗшсем чылай чухне пире сиен кӳнине, эппин, манас марччӗ...

1987-мӗш çул. Мартăн 4-мӗшӗ. Эпӗ вăл вăхăтра «Коммунизм ялавӗ» хаçатра ӗçлеттӗм. Александр Сергеев хавхаланса аккордеон калать. Унăн çумӗнчех салтакра пӗрле пулнă Иван Владимиров художник, ӗçре яланах тӗрӗслӗх шырама юрататакан çын. Композитор мана: «Николай, итле, çак кӗвӗ валли санăн сăвă çырмалла. Эсӗ, тăрăшсан, ку ӗçе тăватăнах». Унтан хăйӗн кӗввипе паллаштарать. Эпир унпа тепӗр эрнере ытларикун тӗл пулма калаçса татăлатпăр...Уйрăлас умӗн, сăмах майăн, вăл пуçӗ ыратни пирки калать. Эпӗ, паллах, ун пирки шутламастăп та, темех мар, иртсе каять тесе айванла çăмăллăн шухăшлатăп...

Ытларикун ним те пулса иртмен пек ӗçе тухатăп. Мана редакцин коридорӗнче Иван Владимиров тӗл пулчӗ те: «Пӗлетӗн-и, Николай, пирӗн пысăк хуйхă пулчӗ, эпир Александр Сергеева ӗнер хăйӗн çуралнă ялне кайса пытартăмăр, санăн килти телефон номерне пӗлместӗп, васканипе шырама та вăхăт пулмарӗ...»

Эпӗ тек нимӗн те илтместӗп, хама такам пуçран чукмарпа çапнă пек туятăп... Кăшт тăна кӗрсен: «Эх, эсӗ те çав...»— тесе калама çеç пултаратăп...

Александр Сергеев... Çук иккен вăл пирӗнпе... Унăн çутă та ырă кăмăллă сăнне текех кураймăп. «Тӗрӗс мар:

*Вăл нихçан та, нихçан та пӗтмест,*
*Тăван халăх пулсассăн вилмест,—*

тесе шухăшлатăп, ăшра хаклăран та хаклă аслă тус — юлташăмран юлашки çула ăсатма хутшăнайманшăн каçару ыйтатăп. Иван Владимирович, эпӗ куляннине ăнланакансккер, мана лăплантарма тăрăшать, чăваш халăхӗн паллă композиторне мӗнле организацинчи пуçлăхсем хисеплесе, масар çинче хумалли веноксем парса яни пирки асăнать. Акă вӗсен списокӗ /Ăна мана И. Владимиров çак кунсенче пачӗ/:

Чăваш АССР Писателӗсен союзӗ, Чăваш АССР хор обществи, Республикăри наукăпа методика центрӗ, Чăваш

çамрăкĕсен театрĕ, Ялти профессипе техникăна вĕрентекен 14–мĕш училище, Çĕрпӳ районĕнчи «Союз» ятлă совхоз, Совхозăн комсомол организацийĕ, тăван ялĕнчи 8 çул хушши вĕрентекен шкул коллективĕ, ĕç тăвакан ял Совечĕ, юратнă арăмĕпе хĕрĕ, Георгий пиччĕшĕпе унăн ачисем, Лиза аппăшĕпе ачисем.

Тин çеç халь асăннă списокпа мĕншĕн эпĕ вулакансене паллаштартăм–ха? Кунта тӳрех çакна асăрхама пулать. Композитор вилнине пĕлсен, Чăваш АССР Культура министерствине, Чăваш радиона тата телевидение ертсе пыракан пуçлăхсем те илтмĕше пенĕ, чăваш халăхне пысăк çухату пулни пирки пĕлтермен те. Мĕншĕн тесен, çӳлтен хушу пулман.

Вăл вăхăтра «патшара» кам ларнине, унăн çывăхĕнче кам–кам тăнине, вĕсенчен чылайăшĕ каярахпа демократ пулнине те лайăх пĕлетпĕр ĕнтĕ. «Партия ум и честь народа» — тесе кăшкăрашнисем пушă деклараци çеç пулнине те`аван ăнланатпăр. Номенклатура çыннисем çӳлти пуçлăх хушмасан нимĕн те туманнине те чиперех ăнкаратпăр.

Эпĕ, композитор пирĕнтен уйрăлса кайсан, писательсен Союзĕнче чылай вăхăт хушши правленин ответлă секретарĕ, председателĕн çумĕ пулса ĕçлерĕм. Çавăнпа та çав «кухньăна» лайăх чухлатăп. Пĕр–пĕр писатель вилсен некролог çырнă хута Ольга Григорьевна Денисовăна, çав вăхăтри обкомăн пропаганда пайĕн пуçлăхĕ патне илсе кайса кăтартма тиветчĕ /*хальхи вăхăтра Чăваш Республикинчи культура министрĕ пулса ĕçлет*/. Ирĕк пулмасан, паллах, нихăш хаçатра та некролога пичетлеместчĕç.

Халĕ кулăшла та, çапах та вырăсла çырнă «известный» е «видный» сăмахсене текста кĕртессишĕн чăн–чăн кĕрешӳ пулса иртетчĕ. Мĕншĕн тесен, «видный» сăмах пулсан, некролога чи аслă пуçлăх алă пусать, вара çав писателе е поэта пысăк шăв–шав кăларса юлашки çула ăсататчĕç. Ун валли Карачурари масар çинче те вырăн хатĕрччĕ, унта та вĕсене ахаль çынсенчен айккинче пытаратчĕç. Çакнашкал церемони халĕ те пĕтмен–ха. Этем «известный» сăмаха çеç тивĕçсен, кĕçĕнреххисем алă пуссан та юратчĕ, ăна вара модăна кĕреймен масара илсе кайма хушатчĕç.

Некрологсенче хăйсен хушамачĕсем пичетленсен епле мăнаçланатчĕç вара пуçлăхсем–чиновниксем, калăн, вĕсем

Андриян Николаев космонавт пек уҫлăха вĕҫсе кайса килнĕ...

Пуҫлăхсем лăпкă пурăнма юратаҫҫĕ ĕнтĕ. Ҫапах та паллă композиторăмăр пирĕнтен уйрăлса кайни пирки халăх умĕнче чи малтан Чăваш халăх писателĕ Николай Терентьев тухса калаҫрĕ пулас. Уншăн ăна тавах. Анчах та ку ĕҫ те пуҫлăхсем ирĕк панипе ҫеҫ каярахпа пулса иртрĕ. Николай Терентьевич кун пирки пурне те уҫăмлăнах калатчĕ.

Ҫапла вара Александр Сергеевич «известный» тата «видный» текен списока кĕреймерĕ. Кунта, паллах, композиторăн айăпĕ ҫук. Тĕрĕссипе каласан, вăл ҫав списока кĕрессишĕн пурнăҫра ним чухлĕ те тапаҫланман, ҫапла пулассине пĕлнĕ пекех, хăйĕн чунне те ыраттарман.

Коммунизм идейисене эпĕ ăнланма тăрăшатăп. Вĕсем пирки пирваях Иисус Христос каланине те пĕлетĕп. Ҫакă та асрах-ха. Пĕр поэт «коммунизм империализма часах ҫĕнтерет» — тесе ҫырнине Александр Сергеевич вуланă та ҫав этемрен уҫҫăнах кулатчĕ: «Айван, сăмса айĕнчине асăрхамасть, кăтартĕ-ха сана империализм хăйĕн вăйне»,— тетчĕ вăл час-часах. Композитор хăй вăхăтĕнчех ҫапла шутланине курсан тĕлĕнетĕп те. Унăн тавракурăмлăхĕ ҫав тери пысăк пулнă ҫав.

Александр Сергеевича тăван аппăшĕ Елизавета Сергеевна Антонова хытă юратнă. Шел, вăл та пирĕн хушăра халь ҫук. Тăван шăллĕне хисеплесе вăл ҫывăх тăванĕсемпе пĕрле пире пĕр кафене чĕннĕччĕ. Асăну каҫĕнче Чăваш халăх писателĕ Николай Терентьев, Алевтина Павловна Порфирьева, Грида Георгиевич Порфирьев, Аристарх Дмитриевпа Юрий Плотников поэтсем, Анатолий Филиппов журналист, тăванĕ, эпĕ мăшăрпа тата ытти тăванĕсем пулнăччĕ. Паянхи кун та эпĕ Елизавета Сергеевнăна, вăл хăйĕн шăллĕне чунтан хисепленишĕн, ăшра тав тăватăп...

Эпир композитора асăнса чылайччен калаҫса лартăмăр, унăн пархатарлă ĕҫне пысăка хурса хакларăмăр...

Сăмаха вĕҫлеме те вăхăт ҫитрĕ. Тĕрĕссипе каласан, манăн ҫак аса илĕве вĕҫлес те килмест, юратнă композитор ҫинчен калаҫас та калаҫас килет...

Йывăр тăпру ҫăмăл пултăр, ҫитменнине ҫитер, ытлашши ҫыртăм пулсан каҫар, Александр Сергеевич...

МИНИСТЕРСТВО КУЛЬТУРЫ ЧУВАШСКОЙ АССР
РЕСПУБЛИКАНСКИЙ НАУЧНО-МЕТОДИЧЕСКИЙ ЦЕНТР
НАРОДНОГО ТВОРЧЕСТВА И КУЛЬТПРОСВЕТРАБОТЫ
ХОРОВОЕ ОБЩЕСТВО ЧУВАШСКОЙ АССР

# РЕПЕРТУАР

## СВОДНЫХ ХОРОВ

**районных, городских праздников песни и труда 1987 года**

Чебоксары — 1987

Ку кӗнекере /тиражӗ 1000 экз./ СССР Гимне /тексчӗ С.Михалковпа Г.Эль–Регистанӑн, кӗвви А. Алек–сандровӑн, «Октябрь хӑвачӗ», /кӗвви Ф. Лукинӑн, сӑвви В. Давыдов–Анатрин, вырӑсла П. Градов куҫарна/, «Ялйышпа пӗрле чухне» /кӗвви Т. Фандеевӑн, сӑвви В. Давыдов–Анатрин, вырӑсла А. Дмитриев куҫарна/, «Сарӑ тулӑ вырма тухар–и? /Кӗвви А. Сергеевӑн, сӑвви Н. Кушмановӑн, вырӑсла А. Дмитриев куҫарнӑ./ тата вырӑсла ҫырнӑ «Наш паровоз /революциллӗ юрӑ /сӑвви Б. Скорбинӑн, «Мы за мир», кӗвви С. Туликовӑн, сӑвви А. Жаровӑн юррисем кӗнӗ.

## «САРĂ ТУЛĂ ВЫРМА ТУХАР–И?

Кĕвви А. Сергеевăн

Сăвви Н. Кушмановăн
Вырăсла А. Дмитриев куçарнă




тав_та_пуҫ тӑ - ван ҫӗ - ре
ХОР
Эх, ҫум_мӑн тӑ_рар_и? са_рӑ ту_лӑ выр_ма ту_хар_и,
ыл_тӑн_ран тә ыл_тӑн тыр_ра пу_хар - и,
пӗр_чӗн_пӗр_чӗк
Эх, хи_ре ту_хар_и са_рӑ ту_лӑ выр_ма ту_хар_и,




Кĕр – кĕрлет колхоз уй – хирĕ,
Ĕç çинче юрлать чĕре.
Куç тулли пуянлăх пирĕн, —
Тавтапуç тăван çĕре!

*Хушса юрламалли:*
*Эх, çуммăн тăрар—и,*
*Сарă тулă вырма тухар—и,*
*Ылтăнран та ылтăн тырра*
*Пĕрчĕн—пĕрчĕн пухар—и!*

*Эх, хире тухар—и,*
*Сарă тулă вырма тухар—и,*
*Ылтăнран та ылтăн тырра*
*Юрла—юрла пухар—и!*

Ушкăнра кашни хаваслă,
Сăн – питре телей çиçет.
Çăкăртан пулаймăн аслă,—
Вăл пире кунçул пиллет.
*Хушса юрламалли.*

Пурнăç, пултăр, — тетпĕр тулăх,
Мир упрантăр тĕнчере,
Çĕр-аннемĕр кӳнĕ пурлăх
Çĕн вăй-хал парать пире!
*Хушса юрламалли.**

---

За околицей — моторы,
На полях кипит страда.
И разбужены просторы
Песней славного труда.

*Припев:*
*Эх, жаркие дела,*
*Нас с тобою жатва позвала!*
*Золотую россыпь зерен*
*Дарит щедрая земля.*

Здесь урок проходит важный
Вся деревня с юных лет.
И в труде узнает каждый:
Старше хлеба в мире нет.

*Припев.*

Будет краше год от года
Наша общая судьба.
Коль под мирным небосводом
Наливаются хлеба.

*Припев.*

---

**Хушса юрламаллине А. Сергеев çырнă.*

«Ыр ҫын вилсен ыр ят юлать тесе»,—
Каланӑ ахальтен—и пирӗн халӑх?
Эс ун асне ӗмӗрлӗхе кӗрсе
Выранаҫрӑн кирек кам та ӑмсанмалӑх.

Эс пурӑнтӑн тӗнчемӗре савса.
Кашни кӗввў, ейў пек, ирӗк, аслӑ.
Ача кулли пек е хӑш чух мӑнаҫлӑ, —
Хӑв тўснине йӑлт патӑн тавӑрса.

Шӑпа тени ҫапла ҫав ҫыраканӑн:
Пурсӑмӑра пурнать хавал парса.
Кӗрешрӗн пӗрмаях эс ӑраскалшӑн,
Эппин, яту сан сумлӑ та таса.

Чунра шӑраннӑ юррусем вилмеҫҫӗ,
Шанатӑп:
Кивелмеҫҫӗ нихӑҫан.
Вӗсем пире ырра савма чӗнеҫҫӗ,
Чӗнеҫҫӗ юратмашкӑн пурнӑҫа...


Марш пек, хавассăн
♩=120
1.Ир- пе пу-те-не а-вă-
-тать - и, çил-тă- вăл у-
-рать- и Çум-ра, э-

Кĕвви А. СЕРГЕЕВĂН.

Сăвви Н. КУШМАНОВĂН.



## УТ ТĔРĔС ÇУЛПА

Ирпе путене авăтать – и,
Çил – тăвал урать – и çумра, —
Эпир малаллах,
Малаллах çул тытатпăр,
Çунать çутă çăлтăр умра.

*Хушса юрламалли:*
*Ут тĕрĕс çулпа,*
*Тăван халăхпа,*
*Упра хăв чысна çамрăкла.*

Эпир тăрăшса вĕренетпĕр,
Тăван çĕршыва юратса.
Ĕçе хăнăхса çитĕнетпăр,
Чунра пысăк ĕмĕт тытса.

*Хушса юрламалли.*

Утатпăр эпир тус – таванлăн,
Телей пире пурнăç пиллет.
Кун – çулăмăр ирĕк,
Хавaслă та анлă,
Мала васкатать çут тĕллев.

*Хушса юрламалли.*

## АЯЗ ТАТА ОРАЗ

Аяз хăй епле авланни çинчен каласа парас пулсан, ăна никам та ĕненес çук. Енчен те ку ĕç хăйĕнпе пулса иртмен – тĕк, çакна вăл чике тăршшĕ лартни вырăнне хурĕччĕ.

Çунакан вутта амăшĕ краççын сапрĕ. Аяз, районтан килне таврăнсан, хирĕçме шутламанччĕ те. Кунĕпех ăша пĕр хĕлхем те яманскерĕн пуçĕнче пĕр шухăш çеçчĕ – ха: хăвăртрах апатланасчĕ. Амăшĕ, ăна курсан, картиш варринчех ыйтусемпе аптрата пуçларĕ.

— Ну, мĕнле? — ывăлĕн çулне пӳлсе, саппунĕпе аллисене шăлнă май ыйтрĕ вăл.— Военком мĕн калать?

— Мĕн калать... Унăн пĕр сăмах. Илместпĕр тет.

— Эй, тата! — тĕлĕнчĕ амăшĕ.— Килĕшмерĕн – им?

— Вĕсене юраймăн!.. Лапа уралла теççĕ.

— Вăт пыр та калаç!— Амăшĕ ытла та хăвăрт тĕлĕннĕрен çилленме те пăхрĕ:

— Иртнинче курссене йышăнмарĕç... Леш... Шоферсенне. Хальхинче... — Кăмăлне кăштах çемçетрĕ те: — Юрĕ, ылтăнăм. Апла – тăк ялан манпа пĕрле пулан,— тесе хушса хучĕ.

— Эпĕ ахаль те яланах санпа.

— Çапла пулмалла та... — ассăн сывларĕ те амăшĕ кил – тĕрĕшĕнчи ĕçсене пуçларĕ.

Аяз пĕччен мар — Петре тусĕпе, лешĕ те çак самантра çăвара мĕн лекнĕ, çавна хыпса çăтма хатĕрччĕ. Кĕскен каласан, иккĕшĕ те хырăм выççине часрах лăплантарас шанчăкпа пӳрте кĕчĕç, унта вара — нимĕн те çук. Аяз сĕтел сунтăхне уçрĕ, шкапа пăхрĕ, аптранипе кравать айне кĕрсе тухрĕ. Пуш – пушă! Ал айне хуть йăваланса выртакан çăкăр татки лекинччĕ. Çук çав. Аязăн майĕпен чăтăмлăхĕ пĕте пуçларĕ. Тӳрех мар – ха. Çапах та вăл малтан кăсăкланса:

— Анне, пирĕнне çимеллине çĕлен хыпса кайнă – им? — тесе ыйтрĕ.

— Çĕлен... Çу – ук... Санăн вăталăх инкӳ, ылтăнăм. Унăн миçе ачаччĕ – ха? Виççĕ?.. Пĕлетĕн – çке — тăваттă. Кашни çиме ыйтать. Вĕсем хыпса кайрĕç.

— Мĕн те пулин хăвармалла пулнă ĕнтĕ.

— Ăнах – и?.. Эс вара халь манран мĕн кĕтен?

— Манăн çиес килет! — тарăхса кайрĕ Аяз.— Çиес килет!

— Çиес килет! — тĕлĕннĕ пек турĕ амăшĕ, аллисемпе айăкĕнчен ярса тытрĕ: — Ман ачан çиесси килет иккен! Киле эсĕ мĕн те пулин илсе килтĕн – и? Мана пĕр тенкĕ, ăçта унта, хăть пĕр пус патăн – и? Анне, ме, çăкăр е чей туян тесе...

Пуçланса кайрĕ вара.

— Сирĕн ман ĕнсе çинче çеç ларса пултăр. Пиччŭсем пур, аннŭсĕр пĕр утăм та тăваймаççĕ, вĕсен арăмĕсем вара — наянсем — ача çуратма кăна пĕлеççĕ. Эпĕ, мĕн, вунă алăллă – и? Выльăх – чĕрлĕхе аннŭн пăхмалла, çĕрулми лартмалла — каллех аннŭн, пахчаçимĕç шăвармалла — анне, урюк пиçсе çитнĕ — анне, хăвăртрах çаврăнкала! Манăн мĕн — çĕр алă – им? Сирĕнпĕн эпĕ выратăп та, çапатăп та, купăсне те калатăп. Апат çиес килет — анне, пар! Кĕпе хура — анне, çу!.. Миçе хутчен калана, авлан тесе... Арăм туп та унран ыйт, вăл сана ĕçтертĕр, çитертĕр, тирпейлесе тăтăр...

— Çитрĕ пуль.

— Çитрĕ? Çук, çитмерĕ – ха. Кам кашни çул хулана института вĕренме кĕрес тесе каять. Ман ывăлăм — Аяз. Кам унта пĕрмаях «иккĕсем» илет? Тен, эпĕ? Кам кил – тĕрĕшре урлă выртана тăрăх çавăрса хумасть, урамра йытă хăваласа çŭрет. Тен, татах эпĕ?.. Пăхăр – ха ăна, вăл хăй кăмăлне каякан ĕç шыраса тупаймасть иккен. Пăхăр – ха, вăл...

— Çитет!

— Аннŭне хирĕç ан кăшкăр. Тупăннă командир. Арăм илсе кил те хуçалан вара унпа!

— Илсе килетĕп те!..

— Илсе кил, илсе кил! Пăх – ха эс ăна, халех мана хăратасшăн.

— Ну, кĕтсех тăр! — шăл витĕр сăрхăнтарчĕ Аяз.— Эсĕ тĕлĕкре тĕлленменнине илсе килетĕп. Эпĕ эп мар пулам, урамра чи малтан кама куратăп, çавна...

— Тавай, тавай. Кăпăшка аллинчен тыт та çавăтсах илсе кил...

Аяз картишĕнчен пуля пек вирхĕнсе тухрĕ. Умри путăк – лакăмсене ним уямасăр малалла талпăнчĕ. Петре ун хыççăн аран – аран ĕлкĕрсе пычĕ. Вĕсем утрĕç – утрĕç те автобус чарăнакан вырăна çитсе тăчĕç. Кунта пассажир пĕртен – пĕр хĕр кăна. Тумтирне пăхсан, вăл хулара е аулта пурăннине

уйăрса илме йывăр. Сăн – пичĕ ытлашши чиперех те мар, анчах кăмăла каймалла.

Аяз ăна тинкерсе пăхма пуçларĕ.

— Мĕн кирлĕ? — ыйтрĕ лешĕ.

— Нимех те.

Каччăн кÿренĕвĕ сĕвĕрĕлменччĕ – ха, çавăнпа та унăн сасси çилĕллĕн илтĕнчĕ. Çапах куçне хĕр çинчен илмерĕ – ха.

— Ну, мĕнле? — ыйтрĕ лешĕ татах.

— Начар мар,— ăшшăнрах хуравларĕ Аяз.

— Килĕшетĕп?

— Килĕшетĕн.

— Эппин, кам чармантарать сана?

— Никам та. Кайрăмăр.

— Ăçта?

— Пирĕн пата, киле.

— Унта эпĕ мĕн курман?

— Хунямуна. Санăн упăшку вара эпĕ пулатăп. Ну, мĕнле?

Хĕр кулса ячĕ.

— Мĕнех вара, кайма та юрать.

Çак самантра Аяз хăраса ÿкрĕ. Хĕр чăнласах та пĕрле пырать пулсассăн? Май килнĕ таран хытах йĕкĕлтес шутпа унран:

— Эсир, ĕçсĕр аптăраса, каччă шырама тухнă – им? — тесе ыйтрĕ.

Анчах та лешĕ сăмахшăн кивçене каяканскер мар – мĕн:

— Малтанах шухăшларăм çав, каппайланма çеç маçтăр, ĕçне пуçăнсанах, шарт сикет терĕм.

Автобус килсе чарăнчĕ. Аяза тин чун кĕчĕ:

— Каятăр эппин, шикленсе ÿкрĕр?

Хĕрĕ тата, хĕрĕ:

— Шухăшлама вăхăт паратăп. Пĕр кун çитет – и? Эппин, ыран каçхине, Киров колхозĕнче...

— Мĕн ятлă эс? Хушамату?.. — васкасах ыйтма пикенчĕ Аяз, мĕншĕн тесен автобус вырăнтан тапранчĕ ĕнтĕ.

— Биби...

Анчах автобус алăкĕ хăвăрттăн хупăнчĕ, пĕрле хĕр хушамачĕ те кайрĕ.

— Вăт епле вăл!—терĕ Аяз.

— Хĕр мар, чăн – чăн вутăш,— пĕтĕмлетрĕ Петре.

Самырсканпа Киров колхозĕ хушши — сакăрвунă километр. Машина сассисемпе кĕрлесе тăракан çулпа унта çитесси —

ним те мар. Акă вĕсем автобусран тухрĕç те. Аязпа Петре шукăль тумланнă, авланакан каччăсем пек, хура костюм тăхăннă, иккĕшĕ те галстук çыхнă, пушмакĕсем хĕвел çинче тĕкĕр пек йăлтăртатса тăраççĕ. Ау—у, Биби, эсĕ ăçта?.. Тĕл пулнă пĕрремĕш çынах каччăсен ыйтăвне татса пачĕ:

— Биби. Э—э... Мучи хĕрĕ. Ав çав çуртра.

Çурт çуртах ĕнтĕ. Ун тавра карта тытса çавăрнă. Калинкке умĕнче ни унталла, ни кунталла кайма пĕлмесĕр аптăраса тăчĕç. Картишне кĕчĕç. Чӳречерен шаккарĕç. Тӳпеттей тăхăннă ватă çын пуçĕ курăнчĕ, хăй куçне чарса пăрахнă:

— Сире кам кирлĕ?

— Биби.

Мучи пуçне шалалла кăштах пăрчĕ те:

— Биби, сан патна хăнасем килчĕç. Биби тухрĕ — тĕлĕнни палăрмарĕ те:

— Килместĕр тесе шухăшланăччĕ. Кĕрĕр.

Алăка яри уçрĕ. Хăнасем, пĕр—пĕрне çул парса, татах пĕр вырăнта тапăртатса тăчĕç. Кĕчĕç. Çавра сĕтел хушшине вырнаçрĕç. Ларчĕç те пĕр самах та чĕнмеççĕ.

— Çураçма килтĕр пулĕ—ха? Эппин, паллашас.

«Авланаканни» япшаррăн ура çине тăчĕ.

— Аяз*.

Хĕр кулăшла çӳçенсе илчĕ: «Ыш—ыш—ыш!»

— Петре — манăн тус.

Лешĕ те, хуçланакан çĕçĕ пек, ун умне яшт! тӳрленсе тăчĕ. Биби кулса ячĕ.

— Эсĕ тусна çӳллĕшне кура суйланă—им?

Чĕнмерĕç. Хĕр чееен пĕрре Петре çине, тепре Аяз çине пăхса илчĕ.

— Юрĕ. Эсир кунта иксĕрех ларăр—ха эппин. Эпĕ чей вĕретем. — Çавăнтах Аяза пĕр альбом тыттарчĕ.— Акă сире... тунсăхласран.

Туссем, сăмсисене турткаласа, альбомпа паллашма пуçларĕç. Анчах пĕрремĕш страницăран мала иртеймерĕç те. Унта пĕр морякăн сăнӳкерчĕкне вырнаçтарнă, вăл мăнкăмăллăн, ăмăрткайăк пек пăхса ларать: пăхăр—ха эпĕ епле маттур тенĕн. Аялта çырса хуни пур: «Владивостокран салам!» Аяз чăтса лараймарĕ, сăнӳкерчĕке альбомран кăларса илчĕ те тӳнтер енче

*Аяз — казахла «сивĕ» тенине пĕлтерет.*

çырнине вуларĕ: «Пурнăç — хăй океан. Унта лайăх ишевçĕ пулмалла. Юратнă Бибие Болатханран». Йăлтах паллă — унăн каччи. Çакна пĕлни ăна тарăхтарса ячĕ, тинех Аязăн чĕлхи уçăлчĕ.

— Пирĕн кунта... çак ăмăрткайăкпа юнашар... ĕç тухаяс çук,— терĕ вăл Петрене. Лешĕ çак сăмахсен пĕлтерĕшне ăнкарса та илеймерĕ, çав вăхăтра пÿлĕме Биби кĕрсе тăчĕ.

— Ку мĕне пĕлтерет: шавĕ пур, çапăçаканĕ çук?

— Темех мар... Пулас упăшкупа паллашрăмăр, — тĕллесе кăтартрĕ Аяз тинĕс ăмăрткайăкĕ çине.

— Вăл тÿрккес каччă,— тарăхрĕ хĕр.

Кайран чей ĕçрĕç.

— Тен, сире хăватлăраххи кирлĕ?

Вăл шурă эрех кăларса лартрĕ, паçăрхи пекех чеен те тĕпчевлĕн каччăсене сăнарĕ. Петре хăвăрт кăна çур литр кĕленчи çине пăхса илчĕ, анчах та Аяз пуçне ÿпкевлĕн сулкаласа, йĕпленĕ пек сасăпа каласа хучĕ:

— Ĕçекеннисем мар.

— Ну, юрĕ, эппин, хаклă хăнасем... Пирĕн программăн иккĕмĕш пайĕ — клубра киноартистсемпе тĕл пуласси.

...Залра пушă вырăнсем çукпа пĕрехчĕ, çапах та Биби малти рете хĕсĕнкелесе кĕрсе, хăшне тĕртсе, хăшне тархасласа, хăйĕн йĕкĕчĕсене юнашар вырнаçтарчĕ.

— Ай, камсем кусем? — ыйтрĕ Бибирен юнашар ларакан хĕр. Хăй вара мăкăнь çеçки пек хĕрелчĕ.

— Вĕсем – и? — Биби каччисем çине мăнаçлăн пăхса илчĕ.— Ман каччăсем, Назия. Çураçма килчĕç. Паллаш.

— Ай!..— тата ытларах хĕрелчĕ Назия.

— Хĕрсем, вилетĕп.

Вĕсемпе юнашар тепĕр хĕр курăнса кайрĕ — унăн куçĕ чармак, сăмси сарлака. Вăл хăюллă пулни тÿрех паллă.

— Хăтарăр! Çĕçĕсĕр пусаççĕ, — терĕ хĕр. Çавăнтах тусĕсене пĕрер чечек çыххи тыттарчĕ.— Часах сцена çине артистсем тухаççĕ. Пĕр çыххине эсĕ паратăн, — тĕкрĕ вăл хăмач пек хĕрелнĕ Назияна, — теприне — Биби. Виççĕмĕшне... Виççĕмĕшне хам парнелетĕп.

Вăл сцена еннелле ыткăнчĕ, ăна хирĕç виçĕ арçын тухрĕ; хăюллă хĕр чутах вĕсемпе çапăнмарĕ, вара куракансем енне çаврăнса, мĕнлерех саламламаллине систерсе, алă тупанĕсемпе хăлхана хупласа хумалла шаплаттарчĕ.

— Хаклă юлташсем! — кăшкăрчĕ вăл, зал еннелле пăхса. — Паян пурсăмăрăн та савăнăçлă кун. Пирĕн пата хаклă хăнасем килчĕç. Сулахайран сылтăмалла...

— Вăт пултарать те ку, э!— тĕлĕнсе пуçне сулларĕ Аяз. — Унăн ротăна ертсе пымалла. Офицертан та кая мар! Хĕр тăрăшсах Султан Ходжиков кинорежиссерăн, Асанали Ашимовпа Ануар Молдабеков актерсен мĕнпур титулĕсене асăнса кайрĕ. Зал алă çупнипе чĕтренчĕ. Аяз асăрхануллăн маччаналла пăхса илчĕ: ишĕлсе ан антăр тата!

— Ай, хăшне куç хыврăн эсĕ? — илтрĕ вăл сасартăк Назия пăшăлтатнине. Каччă сывлама та чарăнчĕ: Биби артист суйлать.

— Асанали манăн пулать,— терĕ хĕр кăшт ларсан. Аяз *кӳреннипе шăлне çыртрĕ.*

— Ай, мана Ануар та юрать,— хĕрелчĕ Назия. Аязăн чĕринче çĕнĕрен тарăху туйăмĕ çĕкленчĕ. Тӳррипе каласан, тарăху та мар – ха вăл, мĕнле калаççĕ – ха кун пек чухне: кӳлешӳ – и, анчах та Аяз çакна хăй те вĕçне çитиех ăнланса çитерейменрĕ – ха, Биби чечек çыххине сухаллă чипер артиста панине сăнарĕ. Лешĕ вара... Пăхăр – ха эсир ун çине! Хĕре аллинчен тытрĕ те, йăл кулса, шăппăн тем каларĕ. Биби тата... Пăхăр – ха эсир ун çине... Çапах та, пăхăр – ха...

Хĕр, хытă савăннипе пăлханса кайнăскер, хăй вырăнне таврăнчĕ. Аяз шăл витĕр сăрăхтарчĕ:

— Тухатпăр!

Вăл çакна питĕ çирĕппĕн каларĕ те, хĕрĕн ăна ирĕксĕрех пăхăнмалла пулчĕ.

— Мĕн пулчĕ?

— Нимĕн те.

Биби ун çине тимлĕн пăхса илчĕ те кулса ячĕ:

— Кĕвĕçетĕн – и?

— Кĕвĕçетĕп. Эсĕ... эсĕ унпа чутах Алма – Атана тухса каяттăн та!..

— Вăл чăннипех кĕвĕçет.

Хĕр халĕ кулмарĕ ĕнтĕ. Ун çине аптравлăн пăхрĕ.

— Ну, халĕ ăçта кайма... хушатăр?

— *Ман пата. Киле.*

— Халех – и?

— Халех,— çакна вăл татăклăн та çиллессĕн каларĕ. — Чупса çитет.

*Биби куласшăн пулчĕ, анчах та кулли тухмарĕ.*

— Ку каччă питĕ хăюллă иккен.

...Вĕсем автобусра хыçалти тăрса пымалли вырăнсене йышăнчĕç. Аяз çӳллĕ те ансăр хулпуççийĕпе ăна юнашар тăракан çынсенчен, пĕтĕм тĕнчерен хӳтĕлесе пычĕ. Хĕр, сасартăк лăпланса пĕчĕкленсе кайнăскер, ун çине аялтан çӳлелле чăнлăн та хăравçăллăн пăхрĕ. Автобус силленнĕ вăхăтра вăл, вăтанса, каччă çумне сĕртĕнчĕ, унăн сăнĕнче çухалса кайни, ачаш çепĕçлĕх, чее кулă, хавас тĕлĕну пурри палăрчĕ.

Тĕттĕмленсен тин вĕсем Аяз килне çитрĕç. Пӳрте малтан Петре кĕчĕ. Аяз амăшĕ пĕчченех, телевизор пăхса ларать.

— Аппа, хĕр илсе килтĕмĕр,— пĕлтерчĕ вăл. Лешĕ ун çине тĕлĕнсе пăхрĕ:

— Эсĕ... ăсран тайăлман пуль те?

— Арăм илсе килтĕмĕр,— тӳреммĕн лаплаттарчĕ Петре.— Ăнланатăр-и? Арăм.

Аяз амăшĕ аптраса ӳкрĕ:

— Мĕнле арăм? Мĕнле илсе килтĕмĕр?

— Аяз авланнине пĕлтерет. Вăл пăлханса ӳкрĕ.

— *Аяз... Арăм... Ай-ай! Ăçта-ха вăл, намăса çухатнăскер?*

— Алăк умĕнче тăрать, аппа.

— Алăк ум... Намăс! Мĕн тумалла?.. Мĕн тумалла, Петре?

— Ыталамалла. Чуптумалла. Пиллемелле, — аллисене саркаларĕ Петре. — Канфет, баурсаки пур-и?

— Пур, пур...

— Пур пулсан, çĕнĕ çынсен пуçĕсем çине ывăт. Мĕн тумаллине, ватăскер, манран ыйтса тăрать тата...

Алăк уçăлчĕ. Сăмах çине тенĕ пекех Аяз Бибие пӳрте çавăтса кĕчĕ.

— Ай-ай! Ай-ай!— пуçне ярса тытрĕ амăшĕ. Çавăнтах çамрăксем çине канфетсемпе баурсаки ывăтма пуçларĕ. Вĕсене Петре кăна пуçтарчĕ.

— Ай, Петре, Петре!.. Халех кинсем патне чуп!

Аяз çапла авланчĕ.

Вăл тата ĕçе еплерех вырнаçрĕ. Нимĕнле пăтăрмах пулмасан та, çунакан вутта каллех амăшĕ краççын сапрĕ.

Аяз ыйхăран яланхи пекех — хĕвел хĕртсе пăхнă вăхăтра — вăранчĕ.

— Хуп турттарма юрататăн вара эсĕ. Тĕлĕнмелле! — терĕ Биби.

— Сан çывăрас килмест-им?

— Апла мар та, анчах намăс. Аннӳ мĕн шухăшлĕ?

— Ан шарла – ха. Каласа кăтартасчĕ сан мана качча мĕншĕн çав тери хăвăрт тухнине.

— Йăлăхтармарĕ – и?

— Мĕн?

— Хăвна пĕрмай мухтанине итлеме. Эсĕ епле маттур! Пуринчен те тĕреклĕ, вăйлă!..

Аяз кулса ячĕ:

— Ӳстерсе калатăн, эп ун пек мар.

— Ӳстерместĕп, — йăл кулчĕ арăмĕ, пулса иртни пĕтĕм пурнăç тăршшĕпех, ĕмĕрлĕхе юлассине пĕлсе, вăтанса аса илнĕ май. — Акă, эсир Петрепе урам тăрăх пыратăр, хăв çӳллĕ, çирĕп утăмлă, çынна пăхăнтаракан сăн – пит. Мана тӳрех килĕшрĕн. Хам ăшра шухăшлатăп: «Çак йĕкĕт хăйне качча тухма сĕнес – тĕк, эпĕ ăна пĕр шухăшласа тăмасăрах...»

Иккĕшĕ те, хăйсен тулли телейĕнчен вăтанса, çурма сасăпа кулса ячĕç.

Юнашар пӳлĕмре алăк чĕриклетрĕ, унта такам кĕни илтĕнчĕ.

— Э – э!.. Сывлăх сунатăп, — стена леш енче уççăнах мар янăрарĕ амăшĕн лăпкă сасси. Килнĕ хăна сăмахĕсене уйăрса илме пулмарĕ. Аязпа Биби, иккĕшĕ çеç пӳрнĕ телейпе киленсе, вăхăта улаххăн ирттерĕччĕç, анчах та юнашар пӳлĕмре савăт – сапа чăнкăртатрĕ, унта чей ĕçрĕç, васкамасăр калаçрĕç.

— Çырлахма та пулĕччĕ, анчах... кашни тенкĕ шутра – çке,— çамрăк мăшăр выртса тăракан пуçелĕксем тĕлĕнче каланă пекех илтĕнет амăшĕн ăнланмалла та уçăмлă сасси,— хăвăрах ăнланатăр: туй тăкаксăр пулмасть...

— Ахалех мĕскĕнленетĕн, кӳршĕм!— кулчĕ хăна.— Тăвата ывăл, вĕсенчен виççĕшĕ ура çинче ĕнтĕ...

— Калама çăмăл, тăвата ывăл,— ассăн сывларĕ амăшĕ.— Виççĕшĕ хăйсен çемйипе пурăнаççĕ. Тăваттăмĕш... Тăваттăмĕш, ав, виçĕ çул каялла вунă класс вĕренсе пĕтерчĕ, института кĕреймерĕ – ха. Çаплах ĕç патне çыпăçмасть — пĕри те ун валли мар имĕш. Халĕ, ак, арăм ертсе килчĕ...

Вăт çапла. Аязпа Биби пĕр – пĕрне куçран пăхрĕç те йăлтах ăнланчĕç. Ăнланчĕç те сăмахсăрах килĕшрĕç, малашне кун пек пурăнма юрамасть. Тӳрех ĕçе пуçăнчĕç. Аяз çирĕппĕн кравать çинчен сиксе тăчĕ, çирĕппĕн утса пӳртрен тухрĕ, çирĕппĕнех председатель пӳлĕмне кĕрсе тăчĕ. Урăх ăçта каймалла – ха унăн? Колхоз вăл колхозах, пуçĕ вара — председатель.

Колхоз пуçлăхĕ Прали — ырă чунлă çын. Тараватх кăмăллă, уçă сăн – сăпатлă. Унăн пӳлĕмĕн алăкĕсем те уçă, ирхине тăхăр сехетрен пуçласах... Пĕр сăмахпа каласан, вĕсем хамăр çыншăн кăнтăрла та, çĕрле те уçă.

— Ну, ирт, ирт! — председатель, темĕн тавçăрса илнĕн, хăйĕн кресли çинчен çĕкленчĕ. — Эпĕ сана кĕтетĕп. Аяз çемьеллĕ *пулчĕ — халĕ унăн хуçа пулма вăхăт тесе шухăшлатăп.* Çемйине пăхса усрас тесен, ăна ĕç кирлĕ, — Прали хăйĕн вăтăр икĕ шăлне те кăтартса кулчĕ: — Тавçăртăм – и?

— Тавçăртăр.

— Ĕç кирлĕ – и?

— Кирлĕ.

— Вăл сана, хаклă çыннăм, тахçанах кĕтет. Вăл саншăн, çамрăк арăму пекех, тунсăхланă. Çакна çеç кала: ăçта каятăн — «Аймана» е «Шолпана»?

Аяз аптраса ӳкрĕ.

— Айманпа Шолпанăн кунта мĕн ĕç пур?

— Çамрăк мăшăр темерĕн, хăйсен телейĕсĕр пуçне нимĕн те курмаççĕ, илтмеççĕ. «Айманпа» «Шолпан» çинчен пĕтĕм район калаçать. Хаклă çыннăм, «Айман» вăл — Рысбек комсомолецĕсемпе çамрăксен сурăх пăхакан бригади. «Шолпан» — Калубек бригади.

— Эпĕ килĕшетĕп,— терĕ Аяз,— сурăх кĕтме килĕшетĕп, анчах «Аймана» та, «Шолпана» та каймастăп.

— Мĕн çинчен калаçать – ха çак арçын, телее пула пуçне çухатнăскер, — тĕлĕнчĕ Прали.— Пурте мана хăйсене, çав бригадăсене яма тархаслаççĕ. Унта мунча пур. Столовăй. Телевизор!..

— Суратăп вĕсем çине. Хăть патша палатисем пулччăр — каймастăп.

— Мĕншĕн?

— Арăм çамрăк.

— Вара мĕн?

— Чухлаймастăр – им? Унта каччăсем нумай.

Прали, пĕчĕк ача пек, куççуль тухиччен ахăлтатса кулчĕ.

— *Чăнах та, — сăмахларĕ председатель, куççульне шăлнă* май,— эсĕ, чăнах та, телее пула пуçна çухатнă иккен. Унта арăмупа çамрăксем хушшинче пыл та çу пурăнмалла.

— Каларăм каймастăп тесе, каймастăп.

— Эсё чăнласах – и? — Прали чухлаймарĕ – ха, унăн те кулмалла, те макăрмалла. Анчах та Аяз, хăть йĕр, хăть кул, вăкăр пек, хăйĕн сăмахĕ çинех тăчĕ. Председатель шухăша кайрĕ. Ĕнсине, хăлхине хыçкаласа илчĕ. Унтан, ассăн сывласа, кĕтмен çĕртен чи хаклă япалана çухатнă евĕр:

— Йышăн, эппин, хĕсĕр сурăхсен кĕтĕвне,— терĕ.

— Юрать, килĕшетĕп.

Аяз алăк еннелле утма тăчĕ.

— Тăхта,— унăн асаппа çуралнă сĕнĕвне Аяз ытла та çăмăлттайла йышăннăран кăмăлсăр пулнипе чарчĕ ăна Прали.

— Эпĕ сире итлетĕп, начальник юлташ.

— Аяз, кала – ха, эсĕ пĕлетĕн – и, эпир санпа тăвансем вĕт.

— Чăнах – и?!— Аяз хăйĕн çĕнĕ хурăнташĕ çине куçне чарса пăхрĕ, çакна вăл халиччен пĕлмен, тĕлĕкре те тĕлленмен.

— Пыр та калаç хальхи çамрăксемпе! Хăйсен ăру тĕпкĕчне те пĕлмеççĕ. Эпир санпа тăваттăмĕш сыпăкри тăвансем вĕт. Пирĕн асаттесен ашшĕ Сайкы йăх пуçĕ пулнă.

— Тĕлĕнмелле! — Аяз, çак хыпара илтсен, пăлханса кайрĕ.

— Çапла çав. — кăмăллăн калаçрĕ Прали. — Эпĕ сана çав кĕтĕве ытахальтен паратап – и? Ыттисем кун пирки ĕмĕтленме кăна пултараççĕ.

Аяз тинех ĕçе вырнаçрĕ.

Çĕнĕ пурнăçĕ унăн акă мĕнле пуçланчĕ.

Малтанах тĕрлĕ ăпăр – тапăра ĕç вырăнне илсе çитермеллеччĕ. Мĕн япали ĕнтĕ: ячĕ кăна — пĕчĕк юрта кăшкарĕ валли кĕççе, темиçе утиял, минтерсем, савăт – сапа шкапĕ, хуран лартмалли такан. Тата мĕн? Икĕ кĕпçеллĕ пăшал, сăмавар, кĕтуçĕпе унăн çамрăк арăмĕ валли пĕрер кĕрĕк. Çак тупра – пухчана колхоз машинипе тусен хушшинчи пĕр çăл патне тиесе пычĕç, вĕсене пушатнă хыççăн шофер каялла вĕçтерчĕ. Аязпа Биби япаласем патĕнче тăнă май, грузовик куçран çухалнине, çак тавралăхра вăл пĕртен – пĕр чĕрĕ те куçăмлă пăнчă пулса çухаличченех сăнарĕç. Ăнсăртран та пулин хăть çамрăк тискер чĕрчун чупса иртинччĕ е кайăк вĕçинччĕ. Хусканусăр шăплăх. Чĕмсĕрлĕх.

— Çапла вара, юлташсем, мĕнрен пуçлăпăр, э? — сăмахларĕ Аяз, пуху уçакан çын евĕр, çеçенхирĕн вĕçсĕр – хĕрсĕр анлăшне тинкерсе.— Казахсем çакăн пек лару – тăрура мĕн тăваççĕ – ха? Малтанах юрта лартаççĕ.

Юрта лартаççĕ тесе калама кăна çăмăл. Эсĕ ăна вырнаçтаратăн — вăл тӳнет. Хăть çурăлса кай — вăл ӳкет. Иккĕшĕ те тăрăшсах аппаланчĕç – аппаланчĕç те юлашкинчен ывăнса çитрĕç. Чей вĕретес терĕç. Анчах ку ĕмĕт те кĕçех путланчĕ, сăмаварне чĕртме нимĕн те тупаймарĕç. Пĕррелĕхе юрĕ – ха тесе, çăлран шыв ăсса, çăкăрпа çыртса çирĕç. Часах хĕвел те анчĕ. Каç та пулчĕ. Тӳпере уйăх та, çăлтăр та çук — талккăшĕпех сĕм – тĕттĕм. Çитменнине, ту енчен сивĕ çил вĕре пуçларĕ. Çакă çеç – и? Çук çав. Çумăр пĕрĕхме тытăнчĕ тата. Кăштах çукаласан иртекенччĕ. Ку вара чарăнма та шутламасть. Вăйланнăçемĕн вăйланса пычĕ. Пĕрĕхсе мар, шапăртаттарса çума пикенчĕ. Вăраха тăсăлакан çумăр. Сивĕ. Йĕпе.

Ним тума та çук, юрта хатĕрĕсене пĕр çĕре пуçтарчĕç, вĕсем çине ытти тупра – пухчана пăрахрĕç, çиелтен кĕççе витрĕç, хăйсем те ун айне хутланса кĕрсе выртрĕç. Çывăрнă пек пулчĕç.

— Улпут пекех вырнаçрăмăр, — терĕ Аяз.

— Патшаран та кая мар,— хирĕç тавăрчĕ Биби. Аязăн шăннипе шăлĕсем шак – шак тăваççĕ.

— Пирĕн тĕллев — ирхинеччен тытăнса тăрасси,— терĕ вăл.

— Аха, унтан каçчен,— хушса хучĕ арăмĕ.

— Ну, каçчен... Чăн малтан — ирччен.

Мăшкăлланă пекех, çутăлассин палли те курăнмасть. Çумăрĕ çӳпçерен янă евĕр çăвать. Çилĕ лăпланинччĕ хуть. Йĕкĕлтенĕ пек вĕрет те вĕрет. Каç – тăк каç пулчĕ вара! Тул çутăлнине те, çумăр чарăннине те сисмерĕç. Ире хирĕç, ывăнса çитнĕскерсем, тутлă ыйха путрĕç. Çамрăк мăшăр вăраннă чух тӳперен хĕвел пĕçертетчĕ ĕнтĕ, нӳрлĕ кĕççерен пăс çĕкленетчĕ.

— Эй! Кам та пулин пур – и?

Вĕсем кĕççе айĕнчен сиксе тухрĕç те тӳрех куçĕсене сăтăркалама тытăнчĕç. Умра юланутçă тăра парать. Кам пулчĕ – ха ку? Вĕсен колхозĕнче сухалсăр кĕтуçĕ пурччĕ, Акжанка тетчĕç. Умра шăпах çав çын иккен.

— Аяз, эсĕ – и ку? — ыйтрĕ вăл.

— Ну, эпĕ. Вара мĕн?

— Эсĕ авланнă теççĕ. Çакă – и – ха санăн арăму?

— Ну, арăм. Вара мĕн?

— Кĕтӳ кĕтме эсир килетĕр терĕç. Çитрĕр эппин?

— Ну, çитрĕмĕр. Малалла мĕн?

— Юрта лартмалла, акă мĕн.

— Çапла, вырнаçтармалла. Анчах вăл лармасть.

Акжанка, лаша ҫинчен анса, вӗсем ҫӗр каҫнӑ вырӑна пӑхрӗ.

— О, аллах! Юрта вырнаҫтарма пӗлмен казаха ӑҫта курнӑ эсир? Ӗҫе тытӑнар! Эсӗ мӗнле йӗкӗт иккенне курӑпӑр.

Аяз, тутине пӑркаласа, ун ҫине пӑхрӗ, вӑл ҫилленнипе тулхӑрса кайма та хатӗрччӗ, анчах ҫийӗнчех шухӑшне улӑштарчӗ, юрта каштисене ярса тытрӗ. Акжанка, пысӑк чул ҫумне ларса, ҫурӑмӗпе ун ҫине тайӑнчӗ.

— Вучахӗ ҫакӑнта пулмалла,— хӑйӗнпе хӑй калаҫнӑн мӑкӑртатрӗ вӑл.— Ҫилтен те хӑтлӗх, савӑт-сапана та лартма пулать.

Биби те пычӗ, ӗнерхи пекех юрта каштисемпе тӑрмашма тытӑнчӗҫ. Каллех ӗҫ ӑнмарӗ.

— Ай, намӑс, — ассӑн сывларӗ Акжанка.— Казах ятне яратӑр. Ҫук, халлӗхе эсӗ, Аяз, казах мар-ха. Ҫапах та пулатӑн. Итле мана, тимлӗн итле. Тӗнчере пур ҫӗрте те тенӗ пекех ҫурт-йӗре купалама аялтан пуҫлаҫҫӗ. Ҫакна мӗн теҫҫӗ-ха. Никӗс. Ҫапла-и? Ну, вӑт, ялан ҫӗр ҫинчен, никӗсрен пуҫӑнаҫҫӗ, унтан стенисене хӑпартаҫҫӗ, каярахпа тӑррине витеҫҫӗ. Казахсем вара — асту ҫакна — ҫӳлтен, ҫивиттинчен пуҫлаҫҫӗ. Илтетӗн-и? Чи малтан юртӑн тӑррине вырнаҫтарса лартаҫҫӗ. Ӑнлантӑн-и?

— Ҫук-ха.

Акжанка кӳренчӗ.

— Ӑнланмарӑн. Ӑслӑ профессорсем сире мӗне вӗрентеҫҫӗ-ши? Казахсем — асра тыт — малтан маччине ҫӗклеҫҫӗ, ун ҫумне тӑватӑ тӗрев ҫирӗплетсе лартаҫҫӗ. Вара тин хӑпартаҫҫӗ. Ну, пуҫларӑмӑр!

Акжанка, вӗрентнӗ май, хӑй те пулӑшма пикенчӗ.

Вӗсем, юртӑна вырнаҫтарса, пӳрт «ҫума» сӑмавар умне ларнӑччӗ кӑна, ҫӳлтен — ту енчен сурӑх кӗтӗвӗ килсе ҫитрӗ. Акжанка итлесе пӑхрӗ:

— Турсын сан сурӑхусене хӑваласа килчӗ,— терӗ вӑл Аяза.

Лешӗ, ним пулман пекех, пиаларан чей ӗҫрӗ. Турсына Аяз лайӑх пӗлет. Вӑл унран кӑшт ҫеҫ аслӑрах. Пысӑк ҫынах мар — чӗнмесӗрех кӗрӗ-ха.

— Кахал,— мӑкӑртатрӗ Акжанка Турсын пирки, лешӗ сурӑхсем патӗнчен юртӑна кӗменччӗ-ха. — Кахал, ҫавӑ ҫеҫ. Хӗсӗр сурӑхсене пӑхасшӑн мар. Усси ҫук тет. Паллах, вӗсемшӗн Герой ятне памаҫҫӗ. Анчах ӗҫӗ ҫӑмӑл. Каларӑм ӑна, ӑнлантартӑм. Патне те ан пыр — вӑл ҫынна итлет-и? Мана ӑратлӑ сурӑх

кĕтĕвне паччăр тет. Хăйĕннех перет. Пралипе хирĕçсе кайрĕ. Мĕнех вара? Ĕç тухрĕ – и? Кĕтсех тăр. Прали вăл, таванăм, сăрт пекех. Ăна хирĕç тăрсан — çамкасăр юлатăн. Турсынĕ те тата — урăх колхоза каять.

— Халь кунтах – ха,— терĕ Турсын юртăна кĕнĕ май. — Çĕнĕ çĕре куçса килнĕ ятпа саламлатăп сире. Йышăн сурăхусене. Шăпах çичçĕр пуç. Ытлашши те мар, сахал та мар.

Сурăхсене шутласа акт çырсан, Аяз вĕсене йышăнсан, Акжанка каллех вĕрентме пикенчĕ:

— Сурăхсем çĕрле çеçенхирте саланса кайма пултараççĕ. Юртăпа юнашар карта тыт. Сайрарах пулин те, шăтăрнак ларт. Авă, куратăн – и, — тĕллесе кăтартрĕ вăл тип çырмари хăвалăх енне, — кас, ан ӳркен, шăпах шăтăрнак валли.

— Юрать, — сăмах пачĕ ăна Аяз. Çакăнпа унăн пĕрремĕш ĕç кунĕ вĕçленчĕ.

— Паянлăха, эппин, çитет, — хăнăхнă йăлапа хăй тĕллĕн мăкăртатрĕ Акжанка. — Киле кайма вăхăт. Кӳршӳпе тăванун ĕçне чиперех турăн пек.

— Тăванун? — тĕлĕнчĕ Аяз.

Акжанка çакна хирĕç нимĕн те шарламарĕ. Пушă аврипе тип çырма енне тĕллерĕ те:

— Ав çав хысакра, сылтăмра — ман юрта. Унта, — тепĕр еннелле кăтартрĕ вăл, — сулахайра — Ораз юрти. Сайкы йăхĕн юртисем виççĕшĕ те пĕр тĕлерех пултăр тесе, Прали хăй тăрăшрĕ.

Вара Акжанка, юланут çине ларса, çула тухрĕ. Унăн лаши, ырă та юрхаскер, пĕр тикĕссĕн, çăмăллăн утать, аяккалла кайса пынăçем юланут анса ларакан хĕвел пайăркисен ăшне кĕрсе кайрĕ. Унăн кĕлетки, акă, тĕтреллĕн курăнма тытăнчĕ. Кайсан – кайсан, вăл та çухалчĕ.

Аяз пуçласа Ораз ятне илтрĕ.

## II

Халĕ Аяз çав Оразпа — хăйĕн тепĕр хурăнташĕпе мĕнле паллашни çинчен.

Ĕнер каçхине хĕвел ытахальтен пĕçертмерĕ, вăл йĕпе—сапана систерчĕ: çур çĕр иртсен вăраха тăсăлакан тата йăлăхтаракан çумăр пуçланчĕ, Аяз мĕн ирчченех, кăкарса хунă пек, кĕтӳ тавра уткаларĕ. Ир енне, тул час çутăлманнишĕн тата çумăр чарăнманнишĕн тарăхса, тусем хушшинчи шăплăха хускатса, вăл икĕ хутчен пăшалĕпе кĕрĕслеттерчĕ.

Пенĕ сасă сигнал пекех пулчĕ, ак çумăр та чарăнчĕ, пĕлĕтсем сирĕлсе кайрĕç те, тухăçра тӳпе кĕренленчĕ. Аяз, юртăна кĕрсе, арăмне вăратрĕ.

— Ура çинчех çывăрса каятăп. Сурăхсене пăхкала—ха. Кĕççе çине салтăнмасăрах кĕрсе выртрĕ. Вăл тĕлĕрсе кăна кайнăччĕ, анчах та ăна, кăтăш пулнăскере, канма памарĕç. Аяз хăйне хытă тĕрткеленипе вăранчĕ. Çывăрма кансĕрлекенни, çиччĕсенчи ача, ăна кăмăлсăррăн чышкаларĕ:

— Ну, тăр—ха, тăр тетĕп!

— Эс кам вара, приказ параканскер. — тарăхса кайрĕ Аяз.

— Токмуратов, вăт кам! Бекмурат Оразович! — каларĕ лешĕ.

— Ăçтан сиксе тухрăн эс... йăрăскер?

— Ăçтан пултăр, атте патĕнчен!

— Кам вара сан аçу?

— Кам пултăр, Ораз! Тавçăрса илме йывăр—им?

— Ай—ай, тараватлăхупа эсĕ... аристократ пекех.

— Юрать, юрать. Çитет пуш сăмах çаптарса. Атте сана халех хамăр пата ларса пыма хушрĕ.

— Ан тĕлĕнтер! Ларса пыма. Мĕн çинче?

— Мĕн çинче, кăвак ашак çинче. Ăнлантăн—и?

Ахăртнех, ку шуйттан çуринчен хăпма çук. Аяз тăчĕ те çăл патне тухса утрĕ. Унта çăвăнчĕ. Кĕтӳ карти пуш—пушах. Сурăхсем те, Биби те çывăхра курăнмарĕç. Кунĕ паян, пур паллăсем тăрăх та, шăрăх пулать. Аяз, юртăна кĕрсе, джинсы шăлавар, урине сандали тăхăнчĕ, тĕкĕр çине пăхса çӳçне турарĕ. Унăн пĕр вăранмасăр, вилнĕ пек, çывăрас килетчĕ, алли—урине те туйманскер, тăпăртатса—сулкаласа илчĕ. Пурте хăй вырăнĕнчех. Янахне тĕрткелесе пăхрĕ — вăл та ниçта та тарман. Шăл йĕрсе илчĕ. О' кей! Куçне хĕсрĕ. Мăч—мăч тутарса, вĕсем хĕрелнине асăрхарĕ. Аптрамалла мар, иртет. Икĕ хутчен

кукленсе илчӗ. Чӗркуҫҫи чӗтремест. Пӗтӗмпех йӗркеллӗ.

Бекмурат Оразовича пӳрнисемпе пуҫ тӳпинчен шаклаттарчӗ те:

— Кайрӑмӑр,— терӗ.

Лешӗ тӗлӗрсе тӑракан ашакӗ ҫине утланчӗ.

— Лар.

— *Ӑҫта?* — ӑнланмарӗ Аяз.

— Ӑҫта пултӑр? Ашак ҫине. Ман хыҫа лар.

— Енчен те...— иккӗленчӗ Аяз.— Санӑн урхамаху иксӗмӗре те чӑтаймасан...

— Тулӑксӑрскер – ҫке эсӗ!

— Ну – ну... майӗперех!— чарчӗ ӑна Аяз.

Анчах та ача хӑйӗннех печӗ:

— *Ҫакна ухмах та пӗлет: ашак ҫине мӗн чухлӗ нумайрах* тиетӗн, вӑл ҫавӑн чухлӗ хӑвӑртрах каять. Ну! Кама калаҫҫӗ, лар!..

Аяз ашак ҫине сиксе ларчӗ, урисем ҫӗре ан перӗнччӗр тесе, вӗсене чармакларӗ. Сӗнксе тӑракан ашак хӑвӑрт тапранса кайрӗ. Сиккипе пынӑ май, хӑлхинчен ҫил ҫеҫ шӑхӑрса пычӗ.

Ту урлӑ каҫрӗҫ те, вӗсен умне юмахри пек сип – симӗс айлӑм *тухса тӑчӗ. Унӑн варринче — юрта. Ҫӗнӗскер, ҫерҫи ҫӑмарти* пек чӑпар. Юртӑпа юнашар — шурӑ «Волга». Инҫех те мар — лаша. Вӑл та шурӑ. Чӗрчун тавраш курӑнмасть, йытӑсем кӑна. Хӑйсем лаша пекех. Вӗсем тӑрар – и, тӑрар мар – и тенӗн лӳпперрӗн ҫӗкленчӗҫ те, хуҫа ачине юрас тесе, ӳркевлӗн вӗрсе илчӗҫ.

— Ҫакӑ пулать те ёнтӗ пирӗн юрта, — терӗ Бекмурат *Оразович. — Ну – ка, пӗрис! Шуйттан хӑраххисем!..*— йыттисене вырӑнне лартрӗ вӑл, кӑкарса хучӗ. Ку ача – тӑк ача!

Юрти вара ытарма ҫук хитре! Хӑть кино валли ӳкер! Тулашӗнчен ҫеҫ мар, шалта та ҫавах — кӗрсен тухас килмест. Юрта мар — хӗр тупри! Музей экспоначӗ. Тӗрлӗ йышши кавирсем, виткӗҫсем — пурте вырӑнлӑ. Йӗпкӗн хӗрлӗ те ҫутӑ сарӑ, кӑн – кӑвак тата хӗрлӗ кӑвакрах тӗссем, хӗрлӗ сарӑ тата хаваслӑ симӗс тӗрӗсемпе хутшӑнса, куҫа шартаҫҫӗ.

— Ассалау! — куҫне ирӗксӗртереххӗн хӗссе, сывлӑх сунчӗ Аяз.

Аптӑраса тӑчӗ, хуҫисен сӑн – пичӗ те хитре ӳкерчӗкри пекех. Кам вӗсене кӗтӳҫӗсем тейӗ? Музейре ӗҫлекенсем. Артистсем!.. Пӑс кӑларса ларакан ҫутӑ сӑмавар та экспонат пек туйӑнчӗ.

Вăл тата тимлĕрех сăнарĕ. Çурт хуçи пĕр хĕрĕх çулсенче пулĕ. Тулли кĕлеткеллĕ. Кăтра çÿçне хыçалалла туранă. Кăвакрах çĕнĕ костюм тăхăннă, майне кĕмĕл тĕслĕ галстук çыхнă.

Районти пĕр – пĕр пуçлăх тейĕн. Чи пысăккиех мар та, çапах та вăтам сыпăкрисен шутне кĕртме пулать.

Унăн мăшăрĕ яштак пÿ – силлĕ чиперкке. Симĕс бархат кĕпе тăхăннă, кĕлетки хрусталь черккене аса илтерет. Хăй те вăл шăратса тунă тетте пек — тÿрех хакĕ çине пăхас килет.

Аяз вĕсене çын сăмаххи тăрăх çеç пĕлет, пĕррехинче уявра курнăччĕ те пулас.

— Батима! Санăн ывăлсемÿ килнĕ,— терĕ хуçа. Унтан мăнаçлăн хушса хучĕ: — Хамăран Сайкы йăхĕн тепĕр çынни тупăнчĕ.

— Эпир питĕ хавас, питĕ хавас, — кĕмĕл укçа ÿксе чăнкăртатнă сас евĕр чĕвĕлтетрĕ Батима. — Шăпа пÿрни... Чăнах та, пÿрни: ют çынпа мар, тăванпа кÿршĕллĕ пултăмăр. Пирĕн çывăхрах паллашмалла тесе шутлатăп эпĕ.

Сĕтел хушшинче калаçу пуçлансан та, Аяз хăйне пĕр – пĕр спектакльте вылякан çын пек туйрĕ.

— Эпĕ çĕрле пăшал пенине илтрĕм, — хĕрхенсе хута кĕнĕн кулкаласа сăмахларĕ Ораз. — Тăванăм темшĕн çывăрмасть тесе шутлатăп. Тен, кашкăрсем тапăннă? Халь кашкăрсем çук. Вăрă – хурах? Вĕсене кăнтăрла та хунарпа шыраса тупаймăн. Тен, çур çĕр варринче шуйттан килнĕ? — Вăл хăйĕн шÿчĕпе киленсе кулчĕ. — Аяз, итле ман сĕнĕве. Кĕтĕве çĕрле хураллама кирлĕ мар. Ан тив, картара канччăр. Эсĕ те лăпкăн çывăр. Çакăн пек канăçсăрлансан, нумаях тÿсеймĕн. Хăвăн сывлăхна упрама тăрăш.

Пăх та кур: пĕр енчен Батиман кĕмĕл шăнкăрав пек сасси, тепĕр енчен — Оразăн ылтăн пек хаклă сăмахĕсем...

Каçа хирĕç сурăх пусса тирпейлерĕç, Бекмурат Оразович, хăйĕн кăвак ашакĕ çине ларса, çак тăрăхри Сайкы йăхĕн çыннисене чĕнсе çаврăнчĕ. Акжанкăпа карчăкĕ, Аязпа Биби тата мухтавлă йăхăн тепĕр несĕлĕ Балта килсе çитрĕç. Вăл питех калаçăва хутшăнмарĕ, çавăнпа та эпир те ун çинчен сăмахламăпăр.

Çур çĕр çывхарас умĕн вучахри хуранта пиçнĕ какая сĕтел çине лартрĕç, Сайкы йăхĕн ÿсĕмĕсемшĕн тесе, черккесем çĕклерĕç. Кĕмĕл шăнкăрав сассиллĕ Батима, çавăн пекех уçă саслă Ораз çутăлас енне кайичченех юрăсем юрларĕç: вĕсем

тăвансен пысăк çемйинчи тĕлĕнмелле туслăх, кирлĕ чухне пĕр — пĕрне пулăшма кирли, Сайкы çыннисем тӳпери çăлтăрсене хапсăнманни, анчах та çĕр çинчи телее нихăçан та алран вĕçертменни çинчен пулчĕç.

— Мĕнле сăпайлă çынсем, — терĕ Биби, çутăлас умĕн килне таврăннă май.— Унăн районта пуçлăхра ларасчĕ, вăл... вăл пур — кунта тертленет. Хай ахаль кĕтуçĕ çеç иккенне ĕненес те килмест.

Капланса килнĕ шухăшсене йăлтах каласа пĕтерме ăна юрта патне çитни чăрмантарчĕ. Пăхрĕç те — кĕтӳ карти пуш — пушă. Унта сурăхсем çук. Пĕри çеç мĕскĕннĕн макăрать.

Сылтăмалла пăхрĕç — сурăхсем çук, сулахаялла — пĕр чун та курăнмасть. Акжанка патне чупрĕç.

— Эсир çывăратăр — и?

— Çук. Мĕн пулчĕ?

— Инкек. Сурăхсем çухалнă.

— Мĕнле çухалнă?

— Хамăр та пĕлместпĕр. Картара пĕр сурăх çеç. Ыттисене пурне те çĕр çăтнă тейĕн.

— Пĕри юлнă апла? — Акжанка туххăмрах вĕсен юрти патне çитрĕ.— Ку сурăх пурри аван — ха. Вăл ыттисене тупма пулăшĕ.

«Ку старик, тем, аташмасть — ши?» — тĕлĕнчĕ Аяз.

— Юрать — ха тул çутăлса килет. Шырама та çăмăлрах,— терĕ Биби.

— Çук, — хирĕçлерĕ Акжанка. — Тĕттĕмре сурăхсене хăвăртрах тупаттăмăр.

«Ăсран тайăлман — ши вăл?» — каллех шухăшларĕ Аяз. Кĕту картине кĕчĕç. Старик пĕртен — пĕр сурăх умĕнче чарăнчĕ те çурма сасăпа тем мăкăртатрĕ, сухалсăр янахне хыпашларĕ.

— Тĕлĕнмелле... Мĕншĕн юлнă — ха вăл? Авă, мĕн... сурăх пралукпа яваланнă!

Унтан Акжанка хăйне ăнланмалла мар тыткалама пикенчĕ. Малтанах вăл çĕтĕк татки ыйтса илчĕ. Кайран...

— Мазут е солярка пур — и? — терĕ.

Çĕтĕке мазут ăшне чиксе кăларчĕ те сурăх çурăмĕ çине çыхса хучĕ. Унтан... шăрпăкпа тивертрĕ. Çулăм ялкăшрĕ. Сурăх ирхи сĕмлĕхе урăм — сурăм тапса сикрĕ. Аязпа Биби, çак хăрушă ӳкерчĕке курсан, куçĕсене хупрĕç. Старик кулать:

— Вĕçтер! Вĕçтер!.. Ыттисене пĕр çĕре пух. — Лăпкăн çапла ăнлантарчĕ: — Унăн çăмĕ çăра, çунтарсан та — çунмасть. Кăштах

хăратать ĕнтĕ, вăл иртет, шикленнипех вилмест. Халь ак... Пăхăр — ха, пăхăр, ытти сурăхсем ун патне пуçтарăнма тытăнчĕç. Е эпĕ ухмаха тухнă, е... Пăхăр — ха эсир, пăхăр!..

Тĕсерĕç те, çакă курăнчĕ. Ялкăшса çунакан факел, тусем хушшинче, чул хысакĕсенче тĕлĕрекен усал вăйсене ыйхăран вăратнăн, сĕмлĕхе çутатса малалла куçрĕ. Кĕрленĕ сасăсем илтĕнчĕç, çĕр чĕтреннĕ пек пулчĕ. Çутă тавра темĕнле тăрмаланчăк мĕлкесем пухăнма пуçларĕç, кĕске самантрах пĕр пысăк çăмхана пĕрлешрĕç: тĕрлĕ сасăсемлĕ ӳссе пыракан çав çăмха кĕтӳ карти еннелле васкарĕ, ушкăн варринче, малтанхи пекех, сĕмлĕхре, çутă ялкăшрĕ.

Çакă тĕлĕнтермĕш пĕр пилĕк минут хушшинче пулса иртрĕ. Акжанка кĕпĕрленсе тăракан сурăх кĕтĕвĕ витĕр малалла ăнтăлчĕ. Унта, варринче, циркри арена çинчи пек пурне те тĕлĕнтерсе, шиклентерсе пĕр сурăх ялкăшса çуннă евĕр курăнчĕ. Ăна вăл аран — аран хăваласа тытса пусса ӳкерчĕ те, çунакан çĕтĕке çĕçĕпе касса, урипе таптарĕ. Çулăм сӳнчĕ. Çутăлса пыракан тавралăхра, ирхи тӳпере, çăлтăрсем илĕртсе асамлăн йăлкăшрĕç.

— Ырă каç пултăр, — терĕ те Акжанка сывпуллашса ирхи ĕнтрĕкелле чăмрĕ.

— Ай, ытла та тĕлĕнмелле — çке! — хыттăн каларĕ Биби сурăхсем çухалса тупăнни тата çĕнĕ тăванĕн мыскарисем питех те кăсăклантарни пирки.

— Çапла, — килĕшрĕ унпа Аяз. Анчах та вĕсем çĕнĕ тĕлĕнтермĕшсемпе кĕçех тĕл пуласси пирки шухăшлама пултараймарĕç те.

Кăсăк япаласем вара тепĕр кунне пуçланчĕç. Ирхине Аязпа Биби выльăхсен йышне шутларĕç: каçхи тĕркĕшӳре хăшĕ те пулин аташса юлман — и? Кĕтӳ картин алăкĕ патне икĕ енне тăрса вĕсене пĕрерĕн — пĕрерĕн кăларчĕç. Юлашки сурăх хăйсен хушшинчен тухнă хыççăн Биби тĕлĕннĕ сасăпа:

— Çичçĕр тăваттă,— тесе пĕлтерчĕ.

— Манăн çичçĕр пиллĕк. Çĕнĕрен шутламалла!..

Вĕçленĕ ĕçе тепĕр хут пуçăнма тиврĕ. Каллех ытлашши пулчĕ.

— Çичçĕр пиллĕк, — аллисене саркаларĕ Биби.

— Çичçĕр пиллĕк,— тĕлĕнчĕ Аяз. — Нимĕн те ăнланмастăп. Пилĕк пуç каярах пулсан, килĕшме те тиветчĕ. Çук вĕт — ытлашши!

— Татах шутлатпăр — и?

— Çук, — шухăшлăн каларĕ Аяз.— Акă мĕн тăвăпăр: вĕсен паллисене тĕрĕслĕпĕр.

Сурăхсене тепĕр хут пĕрерĕн – пĕрерĕн картаран кăларнă май кашнине тимлĕн сăнарĕç. Кашнийĕн хăлхи çинче латин саспалли пек «V» паллă пур.

— Тăхта! — Аяз виçĕ йĕрпе паллă тунă сурăха тытса чарчĕ.

Юрха лашине утланнă Акжанка килсе çитрĕ:

— Сурăхсене çаран çине илсе тухмалла. Вĕсене мĕншĕн каллĕ – маллĕ картаран кăларса кĕртетĕр?

— Шутлатпăр – ха.

— Мĕн?

— Пилĕк сурăх ытлашши тухать.

— Нимех те мар. Ытти кĕтӳрен хутшăннă. Ун пекки пулкалать.

— Палли пирĕн мар.

Акжанка ют сурăхсем çине пăхса илчĕ:

— Виçĕ йĕр... Пирĕн колхозра кун пек паллă çук. Каратау енчи сурăхсене çакăн пек йĕрсемпе паллă тăватчĕç пулмалла. Çапах та пирĕн тăрăхри кĕтĕве епле лекнĕ – ши вĕсем? — Акжанка хăнăхнă йăлипе хăйĕн сухалсăр янахне хыпашларĕ. Вара аллипе сулчĕ: — Ан пăшăрханăр. Хуçи тупăнать.

Лекминччĕç вĕсен тĕлне çак ют сурăхсем! Çаплах кун иртрĕ. Каç пулчĕ. Тĕттĕмленчĕ. Çĕр варринче Аяз ыйхăран вăранчĕ.

— Çывăратăн – и? — ыйтрĕ вăл Бибинчен.

— Çывăратăп,— терĕ арăмĕ.

— Вĕсене хуçи шырать ĕнтĕ.

— Мĕн тумалли пирки шухăшлать пулĕ. Пилĕк сурăх çухалнă — шӳт мар!

Аяз кулянниле татах ассăн сывларĕ:

— Мана вĕсене эсĕ ху вăрланă тесе калассăнах туйăнать.

Ир – ирех вăл Бибие тутинчен чуптурĕ те:

— Сурăхсене хăвах пăхкала – ха, пурте о' кей пултăр,— терĕ.

Васкаса лаша çине утланчĕ, килсе ернĕ сурăхсен хуçине шырама тухса кайрĕ. Чи малтан Ораз патне çитрĕ. Тен, вăл виçĕ йĕрпе паллă тунă сурăхсен хуçине пĕлет? Оразпа Батима хăйсен хăтлă юртинчеччĕ. Вĕсен кĕтĕвне виçĕмкунхи пекех юлташĕ кĕтет. Батима евĕкленсе куркасене кăмăс тултарма пуçларĕ.

— Кама куратăп эпĕ,— чĕвĕлтетрĕ вăл. Хуçи те кăмăлĕпе тарават пулма тăрăшрĕ:

— Хаклă Аязăм, телейӳ хăвăнпах çӳрет. Шăп та лăп кăмăс пулса çитнĕ тĕле килсе çитрĕн. Ирт — ха, ирт. Çук, апла мар, мана хисеплесе малти кĕтесе лар.

Аварсăр куркапа панă кăмăса Аяз пĕр сывламасăр ĕçсе ячĕ. Иккĕмĕшне те тĕппипех пушатрĕ. Ораз унăн сăмахĕсене итлемен пек шăп ларчĕ.

— Çакна пире эсĕ мĕнщĕн йăлтах каласа паратăн? — Вăл тутине кăштах чалăштарса кулчĕ. Аяз хăй сисмесĕрех тăванĕн сăн — питне сăнарĕ, Ораз мĕн каласшăн пулнине тавçăрса илме тăрăшрĕ. — Аллах сана пысăк парне панă. Вăл хăйĕн пирĕштийĕсене çапла каланă: çак пилĕк сурăха Аяза çитерсе парăр. Э? Сурăхсемпе мĕн тумаллине вĕсем пĕлтермерĕç — им? Эпĕ, чăнах та, пирĕшти мар, çапах та хаваспах ăс пама пултаратăп. Вĕсенчен чи мăнтăррине пусса тирпейле те Акжанкăпа мана хăнана чĕн. Иккĕшне — çуллăраххине — Пралипе Калимхан бригадир килсессĕн пус, вĕсем часах кĕтӳри сурăхсен йышне тĕрĕслесе çӳреме пуçлаççĕ. Çакăн пирки те манса ан кай: калăпăр, облаçран хаçат çыннисем килеççĕ, вĕсем сана мухтама е хурлама пултараççĕ. Хăшĕ килĕшет? Çапла çав, ырласа çырни. Тепĕр сурăхне вĕсем валли хатĕрле. Тата миçе юлать? Иккĕ. Эсĕ мĕн тумалла — ха тесе пăшăрханатăн. Аяз, хаклăскерĕм, санăн начартарах пĕр сурăх та пулин пур — и? Çук. Иксĕре çиме кирлĕ — и? Кирлĕ. Эсĕ вăйпитти çын. Арăму та çамрăк. Аллах ан хуштăрах, хавшакланăн та, мăшăру ют каччăсене куç хывĕ. Ун пек ан пултар тесен, пырса ернĕ тепĕр сурăхне пусса тирпейле те тăраниччен çи. Çĕнĕ çитĕнӳсем тума вăй пух.

Ораз хавхаланса, тĕнчере мĕн пуррине манса кайса, сăн — питне йăлкăштарса, пĕтĕм кӳлепипе чĕтренсе, чун — чĕререн хавасланса кулчĕ — куçĕсенчен куççуль тухичченех ахăрчĕ. Батима та, асăрхананçи пулса, кулнă пек турĕ, çакă унăн хăрах куçĕнче палăрчĕ, ахăртнех, питне вăхăтсăр пĕркеленчĕк тухасран шикленчĕ пулас.

— Вĕрен, Аяз. Пирĕн Орек çапла тăвать, — терĕ вăл, упăшки çине пăхса, унпа мухтанса.

Аязăн, тен, кулмаллаччĕ, анчах хăть йĕр, курнăçланма пултараймарĕ. Е унăн: «Ăс панăшăн тавтапуç!» — темеллеччĕ. Çапла калама та чĕлхи çавăнмарĕ.

— Юрать, пичче. Тен, манăн айван пуçăмра, сирĕн ырă сĕнĕвĕре пула, çирĕп шухăш тĕвĕленĕ.

Вăл, кайма вăхăт çитнине туйса, хăвăрт ура çине тăчĕ. Ораз, кулма чарăнса, куçĕсене шăлкаларĕ, унтан Аяз урисене тинкерчĕ.

— Çĕтĕк, — терĕ вăл. — Иккĕшĕ те çĕтĕк. Сандалийусем çине пăхма хăрушă. Вĕсемпе епле çўрекелетĕн – ха тата?

Аяз, ăнланман пек, хăйĕн урисем çине пăхса, именчĕклĕн кулса илчĕ. Чăнах та, сандалийĕсем йăлтах çĕтĕлсе пĕтнĕ.

— Анра пуç, — терĕ вăл.— Васканипе атта тăхăнма та манса кайнă.

— Капла юрамасть,— пуçне сулкаларĕ Ораз.— Батима! Арчаран атă кăлар – ха. Çапла, çапла — тăхăнманнине. Нимех те мар. Кĕçех тепре туянăпăр. Эсĕ, Аяз, хĕрĕх иккĕмĕш тăхăнатăн – и? Питĕ те аван! Сана валли ятарласа илнĕ пекех. Сывлăха пултăр...

Аяз лаша çинче ларса пынă май ура пўрнисене хускаткаларĕ, вĕсем Батима панă çемçе пуртенккесене перĕнчĕç. Пĕр енчен, Оразăн улпутла хăтланкаларăшĕсем, çăмăлттайла калаçăвĕсем ăна пачах та килĕшмерĕç, тепĕр енчен, пиччĕшĕ хăйĕн вĕр – çĕнĕ аттине тăхăнтартса янăран, тинех урисене канлĕ пулнăран, Аязăн ун çинчен çакăн евĕр шухăшлама аван мар пек те пулчĕ.

Нумай – и, сахал – и вăхат иртрĕ — Аяз пĕр юрта патне çитсе чарăнчĕ. Вăл хупă, сурăхсем картара кĕпĕрленсе тăраççĕ, çывăхрах пĕр лаша пур.

— Эй! Хуçи пур – и кунта?

Хирĕç сасă пулмарĕ. Сурăхсен паллисене пăхрĕ. Шел пулин те, вăл шыраканнисем кунта çук. Аяз ассăн сывларĕ те малалла уттарчĕ. Çак вырăнтан самаях инçе кайсан, хыçалалла çаврăнса пăхрĕ. Юртăран такам тухрĕ пулас. Аяз бинокльне куç тĕлне тытса тинкерчĕ. Авă мĕн! Кĕтўçĕсем çамрăк иккен: упăшкипе арăмĕ. Иккĕшĕ те шывра ишмелли тумпа çеç. Йăл кулнă май, Аяз вăтаннипе хăйĕн питçăмартисем кăвар пек пĕçертнине туйрĕ. Çак самантра вăл Бибие аса илчĕ.

Пычĕ – пычĕ те Аяз часах симĕс çаранлăх тĕлне çитсе чарăнчĕ. Çывăхрах — виçĕ сурăх кĕтĕвĕ, айккинерех — тăлланă виçĕ лаша, вĕсенчен инçех те мар виçĕ кĕтўçĕ хĕрсе кайсах картла выляççĕ.

— Пире шăпах тăваттăмĕшĕ çитместчĕ! — хĕпĕртерĕ лараканнисенчен пĕри, çўллĕрехххи, хĕрлĕ çуçли. — Бубнăпа масть пулчĕ! — терĕ вăл кăшт çĕкленсе, Аяз валли юнашар ларма вырăн хатĕрлесе.

Кĕтуçĕсенчен иккĕшĕ, лутра пӳллĕскерсем, хураскерсем /*икĕ хĕрес валет пек*/, выляса ячĕç пулас, пуçĕсене çĕклемерĕç те. Апла пулин те, иккĕшĕ ун çине пăхмарĕç те, аллисене хăвăрт каялла илсе, малтанхи пекех сĕтеле витекен кивĕ çивитти пек лӳчĕркеннĕ картсене куçĕсемпе тинкерчĕç.

— Уç! — тилмĕрнĕн, сăмаха хăвăрт çатăртаттарса каларĕç пĕр харăсах иккĕшĕ те.

— Виççĕмĕртен пĕрне лекет!

— Пиккинчен илмест...

— Червинчен те...

Çавăнтах пĕр — пĕрне куçран пăхса илчĕç.

— Каять — и?

— Каять.

Анчах хĕрлĕ çӳçли, çĕнтернине пĕлтерсе, картсене тирпейсĕррĕн вĕсен умне çатлаттарса çапрĕ, юрать — ха лешсен çумĕнче пистолет тавраш пулмарĕ, чĕррĕн хăвармастчĕç пулĕ ăна. Куçĕсемпе çисе ярас пек витĕр шăтарасла пăхни те — пульăпа пĕрех. Курайманнипе çиллисене шăнараймасăр, тарăха — тарăха карчĕсене çĕнĕрен салатрĕç.

— Çулçӳревçĕ, санăн шăпу телейлĕ пултăр! — терĕ çӳллĕреххи, мăнкăмăллăн, тараватлăн курăнма тăрăшса, мухмăрлăрах кулăпа çиçсе. — Эсĕ пирĕн пата çитнĕ чух эпĕ вĕсенчен выляса илтĕм. Пĕрер пӳрнеске ĕçсе пăхар — ха.

Вăл кĕсйинчен лаптакрах кĕленче савăт туртса кăларчĕ, ун çине илемлĕн «Женис» тесе çырнă этикетка хучĕ çыпăçтарнă, бутылка ăшĕнче коньяк çуталса шăмпăртатать. Ăна, хаклăскере — патша эрехне — пĕр тумлам та айккине тăкмасăр стакана тултарчĕ.

— Кил, тытса пар, — сĕнчĕ вăл Аяза. — Сан хыççăн эпĕ ĕçетĕп. Кусем иккĕшĕ те... шыв сыпчăр.

— Эпĕ ĕçместĕп, — хирĕçлерĕ Аяз.

Вăтам пӳллисенчен пĕри, ăна ним вырăнне хуман пек, хăвăрттăн ун çине пăхса илчĕ, ку чĕчĕ ачи пирĕн пата епле килсе çакланнă? Çапах та:

— Тăваттăмĕш пулатăн — и? — тесе ыйтрĕ.

— Эпĕ выляма пĕлместĕп.

Иккĕмĕшĕ те, хĕрес валет пекрехи, Аяз çине пăхмасăрах мăкăртатрĕ:

— Ача садне çӳрекенсем вылямаççĕ...

Аяз чăпăркка аврине хыттăн чăмăртарĕ, лешĕ татах сăмах

хушнă пулсан, ăна аванах ăс кĕртсе хăваратчĕ. Анчах çӳллĕрехxи Аяза хулпуççийĕнчен ыталаса илчĕ те:

— Ну, ну... шӳтлет вăл. Унăн сăмахĕсене хăлхуна ан чик.

Кĕтмен çĕртен сиксе тухнă тавлашăва чаcрах вĕçлес шутпа, вăл Аязпа кăмăллăн калаçма, ăна çине-çинех ыйтусем пама пуçларĕ:

— Çамрăк каччă, эсир кам пулатăр?

— Кĕтуçĕ.

— Питĕ аван. Коллегăсем, эппин. Каçарăр та, хăш аулран пулатăр?

— Самыркскантан.

— Аван, аван. Кӳршĕсем-иç. Эсĕ пиртен мĕн ыйтса пĕлесшĕн?

Вăл, курнăçланса, çапах та сивĕ сăмахсемсĕр, ырă кăмăлпа калаçрĕ, çавăнпа та ăна çилленес шухăш Аязăн пуçĕнче çуралмарĕ те.

— Çапла, вăт... — Кĕскен епле ăнлантарса парас-ши тенĕн аптăраса тăчĕ вăл.— Сирĕнтен хăшĕ те пулин сурăх çухатман-и?

— Чим-ха...— Хĕрлĕ çӳçли хăйĕнпе вылякан юлташĕсем çине тĕлĕнсе пăхса илчĕ. — Эсĕ çухалнăскерсене хуçине тавăрса парасшăн-им?

— Çапла... Пилĕк сурăх пырса ерчĕ. Юттисем. Манăн кĕтĕве. Эпĕ вара...

Хури — Аяз чăпăрккипе чутах «хăналанманни» — карта салатма та пăрахрĕ.

— Пилĕк сурăх тетĕн-и?

— Çапла. Вĕсен хуçине шыратăп.

Хури хĕрлĕ çӳçли çине пăхрĕ. Унăн сăнĕнче каллех ача сачĕ пирки аса илтерес текен шухăш палăрчĕ.

— Итле-ха, мĕне пĕлтерет ку? — ыйтрĕ хайхи çӳллĕрехxинчен, *çакна Аяз вĕсемпе юнашар тăрса сăмахлани*не курман пек, — е вăл, — Аяз хĕрлĕ çӳçлин тахçанхи пĕлĕшĕ пулнă евĕр пуплерĕ. — Вăл — çавсен йышшинчен мар-и?

«Çавсен» тенин пĕлтерĕшне Аяз ăнланмарĕ, анчах кăштах тĕшмĕртрĕ.

— Çук, вăл урăххисен йышĕнчен, — терĕ хĕрлĕ çӳçли, Аяз çине тĕлĕнерех пăхса, е ку çулçӳревçĕ мăка ăслă, е чее, е вĕсенчен куласшăн.

Çак самантра хурараххи кăмăлсăррăн та çиллессĕн калаçма пуçларĕ:

— Вăт, пыр та калаç! Сирĕн унта, мĕн, Самырсканта ĕççĕр аптăраса çитнĕ-им? Эпир ăна хăлхасене тăратсах итлетпĕр. Çак лаша та... вăл та ĕненмĕ... ăслă-тăнлă этем аулсен тавраш̆ĕсенче... эй, аллах!.. темле сурăхсен хуçине шыранине. — Хурин сасси çирĕпленчĕ, унăн сăмахĕсем прокурор калаçнă пекех витĕмлĕн янăрарĕç: — Выльăхсем сан патна хăйсен тăвата урисемпе пынă пулсан — вĕсен хуçи эсĕ. Сана, мĕн, пичетлесе пана инструкци кирлĕ-им? Пĕр шухăшласан, йăлт тĕлĕнмелле: юлашки вăхăтра çынсем улшăнчĕç... — Хури тарăхса кайнипе аллинчи карчĕсене айккинелле ывăтрĕ: — Çук, эпĕ выляма пултараймастăп. Каçарăр та... хамăн умра çакăн пек... çынна куратăп пулсан...

Аяз паçăрхи пек чăпăркка аврине чăмăртамарĕ. «Çавсен», «урăххисен» йышĕнчен тесе каланисемпе вăл пачах килĕшмерĕ. Çапла пулин те, хăйне такам умĕнче пысăк айăпа кĕнĕ пек туйрĕ. Аванмарланса кайса, ларнă çĕртен йывăррăн çĕкленчĕ, лаша çине утланса, ăна хистесе малалла хăвалама пуçларĕ.

Вăрăм-и, кĕске-и, инçе-и, çывăх-и, каç пулнă çĕре вăл пĕр аул патне çитрĕ. Тусем çинче пуçланакан çăлкуçĕ, Аяз пурăнакан юрта çывăхĕнчен иртекенскер, шăпах çак тĕлте пĕчĕк юханшыв пулса, айлăмри кÿлле юхать. Юнашарах темиçе çурт тата икĕ вăрăм сарай вырнаçнă. Пĕр пысăк çуртăн çенĕкĕ тăрринче икĕ каччă хĕрлĕ пустав çине шурă саспаллисемпе «Искусство — халăха!» тесе çырнă лозунга çирĕплетеççĕ.

Аяз, иртнĕ тĕлпулура хăйĕнчен кулнине манса кайманскер, хальхинче сыхланулларах пулма тăрăшрĕ. Вăл каччăсене сывлăх сунчĕ, лозунга вырнаçтарса пĕтериччен кĕтсе тăчĕ.

— Кам валли ку? — ыйтрĕ Аяз вĕсенчен.

— Артистсем валли!

— Артистсем валли?

— Çапла. Киноран. Вĕсем виçмине килеççĕ. Эс ху ăçтан пулатăн?

— Самырскантан.

— Эпир те унтанах. «Шолпан» çинчен илтнĕ-и?

— Бригада-и вăл?

— Çапла. Эпир шăпах çавăнтан.

— Тĕлĕнмелле. Хамăр пĕр ялтан пулин те, сире пуçласа куратăп.

— Çук, пуçласа мар. Сире паллатпăр. Эпир çиччĕмĕш класра вĕреннĕ чух эсир вуннăмĕшĕнче вĕренеттĕрччĕ.

— Ав епле... Аяз хăюланчĕ.

— Сирĕн миçе кĕту?

— Пиллĕк.

— Сурăхсен палли мĕнле?

— Палли-и? — Пĕр каччи хулă татăкĕпе хăйăр çинче тĕрлĕрен йĕрсем ӳкерчĕ. Çук, виççĕ мар. — Сире мĕн тума кирлĕ вăл?

— Ахалех... Ну, чипер юлăр.

Лаши çине ларчĕ те малалла чуптарчĕ.

Аяз тата тепĕр икĕ каç асапланчĕ, икĕ кун хушши хăйĕнчен хăй култарчĕ. Çук, пурте тăрăхларĕç тени тĕрĕс мар-ха, çапах та чылайăшĕ тĕлĕнчĕ, çакă вара унăн чунне тата та ытларах ыраттарчĕ. Пĕр ăслă старик ăна çапла каларĕ:

— «Чыса çамрăкранах упра», — теççĕ. Эппин, упра. Çакна та ан ман: «Айванлăх — вăрланинчен те хăрушă».

Çакăн евĕр «ăс панисем» Аяза уртарсах ячĕç. Вăл чутах çапăçса каятчĕ. Паллах, старикпе мар — тепĕр çамрăк кĕтӳçĕпе. Лешĕ ăна çапларах каласа хучĕ:

— Эсĕ мĕн — мана ухмах вырăнне хуратăн-и?

— Çук-çке, эпĕ шӳтлеместĕп, пилĕк сурăх пырса ернĕ...

— Итле-ха — кай кунтан. Кай, кай, кай!..

— Çакна мĕнле ăнланмалла?

— Мĕнле илтрĕн, çавăн пек. Тасал куç умĕнчен! Вĕсем пĕр-пĕринпе тытăçса ӳкрĕç, иккĕшне çапăçса каясран уйăрас тесен те — таврара никам та çук. Кĕтӳçĕ, шахтер пек кĕрнеклĕскер, ура çинче çирĕп тăчĕ. Нихăшĕ те аяла пулма килĕшмерĕ. Тен, çавна пула-и, пĕр-пĕрне çĕнеймессине туйса, иккĕшĕ те часах кĕрешме пăрахрĕç. «Эпĕ ырришĕн савăн», — шухăшларĕ Аяз уйрăлса кайнă май. «Шăмму-шакку тĕрĕс-тĕкел чух вĕçтер», — хайĕнпе хăй сăмахларĕ юлаканни.

Çапла-а... Аяз ларса пынă май чунтан тарăхрĕ, унăн тахçан шкулта вĕреннĕ чухнехи евĕр пулса тухать, задачине вăл тĕрĕс шутланă пек, анчах та тупсăмĕ пач урăхла. Халĕ те ыйтăвĕсем ытлашши кăткăсах та мар ĕнтĕ. Пĕрремĕшĕ: такам сурăх çухатнă. Иккĕмĕш: ăна тупмалла. Вĕсене Аяз тĕл пулнă. Ку, ан тив, виççĕмĕш ыйтăвĕ пултăр. Аязăн вĕсемпе мĕн тумалла тет? Отвечĕ çакăн пек: хуçине тавăрса памалла. Икке иккĕ çине хутласан, тăваттă пулать тенĕ пекех ансат ĕнтĕ тупсăмĕ. Çапах

та мĕншĕн—ха пурте унран кулаççĕ, пӳрнисемпе тĕллесе кăтартаççĕ те вăл ăсран тайăлнă теççĕ. Мĕншĕн?..

Çилленнĕскер тата выçăхса çитнĕскер, вăл килне таврăнчĕ, Биби таçта тухса кайнă. Татах шутламалла: сурăхсем картара, алăка çăрапа питĕрнĕ. Арăмĕ ăçта? Ответне тупмалла. Ораз юртинче:

— Вăл пирĕн патăмăрта пулман. Акжанка патĕнче:

— Биби—и? Курман. Ăçта çĕтсе çӳрет—ха вăл?

Аяз, малтанхинчен те усалскер тата выçăпа аптранăскер, каллех «Шолпан» бригадине васкарĕ. Кӳлĕ хĕрринче инçетренех курăнать — халăх лăк—тулли. Лашасене кăкарса хунă, çывăхрах темĕн чухлĕ машина. Прожекторсем хĕвелрен те çутăрах хĕм сапаççĕ. Вĕсен ялтравĕнче — Ораз. Пĕр вырăнта ларса тăма пĕлмен каччăсем ăна кино валли ӳкереççĕ. Пĕри — васкаса калаçаканскер:

— Çапла вара, Ореке, эсир кăçал хăш чикке çитме шутлатăр?

Хăй микрофона Ораз çăварне чиксе хурас пек ăшталанать. Лешĕ, шухăша кайнă евĕр, пĕр вăхăт чĕнмерĕ. Унтан вăтаннă пек пулчĕ. Кăшт тăрсан, сăмахсене тăсарах калаçма пуçларĕ:

— Манăн кăçалхи чикĕ — пăранлакан çĕр сурăхран çĕр хĕрĕх путек илесси. Тĕллев патне çитнĕ, обязательствăсене пурнăçланă. Хальхи вăхăтра эпĕ пăранлакан сурăхсен пилĕкçĕр пуçне тĕрĕс—тĕкел сыхласа хăварассишĕн тăрăшатăп.

Çав вăхăтра тепри, çивĕчреххи, кăшкăрать:

— Чарăн!

Шавлакан камерăсем шăпланаççĕ, куçа шартарса яракан прожекторсем сӳнеççĕ.

— Çĕнĕрен пуçлатпăр! — тесе кăшкăрать чараканни. Каллех малтан каланисем илтĕнеççĕ. Ларса тăма пĕлменни палăртса хуна чикĕсем пирки ыйтать, микрофона Ораз çăварне чикесле ăшталанать, лешĕ, шухăша кайнăн, пĕр хушă шыв сыпнă пек тăрать, кайран, вăтаннă евĕр курăнса, пурпĕрех сăмахĕсене тăсарах хăйĕннех перет: «Çĕр хĕрĕх путек...»

Ораз Аяза курчĕ те йăл кулчĕ, çамкипе ĕнси çине тапса тухнă тарне шăлса илчĕ, унтан камера умĕнче тăнă пекех ассăн сывларĕ те:

— Мономах çĕлĕкĕ, ытла та йывăр иккен эсĕ, — терĕ.

Унтан, хăйĕн хӳттине илнĕ евĕр, ларса тăма пĕлмен каччăсене Аяз çине тĕллесе кăтартрĕ:

— Акă вăл чăн—чăн герой, сирĕн ăна ӳкермелле. Ку каччă

выльăх–чĕрлĕх пăхма тин çеç килчĕ–ха. Чĕре хуşнипе.

Кино ÿкерекенсем, блокнотсемпе кăранташĕсене хатĕр тытса, Аяз патне ыткăнчĕç.

— Сирĕн ятăр. Хушаматăр...

— Аяз Бабатаев.

— Хăçан шкул пĕтертĕр?

— Виçĕ çул каялла.

— Хăвăран пурнăçăра чыслă та хисеплĕ кĕтÿçĕ ĕçне халаллама шут тытрăр–и?

— Мĕ–ĕн?

— Хăвăрăн пурнăçăра чыслă та хисеплĕ...

— Нимĕнле шут та тытман эпĕ. Урăх ĕç пулмарĕ — çавă çеç.

Çивĕч каччă çилленсе кайрĕ:

— Хăвăрăн шÿтĕрсене ырана валли хăварăр.. Ку вăл сурăх кĕтĕвĕ мар — сирĕн çине миллионшар телекуравçă пăхать тата итлет. Ыйтусем параççĕ пулсан — пĕр хуçкаланмасăр хуравлăр.

Аяз та парăмра юласшăн пулмарĕ, кăмăлсăр сасăпа:

— Эпĕ пурнăçра мĕнле — çавна калатăп.

— Сирĕн миçе сурăх?

— Çичçĕр.

— Хăвăрăн çитĕнĕвĕрсем çинчен пĕр–ик сăмах калăр–ха.

Аяз кулса ячĕ:

— Пĕр каçрах çичçĕр сурăхран çичçĕр пиллĕк пулчĕ тăчĕ.

Çивĕч каччă намăс курнăн блокнотне шаплаттарса хупрĕ те айккинелле пăрăнчĕ. Вăл каллех Ораз тавра чупкалама пуçларĕ, хальхинче ăна, «Волга» машина çине ларнăскере, ÿкерме тытăнчĕ.

Çуртсем хушшинчен çывăхрах аккордеон сасси янăрарĕ, Аяз, лашине чĕлпĕрĕнчен тытса, кĕвĕ–çемĕ илтĕннĕ еннелле васкарĕ, пĕр пÿрт патĕнчен айккинелле кăштах пăрăнчĕ çеç, тĕлĕннипе хытса тăчĕ, унта концерт пырать иккен. Çур ункă пек вырнаçтарнă саксем çине пĕр алла яхăн çын ларса тухнă. Варринчи вырăна çÿп–çапран шăлса тасатнă, вăл сцена пек курăнать. Унта пĕр илемлĕ хĕр, наци костюмĕ тăхăннăскер, курма килнисене «Эреш» ятлă ташăпа савăнтарать. Аяз концерт пынинчен мар, ташлаканни Биби пулнинчен хытах тĕлĕнчĕ.

Малти ретре, кĕтесре, сухаллă икĕ каччă лараççĕ, унччен, клубра чух, вĕсенчен пĕрне Биби чечек парнеленĕччĕ. Çавăнпа та çак концерта артистсем килнĕ ятпа ирттернине тÿрех ăнланса илме пулать. Аяза пĕр япала çеç канăç памасть, паянхи ташă–

юрă уявне Биби хăш вăхăтра килсе çитнĕ тата епле майпа унта хутшăнма пултарнă?.. Вăл, шывран кăларнă пулă евĕр, çăварне карса пăрахса, пĕр вырăнта юпа пек хытса тăчĕ. Куракансем Бибие саламласа тăвăллăн алă çупрĕç, çавна пула Аяз çухалсах кайрĕ. Анчах та тĕлĕнтермĕшсем кунпах вĕçленмерĕç – ха. Хайхи çав кинори артистсем иккĕшĕ те Биби патне ыткăнчĕç. Пĕри унăн аллине чуптума пуçларĕ... тепри... эсир пăхăр – ха, пăхăр! — ăна ыталаса илчĕ те çупăрлама пикенчĕ. Лешĕ, сар çу пек ирĕлнĕскер, вăтаннă пек пулса, сцена патĕнчен айккинелле пăрăнчĕ, куçĕсенчен пăхсах паллă — хăй питĕ савăннă, сăн – пичĕ йăл – йăл çиçет.

Тепĕр номер пуласси çинчен пĕлтерчĕç, унтан пĕр хыткан каччă, сцена çине тухса, пантомима кăтартма пуçларĕ, çав вăхăтра Аяз васкамасăр арăмĕ патне çывхарчĕ. Лешĕ те часах ăна асăрхарĕ, вара, савăнса кайнăскер, ун патне ыткăнчĕ. Аяз, хыпкăчпа хĕстернĕ пекех, хăйĕн пысăк аллипе Бибин пĕчĕк пӳрнисене ыраттармаллах чăмăртарĕ.

— Маттур! — Çакна çеç ăнланмалла мар: ку те мухтани, те йĕкĕлтени пулчĕ. — Атя – ха кунтан тухар!

Арăмĕ, хытă савăннăскер тата хăйне çав тери телейлĕ туяканскер, ун хыçĕнчен утрĕ, çынсенчен кăшт пăрăнсан çеç упăшки çиллес пулнине сисрĕ.

— Лаша çине утланса лар!

— Манăн... çак тумтире улăштарса... хамăнне тăхăнмалла.

— Кĕтсех тăччăр. Кайран паратăн. Н – но!..

Аяз лаша çине, Биби çумне, siксе ларчĕ, урхамахне саламатпа çунтарса илчĕ. Пĕтĕм çиллине вăл ун çине ячĕ, ăна пĕр шеллемесĕр хăваларĕ, арăмĕ, кӳреннĕскер, кĕç – вĕç йĕрсе ямарĕ:

— Тен, хуллентерех кайăпăр, э?

Лаши, ăна ăнланнă пек тата икĕ çын йывăрăшне тӳсеймен евĕр, хăвăртлăхне чакарчĕ те васкамасăр юртма пуçларĕ. Аязпа Биби, ют çынсем пек, пĕр – пĕрне сăмах хушмарĕç. Сас – чĕвĕ кăлармасăр хăйсем пурăнакан юрта патне çитрĕç.

Биби, пуçне чиксе, шăппăн вырăн сарчĕ. Аяза çеç аван, вăл, ним пулман пек, юртăран тухса, пăшалĕнчен кĕрĕслеттерчĕ. Хăйĕн ăшĕнче пăшăрханмалли – тарăхмалли ытлашшипех пулчĕ, паянлăха çитĕ — кун вĕçленчĕ. Халĕ çывăрма та вăхат терĕ ĕнтĕ. Чĕнмерĕç, çурăмĕсемпе хăяккăн выртрĕç, иккĕшĕ те ассăн сывласа илчĕç. Хашлатнă сасăсем пĕр – пĕрин хушшинчи

хирĕçĕве вĕçлемелли çинчен пĕлтерчĕç пулмалла. Эппин, калаçу пуçарма та вăхăт.

— Мĕн çинчен те пулин калаcа пар – ха, — ыйтрĕ Биби.

— Сана мĕн кăсăклантарать?

— Ну... хăвăн çинчен калаcа кăтарт.

— Ним интересли те çук.

— Ун пекех мар ĕнтĕ.

Аяз татах ассăн сывларĕ:

— Ни – мĕн те!

Вăл çурăмĕ çине çаврăнса выртрĕ те такамăн анкетине пăхса вуланă пек калаçма пуçларĕ:

— Çуралнă çул — пин те тăхăрçĕр аллă пиллĕк. Шкула кайнă çул — пин те тăхăрçĕр утмăл иккĕ... Пĕрремĕш хут — пĕрремĕш класа. Утмăл виççĕмĕшĕнче иккĕмĕшне куçнă, кайран — виççĕмĕшне, ун хыççăн — тăваттăмĕшне, тепĕр çултан... Çапах та тĕлĕнмелле, этемĕн кун – çулĕ ытла та кăткăс – çке. Кайран вăл пиллĕкмĕшне, улттăмĕшне, çиччĕмĕшне, саккăрмĕшне куçать... Юлашкинчен — тăххăрмĕшне, вуннăмĕшне! Алма – Атари институтта вĕренме кĕрес ĕмĕтпе виçĕ хутчен экзаменсем пама кайса килет. Кайран – и... О! Унăн биографийĕнчи чи паллă тапхăр — вăл хĕрпе паллашать. Автобус чарăнакан вырăнта.

Аяз çиллессĕн те типпĕн сăмахланă май калаçăвăн еккине çеç кĕнĕччĕ, сасартăк шăпланчĕ:

— Эсĕ мĕн — йĕретĕн – им? Пăх та кур! Манăн макăрмалла. Санăн пурте о' кей! Эсĕ сурăхсене пурне те картана хупнă. Çакăншăн ман сана çĕре çити пуç тайса тав тумалла. Артистсем патне... тарса кайни темех мар. Унта хĕрсе кайса ташлани... сухаллă артистсен ытамне ыткăнни... Мансах кайнă, упăшку хирĕçлет – çке! Вăл сана тарса кайма чăрмантарать! Ухмахскер! Епле хăять вăл! Ăнланатăп, ăнланатăп, артистсем патĕнчен лартса килнĕшĕн йĕретĕн – иç!

Биби ĕсĕклесе макăрма пуçларĕ. Аяз та чарăнма пĕлмерĕ:

— Унăн упăшки чăн – чăн йĕксĕк! Ăна, маттур та чипер пикене, вăйпах кĕтӳ кĕттерет. Тен, вăл артистка пулатчĕ, хăйĕн пек пултаруллă актера качча каятчĕ. Анчах та çак çилхăван унăн çутă ĕмĕчĕсене йăлтах пӳлсе хучĕ. Таланта тĕп турĕ. Анчах... Кая юлман – ха. Эсĕ ĕлкĕретĕн. Çав сухаллăскерсемпе... çыхланса кайма. Санăн умăнта хĕвеллĕ малашлăх. Васка! Упăшка – и? Çук, вăл чарса тăмĕ.

Биби сасăпах йĕме пуçларĕ.

— Çитет!.. Чарăн! — кăшкăрчĕ Аяз. — Мĕншĕн макăратăн? Э? Кала — мĕншĕн?

Арăмĕ самантрах чарăнма пултарайĕ — ши вара? Аяз юлашкинчен тарăхсах çитрĕ:

— Э — э! Йăлтах паллă, пĕр сăлтавсăрах макăрмастăн — ха эсĕ!

Биби, ниепле те хăйне хăй алла илейменскер, йĕнĕ чухнехи сасăпа мар, юрланă пек, аран — аран сывлăш çавăрса илчĕ те:

— Эсĕ... эсĕ... мана мăшкăллатăн. Мана ăнланмастăн. Эсĕ... эсĕ...

Чарăна — чарăна «эсĕ... эсĕ...» тесе каланисенче мĕн чухлĕ хуйхă — суйхăпа юрату, ӳпкелешӳпе ачашлăх палăрчĕ, тен, çавна пула — ши Аязăн та куçĕсем шывланчĕç, арăмне шелленипе унăн чĕри хĕссе ыратма пуçларĕ. Вăл, тин çеç каланă сăмахĕсене манса кайса, Бибие хĕрӳллĕн ыталарĕ, лешĕ, çакна аран — аран кĕтсе илнĕн, куççульпе йĕпеннĕ сăн — питне упăшкин кăкăрĕ çумне перĕнтерчĕ. Кайран юмахри пек ырă та канлĕ кас пуçланчĕ. Çав вăхăтра çĕр те хăйĕн тĕнĕлĕ тавра çаврăнма пăрахать тейĕн, минутсемпе сехетсем çеç шăплăхра пĕр чарăнмасăр малалла куçаççĕ пек...

## III

Кайран çĕнĕ кун пуçланчĕ, çывăхри ту хысакĕсем тĕрлĕ тĕслĕ чечексемпе çуталчĕç, тӳпери тăрисем пĕр вырăнта, нота тетрачĕ çинчи пек пĕри çӳлте, тепри кăшт аяларах, хăйсен кĕвĕллĕ юррисене шăрантарма пуçларĕ. Аяз та çурма сасăпа ĕнĕрлерĕ, унăн сăн – пичĕ вăрттăн кулăпа çуталчĕ, чунĕнче ачашлăх туйăмĕ çуралчĕ. Урхамахĕ те ăна ăнланнăн васкамасар кĕтӳ хыççăн утрĕ; пурнăç илемлĕ те савăк, кашни тĕл пулакан сăнар çывăх та хаклă. Ним шухăшламасăр çав хĕлхем сапакан чечексем çине пăхса киленме, кăвак тӳпери тăрисен юррине каçса кайса итлеме, ту хысакĕ çывăхĕнчи кĕтĕве куçсем ывăниччен сăнама пулать. Чим — ха. Çав кĕтӳ камăн — ши? Оразăн ĕнтĕ — тата камăн пултăр? Хăйне çăмăл та телейлĕ туйнăран, Аяз ачалăх кунĕсене аса илчĕ. Аслашшĕ патне хăнана килсен, вăл пĕр япала шутласа кăларнăччĕ — хальхи пекех инçетрен сурăхсен йышне шутламалли вăйă. Çывăха пымасăрах вĕсем мĕн чухлĕн иккенне пĕлме пулать — и?

Хăй сисмесĕрех Оразăн сурăхĕсене шутласа тухрĕ. Пин те

виççĕр çичĕ пуç пулчĕ. Иккĕмĕшĕнче — пин те виççĕр саккăр. Хăшĕ тĕрĕс — çиччĕ е саккăр? Вăл виççĕмĕш хут — хальхинче бинокльпе пăхса — шутларĕ. Пурĕ пин те виççĕр хĕрĕх иккĕ тухрĕ. Аяз çак цифрăсен пĕлтерĕшĕ пирки тарăн шухăша путрĕ те тĕлĕнсе кайрĕ. Аптранипе лаша çинчен анса, хулăпа хăйăр çинче чĕркелесе, ăсра шутланине çырса тĕрĕслерĕ. Хулпуççисене сиктерсе илчĕ:

— Ăна мĕн тума кирлĕ-ха ку? Çук, çук, пулма пултараймасть.

Кăнтăрла апата килсен, вăл юрта умне кукленсе ларчĕ те чул катăкĕпе çĕр çинче чĕркелесе çырма пуçларĕ, 1342, 500. Унтан — 140, 700. Кайран пĕрремĕш класс ачи шутлакан задача: 96+46=142. Биби упăшки пĕр шарламасăр çырнине пăхса тăчĕ — тăчĕ те, тĕлĕнсе:

— Эсĕ мĕн? — терĕ.

— Нимех те мар, çак задача канăç памасть — ха.

Часах вĕсем патне Ораз хăйĕн «Волгипе» çитсе чарăнчĕ.

— Хăнана чĕнессе кĕтсе илеймĕн...— сăмахларĕ вăл, машинăран тухаканскер, анчах та Биби вăтаннине асăрхасан, сассине улăштарчĕ: — Шӳтлетĕп, шӳтлетĕп. Эпĕ мĕн... Казахсем, пĕр-пĕринпе хирĕçес мар тесе, çывăх çыннисене йытă парнелемеççĕ. Эпĕ... çак тĕшмĕш йĕркине пăхăнмăп. Эсĕ вара, Аяз, питĕ ыйтнă пек ту, а эпĕ çав тери парнелес тенĕ евĕр хăтланăп. Çапла майпа иксĕмĕр те... аллаха чавса тăршшĕ лартăпăр!

Ораз ахăрса кулса ячĕ. Биби, çакна пачах та кĕтменскер, хăраса ӳкрĕ. Кăкарăнса тăракан лаша та кăртах сиксе илчĕ.

Ораз, кулса тăрансан, машина ларкăчĕ хыçĕнчен хăлхисене каснă хӳресĕр йытă çурине туртса кăларчĕ.

— Вăл — кашкăрсене хирĕç тăракан ăратран. Унăн аслашшĕне Борибасар* тесе чĕнетчĕç. Шел пулин те, хальхи вăхăтра вĕсен йышĕ чаксах пырать.

— Ай, рахмет**, — Аяз ытараймасăр йытă çурине тĕсерĕ. Унăн аллинче тин çеç çĕр çинче тĕрлĕ цифрăсем çырна чул таткиччĕ. Йытă çурине хăвăртрах хăй çумне тытса çупăрлас тесе, вăл ăна айккинелле ывăтрĕ. — Мĕн юпа пек тăратăн? — терĕ çавăнтах Бибие.— Хăнана пӳрте чĕн.

***Борибасар** — **кашкăра тĕп тăвакан.***

*****Рахмет** — **тавтапуç.***

— Çук‑çук, — хирĕçлерĕ Ораз. — Çĕнĕ çурт ĕçкине ирттермесĕр епле юртăна кĕрĕн?

Вăл каллех ахăрса кулса ячĕ. Борибасар хăранипе каялла кутăн чакрĕ. Кулса тăрансан, Ораз Аяз çырса хунă цифрăсене тинкерчĕ.

— Ку мĕнле... бухгалтери тата?

Аяз нумай шухăшласа тăмасăр чăннине каларĕ:

— Ку вăл сирĕн сурăхсен йышĕ.

— Мĕн?

— Сирĕн сурăхсен йышĕ тетĕп.

Оразăн сăн‑питĕнче кулă улшăнмарĕ те темелле, анчах та вăл малтанхи савăнăçа кăтартмарĕ ĕнтĕ.

— Вăл йыш... мĕн тума кирлĕ?

Калаçăва, тен, шӳтлесех урăх еннелле пăрмаллаччĕ. Анчах та Аяз ним шухăшламасăрах, пĕр чееленмесĕр хĕрсе кайсах ăнлантарма пикенчĕ:

— Сирĕн кĕтӳре миçе сурăх? Пин те виççĕр хĕрĕх иккĕ. Вĕсенчен пилĕкçĕрĕшĕ пăранлаканнисем — колхозăн. Çапла‑и? Кун пирки эсир ĕнер хăвăр корреспондентсене пĕлтертĕр. Çапла вара, пилĕкçĕр çумне çичçĕр хушсан, пин те икçĕр пулать. Тăхăрвун ултă сурăхпа хĕрĕх ултă путек — хăвăрăн. Тĕрĕс‑и? Эпĕ йăнăшмастăп‑и?

— Ай‑ай!— Ораз каллех ахăлтатса кулчĕ, анчах та куçĕсем... куçĕсем паçăрхи пек йăлкăшса çиçмерĕç. Аяз çине тинкерсе пăхрĕç. — Асту эс, асăрханарах... ку цифрăсене пула ăсран ан тайăл. — Вăл çакна каланишĕн хăйне хăй ӳпкеленĕн çамкине пĕркелентерчĕ: — Сывă пулăр. Эпĕ кайрăм.

Машина çине ларас умĕн:

— Ку йытта ӳстер. Лайăх анчăк. Кашкăра çĕнтерекенскер пулать. Эс ăна ялан вăрçтар. Ак çапла!

Вăл йытă çурине урипе тапрĕ. Лешĕ йынăшса илчĕ.

— У, хăравçă! Çырт мана, çырт!

Ораз хăйĕн аллипе йытă çурин çăварĕ патне тăсрĕ, унтан, такама тарăхнăн, вырăнлă сăмах мар пулин те:

— Авă мĕнлерех иккен, çынна ырă тусан... ахаль каламаççĕ çав: «Йытă пек!» — терĕ.

«Волга» алăкне шанлаттарса хупрĕ те вырăнтан тапранса кайрĕ.

— Çилленчĕ‑шим? — ыйтрĕ Биби. — Эсĕ те... тупăннă начальник! Кам хушна сана унăн сурăхĕсене шутлама?

— Тăхта, тăхта... — Аяз каллех çĕр çинчи цифрăсем пирки шухăшларĕ. — Пăранлакан çĕр сурăхран çĕр хĕрĕх путек илни çинчен вăл ĕнер хăй каларĕ. Çакăншăнах çилленме кирлĕ мар. Çапах та мĕншĕн тарăхса кайрĕ-ха Ораз?.. Мĕншĕн?

Задача кăткăсланчĕ. Тен, Ораз çилленмен пулсан, Аяз çак цифрăсем çине алă çеç сулатчĕ пулĕ. Анчах та вăл шăртланса кайрĕ-çке. Унăн сăн-пичĕ шуралчĕ. Çапла, çапла — шуралса кайрĕ. Йытă çурине тапрĕ. Сăлтавĕ мĕнре-ши? Аяз Бибие сĕм-çĕрле ыйхăран вăратрĕ те:

— Тупрăм,— терĕ.

— Мĕн тупрăн, манăн хурлăхăм?

— Вăл мĕншĕн çилленсе кайнине тинех ăнланса илтĕм.

— Чăнах-и?

— Çĕр хĕрĕх путек илтĕм тени тĕрĕс мар. Вăл улталать.

Аяз хăй тавçăрнине, çакна унран та маларах такам пĕлесрен хăранă пек, васканипе хăвăрт, такăна-такăна ăнлантарса пама пуçларĕ:

— Ораз колхозăн çĕр пуç сурăхĕнчен çĕр хĕрĕх путек илтĕм тет. Хăйĕн килĕнчи тăхăрвун улттăшĕнчен — пурĕ хĕрĕх улттă. Э? Мĕн, унăн сурăхĕсем колхозрисенчен япăх-им? Кĕтсех тăр! Ореке, кирек мĕнле пулсан та Герой ятне илес шутпа, никам сисмен чух хăйĕн путеккисене колхоз кĕтĕвĕ çумне хушнă.

— Вăт пыр та калаç!

Иккĕшĕ те, çак вăрттăнлăха чухласа илнине хăнăхас шутпа, пĕр хушă чĕнмерĕç. Кăштах вăхăт иртсен, Биби çапла каласа хучĕ:

— Енчен те вăл кун пек хătланать пулсан, Ораз... ултавçă?

Биби, хăй сăмахĕсенчен хăй хăраса ўкнĕскер, çакна никам та ан илттĕрччĕ тенĕн, шикленсе те васкаса, аллисемпе çăварне хупларĕ.

## IV

Ҫуралнӑ вӑхӑт — пин те тӑхӑрҫӗр аллӑ пиллӗк. Шкула кайнӑ ҫул — утмӑл иккӗ. Пӗрремӗш хут — пӗрремӗш класа. Кайран — иккӗмӗшне, виҫҫӗмӗшне, тӑваттӑмӗшне, пиллӗкмӗшне, улттӑмӗшне... Ҫапах та шухӑшласа пӑхӑр — ха, этемӗн кун — ҫулӗ епле кӑткӑс! Ҫиччӗмӗшне, саккӑрмӗшне... Юлашкинчен тӑххӑрмӗшне, унтан вуннӑмӗшне. Кайран виҫӗ ҫул хушши — урамра йытӑ хӑваланӑ. Хӑйӗн пурнӑҫӗнче мӗн те пулин ырри, ҫынсем валли асӑнмалӑх пӗр — пӗр ӗҫ тунӑ — и вӑл? Нимӗн те! Амӑшӗ пӗрмай выльӑх — чӗрлӗх сутса укҫа пуҫтаратчӗ. Ун валли. Алма — Атана кайтӑр та института вӗренме кӗтӗр тесе. Анчах та тутлӑ ӗмӗтсем шыв хӑмписем пек ҫурӑлатчӗҫ — кашнинче «иккӗ» паллӑсемпе таврӑнатчӗ. Унта — кунта сӑмсине чикетчӗ пулин те, ниҫта та хӑйӗн кӑмӑлне каякан ӗҫ тупаймастчӗ. Чим! Паллӑ самант та пур унӑн биографийӗнче — вӑл хӗрпе паллашрӗ. Автобус чарӑнакан вырӑнта. Авланчӗ. Тата мӗн — ха? Нимех те ҫук. Ҫапах та мӗн чухлӗ улшӑну пулса иртнӗ пурнӑҫра! Мӗн чухлӗ ӗҫ!..

Аязӑн татӑк — кӗсӗк биографийӗ, магнитофон ленти ҫаврӑннӑ *пек, куҫӗ умне тухса тӑчӗ. Халӗ эпӗ ҫирӗм тултартӑм, шухӑшларӗ* вӑл. Ҫирӗм ҫул! Калама кӑна ҫӑмӑл...

Кунӗпех сурӑхсен хушшинче пулнӑран — ши, ӑс — хакӑл мӑкалнине сисместӗн те. Пуҫа пӗр — пӗр шухӑш пырса кӗрсен, унран хӑтӑлма та май ҫук. «Кайран — иккӗмӗшне, унтан — виҫҫӗмӗшне...» — аса илчӗ вӑл йӑлӑхтарса ҫитернӗ сӑмахсене. Вӗсем ӑна, куҫ умӗнче нӑйӑлтатса вӗҫекен шӑнасем пек, пӗрре *те канӑҫ памарӗҫ: «Кайран — саккӑрмӗшне, унтан —* тӑххӑрмӗшне...» Ҫапах та пӗлес килет: ҫынна кӑсӑклантаракан, тӗлӗнтерекен ӗҫ пулса иртнӗ — и унӑн пурнӑҫӗнче? Чӑнах та, нимех те ҫук — шим? Пурӑннӑ, тет, ҫут тӗнчере пӗр ача, ыттисенчен япӑх та мар, начар та мар. Шкулта вӑтам вӗреннӗ, пӗр класра икӗ хутчен ларман. Унӑн пурнӑҫӗнче, алла тахҫанах аттестат илсен те, пысӑк улшӑнусем пулман — ха. Вӑл ӗлӗкхи пекех — мӗнле калаҫҫӗ — ха — шкул ачи...

Оразпа танлаштарсан, эпӗ кам, шухӑшларӗ Аяз. Тӗрӗс тӑвать — и, тӗрӗс мар — и, вӑл пурӗпӗр Герой ятне илтме ӗмӗтленет, малта пыракансен йышне лекме ӑнтӑлать. Унӑн ҫутӑ тӗллевпе ҫирӗп кӑмӑл пур. Тепӗр тесен, Ораз хӑйӗн кӗтӗвӗ ҫумне килти путеккисене хушнӑшӑн колхоз ҫука юлать — им?

Пачах урăхла. Пуять çеç. Паллă ёнтĕ: çынни вăл тӳрĕ кăмăллă мар. Аяз вара кам? Э–э, уншăн пурнăçра чи хакли — чăнлăх. Хăй çара çерçи çеç пулсан та.

Аяза çак ыйтусем аптăратсах çитерчĕç. Капланса килнĕ шухăшсен çăмхине унăн, тен, Бибипе сӳтсе явмаллаччĕ, анчах та мĕн пирки калаçасси çинчен хăй те путлĕн пĕлмерĕ. Шухăшĕсем вара йывăр та кăткăс, вĕсен тупсăмне ăнкарма Аязăн ăс–хакăлпа вăй–хал çитмерĕ. Ансатах мар лару–тăрура çухалса кайнăран, çакăн пек те шухăшларĕ; вăл ларать те арăмĕ патне çыру çырать; çапла, çапла тет, ăнлантарать, малашне мĕн тумаллине пĕлместĕп, пулăш тет. Кам вăл? Тӳрĕ кăмăллă çын. Шкул пĕтернĕ. Ăна шутлама, çырма, вулама, шухăшлама тата киревсĕрлĕхе курайми пулма вĕрентнĕ. Чăнлăхшăн тăма çеç çав, анчах та уншăн епле кĕрешмелли пирки ăс паман. Çакăн евĕрлĕ уроксем те пулман шкулта, вĕсемпе практикăллă ĕçсем те ирттермен. Ĕçсем тенĕрен, чăнах та, пăта çапма, хăма якатма, утюг юсама, тракторпа çӳреме вĕрентнĕ–ха. Эппин, унăн, путсĕре тĕл пулсан, мĕн тумалла тет, лешĕ хамелеон пек курăнсан? Вăл чăнах та илемлĕ, чыса упрама пĕлекен, ĕçре малта пыма тăрăшакан çын евĕр туйăнать. Анчах та хăй — ултавçă. Кун пирки эсĕ те, Биби, çапларах шухăшлатăн вĕт, тĕрĕс–и? Çынсем çеç çакна пĕлмеççĕ. Ораз вара хăйĕн тĕллевĕ патне çирĕппĕн утать, камсем ăна хирĕç, вăл вĕсене таптать. Бибипе Аяза халлĕхе тĕкĕнмест–ха, тăвансем тесе пăрăнса иртме хăтланать. Пăравус пек ăнтăлать. Çук, çук, ăна дирижабльпе те танлаштарма пулать. Тен, вăл пурнăçра Карлсон евĕр хăтланать? Çурт тăрринче пурăнакан пек, çынсен пуçĕ тĕлĕнче вĕçет, пурин умĕнче те ырă кăмăллă та маттур çын евĕр курăнма тăрăшать. Тен, пирĕн, иксĕмĕрĕн, Биби, ним пулман пек пурăнмалла, пурте о' кей! темелле, каçхине лăпкăн çывăрмалла?

Аязăн, кĕтӳ хыççăн çӳрекенскерĕн, темиçе хутчен те арăмĕ патне çыру шăрçалас шухăш пуçĕнче тĕвĕленчĕ: «Биби юнашарах, тытатăп та ун ячĕпе çыратăп. Ан тив, çынсем айван тесе шутлаччăр, — терĕ вăл хăй ăшĕнче. — Кун пек лару–тăрура мана арăм çеç ăнланма пултарать».

Пĕрмай сурăхсем хушшинче вăхăтне ирттернĕрен, тен, унăн хĕрӳ шухăшĕсем майĕпен сĕвĕрĕлетчĕç те пулĕ, анчах та тепĕр виçĕ кунтан ир–ирех вĕсем патне Бекмурат Оразович килсе

çитрĕ. Кăвак ашакĕ çинче лараканскер, яланхи пекех чăрсăр та хăюллă:

— Эй, Сайкы ăрăвĕн çынни! Тумлан! Ман хыççăн пыр! Ашакпа килнĕ пулин те, сăмахĕсене вăл тĕве çинче ларакан çулçӳревçĕ пек каларĕ.

— Ах, хăратсах пăрахрăн! — Аяз арçын ача çине куларах пăхса илчĕ. Анчах та лешĕ куç харшисене сиктермерĕ те, чĕлпĕрне çеç çирĕпрех тытрĕ, мăнкăмăллăн тӳрленсе ларчĕ.

— Хăвна ху ыттисенчен ăслă тесе ан шутла, пурĕпĕр пирĕн юрра юрлама пуçлатăн.

— Вăт парать, э! Биби, итлесе пăх — ха çак ачана.

Биби иккĕшĕн çине те тимлĕн пăхса илчĕ. Пуçне силлерĕ те:

— Ăслă арçын ача,— терĕ. Ассăн сывласа илчĕ:

— Оразович, эсĕ кай. Эпир нумай кĕттермĕпĕр, пырăпăр.

Унтан чылай вăхăт хушши арçын ача кайнине сăнарĕ. Пуçĕнчи капланнă шухăшĕсене пĕтĕмлетсе:

— Кам хăрать, çав маларах аллисемпе сулкалашма пуçлать,— терĕ.

— Çапла, — килĕшрĕ унпа Аяз. — Пуçтарăн эппин. Курăпăр — ха, кам çиеле тухать.

Хăнана çирĕп шухăш тытса, сисчӳллĕн, çапăçма хатĕрленнĕн утрĕç. Анчах кĕтнĕ пек пулса тухмарĕ. Унта ĕçкĕ — çикĕ пырать иккен.

*Оразăн «Волгипе» председателĕн газикĕ юнашар лараççĕ.* Пралипе пĕрле Абиль бухгалтер та килнĕ. Вĕсем çитнĕ ятпа сурăх пуснă, шурă эрех кăларса лартнă. Сăмахшăн кивçене кайман Абиль лайăх юрăçă та иккен. Ун аллинчи тăмра хăй ташлать тейĕн. Вăл Курдайск тăрăхĕнчи паттăрсем, ăслă аксакалсем, чипер хĕрсем çинчен юрă хыççăн юрă шăрантарчĕ, Прали те ютшăнса тăмарĕ. Минтер çине тайăннăскер, шăл хушшине ларнă какая шăрпăк пĕрчипе тасатнă май тĕрлĕрен анекдотсем каласа, пурне те култарчĕ. Çапах та юрăсемпе тĕрлĕ шӳтлĕ калаçусем пычĕç пулин те, пурĕпĕр «Сайкы йăхĕн пĕрлĕхĕ», «вĕсем пĕр — пĕринпе хирĕçни ырри патне илсе çитермест» тени уççăнах палăрчĕ.

Какая çисе ячĕç, эрехне ĕçсе пĕтерчĕç, калаçу лăпланнă пек пулчĕ. Прали, паçăрхи пекех шăл хушшинчи какайне тасатаканскер, ытахальтен каланă евĕр, çапларах пуплеме пуçларĕ:

— Эпĕ пĕр ĕç туса ирттересшĕн. Хамăр аулта çĕнĕ урам хывас пирки «Межколхозстройпа» калаçса татăлтăм. Пурĕ çирĕм çурт. Кашниййĕнчех — ултшар пÿлĕм. Çурт çывăхĕнче сарай, туалет пулать. Сад, шыв колонки — кĕскен каласан, пурăнма пур услови те çителĕклĕ. Çурчĕсем камсем валли? Чухлатăр — и? Пĕлместĕр. Кĕтуçĕсем валли пулаççĕ.

— Эпĕ яланах Пралипе мухтанатăп, вăл чăн — чăн хуçа, — терĕ Ораз васкамасăр, хăйĕн кашни сăмахне Хисеп кĕнеки çине çырса хунă пек. — Шел, çурт мана кирлĕ мар.

— Эпĕ сан пеккисем валли тутармастăп, — терĕ Прали. — Çĕнĕ çуртсем пурнăç çулĕ çине тухакан çамрăксем валли пулаççĕ. Э? Аяз, тĕрĕс калатăп — и эпĕ? Ват аннÿ патĕнче пурăнса, вăл мăкăртатнисене: кăна çапла туман, çак япала хăйĕн вырăнĕнче мар тенисене итлесе йăлăхрăн пулĕ. Хăвăн хуçа пулма вăхăт çитрĕ. Çапла мар — и?

— Çапла, — чăтса тăраймарĕ Биби, унтан, хăй каланинчен хăй хăраса ÿкнĕн, аллипе çăварне хупласа Аяз çине именчĕклĕн пăхса илчĕ. Лешĕ килĕшнĕн пуçне сулчĕ:

— Çапла.

— Аха. Эппин, тимлĕн итле.

Прали минтерĕпе пĕрле Аяз çумне тĕршĕнчĕ, ăна пысăк ĕç шанса панăн, анчах та лешĕ унăн умĕнче кăштах айăпа кĕнĕ пек, çавна пула ÿпкеленĕ сасăпа вĕрентсе калаçма пуçларĕ:

— Аяз, эсĕ халлĕхе çамрăк — уру çине ĕне ури пусман — ха. Çапах та телейÿ хăвăн аллунтах. Тен, эсĕ икĕ тăванупа юнашар ĕçлеме пуçланине, çакăншăн чи малтан хам хытă тăрăшнине шута илесшĕн те мар пулĕ. Эпĕ вара урăхла шухăшлатăп. Хăвна пĕччен ан туй. Йывăр самантра та тăвансен вăйне сиссе тăр. Енчен те сан пулăшăву Оразпа Акжанкăна кирлĕ пулсан, вĕсенчен ан пăрăн. Пĕрле пулăр, пĕр çăвартан сурăр — акă ăçта пирĕн вăй! Ăнлан! Пăх — ха Абиль çине — вăл та Сайкы йăхĕнчен, вăл та саншăн тем тума хатĕр. Кам пирĕнпе мар, кам... Э? Пире хирĕç? — ахăлтатрĕ Прали, анчах та хăйĕн куçĕсем кулмарĕç. — Чи кирли, тăшмансемшĕн ют пул. Енчен те пĕр — пĕринпе хирĕçме пуçласан, кам усă курĕ? Ăнкаратăн: пире юратман çынсем. Çапла çав. Хăв тĕллĕн пурăн, тăвансене те ан чăрмантар. Вĕсене пулăш. Çăкăр — тăвар хире — хирĕç. Сана та манмĕç. Çавăн пек мар — им? Вăл тĕпчевлĕн Аяз çине пăхрĕ.

— Çапла, — хуравларĕ лешĕ.

— Эппин, калаçса татăлнă тейĕпĕр. Кун пирки халиччен эпĕ иккĕленмен, малашне те çавăн пекех пулĕ, эсĕ ăслă — тăнлă, пурне те çур сăмахран ăнланакан çын.

Аязпа Биби хăйсене вĕрентсе каланисене пĕр чĕнмесĕр, хирĕçлемесĕр итлерĕç. Паллă ĕнтĕ, вĕсене ытахальтен, сăлтавсăр чĕнмен — ха. Ораз хăраса ӳкни пирки те тавçăрса илме йывăрах мар. Çамрăк мăшăр кунта килсе çитиччен вĕсем, паллах, хăйсем хушшинче пурин çинчен те тĕплĕн калаçса татăлнă. Эппин, Аязпа Бибин урăх çул çук, кашкăрсем хушшинче пурăнатăн пулсан — кашкăрлах уламалла. Енчен те пăхăнас темесен — тытса çураççĕ.

— Çавăн пек — и? — юлашки иккĕленĕвне йăлтах сирсе ярас тĕллевпе тепĕр хут ыйтрĕ Прали.

— Çапла, — иккĕмĕш хут хуравларĕ Аяз.

Прали, эпĕ сана паçăр калани тĕрĕс пулчĕ вĕт тенĕ пек, Ораз çине пăхса илчĕ.

Лешĕ те, унăн шухăшне вуланăн, куншăн ахаль тумăп, эпĕ парăмра юлакан йышши мар тенĕн, председатель çинчен кусне илмерĕ. Унтан тунă çитĕнĕве тата вăйлăрах çирĕплетсе хăварас, Аяз умĕнче ырă ятлă пулас тесе:

— Праке, — калаçрĕ вăл çĕкленӳллĕ кăмăлпа, — Аяз çине пăх — ха. Чăн — чăн джигит! Халĕ лашине сăна. Урхамах — и ку? Яхăнне те пымасть. Лаша мар — ашак. Праке, санăн ăна лайăх урхамах тупса памах тивет.

Прали, шăл хушшисене чакалаканскер, аран — аран çăварĕнчен пĕр пĕчĕк шăмă таткине туртса кăларчĕ, ăна айккинелле сурса пăрахрĕ. Тинех, хăйĕн ыйтăвне татса панă хыççăн, ĕç пирки те сăмахлама май пур ĕнтĕ.

— Юрать, — терĕ вăл.— Ку сĕнĕве кайран кантурта пăхса тухăпăр.

Çук, Аязпа Биби хăнаран пуша алăпа таврăнмарĕç. Вĕсене ултă пӳлĕмлĕ çуртпа лайăх лаша пама шантарса каларĕç. Çапла пулин те, темшĕн çакăн пирки савăнса, хавхаланса калаçас килмерĕ. Аяз çĕрĕпех, шăна — пăван аптратнă пек, вырăн çинче канăçсăррăн йăшăлтатса выртрĕ. «Кайран — улттăмĕш класс, унтан — çиччĕмĕш... Мемме, хăвăн сăмахупа ху хуçа мар, сана чике тăршшĕ лартаççĕ». Аяз салхуланчĕ, чĕмсĕрленчĕ. Биби çеç калаçмасăр тăма пултараймарĕ:

— Шел, пирĕн вĕсемпе кӳршĕленме тиврĕ.

Биби сăмах пуçараканĕ — Аяз кăткăс лару—тăрăва улăштарма шут тытаканĕ:

— Ыранах çĕнĕ вырăн шырама каятăп. Тупсанах, кунтан куçатпăр.

Ирхине кĕтĕве Биби хăваласа кайрĕ, Аяз — çĕнĕ вырăн шырама. Кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче килне таврăнчĕ, çав вăхăтра вĕсем патĕнче чипер Батима ларатчĕ. Аязăн хăна кунтан кайсан çеç хăйĕн ĕçĕ—хĕлĕ çинчен сăмах тапратмаллаччĕ ĕнтĕ. Çук çав. Пĕр пытармасăр вăл çапла каласа хучĕ:

— Тупрăм. Кунтан пĕр вунпилĕк çухрăмра.

— Мĕн тупрăн? — Батима хăйне ним тĕшмĕртме пĕлмен ача пек тыткаларĕ. Биби Аяз çине хăвăрт пăхса илчĕ. Батима ытахальтен, хăйне пачах интереслентермен пек, çапах та вăлтса:

— Мĕн — кунта вырăнĕ шурлăхлă—им?

— Сурăхсем курăка таптаса пĕтерчĕç, — Аяз çине кăмăлсăррăн пăхса каларĕ Биби.

Пĕр эрне хушшинче сурăхсем курăка йăлтах таптаса пĕтернĕ тенине, паллах, никам та ĕненмĕ. Батимана, Аязран та чеескерне, чавса тăршшĕ лартаймăн. Эппин, каяççĕ пулсан, вĕсене ӳкĕте кĕртеймен. Çапла вара хирĕçӳ çĕнĕрен пуçланать. Куи пек чух тăшмана пĕрре те шеллемелле мар. Эсир ан пăшăрханăр—ха, Ораза вăл тĕпĕ—йĕрĕпе каласа парĕ.

Ирхине Аяз çĕнĕ вырăна куçса каяс тесе юрттине тӳнтерме кăна пуçланăччĕ, сасартăк Ораз, урхамах çине ларнăскер, килсе çитрĕ.

— Ăçта кайма пуçтарăнаççĕ:

— Çĕнĕ вырăна.

— Кунта, мĕн, начар—им?

— Апла мар та, пурпĕр куçса каятпăр.

— Вăрттăнлăх мар пулсан, хăш вырăналла?

— Сарыжазык çывăхнерех.

— Çитĕ шӳтлесе. Ниçта та каймастăн!

— Мĕншĕн?

— Çавăншăн! Айван пуçна урусем канăç памаççĕ пулсан, сана...

— Юрĕ. Ан тив, айван пулсан та, пурĕпĕр хамăн!

— ... сана тытса чаракан çын тупăнать, хăйĕн влаçĕпе...

-- Мĕнпе—мĕнпе:?

— Влаçĕпе. Саншăн ку çĕнĕлĕх—им? Пĕл эппин, кунта,

кӗтӳҫӗсем хушшинче, эпӗ асли. Сана куҫса кайма ирӗк памастӑп...

— Эсир ирӗк панипе паманни ҫине эпӗ суратӑп ҫеҫ!

— Курӑпӑр – ха.

— Ним курмалли те ҫук. Мӗн тӑвайӑр – ши эсир мана, э? Ирӗк паратӑр – и, памастӑр – и, эпӗ тытатӑп та куҫатӑп.

— Эпӗ... *эпӗ машина айне выртатӑп. Урапа айне...*

— Эпӗ... эпӗ вара сире тытнӑ ывӑтнӑ!

— Пӳрнӳпе ҫеҫ тӗкӗн. Сана суда паратӑп. Суда! Тӑван иккенне пӑхса тӑмастӑп. Ҫамрӑк – ха тесе шеллемӗп.

Шӳтлесе каламаннине палӑртас шутпа – ши, Ораз лашине машина буферӗ ҫумне кӑкарса хучӗ те капот ҫине хӑпарса ларчӗ, хӑйне Аязӑн инкекӗшӗн савӑннӑ пек тыткаларӗ. Ӑна ҫапӑҫма хӗтӗртрӗ. Лешӗ, ҫилленнипе ниҫта кайса кӗрейменскер, хӑйне хӑй аран – аран тытса чарчӗ, ҫапах та аллисене ирӗке ямарӗ. Ытларах калаҫрӗ. Ораза ҫавӑ ҫеҫ кирлӗ. Тӗкӗсене тӑратнӑ курак пек капот ҫине ларнӑ та пӗр вырӑнтах ниҫталла куҫмасӑр ларать.

Акжанка лашине чуптарсах ҫитсе тӑчӗ, вӗсене мирлештерме пикенчӗ.

— Ореке, ытлашши ан вӗрилен – ха. Аяз, эсӗ те лӑплан.

— Мӗн тума, ӑҫта каятӑн? Биби, кил – ха кунта. Санӑн упӑшку мӗнле шухӑш тытнӑ тата? Тавралӑха сӑнӑр – ха — мӗнле хӳхӗм вырӑн, э? Ҫакӑн пек ырӑ кӗтес нихӑш вырӑнта та тупаймастӑр.

Ку кӑна ҫитменччӗ, шоферӗ те ҫилленсе кайрӗ:

— Паян каятпӑр – и, каймастпӑр – и?

Аяз аллине сулчӗ, ҫӑва патне пулӑр! Умри ҫула уямасӑр, йӗрекен тӑванӗсене курас мар тесе, урисем ӑҫталла утаҫҫӗ, ҫавӑнталла танкӑлтатрӗ.

— Пӗр сӑмах тупрӑмӑр та. Калаҫса татӑлтӑмӑр та, — ачашшӑн пуплерӗ Акжанка. — Пӗччен пурӑнни пурӑнни – и вӑл? Тӑвансемсӗр. Мӗн тӑвӑн эс тӑр – пӗччен?

Хирӗҫӳ вучахне вӑхӑтра сӳнтернӗ хыҫҫӑн вӑл хӑйӗн кӗтӗвне пӑхма кайрӗ. Машина та тытӑнса тӑмарӗ. Аяз кӑштах лӑпланнӑ хыҫҫӑн килне таврӑнчӗ те Ораза, ним пулман пек рехетленсе чей ӗҫсе лараканскере, курчӗ. Лешӗ, *мӑнкӑмӑллӑн пуҫне сӗлтсе,* юнашар ларма сӗнчӗ. Вӑл хӑйне хӑй пысӑка хуни тата сапӑр тыткалани Аяза тарӑхтарсах ячӗ.

— Эпӗ пурне те пӗлетӗп!— кӑшкӑрчӗ вӑл ниҫта кайса кӗреймесӗр.

— Пĕлетĕн пулсан — кала.
— Калатăп та.
— Каласа пар, эпĕ итлетĕп.
— Сире çеç мар, пурне те пĕлтеретĕп. Аха! Шуралса кайрăр!.. Тăрă шыв çине кăларасран хăратăр! Сирĕн хăтланкаларăшсем çинчен пĕтĕмпех каласа паратăп!
— Чăнах-и? Кăсăклантарсах пăрахрăн, мĕнле хăтланкаларăшсем тата?
— Пĕлес килет иккен. Итлĕр эппин, çак айван шкул ачи Аяз ирĕклĕ темăпа еплерех сочинени çырма пултарасси çинчен. Производствăра малта пыракан пĕр çын Герой ятне илесшĕн пулнă. Вăл пысăклатнă обязательствăсем йышăнать. Анчах та сурăхсем ăна пăхăнмаççĕ. Хăть вĕсемпе пĕрле пăранла. Унăн мĕн тумалла тет?
— Интереслĕ.
— Çапла пулмасăр! Ансат çул-йĕр тупать хайхи, тытать те çак çын хăйĕн путекĕсене колхоз кĕтĕвĕ çумне хушса хурать. Пăранлакан сурăхсем те кушаксем пекех ăратлă пулса тăраççĕ. Кĕскен каласан, çак çын кашни çĕр амаран çĕр хĕрĕхшер путек илет.
— Пултарать!— пуçне пăркаларĕ Ораз, хаваслăн курăнма тăрăшса, анчах та хăйĕн сăн-питне шур пир тĕсĕ çапрĕ. — Анчах та эпĕ, Аяз, çакна çеç ăнланмастăп, енчен те мана Герой ятне параççĕ пулсан, сана, мĕн, япăх пулать-им?
— Мана-и? — тĕлĕнчĕ Аяз. Унтан чĕри ыратнипе, хăйне аран-аран тытса чарса, тарăхса кайса: — Ореке, епле-ха эсир ăнланмастăр. Герой пулатăр-и, пулмастăр-и — çăва патне! *Манăн сире хисеплес килет. Ăнланатăр-и, хисеплес килет.*
— Эсĕ ан хисепле. Пит кирлĕ.
— Епле вара ан хисепле. Епле вара ан хисепле?..— каллех шăртланса кайрĕ Аяз. Хирĕçӳ вăйланнăçем вăйланчĕ, вăл çур çĕр çитес умĕн çеç вĕçленчĕ. Вĕçленчĕ тени тĕрĕсех те мар-ха. Тавлашу, хĕрсе кайса, чи çӳллĕ шая çитрĕ, *хирĕçекенсене иккĕшне те хаярлатса ячĕ. Хальхинче вĕсене* Акжанка та мирлештереймĕ ĕнтĕ. Оразпа Аяз тăшмансем пулса уйрăлчĕç.

## V

Аяз кăнтăрлахи апата пăсăк кăмăлпа таврăнчĕ:

— Пирĕн Герой айван çын мар иккен.

— Мĕн пулчĕ тата?

— Темех мар... ытлашши сурăхĕсем курăнмарĕç. Эпĕ икĕ хутчен шутларăм.

— Эсĕ çăхав çырасса пĕлсе тăрсах, вăл аллисене усса ларĕ тесе шухăшларăн-им?

— Эпĕ ниçта та çырма шут тытман-ха.

— Кам пĕлет сана! — Биби юратса, упăшкин çӳçне ачашласа тăлпаларĕ, унтан пит-куçне çилленнĕн пĕркелентерсе: — Ну, çитĕ ун пирки. Пăрах Ораз çинчен калаçма... атя чей ĕçер. Эпĕ санпа лăпкăн калаçса хăçан пĕрле чей ĕçнине те астумастăп ĕнтĕ.

Вĕсем чей ĕçме ларнăччĕ çеç, çав вăхăтра юрта патне пĕр мотоцикл кĕрлесе çитсе чарăнчĕ. «Кам пулма пултарать-ши ку?» — тĕлĕннипе куçĕсене чарса пăрахрĕ Аяз. «Пĕлместĕп», — тесе каланăн хулпуççисене сиктеркелерĕ Биби. Вĕсен ыйтăвне хăвăртрах татса парас тенĕн, алăк патĕнче кĕçех капăр тумланнă икĕ милиционер курăнса кайрĕ.

— Бабатаев Аяз эсĕ-и?

— Эпĕ.

— Тумлан. Кайрăмăр.

— Ăçта?

— Сурăхусене шутлама.

— Мĕншĕн? Вĕсем пурте тĕрĕс-тĕкел. Манăн сурăхсем...— сасартăк калаçма чарăнчĕ вăл. Унтан, тем аса илнĕ пек, аванмарланса кайрĕ. Вăт Ораз! Вăл чăнах та айван çын мар иккен! Аяз йӳççĕн кулса илчĕ.

— Мĕн шутламалли пур. Эпĕ сире халех пĕлтеретĕп: пилĕк сурăх ытлашши. Хăйсем килсе ернĕ.

— Аха. «Хăйсем килсе ернĕ». Вăт ку аван. Ку сирĕншĕн, Бабатаев, хăвăрăн айăпа çийĕнчех йышăнни, питĕ аван.

— Айăпа йышăнни?

— Бабатаев, хăвна ху айван ача пек ан тыткала. — Милиционер тӳррĕн кастарчĕ. — Енчен те эсĕ тӳрĕ кăмăллă çын пулсан, ытлашши сурăхсем пирки пире мĕншĕн иртнĕ эрнерех пĕлтермерĕн?..

Йĕрке хуралçисем — Аязпа пĕр çулхисем, çамрăк пулнине

кура – и, вăлтса калаçмаççĕ. Вĕсемшĕн ытлашши сăмах – юмах вакламасăрах — пурте паллă, Аяз ăнлантарса панине итлесе те тăмарĕç. Васкаса Акжанка патне вĕçтерчĕç, кăшт тăрсан унăн карчăкне, хăраса ӳкнĕскере, коляска çине лартса килчĕç, ун умĕнче выльăхсен йышне шутласа акт çырчĕç, «ют паллăллă пилĕк сурăх» пуррине кăтартрĕç. Фактсем тĕрĕс иккенне çирĕплетсе, Акжанка арăмне те алă пустарчĕç. Лешĕ, çухалса кайнăскер тата хутла пĕлменскер, акт çине саспаллисем вырăнне хĕрес ӳкерсе хучĕ.

— Лар. Кайрăмăр. Ху айăплă маррине милици уйрăмĕнче ĕнентерĕн.

Аяза коляска çине лартса илсе кайрĕç. Калăн, вăл пĕр – пĕр вăрă – хурах, закона хирĕçле усал ĕç тунă пек. Аяз, ку тĕрĕс мар, сирĕн мана вăйпа илсе кайма нимĕнле право та çук, хăвăрăн тивĕçĕре ытлашши ӳстеретĕр тесе кăшкăрчĕ. Юлашкинчен çухалсах кайрĕ, хăраса ӳкнипе пĕр милиционерне çапса яма та хăтланчĕ, ăна, хыçалти ларкăч çинче пыраканскере, чутах ӳкермерĕ. Лешĕ мотоциклне чартарчĕ те:

— Пӳрнӳпе çеç тĕкĕнсе пăх, эпĕ са – а – на... эп сана суда паратăп, ăнлантăн – и? Служба тивĕçне пурнăçланине курмастăн – им? Ăнланмастăн – им?

Милици уйрăмĕнче Аяз йăлтах пуçне усрĕ, аптраса ӳкрĕ. Пăх та кур, çут тĕнчере эс ним пулман пек пурăнатăн, хăвна ху тӳрĕ кăмăллă, хăюллă çын тесе шутлатăн. Сасартăк сана, айăпсăрскере, кĕтмен çĕртен тытса чараççĕ. Эсĕ вĕсене ăнлантарса пама хăтланатăн — ăçта унта, патне те ан пыр — итлемеççĕ те!

Пăшатана михĕре пытарса усраймăн тенĕн, аулта часах пурин çинчен те пĕлчĕç. Ирхине ирех милици уйрăмне пиччĕшĕсемпе пĕрле амăшĕ те пычĕ. Вĕсене кунта вăрах итлесе тăмарĕç, çапах та Аяза ирĕке кăларчĕç. Тăванĕсем, Аяз айăплă маррине ĕнентерес шутпа, пурне те ура çине тăратрĕç. Часах çухатнă сурăхсен хуçине шыраса тупрĕç. Вăл Кăркăсстанри пĕр ватă кĕтуçĕ иккен.

Ĕçĕ çапла пулса иртнĕ. Çав ватă старик хăйĕн кĕтĕвне Иссык – Куль кӳлли патне хăваласа кайнă чух Курдайск тăвĕсен çумĕнчен иртнĕ. Çавăн чух çухалнă та ĕнтĕ унăн сурăхĕсем. Старике заявлени çыртарттарчĕç.

— Сурăхĕсем, чăнах та, манăн. Вĕсене лайăх пĕлетĕп, — терĕ старик. — Анчах та ку каччăна пуçласа куратăп. Выльăх

вăл кирек хăçан та выльăх. Вĕсем кĕтӳрен çĕтсе юласси пуриншĕн те паллă. Уншăн каччăна айăплама юрать — и вара?

Милиционерсем шухăша кайрĕç. Аяз тӳрре тухма тăрăшнине вĕсем итлемесĕр тăма та пултараççĕ, анчах старик пĕлтернисенчен пăрăнса иртме май çук, шута илесех пулать. Аязăн та тинех чĕлхи уçăлчĕ:

— Сурăхсен хуçине эпĕ те шырарăм.

— Шырарăм тетĕн? Ăçта шырарăн? Кам патне кайрăн?

— Вĕсенчен эпĕ автографсем илмен. Паспорчĕсемпе те паллашман.

— Хăвна ху ыттисенчен ăслă тесе ан шутла — ха.

Çав вăхăтра пӳлĕме Прали кĕрсе тачĕ. Пĕччен мар, «Шолпанра» плакат çакнă чух курнă икĕ каччăпа пĕрле.

— Эсĕ пурне те пăлхатса ятăн! — кăшкăрчĕ вăл «сывлăх сунатăп» е «салам» тесе калас вырăнне. Ĕнер хăйне çапларах тӳрккес тытнă пулсан, Аяз, ăна хирĕçлесе, мĕн те пулин каласа хуратчĕ ĕнтĕ. Паян вара урăх лару — тăру. Çавăнпа та Аяз чĕнмесĕр ларчĕ. Прали вĕрентме пуçларĕ:

— Эпĕ эсĕ вăрланă тесе çирĕплетсе каламастăп. Никам та апла шутламасть. Çапах та!.. Усал хыпар аул тăрăх саланнă ĕнтĕ. Çăвартан вĕçсе тухнă сăмаха тытса чараймăн. Вăрланă — и, вăрламан — и — ку урăх калаçу. А вăт колхоз... Ун çинчен çынсем мĕн тесе сăмахлĕç. Çакăн пирки шухăшларăн — и эсĕ? Сана эпĕ епле те пулин тӳрре кăларăп. Колхозăн ырă ятне вара кам хӳтĕлĕ?..

«Пуш сăмах çаптаратăн», — тенĕ пулĕччĕ Аяз ĕнер. Паян вара хирĕç нимĕн те калаймарĕ.

— Юрать, — ырă кăмăллă та тĕрĕслĕхшĕн çине тăракан çын пек курăнма тăрăшрĕ Прали. — Çак каччăсем, авă, эсĕ сурăхсем тупнă тесе пире пĕлтерчĕ теççĕ.

— Кун пирки эпĕ вĕсене нимĕн те каламан, — хирĕçлерĕ Аяз хăйĕн пулас шăпи пирки пач шухăшламасăр.

— Каланă — и, каламан — и, — пит — куçне пĕркелентерчĕ Прали. — Вĕсем калаççĕ пулсан, эппин... Эсĕ каламан пулсан та, пурĕпĕр... каланă.

Прали «каланă» сăмах пирки вĕçĕмсĕр пупленĕ чух куçне чарсах пăрахрĕ.

— Тăван тени — пысăк вăй, — терĕ вăл юлашкинчен. — Инкеке кĕрсе ӳксен çеç ăна хаклатăн.

Вăл пĕр хушă чĕнмерĕ, Аяза ӳпкелесе, приговор вуланă пек:

— Эсӗ халь ирӗкре. Кайма пултаратӑн. Ӑҫта каяс тетӗн — ҫавӑнталла уттар.

Хӑй те милици уйрӑмӗнчен тухрӗ, газикӗн алӑкне шанлаттарса хупрӗ те, вырӑнтан тапранса кайса, куҫран ҫухалчӗ.

Аяз урамра тӑрса юлчӗ. Хӗвел чӑтма ҫук хытӑ хӗртсе пӑхать. Ӑна тӳсме пулӗ – ха. Анчах та Аяза хӗвелтен те ытларах кӗтмен ҫӗртен сиксе тухнӑ хуйхӑ – суйхӑ ҫунтарчӗ. Мӗн тумалла? Ӑҫта каймалла? Кампа калаҫса чуна йӑпатмалла?

Ҫиесси килчӗ. Чи малтан вӑл урам урлӑ каҫрӗ. Столовӑя кӗчӗ. Ку ҫурт, хальхи ҫӗнӗ проектпа — металпа кӗленчерен тунӑскер, аквариума аса илтерет. Уйрӑмлӑхӗ те пысӑках мар. Аквариума — шывпа, ҫак ҫурта вара вӗри сывлӑшпа тултарса лартнӑ. Кунсӑр пуҫне, кухньӑран темиҫе тӗрлӗ тутлӑ шӑршӑ апатланакан зала тапса тӑрать. Аяз тарласа кайрӗ. Аптраса ӳкрӗ. Нумай шухӑшласа тӑмасӑр борщ, котлет, пӗр стакан чей илчӗ. Ҫав вӑхӑтра курах кайрӗ: милиционер. Лешӗ те столовӑя кӗчӗ. Вӑл та апатланасшӑн иккен. Аязӑн хӑранипе чӗри кӑрт – кӑрт тапрӗ. Хытах шикленчӗ.

Милиционера курнипе сасартӑк ҫухалса кайнӑшӑн Аяз хӑйне хӑй тарӑхса кайрӗ. Ҫав вӑхӑтрах унпа пӗрле пӗр сӗтел хушшинче ларакан икӗ каччӑ вӑрттӑн шурӑ эрех кӑларчӗҫ те хаяр шӗвеке васкасах пушатрӗҫ. Аяз та нумай шухӑшласа тӑмасӑр буфет еннелле утрӗ, ҫӗр аллӑ грамм илсе ӗҫрӗ.

Тинех хӑйне ҫӑмӑл та ирӗклӗ туйрӗ. Юрлас килчӗ. Урама тухрӗ. Ялти магазинӑн витрини ҫинче баян курчӗ. Пуҫӗнче ӑна туянас шухӑш та вӗлтлетрӗ, анчах та унӑн хӑйӗнпе пӗрле аллӑ тенкӗ укҫа ҫеҫчӗ. Ирӗксӗрех ку ӗмӗте пӑрахӑҫлама лекрӗ. Пур – ҫук укҫапа баян туянаймӑн ҫав. Вара вӑл автотрасса еннелле утрӗ. Унта пӗр таксиста чарчӗ те хӑйӗн аллӑ тенкӗ укҫине ӑна тыттарчӗ. Лешӗ ӑна Биби патне илсе ҫитерчӗ.

Арӑмӗ йӗпеннӗ куҫӗсене шӑлмасӑрах унӑн ытамне ыткӑнчӗ, пуҫне кӑкӑрӗ ҫине хучӗ, ниепле те лӑпланаймарӗ.

— Эсӗ, мӗн, хавас мар – им? — аптраса ӳкрӗ упӑшки.

— Сывӑ та тӗрӗс – тӗкел, сывӑ та тӗрӗс – тӗкел, — тесе ҫеҫ пӗр вӗҫӗмсӗр сӑмахларӗ мӑшӑрӗ.

— Ну, ҫитӗ, ҫитӗ. Тен, сана... кам та пулсан кӳрентерчӗ? Ораз? — кичемленсе кайса ыйтрӗ вӑл. Биби куҫҫуль витӗр кулса ячӗ:

— Эпӗ саншӑн епле пӑшӑрхантӑм! Еплерех кӗтрӗм тата!

Аяз хӑйшӗн тӗнчере чи хаклӑ та ҫывӑх ҫын Биби иккенне

пуҫласа ӑнланса илчӗ. Вӑл ӑна хыттӑн ыталарӗ те кӑкӑрӗ ҫумне чӑмӑртарӗ. Ҫав вӑхӑтра хӑйӗн хуйхи—суйхине йӑлтах манса кайрӗ, унран каллех унчченхи Аяз пулса тӑчӗ. Кайран каҫ пулчӗ, вӑрӑм та ырӑ, лӑпкӑ каҫ, тутлӑ тӗлӗксем унпа пӗрле хутӑшса кайрӗҫ. Вӗсем, тул ҫутӑлсан та, ӑнланса илеймерӗҫ—ха, те ку тӳлек юмахри пек канлӗ каҫ, те ҫутӑ ир пуҫламӑшӗ. Чуна ачашлакан киленӗве хӑратас мар тенӗн вӗсем шӑппӑн, хӑйсем илтмелле ҫеҫ пӑшӑлтатрӗҫ. Кӑшт тӑрсан:

— Малашне мӗн тӑвӑпӑр? — ыйтрӗ арӑмӗ.

— Пурӑнмалла!— телейлӗн кулса илчӗ упӑшки, унтан ассӑн сывларӗ. — Анне те, пиччесем те ӗҫрен тух теҫҫӗ. Оразпа килӗштерсе пурӑнма кансӗр. Усал сас—хура та таврана сарӑлнӑ. Мӗн те пулин сиксе тухсан, тӳрех: «Ҫавӑ—и, кӑркӑссен пилӗк сурӑхне вӑрлаканни—и?» — тесе пакӑлтатӗҫ. Анне калать: «Вӑл сан ҫулна пӳлсех пырӗ». Ораз эпӗ ӑна пурӗпӗр тавӑратӑп тет имӗш.

— Вӑл тин ҫеҫ килсе кайрӗ, — пӗлтерчӗ Биби. — Йытӑ ҫурине хӑйӗнпе илчӗ. Пӗтӗм инкек—синкек ҫавӑнтан пуҫланчӗ тет.

— *Илсе кайтӑрах, — аллине сулчӗ Аяз. — Мӗн, лайӑх йытӑ* тупаймастӑп—им? Унӑннинчен те чаплӑраххи пулӗ, ӑна палласа ҫухрӑмранах вӗрекенни. Вӑл Ораза пирӗн ҫывӑха та ямӗ.

— *Эс мӗн, — сисчӳллӗн ыйтрӗ Биби, — эпир кунтан ниҫта* та каймастпӑр тесшӗн мар—и?

— Кӗтсех тӑччӑр! Енчен те иксӗмӗр ҫак вырӑнтан... хамӑр *ирӗкпе куҫассӑн, ҫын кулли пулатпӑр вӗт.*

— Фу—у! Тепӗр енне ҫаврӑнса вырт—ха. Санран эрех шӑрши кӗрет.

— Ан калаҫ—ха кирлӗ мара. Эпӗ ӗнер ӗҫнӗччӗ—иҫ. Пӗлетӗн—и, милици уйрӑмӗнчен тухрӑм та — чӑтма ҫук кичемлӗх. Пӗр стакан эрех янклаттартӑм та — вара тин манран хуйхӑ—суйхӑ хӑпрӗ. Чунра ырӑ—ырӑ пулса кайрӗ...

— Пӗлсех тӑр! Эпӗ алкоголиксене юратмастӑп. Тек пӗр тумлам та ӗҫместӗп тесе сӑмах пар.

Упӑшки кулса ячӗ те ӑна ыталаса илчӗ.

— Ӗҫместӗп. Сӑмах паратӑп.

Анчах та тепӗр куннех вӑл тупа тунине пурнӑҫлаймарӗ.

Аяз, сурӑхсене кӗтнӗ май, хӑй сисмесӗрех майӗпен—майӗпен юртӑран аяккалла кайса пычӗ. Ту хушӑкӗ ҫывӑхне вырнаҫрӗ, кунтан выльӑхсене сӑнама меллӗ, журнал хуплашкине уҫрӗ ҫеҫ, унтан хӑранипе ӑна хӑвӑрт хупса хучӗ. Ҫӗр айӗнчен сасартӑк

сиксе тухнă пек, ун умĕнче Ораз куранса кайрĕ. Вăл, пухăва е урава кайма хатĕрленнĕ евĕр, яланхи пекех шукăль тумланнă, тур лаши пĕр вырăнта чăтăмсăррăн тапăртатса тăрать. Хĕвел çутипе кĕмĕл йĕнерĕ куçа йăмăхтарса илемлĕн йăлтăртататъ. Икĕ йыттине йĕвенпе кăкарнă, çурăмĕ хыçĕнче — икĕ кĕпçеллĕ пăшал, кăкăрĕ çинче — бинокль. Аяз çухалса кайрĕ, сывлăх сунмалла-ши, сунмалла мар-ши? Ораз, çакна туйса илнĕскер, кулса илчĕ:

— Ну, хулиган! Сывах-и?

Йăйăрĕ çинчен сиксе анчĕ те ачаш аллисене Аяз еннелле тăсрĕ.

— О, хулиган!..— пуçне пăркаларĕ Ораз костюмĕн шалти кĕсйинчен шурă эрех кĕленчи туртса кăларнă май. Вăл тĕплĕ çын çав: хулпуççи çине çакнă такмакĕнче икĕ стакан та тупăнчĕ. Хаяр шĕвеке çав савăтсене тултарчĕ, унтан пĕрне Аяза тыттарчĕ. «Э! Çыртмалли...» — хутаçсенче икĕ татăк какай та пур иккен.

Стаканне çĕкленĕ май Ораз, куçне хĕссе, шухăша кайнă пек пулчĕ.

— Пăх-ха çав ăстиçуксене, — такама вăрçнăн сăмахларĕ вăл, — сана айăпа кĕмесĕрех тĕрмене хупса лартасшăнччĕ. Сана! Манăн чи çывăх тăвана!.. Çакна пĕле тăркачах чăтса тăрăп-и эпĕ? Тӳрех Прали патне вĕçтертĕм. «Нивушлĕ, — тетĕп,— нивушлĕ Сайкы йăхĕнчи çынна инкекре хăварăпăр?..» Прали сана кун пирки каларĕ пулĕ-ха.

— Пуçласа илтетĕп.

— Каламан-тăк, кайран пĕлтерĕ. Прали ылтăн çын, Сайкы йăхĕнчен тухнисемшĕн чунне пама хатĕр. Милици уйрăмĕнчен те сана вăлах ирĕке кăларчĕ пулĕ-ха?

— Аха.

— Вăт куратăн-и, эпĕ саншăн епле тăрăшатăп. Эсĕ мана ырă тăвасах темерĕн те-ха. Юрĕ ĕнтĕ. Тепри пулсан-и... Анчах та эпĕ... Çук çав, эпĕ çынна инкекре хăварма пултараймастăп. Тепĕр тесен, милици уйрăмне хам та пыма пултараттăм. Çапах та, пĕрремĕшĕнчен: эсĕ мана свидетель пулма чĕнмерĕн. Иккĕмĕшĕнчен: маларах ху, тăван иккенне пăхмасăрах, епле мана хытă хăртса-вăрçса тăкрăн. Саншăн аллах тӳре пултăр ĕнтĕ. Кĕскен каласан, Пралирен эпĕ ыйтрăм, вăл сана пулăштăр тесе.

Оразăн сăмахĕсем пурте тĕрĕсех-ши? Аяз малтанласа ĕненме те хатĕрччĕ.

— Эппин... ырă – сывă таврăннă ятпа пултăр, — терĕ Ораз, стаканне пушатса. — Эсĕ те янклаттар. Ĕç те савăн, эпир каллех пĕрле.

Аяз та стаканне ўпĕнтерчĕ — пĕр вăхăт, сывлайми пулса, чыхăнса кайрĕ, кăшт тăрсан, васкаса какай таткине чăмлама пуçларĕ. Ораз ўпкеленĕн пуçне пăркаларĕ, ку ĕçре сана вĕрентмелле те вĕрентмелле иккен.

— Мемме. Айван, — шăл витĕр сăрхăнтарчĕ вăл, те Аяз ĕçме пĕлменнишĕн тарăхса, те унчченхи кўренĕвне аса илсе, тем каласшăн пулчĕ — тўрех ăнкарма та май çук. Унăн кăмăл – туйăмĕ ытла та хăвăрт улшăнчĕ, вăл шуралса кайрĕ, куçĕсем хаярран йăлкăшеа илчĕç.

— Çак кĕленчене ав çав чул çине ларт, — сассине хăпартса хушрĕ вăл Аяза.

Лешĕ, эрех ĕçнипе анраса кайнăскер, ун çине ăнланмасăр та хăрарах пăхрĕ.

— Уттар – уттар! — кăшкăрчĕ Ораз. Аяз хулпуççине сиктерсе илчĕ те лаптакрах яка чул еннелле танкăлтатрĕ. Кĕленчене вырнаçтарса лартма пуçларĕ, унăн тĕпĕ чул çине перĕнме те ĕлкĕреймерĕ, çав самантрах пăшал сасси янраса кайрĕ. Кĕленче савăт, Аязăн аллинчех çурăлса кайса, чăл – пар çĕмĕрĕлчĕ. Вăл сыхланса юлнă кĕленче çăварне алран ямасăр пĕр вырăнта юпа пек хытса тăчĕ, урисем чĕтрерĕç, Ораз пуçне каçăртса ахăрчĕ. Пĕтĕм чунтан. Куççулĕ тухиччен кулчĕ. Ун сассине ахрăм та тепĕр хут илсе килчĕ. Вăл çаплипех чарăнаймарĕ – ха. Кунашкал çынсен хăтланкаларăшĕсем те хăйне евĕрлĕрех — пĕр пуçласан, ниепле те вăхăтра чарăнаймаççĕ çав.

## VI

Енчен те пуля кăшт çеç айккинчен вĕçсе иртнĕ пулсан, тăхлан кĕленчене мар, Аяз чĕрине шăтарса тухатчĕ вĕт, çавăнпа та вăл карт! сикрĕ, унччен столовайĕнче милиционера курсан хăраса ÿкнĕ пек.

Ĕçĕ, паллах, халĕ те, тепĕр кунне те çав шиклĕ туйăм иртменнинче кăна мар — ха. Пачах урăххинче. Аяз ниепле те лăпланса çитеймерĕ. Ку вара ăна вăйран ячĕ. «Хăравçă. Санăн ÿт — пÿре юн мар — шыв чупать, — хăйне хăй вăрçрĕ вăл. — Тĕрĕс калать анне, санран çын пулаймасть тесе. Тĕрĕс калать».

Çĕрĕпе çывăраймарĕ. Ирхине унăн пуçĕ ыратрĕ, ăшĕ пăтранчĕ. Вăл апат çиеймере, хăсма пуçларĕ. Каç пулнă тĕле йăлтах сывалса çитмеллеччĕ ĕнтĕ. Çук çав, виçĕ куна тăсăлчĕ çак чир. Акжанка карчăкне пулăшма чĕнчĕç. Лешĕ сипleme пуçларĕ. Вĕрÿ — суру сăмахĕсемпе. Пĕчĕк ачана сыватнă пек, унăн куçне, хăлхине, çăварне пăхрĕ те:

— Ăна такам хăратнă! — пулчĕ карчăкăн диагнозĕ.

Хăйне япăх туйни темех мар — ха, анчах та çак сăмахсем Аяза тарăхтарсах ячĕç. Вăл сиксе тăчĕ. Унăн Ораз патне кайса, ăна карланкинчен тытса, пăвса пăрахасси килчĕ. Анчах та Биби Аяза кăларса ямарĕ.

Кайран та, сывалнă хыççăн кĕтÿ кĕтме пуçласан, вăл Ораз юрти енне пăхма пултараймарĕ. Кашнинче, инçетре шукăль тумланнă юланутçă курăнсан, унан чĕри хĕссе ыратрĕ. «Хĕрарăм!.. Мемме!.. Санăн туту çинче аннÿн сĕчĕ халĕ те типмен!..» — хытах вăрçрĕ вăл хăйне хăй. Начарланса кайрĕ, куçĕсем путса кĕчĕç.

— Врач патне кайса кил — ха,— сĕнчĕ Биби. — Эпĕ питĕ ыйтатăп. Итлесемччĕ!

Аяз пит — куçне çеç пĕркелентерчĕ. Ăна врач кирлех те мар. Унăн епле пулсан та Ораза пĕтĕм халăх умĕнче намăслантармалла. Тăрă шыв çине кăлармалла. Аязăн Оразпа тытăçса илсе, ăна тата хăйĕн шиклĕ туйăмĕсене çĕнтересех килет. Биби те, Акжанка карчăкĕ те унăн вăрттăн шухăшĕсене, вăл хăравçă иккенне пĕлеççĕ пек, çавна пула çамрăк арçын тата та ытларах асапланчĕ.

Кĕтмен çĕртен Оразпа куçа — куçăн тĕл пулма сăлтав та тупăнчĕ: эппин, Аяз кăтарт, ăçта сан хăюлăху?

Тусем хушшинче хăшпĕр çĕрте айлăм вырăнсем пур. Унта лайăх курăк ÿсет, анчах та унта çулма кансĕр. Ытти çулсенче çак айлăмсем çине çаврăнса та пăхмастчĕç — ха. Кăçал вара урăхла лару — тăру. Типĕ тăчĕ, вăхăтра çумăр çуманнине пула çеçенхирти курăксем çуркуннех ĕнсе кайрĕç. Колхозăн вара ирĕксĕрех ăçта май пур, унта выльăхсем валли апат хатĕрлеме тиврĕ. Тусем хушшине комбайн евĕр утă çулакан косилка ячĕç, машина штурвалне тытса пыраканни çивĕч каччă Кадирбек пулчĕ.

— Тухман тара кăлараканскер, — терĕ вăл косилкăна ним вырăнне хуман пек, машина кустăрмине урипе тапса. Прали çырса панă хут таткине кĕсйинчен кăларса, пуçĕ тĕлĕнче темиçе хутчен çавăркаларĕ, Оразпа иксĕр те тинех манăн алăра тенĕн ахăлтатса кулчĕ. Ăна вăл çÿлелле ывăтрĕ, вĕлтĕртетсе ÿкекенскере, çăмăллăн тытса, ал лаппи çине хучĕ: пăхăр, сире çакăн пек ташлаттарăп — хут таткине ал тупанĕ çинче сиктерчĕ. «Ĕçлекенсем çитмеççĕ. Ораз тата Аяз, Кадирбека пулăшăр», — тесе çырнă унта. Нимĕн те тăваймăн — хушнине пурнăçламах тивет.

Аязпа Ораз утă çулма тухрĕç. Кабинăра Ораз Кадирбекпа юнашар вырнаçрĕ, лешĕ ывăнсан, вăл, ăна ылмаштарса, штурвал тытрĕ. Аяз машина пускăчĕ çинче ларса пычĕ. Косилка шăлĕсем утăпа хупланса ларсан, унăн ăна вăхăтра тасатмаллаччĕ. Ĕçĕ ытлашши йывăрах мар темелле ĕнтĕ.

Икĕ кун хушши вĕсем пĕр шăв — шавсăр ĕçлерĕç. Аяз Ораз çине пăхрĕ. Лешĕ ăна курмăш пулчĕ. Кадирбек çеç хăйĕн пĕр юррине юрларĕ:

— Тухман тара кăларакан машина пурне те килĕшет. Сире, сире эпĕ еплерех ĕçе кÿлтĕм. Эсир манăн лашасем! Н — но, тăванăмăрсем!..

Лаша пек кĕçенчĕ.

Виççĕмĕш кунне пулса иртрĕ ку ĕç. Ораз хăйĕнпе пĕрле икĕ çур литр шурă эрех илсе килчĕ. Кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче пĕрне уçрĕ те курăк çине какай таткисене кăларса хучĕ. Юлташĕсем пусахларĕç пулин те, Аяз вĕсемпе пĕрле ĕçме килĕшмерĕ. Кадирбекпа Ораз пĕр кĕленчине иккĕшех пушатрĕç.

Ахаль те пĕр вырăнта ларса тăма пĕлменскер, Кадирбек эрех ĕçнĕ хыççăн тата ытларах ăшталанма пуçларĕ. Хăйĕн «армади»

çине пăхса илчĕ те малалла утса – чупса кайнă май: «Шыва кĕрсе килетĕп»,— терĕ. Айлăмалла, çăлкуçĕ патне,васкарĕ. Оразпа Аяз иккĕшĕ çеç тăрса юлчĕç.

Çамрăкраххин эрех ĕçмесĕрех аллисем кĕçĕтрĕç, вăл кĕтрĕ — чи малтан тапăнас темерĕ – ха.

Кадирбек инçех кайманччĕ, утă çулакан косилка патĕнче хирĕçу пуçланчĕ те. Малтанлăха сăмахпа кăна.

— Халĕ те çилле хăвалатăн – и – ха? — ыйтрĕ Ораз.

— Çук – çке, савăнатăп!

— Лапчăтса хума та хатĕр – и?

— Хатĕр.

— Аллусем кĕске. Енчен те çапăçса пăхас тесен, эпĕ сан çамку çине икĕ мăйрака лартса яма пултаратăп.

— Хăтланса кăна пăх!

— Эпĕ тўрех. Сан пек пуш сăмах çаптармастăп. Ман çинчен халĕ те çыраймарăн – и – ха? Тахçантанпах хăрататăн.

— Вăхăт çитсен çыратăп.

— Хаçата – и?

— Хаçата та.

— Пăх – ха эсĕ ăна! Хăрамастăн та – и?

— Санран – и?

— Манран.

— Камран – камран та, санран хăрасах тăмастăп – ха.

— Юрĕ. Курăпăр – ха, малашне кам кама çĕнтерессе.

— Курăпăр.

Çакăн пек сăмахсемпе перкелешрĕç те лăпланчĕç. Оразăн çапăçас шухăш çук, Аяз та аллисене ирĕке ямарĕ.

— Юрать. — Ораз темĕнле пысăк ĕç тунă пек кулса ячĕ. — Атя, хăюллă пулар тесе, пĕрер черкке ўпĕнтерер.

— Эсĕ хăравçă пулсан — хăвах ĕç. Манăн санпа пĕрле юнашар ларса хăналанас шухăш çук.

— Юрĕ, эппин. Сăмахна улăштарас темесен, курăк çулма кайăпăр, ара.

«Мĕншĕн – ха вăл сасартăк... лăпланчĕ?» — кăсăкланса шухăшларĕ Аяз. Ораз çине пăхсан тата та хытăрах тĕлĕнчĕ вăл — унăн сăн – пичĕ сивлек те хаяр, куçĕсем усал ĕç тума шут тытнă пек йăлтăртатаççĕ. Ку ырра мар – ха. Çапах та курăпăр — малашне мĕн пулĕ?

Ораз штурвал умне ларчĕ. Аяз та ларкăч çине вырнаçрĕ. Машина кĕрлесе малалла куçрĕ. «Тинех эпĕ каялла

чакмастăп, — Аяз хăй хăранине туймарĕ ĕнтĕ. — Çынсем умĕнче пурĕпĕр, пурĕпĕр каçару ыйтатăн!»

Косилка, пĕр çĕр метр кайсан, чарăнса ларчĕ: машина шăлĕсем утăпа тулса ларнă. Аяз фуфайкине тăхăнчĕ, карттусне хăлхисем хупланмаллах антарса лартрĕ, унтан, хура куçлăхне тӳрлетсе, машина ăшне кĕчĕ. Унăн умĕнче косилкăн çутă шăлĕсем йăлтăртатрĕç. Пĕр хушă Аяз хăрана пек те пулчĕ, çапах та вăл çак шиклĕ туйăма хăвăрт сирсе яма пултарчĕ, хулпуççисене хускаткаласа, куç тĕлĕнчи хăва хулли пек çирĕп курăк тунисене сăнарĕ. Тата шаларах, бункер ăшнех, кĕме тивет, унсăрăн косилка шăлĕсене тасатма май çук. Вăл, хĕсĕнкелесе, шаларах кĕрсе вырнаçрĕ çеç, курах кайрĕ: машинăн шурă çĕççисем, хăрушшăн йăлтăртатса, ун çинелле вирхĕнчĕç. Шутлă çеккунтра Аяз кăшкăрса яма, пĕтĕм вăйне пухса, урисемпе косилкăн шăлĕсене самантлăха тытса чарма ĕлкĕрчĕ. Ăна Ораз парнеленĕ кирза атă çăлса хăварчĕ. Вăл çĕçĕсем хушшине кĕрсе кайрĕ. Çав вăхăтра Аяз аллисемпе машинăн шăлĕсенчен ярса тытрĕ. Косилка кĕрлени илтĕнчĕ, пуçĕнче пĕтрĕм! тенĕ шухăш мĕлтлетрĕ. Ораза пулăшма чĕнчĕ *пулас, машина шăлĕсем сылтăм урине хуçас пекех хĕстерчĕç.* Вăл пурĕпĕр чавсисемпе тĕренленме, чĕрĕп пек пĕр чăмăра хутланса ларса, бункертан вирхĕнсе тухма пултарчĕ. Ирĕке тухрĕ пулин те, тăнне çухатнă май, Аяз хăйĕн сылтăм урине такам вĕри пушăпа туртса çапнă пек туйрĕ. Мĕн пулса иртнине йăлтах тавçăрса илеймесен те, çакна çеç ăнланчĕ: сывă юлнă.

Икĕ уйăх çурă — çителĕклĕ вăхăт, çак хушăра Аязăн хăйĕнпе мĕн пулса иртнине ăнланса илме пулать ĕнтĕ. Хăрамаллиех çук. Сылтăм урине татнă — мĕнех вара! Пиччĕшĕсемпе амăшĕ çакна пĕлсен хĕпĕртерĕç — вĕсем тата та хăрушшине кĕтнĕ мар-и вара? Çак хыпарпа хавхаланнăскерсем сурăх пусрĕç. Сăваплă парне!..

Аяз малтан район больницинче, унтан пĕр уйăх çурă Алма-Атара выртрĕ. Суранĕ тӳрленчĕ, ыратнисем иртсе кайрĕç. Пĕр уйăх хушшинче протез туса парсан, вăл çĕнĕрен утма вĕренчĕ. Туясăр çӳренĕ чух та уксахлани питех паллă марччĕ-ха. Çакăншăн Аяз питĕ савăнчĕ.

Çапла, ӳт-пӳ ыратăвĕсем иртрĕç темелле. Анчах та чун суранĕсем ăна канăçсăрлантарчĕç-ха.

Оразăн хăраса пурăнасси нумая пымарĕ. Аяз бункера кĕрсе

кайнине эпĕ курман тесе, вăл хăйĕн айăпне йышăнман. Пиччĕшĕсемпе амăшĕ те шăв – шав çĕклес мар терĕç: тăвансем – çке. Биби çеç ниепле те лăпланаймарĕ, анчах та ăна та часах ытлашши каласма чарчĕç. Чи хакли джигит сывă юлни терĕç. Инкек – синкек кашни çынпах пулма пултарать.

Çак хыпарсене ăна Петре каласа пачĕ.

— Юрĕ, — терĕ Аяз итлесе пĕтерсен. — Çапах та вăл пурĕпĕр ман умра каçару ыйтса упаленĕ – ха.

Вăл сăмахĕсене пĕр тарăхмасăр каларĕ пулин те, Петре ăна лăплантарма пуçларĕ.

— Нимех те мар, нимех те мар, — хуравларĕ Аяз. — Кунтан часрах тухасчĕ çеç.

Аяз малтан Петрене, вăл пĕрремĕш кунах ун патне курма килменнишĕн, çилленнĕччĕ. Анчах та тусĕ геологи экспедицийĕнче пулнă иккен — унта ĕçе вырнаçнă — усал хыпара илтнĕ – илтмен тӳрех Аяз патне вĕçтерсе çитнĕ. Унăн мотоциклĕ, тин çеç туяннăскер, вĕр – çĕнĕскер, больница картишĕнче кĕрлесе ларать. Çак шăв – шав Петрене тата та мăн кăмăллă тăвать.

— *Ан çиллен ĕнтĕ, — тет вăл айăплă сасăпа. — Эпĕ... эпĕ* ăçтан пĕлме пултарнă – ха эсĕ çакăн пек инкеке кĕрсе ӳкессе. Пĕлнĕ пулсан – и? Çак мотоцикла тӳлевсĕр парсан та, геологсем патне ура ярса пусмастăм!

Биби больницăна икĕ хутчен пырса кайрĕ. Арăмĕн сăн – пичĕ тĕксĕмленнĕ, сивлек, çапах та малтанхи пек макăрмасть.

— Пĕтĕм инкек – синкек Ораза пула, — тет вăл çиллине шăнараймасăр. — Суккăр çынна та паллă. Санăн тăванусене çеç ӳкĕте кĕртме май çук, «Шăв – шав кирлĕ мар!.. Çилленсе çил арманĕ лартаймăн!..» — теççĕ. Хавшак çынсене чăтма пултараймастăп!

Аяз шӳтлеме хăтланчĕ:

— Артистсем килмерĕç – и – ха?

— Ан хуçкалан.

Ун хыççăн каллех ыйхăсăр irttерне каçсем шăппăн шурĕç. Кӳрену туйăмĕ, тăшмана хытах тавăрас шухăш вăйланнăçемĕн вăйланчĕ. Анчах та епле? Мĕн тума пултарĕ Аяз çав ирсĕр çынна? Кам – ха вăл?

Хушамачĕпе ячĕ: Бабатаев Аяз.

Çуралнă çулĕ: пин те тăхăрçĕр аллă пиллĕк.

Шкула утмăл иккĕмĕш çулта кайма пуçланă. Пĕрремĕш хут — пĕрремĕш класа. Кайран — иккĕмĕшне... Унтан... Эй, аллах, мĕн чухлĕ ĕç пулса иртнĕ! Амăшĕ выльăх — чĕрлĕх сутатчĕ, ывăлĕ Алма — Атари института вĕренме кĕтĕрччĕ тесе, кашни çул укçа — тенкĕ пуçтаратчĕ. Унăн «хĕвелĕ — Аязĕ» вара, «иккĕ» паллăсем илсе, пуçне усса, каялла киле таврăнатчĕ. Кайран авланчĕ, тавах аллаха, арăмĕ лайăхскер, ăна çур сăмахран ăнланаканскер пулчĕ. Çапах та... Хăйĕн пурнăçĕнчи кашни утăма тĕпчевçĕ куçĕпе пăхсассăн та, мĕн ырри пулнă — ха унăн? «Малтан — пĕрремĕшне, унтан — иккĕмĕшне, каярахпа...» Амăшĕн кĕпи аркинчен уйрăлайманскер, мĕн курнă — ха вăл пурнăçра? Хăçан та пулин кăштах хăйĕн тусĕсен, çывăх юлташĕсен кун — çулĕпе кăсăкланнă — ши?

Çак шухăшсем унăн чунне ыраттарчĕç. Кам вăл? Мĕншĕн çут тĕнчене килнĕ? Унăн малашнехи шăпи еплерех пулĕ? Аяз, капланса килекен çакăн евĕр ыйту — шухăшсене пула, йăлтах канăçне çухатрĕ. Вĕсен тупсăмне тăр — пĕччен уçса пама пĕлмесен те, çакна лайăх ăнланчĕ: тинех вăл мемме мар, ăна хăпăл — хапăл тамăк — бункера тепĕр хут хăваласа кĕртеймĕн. Оразпа та вăл тинех çурма çулта кĕрешме пăрахмĕ.

Çак ĕмĕт — шухăшсемпе хавхаланса, вăл больницăран тухрĕ. Ăна киле илсе кайма шалча евĕр, хăйне вăтанчăк тыткалакан чĕмсĕртерех Петре килнĕ. Тусĕ куçа илемĕпе илĕртекен чечек çыххисемпе пĕрле тата икĕ кĕленче шампански йăтнă. Вăл темшĕн васкарĕ. Именнĕ пек пулса, чечекĕсене медсестрасене салатса пачĕ, Аязпа пĕр палатăра выртакан çынсене эрехпе хăналарĕ.

Петре Аяза васкатрĕ, лешĕ палатăран тухнă чух умывальник тĕлĕнче çакăнса тăракан тĕкĕре асăрхарĕ те чарăнса тăчĕ. Çÿçне çеç тураса илесшĕнччĕ вăл. Темĕнле ăнланмалла мар вăй ăна тытса чарчĕ, тĕкĕртен ун çине пĕр каччă тинкерсе пăхрĕ, анчах та ку йĕкĕт тахçанхи Аязран хытă уйрăлса тăрать. Кăтра çÿçлĕ. Çÿллĕ çамка. Сăмси ăмăрткайăкăнни пек. Пысăк та сисчÿллĕ куçсем. Сăн — пичĕ имшер те чăрсăр. «Ну, паллашар — и? — терĕ вăл, шухăшлăн хăйĕн çине хăй пăхса. Çакна Аяз ăшĕнче каларĕ те унтан тата хушса хучĕ: — Тинех эсĕ мемме мар». Хулпуççисене тинкерчĕ, тапса тăракан вăй — халне пĕлес тенĕн, вĕсене хускаткаларĕ, хăй тĕреклĕ пулнине сисрĕ, çакна вăл унччен туйман та.

Больница коридорĕ тăрăх Аяз çăмăллăн та ирĕклĕн утрĕ. Картишĕнче, мотоцикл патне пырсан, ун тавра çаврăнса илчĕ те кустăрмана урипе тапрĕ:

— Кам калать – ха эпĕ уксах тесе?

Кулса ячĕ. Петре ун валли ятарласа илсе килнĕ шлемне пуçне тăхăнчĕ.

— Мĕнле, лайăх – и? — Аяз, хăпартланса кайнăскер, савăнăçлăн тусĕ çине пăхрĕ. — Геройран кая – им?

Мотоциклăн хыçалти ларкăчĕ çине вырнаçса ларсан, чӳречерен алă сулакан юлташĕсене мăн кăмăллăрах сасăпа кăшкăрчĕ:

— Тепре куриччен!

Мотоцикл хăвăрт вырăнтан тапранса кайрĕ.

— Хула тăрăх кăштах ярăнса çӳрер – ха!— кăшкăрчĕ Аяз.

— Эпĕ... çухалса каяс марччĕ.

— Темех мар. Хулана пĕлес пулать.

Вĕсем хăйсен кăмăлĕ туличчен Алма – Ата урамĕсем тăрăх çӳрерĕç. Çилçунат пек, циркпа Мăшăрлану керменĕ патĕнчен иртсе кайрĕç. Ленин ячĕпе хисепленекен Кермен хыçа юлчĕ. Коктюбе çине хăпарчĕç. Унтан — Медеона. Кайран, тусем çинчен вирхĕнсе ансан, Аяз:

— Халĕ киле таврăнма та вăхăт çитрĕ, — терĕ.

— Лайăхрах тыт! — асăрхаттарчĕ ăна Петре ытларах газ хушнă май.

— Хытăрах! Тата хытăрах!..— хавхаланса кайса кăшкăрчĕ Аяз, çил шăхăрнипе çунатланса. Вĕсем иккĕшĕ те килĕсене васкарĕç. Аяз хăйне тин çуралнă пек туйрĕ.

Ăна пиччĕшĕсем арăмĕсемпе пĕрле кĕтсе илме тухнă. Амăшĕ куççульне шăлкалать. «Начаррисем хыçа юлччăр,— пăшăлтатрĕ вăл, кĕçĕн ывăлĕ çумне тĕршĕнсе. — Пурнăçу телейлĕ те вăрăм пултăр. Сана мĕнпе хăналас, мĕнпе хаваслантарас? Така пусатпăр, килĕшетĕн – и? Той* пултăр!»

— Той? Эппин, ман пата каятпăр!

— Епле – ха сан патна?

— Манăн киле. Çеçенхире.

— Çак пӳрт, аçун кил – çурчĕ, саншăн ют – им?

Карчăк куççуль тăкма та хатĕрччĕ, анчах та ывăлĕсемпе кинĕсем унпа пĕчĕк ачапа калаçнă пек сăмахлама пуçларĕç те амăшĕн кӳренĕвĕ туххăмрах иртсе кайрĕ.

*Той* — ***ĕçкĕ – çикĕ.***

Пурте, машинăпа мотоцикл çине ларса, Сарыжазык еннелле вĕçтерчĕç. Çула май, «Шолпана» кĕрсе, милици уйрăмĕнче Аяз хутне кĕнĕ икĕ каччăна пĕрле пыма чĕнчĕç. Вĕсен ушкăнне тата çичĕ—сакăр йĕкĕт хутшăнчĕ. Аязăн нуши—терчĕсене лайăх пĕлекенскерсем, вĕсем пурте пĕр саслă пулса, йĕксĕк Ораза вăрçаççĕ, ăна хирĕç кĕрешмелли çинчен калаçаççĕ.

Пĕр—пĕрне çур сăмахран ăнланакан çак хаваслă ушкăн часах ту çывăхне, Аяз юрти патне, çитсе чарăнчĕ. Кунти çĕр «ватăлнă» пулин те, сурăхсем симĕс курăка йăлтах таптаса пĕтерсен те, Сайкы йăхĕнчи виçĕ юрта хăйсен малтанхи вырăнĕнчехчĕ. Биби, паллах, çак йыша курсан, вăтанса кайрĕ, пурте хăйне тинкерсе те тĕпчесе пăхнăран, упăшки патне çывăхарах пыма, ăна çынсен умĕнче ыталаса илсе чуптума хăяймарĕ. Вăл çаврăнса тăчĕ те йĕрсе ячĕ. Кусем савăнăçпа хурлăх куççулĕсем пулчĕç.

Аяз çав кун лăпланса ларма пĕлмерĕ. Вăл тем тума та хатĕрччĕ.

— Туссем! — кăшкăрчĕ вăл. — Атьăр пирĕн юртăна çав сăрт çине куçарса каяр та унта той пуçлар.

Каччăсем пĕчĕк теттене вылятнă пек хăпăл—хапăл васкаса юртăна çĕклерĕç те ăна самантрах çĕнĕ вырăна куçарса кайса лартрĕç. Аязăн халь Ораз çывăхĕнче пурăнас килчĕ, кунтан, çӳлтен, вăл кашни кун мĕн хăтланнине ал тупанĕ çинчи пек курса тăма пулать. Аялта вырнаçнă шурă юрта çине пăхрĕ те: «Ореке, халь тин чăт!..» — терĕ.

Той пуçланчĕ. Пиçнĕ какай шăрши таврана сарăлса сăмсана кăтăклантарчĕ. Аккордеон сасси çĕрĕпе чарăнмарĕ. Кăвайтсем çунчĕç. Ирчченех юрă—кĕвĕ янăраса тăчĕ, тăпăртатса ташлани чун—чĕрене çунатлантарчĕ. Çак хаваслă уява Ораз курмасăр—илтмесĕр юлмарĕ, паллах. Çиллине шăнараймасăр, ниçта кайса кĕреймерĕ ĕнтĕ вăл.

Хăнасем ирхине саланчĕç, хуçисем те тул çутăлас умĕн çеç кăшт тĕлĕрсе илме ĕлкĕрчĕç. Вăранчĕç те пăхаççĕ — Оразăн юрти çук. Ĕнер çеç пурччĕ, халь çав вырăн пуш—пушă. Икĕ çаврашка çеç, хăраса ӳкнĕ ӳхĕ куçĕсем евĕр, аякранах илемсĕррĕн курăнаççĕ.

Аяз, пуртă ярса илсе, Петрене пуç сĕлтрĕ: кайрăмăр. Нумаях пулмасть Ораз юрти ларнă вырăна çитрĕç. Аяз çав тĕлте хĕрес чавса лартрĕ. Петре тусĕн хăтланкаларăшĕсене сăнарĕ те кулса ячĕ. Аяз тарăн шухăша путнă çын пек курăнма тăрăшрĕ, анчах

та кăлăхах, чăтаймарĕ — ахăлтатма пуçларĕ. Çав вăхăтра вĕсем иккĕшĕ те паттăрсем пек, хăйсен курайман тăшманне хăвалаçа янă улăпсем евĕр курăнчĕç.*

* ***«Кайри мала, хуркайăксем».*** *Калавсемпе повеçсем.. Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви.1989 ç.— 318 с.*

## АВАЛХИ БУХАРА КРЕПОҪЁНЧЕ

**Егоров Вениамин Павлович**

*1897—мёш ҫулта Чӗмпӗр губернинчи*
*Пӑва уездне кӗрекен Турхан ялӗнче*
*/халӗ Чӑваш Республикинчи*
*Патӑрьел районӗ/ ҫуралнӑ, чӑваш.*

1919 ҫулхи 511 тата 2322—мӗш номерлӗ РВСР /Российӑн Революци Вӑрҫӑ Совечӗ/ приказне тӗпе хурса Хӗрлӗ Ялав орденӗпе наградӑланине ҫирӗплетнисен списокӗнче... Туркестан фронтӗнчи: Уйрӑм тӑракан стрелковӑй полкри... пулемет командин ертӳҫине. Егоров Вениамина 1920 ҫулхи сентябрӗн 1—мӗшӗнче Бухара крепоҫне ҫапӑҫура ҫӗнтерсе илнӗшӗн.

*СССР Революци Вӑрҫӑ Совечӗн*
*1925—мӗш ҫулхи августӑн*
*10—мӗшӗнче кӑларнӑ*
*приказӗнчен*

1920 ҫухи сентябрӗн 2—мӗшӗнче Туркестан фронтӗнчи ҫарсене ертсе пыракан, чапа тухнӑ командующи М. В. Фрунзе В. И. Ленина телеграмма янӑ. Унта ҫапла ҫырнӑ: «Паян Бухарари Хӗрлӗ ҫар тата пирӗн чаҫсен пӗрлешнӗ вӑйӗсем тӑрӑшнипе авалхи Бухарана штурмласа ҫӗнсе илнӗ. Бухарара хуҫаланнӑ черносотенецсемпе, пӑнтӑхнӑ вӑйсем пӗтсе ларчӗҫ. Регистан* ҫийӗнче Хӗрлӗ ялав вӗлкӗшет. Эмир хӑйӗн аран—аран упранса юлма пултарнӑ ҫарӗсемпе хуларан тухса тарчӗҫ...»

Ҫак телеграммӑна яриччен маларах историлле, асра юлмалли пулӑмсем пулса иртнӗ.

1920 ҫулта, ҫуллахи вӑхӑтра Туркестан Совет Республикипе тата Бухара эмирачӗн границинче кӑткӑс та ҫивӗч лару—тӑру пулнӑ.

М. В. Фрунзе Совет правительствине, В. И. Ленина Бухара эмирачӗ Вӑтам Азири контрреволюциллӗ хӑрушӑ вучах пулса тӑни пирки темиҫе хутчен те пӗлтернӗ, ку ҫӗршыва ертсе пыракансем агрессивлӑ ҫул ҫине тӑнине пӗрмаях аса илтернӗ.

---

**Регистан — Кивӗ Бухарари парадсем урттерен площадь.*

Англи империалисчĕсем хĕтĕртсе тăнипе эмир Совет Туркестанне хирĕç тапăнма хатĕрленнĕ. Унăн çарĕсемпе хире – хирĕç тăрас хăрушлăх чăнласах та ÿснĕçемĕн ÿснĕ.

Халăх хушшинче эмирпа унăн правительствин политикине килĕшменни, вĕсем империалистсемпе каварлашса пĕр чĕлхе тупнине хирĕçлени вăй илсе пынă. Çак сăлтавсене пула вырăнти коммунистсем чĕнсе каланипе Бухара хулинче пурăнакан ĕç халăхĕ 1920 çулхи августăн 25 – мĕшĕнче хĕçпăшаллă восстани çĕкленĕ. Йĕркеленсе çитнĕ ревком çĕрĕшсе, пăнтăхса çитнĕ феодаллă режима тĕп тума, ун вырăнне Совет влаçне йĕркелесе çирĕплетме халăха чĕннĕ. Революциллĕ комитет çав вăхăтрах Советлă Туркестан правительствине халăх çĕкленĕ пăлхава пулăшма ыйтнă. Ĕç халăхĕ ыйтнине тивĕçтерессишĕн часах Хĕрлĕ Армийĕн çарĕсем пăлхавçăсене пулăшма вăхăтра пырса çитнĕ.

Туркестан фрончĕн командирĕсене, хĕçпăшаллă салтаксене августăн 28 – мĕшĕнче каçхине М. В. Фрунзен приказне вуласа панă, унта «хĕçпăшаллă çарсен пĕтĕм хăвачĕпе Бухара халăхне *пулăшмалла» тенĕ.*

Революциллĕ Бухара отрячĕсем тăшмана хирĕç тĕрлĕ енчен тапăнма пикеннĕ. Ку вара Хĕрлĕ Çара ют çарсен вăйĕсене *пайăн – пайăн аркатса тăкма май панă.*

Совет Çарĕ чăн малтан Авалхи Бухарана тапăнма, унта вырнаçнă эмирăн резиденцине, çакăнта тăракан унăн тĕп вăйĕсене аркатса тăкма пуçланă. Тăшман Бухара хулине малтанах пур енчен те лайăх хÿтĕлеме хатĕрленнĕ. Крепоçăн стенисемпе башнисем /çÿллĕшĕ 10 метр, сарлакăшĕ 5 метр/ малалла кайма пысăк чăрмавсем кăларса тăратнă. Ку участокра хирĕç тăракансен вăйĕ тапăнаканнисенчен хăватлăрах та нумайрах пулнă.

Эмирăн тĕп хулине хирĕç августăн 29 – мĕшĕнче Каган—Бухар чаçĕнчи икĕ колоннăн оперативлă групписем тапăнма пуçланă. Хĕвеланăç колоннине, Уйрăм тăракан стрелковăй полк та кĕнĕ. Ăна Атăл тăрăхĕнче 1919 çулта çуркунне йĕркелесе çитернĕ пулнă. Кунта Чăваш енче çуралнă боецсем нумайăн шутланнă. Вениамин Егоров та, Чĕмпĕр губернинчи Пăва уездне кĕрекен Турхан ялĕнче çуралнăскер, вĕсен йышĕнче пулнă.

Чухăн хресчен кил – йышĕнче çуралнăскер, вăл пĕчĕк чухнех пуянсемпе помещиксемшĕн тар тăкнă, çапах та хăй çине тăнипе

Чĕмпĕрти училищĕре малтанхи пысăк пĕлӳ илме пултарнă. Кунта вĕренсе тухсан пĕр кооператив йышĕнче писарь пулса ĕçлеме пуçланă, анчах та ăна 1916 çулхи август уйăхĕнче патша çарне илнĕ. Фронтра чух Егоров ăста пулеметчик пулса тăнă, ăна часах унтер–офицер званине панă.

Октябрьти революци çĕнтерсен вăл демобилизаци йĕркипе тăван ялне таврăннă. Империалистсен вăрçине хутшăннă вăхăтра окопсенче пулнă чух большевиксен идейисене чунтан кăмăлласа йышăннă, тăван ялĕнче те çĕнĕ пурнăçшăн кĕрешме ял çыннисене хавхалантарма тăрăшнă. 1919 çулта ăна большевиксен парти ретне илнĕ.

1919 çулхи март уйăхĕнче Хĕвелтухăç фронтĕнче совет çарĕсен лару–тăру йывăрланнă чух В. П. Егоров Хĕрлĕ Армин ретне тăнă. Ответлă заданисене пурнăçлама ятарласа йĕркеленĕ полк Атăл тăрăхĕнче тата пушкăртсен çĕрĕнче колчаковецсене хирĕç çапăçнă. Каярахпа ку полка Оренбург енне куçарнă. Унта вăл вăхăтра Туркестан фронтĕнче М. В. Фрунзе командующи пулнă. 1919 çулхи октябрь уйăхĕнче В. П. Егорова пулеметчиксен командинче старшина пулма çирĕплетнĕ, 1920 çулхи июньте вăл командир пулса тăнă.

Авалхи Бухара хулине штурмланă чух вăл малти ретре, тапăнакансен йышĕнче пулеметчиксене ертсе панă.

Пĕрремĕш кун совет çарĕ питĕ вăйлă çирĕплетнĕ кишлаксене ярса илессишĕн Бухара çывăхĕнче çапăçнă. Эмир салтакĕсем хӳтĕленме ятарласа хатĕрленĕ вырăнсенче пытанса ларса вăйлăн хӳтĕленнĕ. Вĕсем уйсене шăвармалли каналсенче тата садсенче вырнаçса уçă вырăнта куçакан боецсене вĕçĕмсĕр персе тăнă. Винтовкăсемпе пулеметсенчен вут–çулăм кăларса, тĕрлĕ орудисенчен персе, çулсем çине гранатăсем пăрахса тапăнакансене малалла кайма чăрмантарнă. Хӳтĕленекенсем чăн малтан командирсене тĕп тума тăрăшнă. Полк пысăк çухатусем тӳснĕ пулсан та ытлашши малалла куçайман. Каç пулсан тапăнассине вăхăтлăха чарма тивнĕ.

Ирхине Каган–Бухар группи татах тăшман позицийĕсене атакăлама пикеннĕ. Хĕвеланăç колонни Бухара хули çывăхĕнче пĕр вăхăт хушши çирĕпленсе тăма пуçланă, анчах та унăн çав тери вăйлă вут–çулăма пула йышăннă позицине хăварса каялла чакма тивнĕ. Бухара хулине хӳтĕлекенсем малтанхи ăнăçупа хавхаланса тата хăйсен пысăк йышĕпе усă курса

хĕрлĕармеецсене хирĕç контратакăна çĕкленнĕ. Телее вĕсен атаки часах пăчланнă, мĕншĕн тесен пулеметчиксен пĕр чарăнмасăр персе тăнипе Бухарана хӳтĕлекенсем малалла каяйман.

Малтанхи ăнăçăва çирĕплетес тĕллевпе фронт командованийĕ Каган — Бухара группине çĕнĕ вăйсемпе çирĕплетме пикеннĕ: çапăçăва авиаципе артиллери, бронепоезд, автомашинăсем çине вырнаçнă бронеотрядсем хутшăннă. Ответлă заданисене пурнăçлама ятарласа йĕркеленĕ полка Хĕвеланăç колоннине, Каршинск крепоçĕн хапхине тапăнма куçарнă.

Бухарари революцин чаçĕсем тата советсен çарĕ йывăр çапăçусенче паттăрлăхпа хăюллăх кăтартса, тăшман хӳтĕленĕ позицисене пĕрин хыççăн теприне çĕнсе илсе, хулана пур енчен те хупăрланă. Часах вĕсем крепоç стенисен çывăхнех пырса тăнă, шал енче мĕнпур вăйне пухса хӳтĕленекенсен гарнизонĕ çеç тăрса юлнă. Тăшман тинех ăнланса илнĕ: унăн ниçта та тарса кайса хăтăлма май çук. Августăн 30 — мĕшĕнче йывăр артиллери Каршинск хапхине персе пысăк сиен кӳнĕ: часах тапăнакансен умĕнче çул уçăлнă.

Ирхине хĕвеланăç енне кĕрекен колоннăн регулярлă çарăн командирĕсемпе политработниксен тĕслĕхĕпе хавхаланса хулана штурмлама пикеннĕ. Салтаксем çапăçусенче Ответлă заданисене пурнăçлама ятарласа йĕркеленĕ полк тăшмана çĕнтерес тесе пысăк чăтăмлăхпа паттăрлăх кăтартнă. Яланхи пекех штурмлакансен малти ретĕнче пулеметчиксен командирĕ В. П. Егоров та пулнă. Боецсем хăйсен командирне хăрушă вырăнсенче тăтăшах курма пултарнă, вăл вĕсене ним хăрамасăр хăюллăн тапăнма чĕннĕ, иккĕленекенсене çапăçура тĕслĕх кăтартнă.

Мускаври вăрçă историйĕн архивĕнче ку тĕлĕшпе унăн паттăрлăхĕ çинчен çырса хăварнисем упранса юлнă. Полк командирĕпе комиссар наградăлама тăратнă реляцинче Вениамин Егоров пирки çапла çирĕплетсе çырнă: «Авалхи Бухара крепоçне сентябрĕн 1 — мĕшĕнче штурмланă чухне вăл пулеметсене хăш вырăнта лартма кăтартусем парса тăнă, взвод командирĕсем вăл хушнине тӳрех ăнланса пурнăçлани тăшман вырнаçса ларнă позицисене хăвăрттăн тĕп тума май панă, кĕске вăхăт хушшинчех вĕсен енчен пирĕн салтаксем çине персе тăрасси чакнăçемĕн чакнă. Ку вара советсен çарне Каршинск хапхи витĕр сахал çухатусемпе хулана кĕме май панă...»

Хулара хаяр тытăçусем вăйланнăçемĕн вăйланнă: хӳтĕленекенсем кашни урамшăн, кашни çуртшăн чăрсăррăн çапăçнă. Тăшман çине тăрса хирĕç тăни усăсăр пулнă, мĕншĕн тесен сентябрĕн 2-мĕшĕнче Авалхи Бухара хули йăлтах тапăнакансен аллине кусна. Хирĕç тăракан тăшман çарĕ хуларан тухса тарнă: çавăрса илнĕ ункăран мĕн пур вăйне пухса аран-аран хăтăлнă та хаяр çапăçусемпе çурçĕр-хĕвеланăç енне кайнă. Вĕсемпе пĕрле, хăйне пăхăнакансемпе, хуларан эмир та тухса тарнă. Тăшман çарне йăлтах тĕп тăвас тĕллевпе М. В. Фрунзе юланутçăсен ятарлă группине йĕркеленĕ. Вăл чакакан çара пĕтĕмпех аркатма тăрăшнă.

Юлашки çапăçусенче Ответлă заданисене пурнăçлама ятарласа йĕркеленĕ полкри салтаксен йышĕ нумай чакнă. Ăна канма тесе урăх вырăна куçарнă. Тăшмана çапса аркатас тĕлĕшпе хăюллăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн командирсемпе салтаксем правительствăн пысăк наградисене илме тивĕç пулнă. Вĕсен шутĕнче Вениамин Павлович Егоров та пулнă. Унăн кăкăрне 2022-мĕш номерлĕ Хĕрлĕ Ялав орденĕ илемлетнĕ.

Кайранхи çар служби унăн Узбекистанра пулнă чухне тăтăшах пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçма, тăванла халăха совет влаçне йĕркелес тĕлĕшпе яланах пулăшма тивнĕ: В. П. Егоров ертсе пыракан пулеметчиксен полкĕ Ферган айлăмĕнче басмачсен бандисене тĕп тăвас тĕллевпе темиçе хутчен те çапăçма тивнĕ. Командовани унăн нумай енлĕ çар опытне шута илсе, ăна пулемет ĕçне вĕрентес енĕпе инструктор пулма çирĕплетнĕ.

1930-мĕш çулсенче В. П. Егоров 6-мĕш Туркестан стрелковăй полк шкулĕн начальникĕ пулнă. Вăл Андижан хулинче вырнаçнă.

Шел пулин те пире унăн кайранхи шăпи епле пулни, вăл çар службине хăш вырăнта ирттерни паллă мар.*

---

**_*«Наши земляки — герои гражданской войны»._**— *Чебоксары: Чуваш. кн. изд—во. 1984. 320 стр.*

*Ку кĕнекене мана хамăн кӳршĕ — Федор Антонович Алексеев пачĕ. Ялти хăшпĕр çынсем очеркри герой Турханти хăш йăхран тухнине тĕпченĕ. Анчах та ĕçне вĕçлеймен. «Николай Матвеевич! — терĕ пĕр пĕчĕк хут листи çинче,— Семен Яковлевич /Алексеев/ патне кайса килтĕм. Анат касра Йăкăнат Павăлĕ пурччĕ. Çавăн ывăлĕ пулма кирлĕ вăл,— терĕ».*

## ТУПМАЛЛИ

Тăван ял – йышăм хушшинче ....3
Герман епископ .... 109
Николай Тувалькин, */отставкăри полковник/*
Çĕнтерӳн пĕрремĕш чĕкеçĕсем
яла вĕçсе килчĕç ....152
Юрă хăнана чĕнет ....176
Аяз тата Ораз ....217
Авалхи Бухара крепоçĕнче ....274

**Николай Кушманов**
/Алеметкин/
Николай Константинович

# БЛИЗКИЕ МНЕ ЛЮДИ

**очерки, рассказы, повесть**

на чувашском языке

Редактор *Дмитриева Г. С.*
Оригинал – макет *Кушманов Н. К.*

Формат 60х64/16. Бумага офсетная.
Усл. печ. л. 17,5. Гарнитура Балтика, TimCH.

